**Шупашкар — 2015**



# Михаил СЕНИЭЛЬ

**Çырнисен пуххи**

**Тăваттăмĕш том**

# СӐНМИ ХĔВЕЛ

***Поэма***
***1967—1987***

**Шупашкар — 2015**

ББК 84(2 Рос-Чув)-5
УДК 821.512.111
С 31

**Михаил СЕНИЭЛЬ**
**Çырнисен пуххи. Тăваттăмĕш том. Сӳнми хĕвел.** Поэма. 1967—1987. — Шупашкар, 2015. — 352 с., портрет.

ISBN 5—87677—046—9

© М. Сениэль, 2015

# СӲНМИ ХӖВЕЛ

*Поэма*

*Маттуртан та маттур хӗрача, сана шырарӑм эпӗ мӗн ачаран! Кашни хӗр патне ҫывхармассерен, вӑл эсӗ пуль тесе, эпӗ ун умне кукленеттӗм, турӑ вырӑнне хураттӑм. Чӗркуҫҫи ҫинче тӑнӑ чухне ҫеҫ, эсӗ маррине асӑрхаса, чӑн турӑ вырӑнне суя турра пуҫҫапнине туяттӑм... Вара эпӗ ҫӗкленеттӗм те малалла каяттӑм.*

Петефи, «Ҫул ҫырӑвӗсем»

## УВЕРТЮРА

Эй, хӗвел, эй, ҫутҫанталӑк, ҫут тӗнче,
чӑрсӑр шухӑш тытрӑм, парӑр вӑй-хӑват...
Пурнӑҫ тӗнӗлӗччӗ Юрату ҫак ҫӗр ҫинче,
Халь йӗрет, типет вӑл пӳлӗм сӗмӗнче,
ӗмӗрӗ кӗскишӗн хуйхӑрать.

Ах, пулсамччӗ, юррӑм, сарлака.
Ах, пулсамччӗ ҫепӗҫ, ӑслӑ, тарӑн...
Юрату халь — вырӑн саракан
мӗскӗн сасӑллӑ хӗрарӑм тарҫӑ.

Сӑмахне чӗнмешкӗн те хӑрать.
Урама тухсассӑн та вӑрҫаҫҫӗ.
Ҫутӑ кун та уншӑн хуп-хура.
Ҫук, хӗр мар вӑл, ҫук, — хӗрарӑм тарҫӑ.

Юрату шăпи — салху камит:
вилмесен, чĕрех-мĕн юлмалла.
Юлĕ тейĕпĕр... анчах, ами,
мĕнлерех вăл сывлĕ малалла?

Йышлăн-и палласçĕ халь ăна?
Йышлăн-и пĕлесçĕ, хĕрхенесçĕ?
Йышлăн-и сиксе хутне кĕресçĕ?
Мĕскерле шутлать хăй самана?

Эп çакна кăшт калама пултарăп
хам мĕн курнă, хам мĕн илтнĕ пек.
Эп Юратăва чăн вилĕмсĕрлĕх парăп.
Чим... пăхса илер эппин тĕпе.

Кăшт кăна çулне-йĕрне тĕпчер те
паянхи куна килсе тухар.
Ялкăштăр, çунтартăр та пĕçерттĕр
чунăма çут çулăм, шĕл кăвар.

Хĕрĕх ĕмĕр. Шăп тăват пин çул.
Арçынсем влаçа ярса илесçĕ.
Çĕр çинче хĕрарăм хуçа чух
путлĕ пурнăç пулмастех вăл, тесçĕ.

Арçынсем тискеррĕн тыткаласçĕ.
Арçынсем туймасçĕ, ăнланмасçĕ —
хăрамасть вăйпа хăратнипе
ни тухатмăш, ни маттур пике.

Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр ăсатса,
ахлатать, çунать хĕрарăм-халăх.

Ҫав-ҫавах хăватлă та таса
чĕринчи тупа пек пăхăнманлăх.

Фараон, эх, мĕскĕн Эхнатон,
ма айван эс, ма ытла айван эс:
вăйпала кирек мĕскер ан ту —
Нефертити санăн пулаймарĕ.

Ху ăна епле юратнине
вăтăр пилĕк ĕмĕр витĕр эсĕ
кăшкăрса илттертĕн тĕнчене.
Мăшăру илтмерĕ. Вăл — «чĕресĕр».

Урăха вăл панă чĕрине.
Урăха йăлтах хăйне вăл панă.
Леш маттурĕ тăм ҫăрса йăпаннă,
тăмпала каланă чунрине.

Ҫĕр ҫинче ҫуралнă Юрату.
Пил сана, сĕм авалхи Египет,
пил, мухтав сана... Ҫав ҫурату
йывăр пулнă, теҫҫĕ, питĕ-питĕ.

«Ачуна» та йывăр пурăнма, —
пĕчĕк чух шеллерĕҫ, ачашларĕҫ,
ҫĕклесе мухтав юрри юрларĕҫ.
Ӳссе ҫитрĕ — хăврĕҫ, кирлĕ мар.

Юрату — шалти кăвар, ӳтри
вăрттăн вут — ăҫта, ăҫта эс ҫĕтрĕн?
Сансăр тĕмсĕлеҫҫĕ Греци, Рим.
Выльăх сансăр — Архилох, Пракситель.

Тинĕсри хăватлă тăвăл пек,
ак поэт чунне лăскарăн, çапрăн, —
ӳкрĕ вăйĕ-халĕ пĕтнипе
витĕр юратса арканнă çамрăк.

Каярах Праксителе йĕрлерĕн.
Скульптор путрĕ тарăн шухăша.
Ĕнтĕ, акă, Юрату кĕрлевĕ
куçрĕ ĕмĕте. Çын тăрăшать.

Тăрăшать вăл, тăрăшать... Çав ĕмĕт
хĕр пулать те тăрать... хумсенчен.
Пӳ, ăс-хакăл илемĕ йăлт çĕнĕ.
Çĕр курман кун пекне халиччен.

Скульптор вилнĕ. Пики вилес çук.
Çул иртет те килет тепĕр çул.
Юрату çеç иртмест те иртмест —
сăн-питпе те, ăспа та çап-çут.

Нихăш те ытларах чаплă мар —
ăсĕ те пит илемлĕ, пӳ-си те.
Чун тени ӳтре çеç пурăнать,
ӳтсĕр чун вăл чун мар. Вилĕ. Сивĕ.

Кирлĕ мар вĕсене вăрçтарма.
Ан вăрçтарăр, — пăсатăр, хуплатăр:
е ăс-кăмăл пуçлать мухтанма,
е пӳ-сийĕ мухтанĕ... Хăртатăр.

Ах, хăрхатăр, хуплатăр хура çĕрпеле.
Юрату ун чухне йăванать, çухалать.

Е вĕçет те каять çилпеле
инçете-инçете, мĕльюншар çухрăма.

...Савăнать, иртĕхет аслă Рим,
юратса тăранассăн сунмасть.
Асса кайнă, чакмасть, чарăнмасть,
ураганлă пушар — чĕрери,
ураганлă пушар — ӳт-пӳри.

Ливире миçе хăйăр пĕрчи,
тӳпере миçе çăлтăр (ан кул),
çавăн чул чуптусам, тет Катулл,
çиллĕ-тăвăллă эллин ачи.

Юратун вĕçĕ çук, хĕрри çук.
Ах, Проперций, Овидий, Вергилий...
Ухмаха ересле çуннă чух
чуптăвас та, тем те тăвас килĕ.

Юрату, Юрату çунтару.
Ах, Назон, пултараймăн, ан ашкăн, —
эсĕ хатĕр савма, чуптумашкăн,
çĕр çинчи пур хĕре пĕр тăрук.

Поэтсем поэтла юратаççĕ.
Император-тиран — хăрушла.
О, Нерон! Эсĕ мĕн шухăшлан?!
Аннӳне эсĕ... арăм тăвасшăн.

Савăнать, савăнать аслă Рим.
Юратса тăранассăн сунмасть.
Асса кайнă, чакмасть, чарăнмасть,

ураганлă пушар — чĕрери,
ураганлă пушар — ӳт-пӳри.

Киленеç пӳ-сие, сăн-пите юратса.
Киленеç ăстăна, кăмăла мухтаса.
Çут тĕнче кăвапи вăрçă мар,
халăх мар-мĕн —
хĕрарăм,
Юрату.
Вăл çеç çулăм пек çутă, таса.

Юрату — пурнăç тĕнĕлĕ. Унăн тавра
çаврăн, çаврăн, тĕнче, хытă çаврăн.
Икĕ çын пĕр-пĕрне юратни, икĕ çамрăк,
пул яланлăх эс, пул мухтавра.

Пил сана, шанчăклăх, кӳлешӳ.
Нихăçан та ан ирт, Юрату.
Пил сана, хирĕçӳ, килĕшӳ.
Пил сана, юрату-ырату.

Ах, чĕре ыратать, ыратать,
çавăрать, çĕмĕрет пуçăма.
Ах, чĕрем ыратать, ыратать, —
Юрату пĕтес пек туйăнать.

Пурпĕрех пил сана, пил сана.
Пил сана, Юрату-савăнăç.
Мĕншĕн эс хăш чухне — пыл-сăра?
Мĕншĕн эс хăш чухне — наркăмăш?

Пĕтеймерĕ-мĕн-ха, Индине
ак тухать те тарать.

Йăлăхсан, сар Арави енне
тапранать.

Çурмаран ик пая уйăрса,
ӳтне çеç гимнсем кĕвĕлеççĕ.
Юрату ыткăнать Прованса —
ăстăнне мухтаса киленеççĕ.

Тĕнчере вăл çӳрет те çӳрет
килсĕр-çуртсăр. Темле те чĕнеççĕ.
Пулнă, теççĕ, Платон — ыр чĕре.
Хăй кайни — тахçанах.
Тусĕсем — иртĕхеççĕ.

Айкашаççĕ суйса ĕмĕртен ĕмĕре.
Пĕлĕтрен те çӳле çĕклесе аслăланă
Юрату мĕлке çеç халь.
Пӳрен
ăстăнне уйăрса, çын ӳтне лапăртанă.

Çара ӳт курăнни пысăк намăс.
Лапсăркка çипуçа çĕртенех сĕтĕрсе
кĕлтуса çӳресен çеç хурламĕç:
чуптуни — вĕççĕр çылăх, тесен.

Чун çеç чаплă, ӳт-пӳ йĕрĕнчĕк,
ирсĕр, теççĕ.
Вăтам ĕмĕр — çветтуй иезуит —
ӳт-пĕве тĕллесе, ăстăна вĕлересшĕн, —
пĕтĕм ĕмĕрсенчен чи суйи.

Сывлăшсăр çил çук пек, ӳтре çеç чунăн пӳт.
Ӳт вăл чун, чун вăл ӳт.

Ӳтсĕр чун — вилĕ чун, вилĕ чун — вилĕ ӳт.
Ăстăн та çаплаллах... Кăсăк шӳт!

Тăн чаксассăн, чун вăйĕсĕр мĕскĕн —
çын — вара мĕлкинчен те хăрать.
Ӳк, пуççап, асаплан, пĕшкĕн, пĕшкĕн,
çунассу килмесен тамăкра.

Те хĕрарăм эс халь, те арçын эс.
Те эс пур, те эс çук. Çук этем.
Пуç çинчи вут хĕрес, имĕш, çăлнăç.
Мĕскертен çăлăнан? Мĕскертен?

Этемсем çук пирки мĕлке мĕлкене
мĕлкелле юратса йăпанать.
Мĕлкелле çункалать, мĕлкелле ӳкĕнет.
Ачăпчи çеç ӳтрен çуралать.

Хăçанччен çакăн пек пулмалла?
Ку мĕскер катара?.. Ренессанс.
Çут тĕнче çĕнелет. Малалла!
Йыхăрать те чĕнет хавха сас.

Ку — Истори сасси. Нимĕн те
чулланса хытаймасть нумая.
Эпĕр те кайăпăр, килмĕпĕр.
Килесси те — килет те каять.

Юрату çеç иртмест те пĕтмест.
Мĕн тери хĕн курсан та, тӳсет вăл.
Ик пайран пĕр пайне тиркесен те,
пĕтĕмпех тиркесен те вилмест.

Пĕлĕтсем хуплани хĕвеле хăруш мар.
Çил-тăман ахăрни хĕвеле хăруш мар.
Турăпа хăратни хĕвеле хăруш мар.
Вилĕмпе хăратни те ăна хăруш мар.

Эп ыйтатăп айван сăввăма хĕрхенме.
Эп ыйтатăп кăштах малалла итлеме.
Уçă чунлă пулмашкăн ыйтатăп, —
юратан чĕрене чĕрĕрпе итлеме.

Паттăр яш пек тухать Ренессанс.
Ылтăн ĕмĕр! Анчах — нумая-ши?
Мĕлкене вăл калла çын тăвасшăн.
Çын тумасăр, паллах, юрамасть.

Туйăм-сисĕм, кĕрле, кĕр-кĕрле!
Вут пек çунтăр тута, савăшу.
Кашни çын хăйне евĕр савма пĕлмелле.
Юрату савнăçĕн вĕçĕ çук.

Юрату — ирĕклĕх. Ху кама эс савасшăн,
сав, юрат, сирпĕнсе, арканса каяс пек.
Мĕлкене Ренессанс çын тăвасшăн.
Тăрăшать чунĕпе, юнĕпе, ăсĕпе.

Иртерех-мĕн... Ай-хай, иртерех çав.
Темĕскер çитеймест, çитеймест.
Темĕнле вăрттăн вăй хĕстерет-çке.
Мал енче — те чĕрес, те хĕрес.

Вăл та мар, ку та мар, — Тивĕç, Тивĕç.
Тимĕр тăлă пек Тивĕç выртать.
Юрату тек кулмасть, сӳнчĕ, сивĕ.
Хĕвеле хупăрлаççĕ пăрпа.

Пăр ирĕлет те — куççулĕ, куççуль
шăварать хĕвеле, йĕпетет хĕвеле.
Çиçме мар, типшĕрме майĕ çук
ни çулла, ни хĕлле...

Çĕнĕ ĕмĕр — вунтăххăрмĕш ĕмĕр.
Юрату хĕвел мар, Афродита та мар.
Юрату — пуясси. Юрату — ылтăн-кĕмĕл.
Урăхла ĕçсенче те аван.

Юратун кĕтӳпех курайман тăшмансем.
Киленӳ çӳпçи теççĕ ăна, проститутка.
Вăл — чура та тиран — ярса тытнă
арçынна майĕнчен.

Усă куртăн — тавай, пар укçа.
Качча илтĕн — тавай, туп укçа.
Укçа çук-тăк, патне пыраймастăн.
Мĕскĕн те Юрату, пурпĕрех-ха — хуçа.

Тепĕр ĕмĕр тата хăрушрах.
Пуçĕнчен çĕрнĕ-çке çакă ĕмĕр.
Салху Блок татăлать-шухăшлать.
Çамкинче, куçĕнче — çăлтăр хĕмĕ.

Юрату вăл кĕтет тем пекех.
Килчĕ леш, ӳкрĕ те чăлл! çухалчĕ.
Шатăр! хуçăлчĕ Блок чун çуначĕ:
кĕççе питлĕ-мĕн Кĕтнĕ пике.

«Çĕр çинче Юрату çук», — поэт кулянать.
Юрату? Пур. Анчах — аçапа ама пек савăшни.
Вăратмасăр пуçа, кăмăла
машшина машшин пек «юратни».

Юрату — вилес пек, анчах чĕрĕ.
Юрату — юратусăр. Йĕрет кунĕн-çĕрĕн
çĕтнĕ вăй-хăватне, илемне тĕттĕмре шыраса.
Юрату — вилес пек... Ăна — тивнĕ сĕрĕм.

Ак çапать, шарт! çапать аслати, — юнлă вăрçă.
Кĕррĕс! Ух! Ухлатать те кĕрлет.
Юрату ахлатса пуçне пăрчĕ —
лаплатать те ӳкет месерле.

Тĕнчепе икĕ çил вĕрсе иртрĕ
Ирĕклĕх, Юрату кĕввисем юрласа.
Ĕмĕрĕн çĕрĕкне вăхăт çитрĕ
тасатма, типĕтсе те хырса.

Çав çилсен юрăçи Маяковский,
çав çилсен вăйĕпе, сипĕпе антăхса,
çил çинче Юрату кĕтнĕ майăн курать-çке:
Юрату чĕрĕлнĕ, çухалать ал тăсса.

Шырасан, шырасан, ниепле тупаймасăр,
виçĕ пинмĕш çулта тĕл пулма шӳтлесе,
револьвер кĕпçине тинкерет çунтараслăн...
Ах, ытла та хивре-çке, хаяр-çке çилсем.

Культ текен эсремет сиксе тухрĕ.
Этемре сăн-сăпат çĕтрĕ питĕ —
пĕчĕк винт, механизм урапи вăл.
Винтсене ĕçлетет çулпуç-турă.

Майĕ çук винттăсен юратма.
Сăтăра, тепĕр вăрçă кĕрлерĕ.

Хыççăн тиврĕ çĕре сыватма.
Юратма тĕл килмерĕ, килмерĕ.

Çĕрĕ кăшт сывалсан, тасалсан.
Ун чухне çуралса, хальсенче эп йăл илтĕм.
Сăн-сăпат — палăрать. Тĕссĕр мар — сăнăм-питĕм.
Чун-чĕре те хăй майăн тăрать çуталса.

Çăлтăр пек куçăмпа пăхрăм та, пăшăрхантăм:
пӳлĕмĕн сĕмĕнче, тĕпĕнче,
Юрату типнине-çуннине эп куратăп...
Ах, хăçан... мĕн тума килнĕччĕ?..

Васкаса вырăнсем саракан
мĕскĕн сасăллă тарçă,
ĕмĕрсен саккисем сарлака,
санăн ансăр çав, сан вăрăм мар çав.

Сăмахна та чĕнмешкĕн хăран.
Урамра та вăрçаççĕ, вăрçаççĕ.
Çутă кун та сана хуп-хура.
Çук, хĕр мар эс, хĕрарăм тарçă.

Йышлăнах палламаççĕ сана.
Йышлăн пĕлеймеççĕ, хĕрхенмеççĕ.
Йышлăнах сиксе хутна кĕмеççĕ.
Самана шеллет, пĕр самана.

Мĕншĕнне кăшт калама пултарăп
хам мĕн курнă, хам мĕн илтнĕ пек.
Юрату... Эс вĕççĕр аслă, тарăн.
Ачаран эс манра — Хĕвел пек...

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

### 1.

Аставап-ха, пиллĕк-улттăрах
кăмăл манăн хăвăрт хуçăлатчĕ,
кăшт тăрăхлани е хытăрах
сăмахпа чĕнни те макăртатчĕ.

Çывăрма выртсан, çĕрле, куçа хупсан,
тĕттĕмре, тĕлĕкре мар, ĕретĕн
шăл йĕретчĕ тĕрлĕрен усал,
курăнатчĕ куçăма темтепĕр.

Хăраса шари! çухăрнипе
асанне шартах сикетчĕ. Çавăнтах
хăй çутса турра асăнсанах
йĕксĕксем таратчĕç вăрă пек.

Хăй сӳнсен, килетчĕç çĕнĕрен...
Ку галлюцинаци пулнă. Пурнăç
тамăкчĕ вăл маншăн. Чĕрене
ун чухнех вăл мĕн тери хыт çурнă.

Çӳç касма тытатчĕç — çухăраттăм,
çĕçĕпе мăйран пусаççĕ пек.
Айкашатчĕç патăмра тăваттăн,
кăкарса хурса пиçиххипе.

Пиçкаçан тесе, атте хĕнетчĕ
хăй те, эп те ăшша пиçиччен.
Тĕпелте анне вăрттăн йĕретчĕ.
Эп çунаттăм тăн çухаличчен.

Асанне хута кĕретчĕ те,
пуçланатчĕ харкашу. Анне:
«Ачана эс шăнтса пăсрăн, — тет, —
эсĕ илтĕн, — тет, — ача чунне».

Асаннийĕ ылханать вăрçа.
Çăкăр çук, сĕт-турăх çук пирки
пĕчĕклех хавшарĕ, тет, ача.
Саманан пулмарĕ, тет, йĕрки.

Кăкăр сĕчĕ те курман, ялан — чăмлак.
Ĕмĕртме пыма инçе тĕнче хĕрне —
Атăл патĕнчи окопсене.
Мĕншĕн кайрăн, тет окоп чавма?

Чунĕ кӳтнипе чăлах атте,
чарăнăр! тесе, сĕтел çапать.
Эп тухса тарап Валюк патне,
кӳршĕ хĕрачи патне чупап.

Унпала выляттăмăр манса
инкеке. Ик çул вăл аслăрахчĕ.
Букварьсем хуратчĕ кăларса.
Хут та, кăранташ та кăларатчĕ.

Вулама вĕрентĕм. Ӳкерме.
Иккĕнех ӳкретпĕр урамра та.
Пурăнăç пулса çитсен тĕрме,
ĕнтĕ ун патне кăна таратăп.

Пиччĕш пур, Çеруш, самай ача,
Вăл илет пире хăй хӳттине.

Кирлӗ-тӗк, хаяррӑн ҫапӑҫать —
тивтермест нимле пуҫтахсене.

Тӗлӗнетӗп: ҫав тери хавшак эп.
Ҫын туйманнине туйса-киссе,
ним ҫукран та кӑмӑла хуҫатӑп.
Кӑн! пӑхса илеп, шартах сиксе.

Тӗлӗнеп. Анчах та нихӑҫан
эп сехре хӑппи туймастӑп. Мӗншӗн?
Чунӑм ыратать. Хуйхи ҫурать пуҫа.
Хӑраса чӗтрени ҫуккӑ. Мӗншӗн?

Чӗререн шеллетӗп аттене —
эпӗ мар пек, вӑл патак ҫиет пек.
Чӗререн шеллетӗп аннене,
вунӑ хут, ҫӗр хут шеллетӗп.

Мӗскере-ши ҫакӑ пӗлтерет?
Асанне те ҫывӑх, питӗ хаклӑ.
Мӗскере-ши ҫакӑ пӗлтерет?
Вӑйсӑр эп. Ҫав вӑхӑтрах хӑватлӑ.

Тӑнлӑрсам, тархасшӑн ӗненсемӗр:
мантӑм эп туйма ҫак вӑхӑтра
хам ача ҫеҫ иккенне. Вара
чӗрере ҫуралчӗ ҫӗнӗ ҫемӗ.

Пулчӗ вӑл тӳрккеслӗх, пӑхӑнманлӑх,
пуҫ усмасӑр шанни хама хам.
Тарӑнра, таҫта шалта сулмаклӑн
янӑрать манра вӑл халь те.
Халь...

Халь, паллах, урăхларах. Анчах та
васкар мар-ха. Йĕркипе калар.
Пулнă эп ун чух ачи ачах, тен,
кăмăл-шухăш çеç — ачалла мар.

Валюкпа тек кăсăк марччĕ ĕнтĕ.
Аппа вырăнне, букварь, пуканесем
парнелетчĕ. Вĕлеретчĕ вĕрентсе.
Тавлашса хĕрачана кам çĕнтĕр?

Мĕн çинчен унпа пуплемелле?
Пиччĕшне те эп чун уçаймарăм,
çӳреме вара çапах ялан пĕрле
уллаха-мĕне çӳре пуçларăм.

Икĕ килĕ урлă Ляванттин
амăшĕ таçта çĕтсе çӳретчĕ.
Çĕр выртма пырса, çур ял ачи —
тĕнчене манса — юмах итлетчĕ.

Çавăччĕ уллах. Эпир «сӳнсен»,
çерушсем тем вăрттăн, пăшăл-пăшăл,
Лиза, Вера текелеç çемçен,
шухăша кайса, çав тери ăшшăн.

Илтрĕм эпĕ: вĕçкĕн Микула
класĕнчи хĕре савать пулать.
Туйрăм эп: Саппаттăл Ляванттин
тусĕ — çиччĕмĕш класс хĕрачи.

Итлесессĕн, чун киленмелле.
Мĕн тери ыр вăрттăнлăх, шăп, çутă.

Вăрттăнлăх-и, мусăк темелле.
Ах, сиплет чуна, ах... Ун пекки ним çук-тăр.

Иккĕмĕш класра усал-тĕсел
çĕрлесем темех тухас темерĕ.
Асанне, мана упрас тесе,
пурпĕрех хĕрес хурса çӳрерĕ.

Хальсенче — хуплатчĕç тĕлĕксем.
Пĕринче, «уллах ларса» килсессĕн,
эп шартах вăрантăм тĕлĕнсе:
хама хам та ним кала пĕлмесĕр.

Вăрансан та — çуммăн тăнă пек,
сăн-питне куратăп, сассине илтетĕп.
Çырă хĕрача... Чĕнетĕп ячĕпе.
Хушамачĕпе хĕре чĕнетĕп.

Тĕлĕк те, тĕлĕк те мар, пасса.
Нина Алшигусти! Алшигусти!
Халĕ çеç тăраттăмччĕ пăхса.
Чим-ха... Нина мар, Инанга Густи.

Алшигусти... Чăн. Тĕп-тĕрĕсех...
Пĕр каяп шурса, пĕр хĕрелсе.
Сивĕ тар тапса тухать, хăратăп,
çĕнĕрен Инангăна куратăп.

Эй, сăваплă, чаплă курăну!
Ик алла тăсса, патна пырасшăн пултăм.
Çаврăнтăн та утрăн. Юлтăм, юлтăм.
Чарăнма эп ыйтрăм, чарăн, ну...

Çăлтăр куç çути чуна витсе
юлашки хут йăлкăшса илсессĕн,
çырă çӳç çути малта сӳнсессĕн,
ятăм эп ĕсĕклесе йĕрсе.

Чунăмра тем татăлчĕ, çухалчĕ.
Темĕн чул чупсан та тупас çук.
Тутлă-тутлă ырату саманчĕ
чĕрере тек вутлă пулас çук.

Хыçалтан каясшăнччĕ, йĕр çĕтрĕ.
Тĕлĕкре çеç курнакан çынна —
чăнлăхра ăçтан йĕрлен ăна?
Пĕтрĕ шанчăк, пĕтĕмпех вăл пĕтрĕ.

Чĕрене хăвпа эс илсе кайрăн,
чунăма хăвартăн пуш-пушах.
Иккĕмĕш класрах эп Гамлет майлă, —
курăнап салхуллă, ăш пăшать.

Калаймарăм мĕн калассине.
Эсĕ çеç тĕпрен ăнланайса
итлĕттĕн те чунăн сассине,
темĕншĕн ытла хурларăн çав.

Çук, çапах та эпĕ лăпланмарăм.
Каярах, кăшт хуйăх сĕврĕлсен,
чун тĕпне вырнаçрĕ пăхăнманлăх,
çĕтнĕ çĕрсенчен калла килсе.

Чăнлăхрах тупатăп, чун сисет,
кайрăн-тăк, каях эппин, ан кил эс.

Тĕлпулушăн вĕççĕр çуннисем
манăçаççĕ. Пулнă-иртнĕ. Кивĕ...

Хурсене пăхма кайсассăн, куртăм:
эх, вылять-çке Йӳплĕ Нинипе
хулалла тумланнă пĕчĕк сарпике.
Куртăм та, шурса чĕлхесĕр пултăм.

Ушкăн-ушкăн, ушкăн шурă хур,
сирĕнпе шавласлă шухăш пур.
Шавлăпăр хăна-хĕр илтмелле.
Шавлама пĕлместпĕр-и элле!

Çаврăнĕ те пăхĕ тĕлĕнсе.
Каçхине, тен, тĕлĕк тĕлленсен,
хурсемпе пĕрле кăштах мана та
куç умне ӳкерессе шанатăп.

Хурсемпе нимех те ĕç тухмарĕ.
Йӳплĕ тусĕ ман енне пăхмарĕ.
Чим-ха, шăрçалас эппин çыру.
Хуршăн савăнма вăл мĕн... ухмах-и?

Çав каçах шăрантарса илетĕп.
Ик эрне иртет. Ятне-шывне пĕлеп те,
Йӳплĕ хăнине тытатăп, айтуру!,
ним кала пĕлместĕп. ак пăру.

Тепĕр кун килет хитре ответ:
«А любви на свете больше нет».
Пĕтрĕм: çĕнĕ Йӳплĕ майралла «çыхать».
Эпĕ вырăсла, тем чухлаймастăп-ха.

Ăнăçмарĕ-ха капла. Ăçтан
тăххăртах эп вырăсла пĕлем?
Кăшт тăхтар-ха: тен, Алькка чăштах
хăй вĕренĕ чăвашла. Хуллен...

Çакăн пек сĕмленнĕ хушăра
кăмăл темшĕн сӳрĕлчĕ те кайрĕ.
Урăх сăн халь чуншăн ăшăрах, —
куç умне ытарайми тухайрĕ.

Ун çинче çеç шухăш, ун çинче.
Ун кашни хусканăвнех сăнатăп.
Ун кашни кулли — чун патĕнче,
уçă сассине чунран саватăп.

Вăл пур чух кăна класра тăрас килет.
Вăл çук чух часрах киле тарас килет.
Пĕтрĕм эпĕ. Чăнласах пуль пĕтрĕм.
Пĕтĕм савнăç çавă, пур тивлет.

Шурă пурçăн ленттă, çырă çӳç.
Йăрăс хăмăш пӳ те хăмăр куç...
Çăпата сырмастăп тек, анне.
Халиччен юратчĕ... Тавтапуç.

Халь каймастăп шăтăк сумккăпа,
çӳреместĕп çĕтĕк Çумкка пек.
Илсе пар ботинка та костюм.
Тилмĕрсе ыйтап, май çуккипе.

Ах, кама шанас-ха, ах, кама?
Тен, хăйне малтан каламалла?

Ăнланаймĕ çав, кӳренĕ, ятлĕ çеç.
Ялкăшап вутра, мĕн тумалла?

Урăх ачапа пĕрле тăрса,
урăх ачана итлет пулсан,
вăрттăн кӳлешсе халтан каяп:
çав кашни самант мана — асап.

Ăслă та сăпай пулас килет.
Ырă та хастар пулас килет.
Çӳллĕ те хитре пулас килет.
«Пиллĕкпе» çеç вĕренес килет.

Пуринчен малта пулас килет.
Тĕнчене тĕлĕнтерес килет.
Тытрăм-çыртăм, ак, нихçан çука,
интереслĕ сăвă «Качака».

Хыççăн, акă, савăк «Çуркунне»
ярăнса тухать стенхаçатра.
Тĕлĕнтертĕм, терĕм, тĕнчене,
хĕрача çеç тĕлĕнмест çаплах.

Вуласа пăхин хуть, тупата.
Çуркунне çитет те, юратап
эп хĕре татах та хытăрах:
тĕлĕк, чăн, — ялан умра тăрать.

Хӳтĕлĕп ăна кирек камран.
Тăрăшăп пăрма усал кунран.
Уншăн пурнăçа эп пама хатĕр
унсăр пурнăç пурĕпĕр çукран.

Эй, Мария, чи таса тивлет,
сан ҫинчен ҫур сив сăмах илтсен те,
ҫав сăмах илтĕнессе сиссен те,
тарăху чуна кайса тивет.

Ах, епле сана ҫавна калам-ши?
Ах, кама шанса евче ярам-ши?
Ҫулăмпа ҫунан чуна, пĕве
мĕн сапса мĕнпе кăшт пусарам-ши?

Эпĕ — эс пуласшăн. Эс пул — эп.
Ман пекех юрат, ман пекех тĕлĕн.
Ун чухне ҫеҫ, ун чухне ҫеҫ пĕлĕн —
мĕншĕн юратусăр ҫын пĕтет.

Эп сана юратнăран пиччӳ
пулчĕ-тăчĕ манăн ҫывăх тус.
Эп сана юратнăран чун ҫук
аннӳне тем пуласран. Асту...

Эп сана манайманран каҫ-каҫ
хуйхăратăп уйăх ҫутинче.
Эп сана юратнăран юрлаҫ
шăпчăксем ялҫум вăрманĕнче.

Эсĕ пуррине пĕличченех
тĕлĕкре эс курăнтăн мана.
Ҫĕтрĕн те, эп юлтăм пĕчченех.
Килтĕн те ҫĕнрен, мĕн тумалла?

Хал ҫитмест-ҫке нимĕн калама,
вăтанатăп, именеп.

Шухăшлатăп, ак, çыру пама
каçхине.

«Виççĕмĕшĕ ытлашши» вăййа
кĕрхи уйăх çутинче
хĕрттерсе вылятпăр-çке, ай-яй,
магазин урамĕнче.

Вăрттăн тыттаратăп çырăва.
Кăлт! кăлт! кăлт! сикет чĕре.
Çĕрĕпе пултараймастăп çывăрма,
шухăшпа тулта çӳреп.

Ĕнтĕ кĕчĕ пысăк уйăх кантăкран —
кăнтăртан.
Хăпарать майпен çӳле-çӳле —
Савали йăмри çине.

Куçăмсем пăхаççĕ таçталла
çĕрĕпех.
Çакă вăхăтра Мария та çапла
ларать пек.

Çырăва вуланă та, ларать
уйăхпа ачашланса.
Йăл кулать вăл, хăш! сывлать юратнăран,
йăлт каять çунатланса.

Ирхине ирех шкула килет
вирхĕнсе.
Йăлкăшса илет, куçран пăхса илет
вăрттăн çеç.

Ыйхă вĕçрĕ. Тертленетĕп.
Ах, хăçан,
шуçăм, шуçăм, илемлетĕн
тухăça?

Тепĕр кун Мария пымарĕ шкула:
сехетрен-пĕр чупать, тет, тула.
Чир-чĕр курăнса килмест куçа,
пурнăçра вăл темĕн те пулать.

Вилнĕ кайăк пек, лап! ӳкрĕ эрнерен
умăма хам çырнă леш çыру.
Кĕç тытса çурать — хаяр Марьен
сăнĕ-пичĕ. Мĕн ку? Атăру!

— Йĕксĕк, — тет, — çынран кулмалăх пулнă,
парăп эп сана... кăтартăп кулă.
Класс тени çакна çавтер хавас —
çырăва саспа вулать «А» класс.

Аслăраххисем пĕтсе кайса,
кĕçĕнреххисем чăхăлтатса
ахăраççĕ, ахăраççĕ, ахăраççĕ.
Эп тухса таратăп хăраса.

Пытанатăп тем вăрланă пек.
Вăтанатăп намăс тунă пек.
Макăратăп чун хурланнипе,
ĕсĕклетĕп вăрттăн çĕрĕпех.

Хуйхă чух ман сăвă çырăнать.
Хуйхă чух ман купăс каланать.

Тек шкула каймастăп, кайччăр марьесем,
пурпĕрех таратăп хулана.

Виçĕ çул вĕрентĕм — сахал мар.
Иккĕпех атте, ав, çухалман.
Уллаха çӳретĕп, уллаха.
Аннесем йĕреççĕ уласа.

Кăкарса хурса ватать атте,
çунтарать чĕре çурăлас пек.
Чăтма çук. Шăрса ярап... Каç пулать те —
ӳсĕр таврăнатăп вилес пек.

Ӳсĕре атте тивмест. Кайран,
тепĕр кун лекет. Аран-аран
сĕтĕретĕп шăмшака. Типетĕп.
Тислĕк тасататăп картара.

«Пуççăр юланут» вулатăп каçхине.
Хулана епле тарассине
уççăнрах та уççăнрах куратăп,
хăвăртрах! тесе чуна хĕнеп.

Пичкерен резина пыршăпа
сăвăрап та сарă сăмакун,
çăварти çав ырă шăршăпа
кинона пыратăп шăматкун.

Çанă пек  чикаркка пĕтĕрсе
тĕтĕрсе тăрап коридорта.
Клуб хуçи, пĕр йĕксĕк, çĕтĕлсе
хăлхаран пырса туртать.

— Мĕн, пушар ярасшăн-и, бандит!
Тен, тăвар ярасшăн мотора?
Вунпĕртех кам ĕçтĕр, кам ачи?
Кай кунтан, вĕçтер, мĕскер тăран!

Кайрăм та... тек тăраймарăм эп.
Вилес пек ахлатрăм виç эрне.
Пĕр лекеп эсрелĕ аллине,
тепĕрре хаяррăн вĕçернеп.

Аташни иртсен, тăн таврăнсан,
умăмра куратăп пукане-куян.
Хураçка та пур. Ларать хăлха усса,
эп чĕрĕлессе кĕтсе, пăхса.

Юнашар атте кулса тăрать,
юратса анне çӳçе турать.
Крушкă тытнă асанне: «Сĕт ĕç-ха, — тет, —
тин вĕренĕ, ĕç астăварах».

Кăмăл хуçăлать савăннипе.
Тăнăм çухалать пăлханнипе.
Тепĕр ик кунтан, ним пулман пек,
шкулалла утатпăр аннепе.

Виççĕн çеç класра: Марье, Нинук та эп.
Шăл çыртатăп, курăпăр, тееп.
Манăн пĕр «тăваттă», ыттисем йăлт «пиллĕк».
Иртесех тесессĕн, иртееп.

«Пиллĕкпе» пĕтет тăватă класс.
Асанне мухтать, мухтать анне те.

Иртнине эп шăппăн асилетĕп.
Манăçмасть иртниййĕ, мĕн тăвас.

Ман ӳссех пырать сăвă тетрачĕ.
Вăрттăн вĕренетĕп ташлама.
Вĕренеп те, концертра кураççĕ —
ташăç эпĕ, ташăç, бандит мар.

Ăмăртса калатпăр Лявапа,
кӳршĕ ачипе, хуткупăс.
Ĕнтĕ пусрăнчăк эп, чунăм хупă,
хама хам эп халĕ йăпатап.

Ӳкереп хăш чух ӳкерчĕксем —
ахлатать анне: «Чисти хăй пек
тухнă асаннӳ, пăх-ха, — тесе.
Шăллăм та, анне хăй те «хăй пек».

Пĕринче ӳкертĕм Марьене.
Юлташне кăтартрăм та, пытартăм.
Чун хурланчĕ. Каçхине çытарăм
курчĕ эп каллех макăрнине.

Çаврăнать умра халь урăххи.
Урăх çырă çӳç чĕвĕл чĕкеçĕн
ман чĕре алăкĕнчен кĕресшĕн.
Йӳплĕ Нинукĕ тени. Хайхи.

Каçхине тыттарчĕç, ак, çыру.
Такмаксем çырса тултарнă. Кăсăк.
Вĕçĕнче чернил тумланă пысăк
пăнчă. Ыйтнă каçару...

Урама, пура патне пымашкăн
систерсе пĕтернĕ çыруне.
Мĕн тери хаваслăх çакă маншăн.
Чĕрере пуçланчĕ çуркунне.

Çын тĕл пуласран, тăкăрлăка кĕретпĕр.
Калаçмастпăр хамăр нимĕн те.
Çавăн пек çӳретпĕр те çӳретпĕр.
Ак эрне те, уйăх та иртет.

Кӳршĕ яш Çеруш, çакна пĕлсессĕн,
чут кулса вилетчĕ пирĕнтен:
«Мĕн туса çӳретĕр ним чĕнмесĕр?
Ак итле, аслисенчен вĕрен.

Малтанхи каçах ан пул эс харсăр.
Çăлтăрсем çинчен калаç, ытти çинчен.
Тепĕр каç ал пар куçран пăхса, кулмасăр.
Пăхса юл кĕрсе çухаличчен.

Эрнерен, ăсатнă чух, çитсессĕн
хулĕнчен тытса хапхи умне,
юратать-и, çук-и, ыйт та эсĕ,
ăнлантар ху ма юратнине.

Уйăхран кăна чупту. Ахаллĕн
хĕр писет, ясар ача тесе.
Çавă çеç. Ытти вăл урă халлĕн
тумалли ĕç мар, çавна пĕлсем».

Çеруша ĕненесех килмерĕ.
Эп пĕлеп Нинукăн кăмăлне.

Вăл та пĕлмест мар. Ĕнер-и,
хам каларăм. Хăй вăл именет.

Тепĕр кун пăхатăп та, Нинук
ним те хитре мар. Епле çавна
эп унччен асăрхаман? Çинук,
ав, самай чипертерех, чăнах.

Куç хыватăп, ак, Çинук çине.
Шухăшра эп ăна чуптăватăп.
Кăкрине, пилĕкне, ыттине
халиччен курман пек, куç чаратăп.

Нинукнах чупту тесе, Çинук
йышăнмарĕ, хăваларĕ ячĕ.
Йышăнмăсăн, сансăрах пурнаççĕ...
Пĕр шуйттан: хуть Çинук, хуть Нинук.

Пуçланать, ак, хайхи, тамаша.
Виç каçран ăсатап Натташа.
Вăл хăвать те — Чечек Зойине,
йăлăхап та — Пайур Верине.

Чуптутарчĕ пĕри çеç, Вери.
Ӳт-пӳри вут кăштах тамалсассăн,
илтрĕм эп, илтрĕм эп çирĕп сасă:
«Алшигусти камне мантăн-и?

Такама та çӳрен чуптуса.
Ма пĕлместĕн кăштах намăса,
куллен-кун хăвна ху йӳнететĕн?
Ма путмастăн çĕнрен шухăша?»

Ăнланатăп сана, çирĕп сас.
Ĕнтĕ халь урама та, клуба та
тек чупмастăп. Чун писрĕ. Мантăм.
Пĕр ахаль ма чупас?

Лăпкă музăсен артакĕнче
кӳршĕ-аршă Лявапа халь эпĕр
юмахсем, юмахсем кĕвĕлетпĕр
паттăр çын Йăван салтак çинчен.

Çапкаланчăк çил тулта улать,
кантăка тăман силлет кас-кассăн.
Пушкина вула-вула каç-каçăн
антăхса каятпăр, вут хыпать.

Акăш-макăш пысăк тăрăшулăх,
поэта тухма шут пур, ваçка.
Юн вĕрет, вĕрет тем чухлĕ шухăш,
шуйттанаваскать, текехваскать.

Хуть пĕрне тытса çăварлăхласчĕ.
Нихăшин ним чухлĕ çук йĕрки.
Тарăхса сурать çăварăм лачă.
Тусăн та темех каймасть екки.

Мĕн тăван... каллех çитеп клуба.
Кĕр-кĕрлет яш-кĕрĕм. Микула, Ваççа,
Лявантти, Çеруш, Эрхип ташша çапать —
кукăркаланса, ура хуçса.

Тусăмсем... Тăвата-пилĕк çул
аслăрах. Савкаç шкулне çӳреççĕ.

Хам çулхисемпе ман ăнмасть калаçу, —
тантăшсем çилле анчах кӳреççĕ.

Ярăнни, урок, кино, Тарзан
ачапча ухмахĕшĕн хаваслăх.
Пăрăнса иртеп клубра асăрхасан;
унăн-кун пăхатăп тĕл пулсассăн.

Чăтма çук кичем тантăшсемпе.
Йĕрĕнсе итлетĕп, лач суратăп.
Пухмалла та, тетĕп, пурсăра та
чĕчĕ памалла, теп, класĕпех.

Шакла пуçлă манкалюк туссем,
мĕншĕн нимĕн шухăшла пĕлместĕр,
вĕренме те лайăх вĕренместĕр? —
ĕлкĕреймĕр кашта пек ӳссен.

Сирĕнпе пике калаçма мар,
куç хӳри те ывăтмасть юлхавлăн.
Кайăр килĕре, — тытать мамма
Лявасен мунчи панче. Çухалăр.

Çакăн пек шутланă хушăра
çĕмĕрт куçлă хĕр мана ал пачĕ.
Виç-тăватă çул вăл аслăрах.
Алă пачĕ те чунра кăвар хăварчĕ.

Чун тĕпне пытаннă лăпкă туйăм
çиçĕм пек йăл-ял! илет çиççе.
Хĕр камне пĕлсех хама эп суйрăм:
чим-ха, ку Инанга-иç, тесе.

Çӳçĕ çырă, куçĕ çăлтăр куçчĕ.
Хăш çĕрте çӳрет манран тара-тара?
Акă вăл! Инанга Алшигусти!
Пăхрăм та, умра тăра парать!

Алшигусти... Чăн. Тĕп-тĕрĕсех.
Пĕр каяп хĕрсе, пĕр сивĕнсе.
Сивĕ тар тапса тухать. Хăратăп.
Чăн-чăнах, Инангăна куратăп.

Эй, сăваплă чаплă курăну!
Ик алла тăсса патне пырасшăн пултăм.
Ăшшăн кулчĕ те... эп юлтăм, юлтăм.
Вăхăтра эп турăм чарăну.

Хуйхăрни-пăшăрханни саланчĕ.
Макăрмастăп тек, малтанхилле.
Тутлă-тутлă ырату саманчĕ
чĕрене хĕрӳн хĕссе илет.

Калăп пĕтĕмпе — калассине.
Эсĕ çеç тĕпрен ăнланăн халь —
итлĕн тăлăх чунăн сассине,
итлĕн те ытлах хурламăн-ха.

Эпĕ — эс пуласшăн. Эс пул — эп.
Ман пекех юрат, ман пекех тĕлĕн.
Ун чухне çеç, ун чухне çеç пĕлĕн —
мĕншĕн юратусăр çын пĕтет.

Эс поэзи пул, ман пурнăç тупсăмĕ.
Юрату пул, Юрату-Хĕвел.

Дина ятлă эс, анчах та, тусăм,
эс Инанга пул. Малтанхилле.

Ăслă пул, маттур, хастар та çепĕç.
Хӳтĕле мана, урсан эсрел:
аннесем сан пек хыт хӳтĕлеймĕç
ахрата тĕксе сирпĕтесрен.

Эс аппа та пул. Эс пул юлташ.
Санăн... çывăх тус та пулмалла.
Пурнăç ятлă кăткăс кунçулта
эс хамран та хӳтĕле мана.

Пĕтерме пултарăп хама хам...
Эй, таса хĕр, ан ятла, ан ывăн.
Эп — анне куççулĕ, савнă ывăл —
яланах çунатăп хурлăхра.

Пул тăван çĕршыв. Пул пысăк парăм.
Пурнăç пул. Анне пек пул чечен.
Килĕшсен, ыйтатăп, пул эс арăм,
парнеле хĕвел пек ачасем.

Çакăн пек куллен шутлатăп. Мантăм
кил тĕлне. Шкултах урок туса,
çутăллах клуба тухса чупатăп.
Тĕттĕме кĕтме çавтер асап.

Динăна курсан, маттур сăмах та,
кулă та çĕтет нар пек питре.
Çĕрĕпех ытарайми сăнатăп,
çук, ытараймастăп пурпĕрех.

Никама та калас мар, хăйне те.
Кĕçĕр ахаль çеç хыçран кайса пăхас.
Купăсçă пуçлать те çепĕç вальс,
шухăшра хĕре ташша чĕнетĕп.

Çаврăнатпăр пек. Пике кулать.
Именмесĕр эп куçран пăхатăп.
Вунвиç çул нумай та мар, сахал та.
Тепĕр виççĕшне хушма пулать.

Çук çав... Дина ташлать Ваççапа.
Ăсатма та Ваççах йăкăртатрĕ.
Ав мĕнле... Пике каяс çулпа,
ĕмĕт-шухăш, ахалех юртатăн.

Виçĕ уйăх тилмĕрсен-çунсан,
Эрхипе каларăм хуйхăма.
Вăл итлерĕ, итлерĕ... Унтан
печĕ ячĕ хитре мар сăмах.

Эрхипе эп çапрăм янахран.
«Ну, ну, ну! Чипер хăтлан», — тус сурчĕ...
Çамрăксем саланнă яхăнра
курăнчĕ умра савниййĕн çурчĕ.

Эрхип тус засадăра. Эп, тем
шухăша кайса, чĕтреп, чĕтреп.
Шăппăн çывăхарчĕ ик этем, —
çитĕ Ваççана, халь — ман черет.

Мишавай Ваççи вунçиччĕре.
Çатăрланă-тытнă та хĕре,

тепĕр аллипе, сăмахсăрах,
пĕтĕрчĕ те илчĕ çухаран.

Эпĕ шаклаттартăм хысаран.
Пĕкрĕлчĕ. Эп тапрăм янахран.
Тăрăнса анатпăр юр çине.
Эй, Эрхип, васка засадăран!

Дина ытамланă Ваççана,
ман енне ярасшăн мар çунать.
Çывăхрах пике сăнне куратăп:
ырă, çутă, ăшă ман чуна.

Çитрĕ-тăчĕ те хастар Эрхип,
çĕтрĕ-ларчĕ хай Ваçça чĕлхи.
Йышăнтăмăр: «Хĕр кама сават —
хăй калатăр. Динăна — сăмах».

«Мишшана, — тет Дина макăрса,
Эрхиппе ман хушшăма тăрса.
Калама çук пысăк савăнăç.
Савнăç мар çав ĕнтĕ, наркăмăш...

Сӳнчĕ, çĕтрĕ, пĕтрĕ юрату.
Хĕмĕ çеç, шевли, мĕлки юлайрĕ,
хурланса выç анчăк пек уларĕ.
Кăмăл пăшăлтатрĕ: «Урăх туп».

Манаймастăп... Хĕл те иртрĕ акă.
Çуркунне, улт класс пĕтес чухне,
кунĕн-çĕрĕн çырусем çыратăп —
каскалатăп Дина чĕрине.

Хам вара Верук патне çӳретĕп.
Тараватַ — Верук, Пайур Вери.
Ай, тути, тути! Пылак сĕре те.
пĕçертет кăвар пекех вĕри.

Çӳçĕ йĕтĕн. Куçĕ кăн-кăвак.
Чăмăр кăкăрсем пӳске пек хытă.
Пилĕк. Урасем... Эп йăлт курап.
Кĕçĕр те йăлтах вăл хыванйă.

Анлă та тĕреклĕ пĕççисем
çумăма сĕртĕнсенех — асамлă
ток чупать ман тăрăх. Çӳçенсе,
савăнса сывлатăп эп. Сăваплă.

Тутлăн тĕлкĕшет ӳт-пӳ ялан
Верука çума лăпчăнтарсан,
мĕн тери таса пикен пӳ-си илемĕ,
мĕн тери тивлет унта иленнĕ.

Уйăх çутинче — шап-шурă мрамор
кĕлетке вăл, Афродита пек.
Кĕçĕр пӳртĕнче эпир пĕр хамăр,
витĕнсе выртатпăр çиттипе.

Аллăма кăкри урлах хуратăп.
урăх хăяймастăп тĕкĕнме.
Выртнă майăн ытарми туятăп —
пичĕ сĕртĕнет ман питĕме.

Пĕвĕмре — чи ырă, лăпкă музыка,
янăрать çап-çуттăн çуталса.

Савăнăç та — темĕн пысăкăш,
шухăш та — таса, таса, таса.

Пĕрле чух çапла. Пĕрле мар чух
мусăк, савнăç, тунсăх — йăлт тарать.
Чăнласах савма мĕн-ма хал çук,
мĕн çитмест, мĕскер чăрмантарать?

Ултă класс пĕтсен, каникулра
кашни кун шыва кĕме анусăн
шухă кăмăла сив ăс яр-уççăн:
«Верука пăрах», — тесе калать.

Ӳт ӳте тунсăхлани тăмарĕ
хăрнă хурăн пек пĕр вырăнта.
Çепĕç шăпчăк пек вăл вĕçсе кайрĕ
урăх йывăçа, çĕн турата.

Иртнĕ туйăмсем асрах пулин те,
кăмăлларăм Саврăш хĕрринче
палламан хĕре, хĕр чăрсăр питĕ,
чăп-чăпар купальник ун çинче.

Малтанхи хут çывăх курнăран-и
çарамасскере тăр-кăнтăрла,
пăхкалаççĕ ачасем хăранăн,
эпĕ те именчĕклĕ тăрап.

Пычĕ те хĕр ярăнса утса
пирĕнпе паллашрĕ, алă пачĕ.
Кулчĕ те, кулли — таса, таса.
Ячĕ те таса. Светлана — ячĕ.

Эп сăнарăм куç ыванăччен
хĕр-пикен кашни хусканăвне.
Эп юратрăм халăм пĕтиччен
линисен хĕрӳ ачашлăхне.

Умлă-хыçлăн чăмрăмăр йĕмпех.
Çӳллĕ çырантан сикет Светлана —
ярăнса анать вăл чĕкеç пек,
чалт! çеç çухалать шывра çуралнăн.

Тухрĕ. Хăйăр ăшĕнче эпир
юнашар выртатпăр, вырăсла пуплетпĕр.
Малашне — кĕтетĕп кашни ир,
кăнтăрла, каçпа. Ялан кĕтетĕп.

Килкелет хăш чух, анчах пĕрре
илтрĕмĕр хыпар: Светлана кайнă.
Йывăр хуйхă çапăнчĕ пире, —
хисеплеттĕмĕр хĕре чылайăн.

Хĕрпеле ăсанчĕ малалли.
Шухăша эп путрăм тарăн-тарăн.
Манăн пурччĕ тем каламалли,
темĕн чарчĕ, темшĕн калаймарăм.

Чун уçма шиклентĕм. Ĕненмерĕм
туйăмсен хĕвеллĕ уявне.
Аслăларĕ, йыхăрчĕ чĕремĕм
тĕлĕкри Инанга куллине.

Сарпике! Инанга Алшигусти!
Çутă çыннăм, ыр сăнар, синкер!

Çырă çӳçчĕ эсĕ, çăлтăр куçчĕ.
Таврăн эсĕ, кил эс, кăмăл уçчĕ,
тĕлĕкрен ан пул хура инкек.

Таврăнмарĕ, урăх курăнмарĕ...
Кӳршĕ Лявапа, туспа, вара
кĕнеке вулатпăр çырăн-варăн.
Юрату таврашĕ — манăçра.

Хур пăхатпăр. Прозăпа çыратпăр.
Юратусăр сăвă çырăнмасть,
юрланмасть пĕр юрă та, çавра та...
Инçе мар, вĕçлетпĕр çичĕ класс.

Çичĕ класс пĕтсен — Аксу (Шуршыв).
Педучилище. Анчах та вăтам шкул
кирлĕрех-тĕр. Педагогика шăрши
ӳпкере ахаль те — кашни кун.

Юратусăр çитрĕм хĕллене.
Юратусăр юлнă чĕрене
пăтратать мăнкăмăллăх, хаярлăх,
тахçантан упраннă пăхăнманлăх.

Шăл çыртса вĕçлетĕп çур çула:
пур предметпала та «пиллĕк» манăн.
Пустуя çапмастăп шашкăлла,
музыка çине халь шухăш кайнă.

Кĕвĕре шавлать-мĕн ик сăнар:
тинĕс,
тăвăл.

Юрласа кĕрлеççĕ,
баянран тухса сăвва кĕреççĕ,
çирĕплĕх кӳреççĕ сассăма.

Тинĕсĕ, паллах, паллах, ман чун.
Тăвăлĕ те манăнах вăл чун.
Марьепе, тет, Павăл пит юлташлă.
Динăпа Ваççах, тет, ыталашнă...

**2.**

Хулленех ӳсет хевте. Ӳсет
ăсăн-кăмăлăн хевти-хăвачĕ,
Сывлăхăм вара... Хĕрес хываççĕ —
юн сурсан ялан эп — аннесем.

Халĕ те хăш чух галлюцинаци
сив чир пек силлет, йыт пек тулать.
Тĕрлĕ йĕксĕк, темĕн тĕрлĕ сасă
чĕрене çурса хăруш кулать.

Ĕçнĕ хыççăн уйрăмах пит йывăр.
Эп ухмахшăн мар анне макрать.
Ăсĕ пулĕ, пултăрччĕ, тет, сывлăх.
Кулянать вăл сывлăхăм çукран.

Ан хӳхле-ха, ылтăнăм, итле-ха:
палласа эп илтĕм инçетрен —
çĕнтерме эп тухнă, эп килетĕп
çамрăк, яштака, кервен, хитре.

Хама хам курса, аннеçĕм, пĕлтĕм
эрехпе табакăн суйине.

Суяпа пурнас-тăк, эпĕ пĕтрĕм:
пăр çапать ăс-туйăм-сисĕме.

Вăйсăр ăс, кăварсăр сисĕм-туйăм
чĕрĕллех виле тусан мана,
пурнăçра вара мĕскер эп тупăп?
Мансăр мĕн хăтланĕ самана?

Тăшмана çĕнсе эп вилмелле.
Ачаллах ман чун юнпа пĕвенчĕ.
Ман поэт пулса кĕрлемелле,
чăвашсен поэчĕ, самана поэчĕ.

Кам суя — çавсем мана тăшман.
Çурма чăнлăх та хăруш тăшман.
Вăйсăр юрату — тăшман, тăшман.
Вăрçă, çарату, элек — тăшман...

Çын вĕлерекен — чи курайман тăшман.
Уççăн вĕлерет-и, вăрттăн, хăвăрт,
е вуншар, çĕршер çулсем кăшлать.
Вăл пур чух çак çĕр çинче — çĕр тăвăр.

Хĕвел пек хăватлă Юрату —
тĕлĕкри Инанга Алшигусти —
килтĕр çĕр çине, яланлăх куçтăр.
Мĕльюншар кĕрлетĕр Ылтăн туй.

Çавăн пек ман кăмăл. Пăхăр-кĕмĕл
туйсемпе кăна вăл çырлахмасть.
Юратсан мана савни мĕн ĕмĕр,
эп те ĕмĕр юратма хавас.

Çакăн пек хĕрӳ те сапаланчăк
шухăшсем пуçа пăтратнă май —
çав-çавах-ха чунăм çапкаланчăк.
Такăнап нумай, ӳкеп нумай.

Аксура та лăпкă пурăнмашкăн
хал çитмерĕ... Эпĕ кулленех
тăххăрмĕш класри тулли майрашăн
хама хам вăрçатăп, кӳренеп.

Пуçăмра шавларĕ икĕ лагерь:
шутламасăр, харăссăн, вĕри
хапăллать иккен хĕре пĕри,
тепĕри сивлет, мĕне пула-тăр.

Тинкерсе пăхап хĕр куçĕнчен,
ĕненме хĕнрех хĕлхем куратăп.
Сивĕ лагерь: «Кун пек туссенчен
пăрăнсассăн, — тет, — авантарах-тăр».

Тарăнри, шалти, чăнмарлăха
вăхăтра сиссе, вута кĕмерĕм.
Куç хĕлхемĕ (паллашу кĕперĕ)
халĕ — шанчăксăр хура хапха.

Чун артакĕ — çепĕç сĕрме купăс —
ма чĕнместĕн, сĕркĕчӳ ăçта?
Пĕтĕмех хапхи суя-и, хупă?
Чăннине шыра, тупса уçтар.

Ах, чĕреçĕм, чĕвĕлти чĕкеçĕм,
ан  мансам хĕвеллĕ кунсене.

Ан мансам, çав ыр кунсем чĕнеççĕ
умăма Инанга куллине.

Шурă юр шур акăш пек ансассăн
лачакаллă пысăк Аксăва,
ак, каллех, кулянчăклă таса сăн
çуттăн çупăрларĕ асăма.

Хаклă сăнара курма тӳр килчĕ
тепĕр тăххăрмĕш класа кĕрсен.
Сăнĕ те Инанга сăнĕ-пичĕ,
чун-чĕри те унăнах-и, тен?

Чун артакĕ — çепĕç сĕрме купăс —
ĕсĕкле, юрла, ак — сĕркĕчӳ.
Пĕтĕмех хапхи суя-и, хупă,
Юрату тĕнче пек аслă чух!

Ах, анчах...
Хуйхатнă шăпчăк-кайăк
мĕншĕн юрламасть-ши юррине?
Ах, чĕрем... Епле, епле манайăп
Алшигусти тĕлĕк иккенне?

Нихăçан, ним чухлĕ манмасан та,
ытарми Истомина — хĕвел.
Хуйхă та, шанманлăх та, асап та
çаврăнчĕç хаваслă пĕр кĕвве.

Эп, Истомина, сана каламăп
виличчен те хам юратнине.

Пĕр никам пĕлеймĕ те кулаймĕ.
Пĕлмĕп санăн чăн характерне.

Хам шутланă пек курса сана,
кăмăлун начарлăхне курмасăр,
чун-чĕрӳн ултавлăхне туймасăр,
ытларах эп çунăп, савăнăп.

Ан пăссам иллюзи ырлăхне,
час-часрах куçран пăхса илсемччĕ, —
хурлă куçусен таса илемĕ
ĕмĕре вырнаçрĕ чĕрене.

Эс, паллах, Инанга чухлĕ çук.
тусăмçăм Истомина... Эс пул-ха
унăн ыр мĕлки — ăш çуннă чух,
кăшт мана арканасран асту-ха.

Урамра вĕреççĕ лĕп çилсем.
Çил çинче, çур каçĕн сĕмĕнче,
тĕттĕмрен пăртакçă шикленсе,
çутă туйăмпа çӳреп пĕччен.

Ялăм-йышăм та, Мария та
куç умне тухать. Уç çил кас-кассăн
сывласа иртет те — лăпкă асăм
пăлханса каять, чун ыратать.

Çĕнĕрен эп витĕр юрататăп,
Марьене Инанга пек куратăп.
Ах, çилсем, эсир-и сĕркĕчсем!
Ах, чĕре! Итле-ха, итлесем!

Ан вутлан, хӗрӳллӗ сӗрме купӑс,
палласам илемлӗ ултава.
Марьене манма хӑюлӑх туп эс.
Манмасан — пӗтетпӗр, тӗп тӑвать.

Марье мар, Инанга Алшигусти
тухатса пуҫ ҫаварнӑ, пӗлсем:
тӗссӗр марччӗ ҫӳҫӗ, ҫырӑ ҫӳҫчӗ,
хӑмӑр марччӗ, ҫырӑччӗ — куҫсем.

Ҫырӑ ҫӳҫ ҫути малта сӳнсессӗн,
ҫӑлтӑр куҫ ҫути чуна витсе
юлашки хут йӑлкӑшса илсессӗн,
янӑччӗ эп хӳхлесе-йӗрсе.

Чунӑмра тем татӑлчӗ, ҫухалчӗ.
Темӗн чул чупсан та тупас ҫук.
Тутлӑ-тутлӑ ырату саманчӗ
чӗрере тек вутлӑ пулас ҫук.

Хыҫӗнчен каясшӑнччӗ — йӗр ҫӗтрӗ.
Чӑнлӑхра ӑҫтан йӗрлен ӑна —
тӗлӗкре ҫеҫ курнакан ҫынна?
Пӗтрӗ шанчӑк, пӗтӗмпех вӑл пӗтрӗ.

Пурнӑҫӑмӑн тупсӑмӗ Инанга,
ӳпкелетӗп сӑвӑ шӑратса:
вӗҫсӗр-хӗрсӗр тӗмсӗлтӗм, аркантӑм
ҫӗр ҫинче сана эп шыраса.

Миҫе хут хӑюллӑн улталантӑм
шанчӑка кӗлрен чӗрте-чӗрте.

Миçе хут, кала, миçе амантрăн
чĕрене? Чĕп-чĕрĕ юн — чĕре.

Эй, апрелĕн нӳрлĕ çилĕсем,
ма чуна юратрăр, ачашларăр,
илĕртрĕр... нимех те параймарăр?
Ма çĕнетрĕр, çӳллĕ çĕклесе?

Кил, Инанга, кил эс çĕр çине.
Çӳллĕ чунпала, чĕмрен кайса, кĕтетĕп.
Кил. Килсен — эп пур. Килеймесен — пĕтетĕп.
Кил те ан вакла тек чĕрене.

Эсĕ килессе курса çӳрем-ха,
кăмăла çӳлтен-çӳле çĕклем-ха.
Çур та иртрĕ, çу та. Кĕркунне
ылтăнне сапмашкăн пикенет.
Юнлă чĕрене малашпала сиплем-ха.

Кĕркунне. Аксу. Йĕтем.
Саккăрмĕш те тăххăрмĕш классем
сăвăратпăр, типĕтетпĕр тырă.
Эп салху çавтер. Мĕнле этем...

Тĕлĕнетĕп: çав тери хавшак эп.
Çын туйманнине туйса-сиссе,
ним çукран та кăмăла хуçатăп,
кăн! пăхса илеп, шартах сиксе.

Тĕлĕнеп. Анчах та нихăçан
эп сехре хăппи туймастăп. Мĕншĕн?

Чунăм ыратать. Хуйхи çурать пуçа —
хăраса чĕтрени çуккă. Мĕншĕн?

Чĕререн шеллетĕп тĕнчене:
эпĕ мар пек, вăл пĕччен çӳрет пек.
Чĕререн шеллеп савнисене,
ман чуна тивĕçсĕртен шеллетĕп.

Мĕскере-ши çакă пĕлтерет? —
пурпĕрех хăйсем пит çывăх, хаклă.
Мĕскере-ши çакă пĕлтерет? —
вăйсăр эп, çав вăхăтрах хăватлă.

Вăранать тӳрккеслĕх, пăхăнманлăх,
пуç усмасăр хама хам шанни.
Тарăнра, таçта шалта сулмаклăн
ялкăшать Инангăшăн çунни.

Тĕтрере виç нимфа асăрхарăм.
Нимфа çав, Инанга мар... Пĕрех,
куртăм та — сасартăк пĕтрĕ халăм.
Пĕринчен теприйĕ хитререх.

Çупăрларĕ юрату саманчĕ.
Çупăрларĕ те... часах саланчĕ.
Виç илем çути манра юлса
тек тĕлкĕшрĕ, тек çулăмланчĕ.

Вăрттăн пăшăлтатрăм эп: «О, нимфа,
ăнсăртран пулин те, аса ил-ха.
Анчах кĕллĕм мĕншĕн — пурсăра?
Мĕншĕн эсĕр виççĕр — пĕр сăнар?»

Илĕм-тилĕм çамрăк сăнсене
вĕççĕр-хĕрсĕр саврĕ тĕлĕкĕм.
Уйраймасăр виççĕрен пĕрне
нумайччен аташрăм, тĕлĕнтĕм.

Çаплипех ăсантăм праçнике.
Ялăма. Атьсем пуçарнипе
кăнтăрлах, Октябĕре кĕтсе,
куртăмăр клубра спектакль, концерт.

Тĕлĕрсе лараттăм хыçалта.
Кăсăк мар — те юрă, те макру.
Те вăрçаççĕ, те чăнах спектакль.
Хăшĕ санăн, Лява-тус, майру?

Чим, тăхта... Мĕскер çине пăхатăп?..
Ăçта çӳретĕр, шухăшсем?
Ах! Умăмра пике куратăп, —
тăп-тăрă, тап-таса куçсем!

Ялтлатрĕ вутлă хĕç пек çиçĕм,
ахлатрĕ тăвăл-ураган.
Эс пурнăç-и е хура вилĕм?
Мĕскер-ши курăп эп санран?

Асамлă сарпике! Тамара!
Юратрăм тунсăх сассуна,
çут уйăх сĕмлĕ куллуна,
çурхи каç пек чечен сăнна.

Курсассăнах, тӳрех вутлантăм,
унччен курман пулсассăн та.

Тамара, пурнăçăм Тамара,
илсем, эп — санăн аллунта.

Ялтлатрĕ вутлă хĕç пек çиçĕм,
ахлатрĕ тăвăл-ураган.
Уйăрайсан пĕр хура вилĕм
пултарĕ уйăрма санран.

Ан пул текех Лява савнийĕ,
ан пул эс Дина та Верук,
ан пул Çинук, Нинук, Мария.
Пул харăс пурте, пĕр тăрук.

Юрла, юрла, юрла, тăванăм...
— Лява, итле-ха, паллаштар.
— Кампа?
— Хăв майрупа.
— Тамара?
Халь мар... Куратăн вĕт — ăçта.

Çапла перкелешсе юлхавлăн
тăратпăр сцена хыçĕнче.
Туйсассăн та пуçа çухатнăн,
ним палăртмастăп çын çинче.

Юртан та шурăрах кĕпе,
кĕске те тăвăр хӳхĕм юбка...
Авкаланать хĕр, алă çупăр,
чунран киленĕр юррипе.

Хура та çӳçĕн хумĕсем
хулпуççисем çине анаççĕ.

Пăта кĕлеллĕ туфлисем
хитре урисене мухтаççĕ.

Шăк-шак! шăк-шак! утса килет.
Паллашрăмăр. Калаçрĕ-кулчĕ.
Çывăхранах куççем тĕл пулчĕç.
Пăлхантăм эп нихçанхилле.

Сиксе вĕрерĕ туйăм-сисĕм —
кун пек хăçан вăл пулакан?
Ялтлатрĕ вутлă хĕç пек çиçĕм,
ахлатрĕ вутлă ураган.

Ма витĕрех мана куратăр,
шиклентеретĕр, хăрататăр,
тăп-тăрă, тап-таса куççем,
ма лăпкă та эсир, хаяр та?

Сирти эп пĕлеймен асап
сăваплă. Тарăн та вĕри.
Лермонтовла тунсăхласа
мĕн-ма пăхатăр çав тери?

...Ялтан калла каять карапăм.
Çӳреп пулсан та Аксура,
ялан сире, куççем, куратăп,
илтетĕп çутă сассăра.

Пăшăрханса шутлатăп: «Чим-ха...»
Чунпа вĕçетĕп инçене.
Виç çамрăк хĕрача — виç нимфа —
кĕрсе çĕтеççĕ тĕтрене.

Тамара, пурнăçăм Тамара,
эп, çăмăлттай айван этем,
хăйса çыру çырас тумарăм,
пĕлетĕп: урăх çын кĕтен.

Ман пеккисем тивĕçтереймĕç,
тивĕçтереймĕç лявасем.
Чун ирĕк чух çӳлтен-çӳле вĕç,
хĕвел патнех çитес тесе.

Каçар: хальччен çапла çапманччĕ
мана вут-тăвăл, ураган.
Каçар: чун ыратнин хăвачĕ
кĕрлет юратнипе пĕртан.

Çапла шутла-шутла сисмен те,
эп çырнă-хунă вун строфа.
Самай, самай пуç усрăм-ха,
хытах имментĕм-ха, çӳçлентĕм.

Вĕçсем, вĕçсем яла, çыру.
Çирĕклĕрен унта Тамара
шкула çӳрет. Итле, тăванăм...
вĕçсем ун аллине, çыру.

Эс ăнлантар та ĕнентер
эп мĕн тери телейсĕрне.
Хуллен çеç хурлăхлăн пĕлтер
хăйне епле юратнине.

Ан ыйт хурав, ан ыйт эс ним те.
Ма иккенне пĕлен хăвах.

Ăна пĕрре анчах курни те
мĕн ĕмĕр кӳрĕ вăй-хăват...

Çыру кайни виç кун.
Час пулăп, ак, килте те.
Мĕн усă: çун, ан çун...
Анчах... çапах кĕтетĕп.

Кăнтăрларан вĕреннипе,
кăнтăрлапа шкула пырап та,
юлташ кулать тем пĕлнĕ пек:
«Ташла, çыру паратăп».

Çыру... Шеллевсĕр шурă хут...
ма кун пекех сасартăк... Чим-ха.
Картах сикеп. «Урра! — теп. — Тихо!»
Çапла. Хĕвел пек ăшă хут.

«Шăматкунах, — тет, — тĕл пуласчĕ,
кĕтмешкĕн хатĕр çĕр хута...»
Тăманлă-çиллĕ кĕрхи каçĕ
йĕре шăлать, çул çухатать.

Тӳррен ял — çирĕм, тавраран
лăпах-тăр çирĕм пилĕк çухрăм.
Урок пĕтет аран-аран.
Çула тăр-пĕчченех эп тухрăм.

Фуфайкăпа, çăпатапа.
(Кăçатăпа чупма та пулмĕ.)
Алра — патак. Саппас тата
пур шăрпăк. Ак, шăкăртатать.

Киреметпуç çулне ӳксен,
сăртран Аксу енне вĕлт! пăхрăм.
Аксу — çумрах, каяс çул — вăрăм.
Епле çитем, хăçан çитем?

Чупатăп. Хуп-хура тĕнче
питрен сурать, ура хурать.
Киреметпуçĕн тĕлĕнче
хăйçутисем хăра-хăра
мана чĕнеççĕ, тĕлĕнсе.

Çич-сакăр çухрăма сехет те
килмерĕм пуль. Ăшша пиçеп.
Шухăшăмсем — малта, инçе:
«Каймарĕ пулĕ-ха, кĕтет-тĕр».

Киреметпуç пĕтсен, вун çухрăм
вĕçĕ-хĕррисĕр сĕм вăрман.
Çаплах васкарăм, ӳкрĕм, чупрăм,
сăлтавĕ пысăк — васкама.

Хитре Уçланкăн — çирĕм кил.
Çăва çумĕпеле иртсен,
эп туйрăм: çĕтрĕ сивĕ çил —
таçта малта улать тискер.

Сулахайра мĕлке, мĕлке.
Умра тек мĕлтлетет вуткуçĕ.
Пăхсан, унта такам сĕнккет.
Ак чарăнчĕ. Мĕскер пелкет?

Масар çинчен тухман пуль те?
Каймасть. Кама кĕтсе тăрать-ши?

Мĕнле усал-тĕсел травращĕ
пуçтахланать-ха çав тĕлте?

Çан-çурăмăм сӳ! сӳ! тăвать.
Пырсах кĕретĕп — мăклашка!
Ах, мăклашка, тавах, тавах.
Лăплан, çăварăм, ан хашка.

Вăрман çулне пĕлместĕп мар.
Чĕр шĕшкĕ — алăри патакăм.
Арçурисем умра пайтахăн
курна пуçларĕç куçăма.

Чĕриклетет, юрлать, кашлать,
мĕскер шуйттанĕ мăкăль-мăкăль
вĕрет-сурать-ха хăрушла?
Хуть çурăл — тăр-пĕччен! Хуть макăр.

Каç тĕттĕм, йывăр çав тери —
майран пăвать. Сăнсем куратăп.
Тамара тухрĕ те, шари!
сехре хăпса эп çухăратăп.

Галлюцинаци... Шăрпăка
чăр-чар! чĕртсе çунтартăм хут.
Самантлăха кăшт çутă та —
унтан каллех, ак, тăнкă çук.

Ĕщеннĕ лаша пек сывлатăп.
Ак Таркăн çулĕ. Ак ĕшне.
Эп ĕнтĕ ача мар, эп ватă.
Ай-яй вăрман хыт тĕрĕслет.

Ытла та нервăсем хавшак-çке.
Ытла та эпĕ — чăх чĕри.
Пуçри «Сив лагерьтен» хушаççĕ:
«Эс ху пулсам шуйттан çури».

Тӳпе пăч-тĕттĕм. Çурçĕр ен
кăштах çуталнă. Вăйсăр çутă.
Унпа та, тăлăх çулçӳрен,
хавхаланса, пăлан пек чупрăм.

Хура вăрман юлать хыçа,
анчах темме манпах пырать пек.
Ик-виççĕ çаврăнтăм: куçать.
Чун сӳ! тăвать. Вут пек таратăп.

Малта — хăйçутисен ташши.
Чунра çут туйăмсем ташлаççĕ.
Кĕркуннехи хăрушă каçчĕ,
çурхи туса ярать тахши.

...Хĕре эп Демон пек чуптурăм.
Тути çунтарчĕ тутана.
Умра вăл çеç, вăл çеç — ман туррăм.
Тĕнче те çук пек туйăнать.

Ĕсĕклесе йĕрсе ярать хĕр.
Мерчен куççулĕ куç тулли.
Пуçне чĕрем çине хурать хĕр.
Куçне шăлать чечен алли.

«Кайсассăн, эс, Мишша, çырах тăр».
«Эс те, Тамуç, — çине-çинех».

...Нимех те калаçман, çапах та
каларăмăр калассине.

Тамара, эс капла ан макăр.
Капла, ачам, кусна пăсан.
Тамара, пурнăçăм Тамара,
чи пысăк савнăç, хĕн-асап.

Сан куççульне чуптунине те
сан куллуна чуптунине
сăнарупа пĕрле илетĕп,
асран кăлармăп ĕмĕрне.

Лăпкарĕ ăшă сăмаху.
Çĕкленчĕ чунăн вăй-хăвачĕ.
Хĕвелленсе çут сăнару
чун тӳпине çиçсе хăпарчĕ.

Каш-каш! кашларĕ ват юман,
хĕрӳ ӳпкелесе çиле.
...Ак улт эрне хыçа юлать.
Çĕн Çул. Каникула килеп.

Каникулра кашни каçах
çирĕклĕхпе чупса каçап,
юман çумне çитсе хурахăн
виç хут ши-ши! эп шăхăратăп.

Умри çап-çутă чӳрече
сигнал илтет те лап! сӳнет.
Хĕр сăн-питне каç сĕмĕнче
куратăп хăй тухичченех.

Раштав сивви хăватлă сивĕ.
Чунсем кăвар пулсассăн та,
ура та, алă та, алсиш те
шăкăрттинех шăнса хытать.

Хурал пӳртне Микки патне
халаплама кĕрсе ларатпăр.
Старик юмах нумай пĕлет.
Вăт такмаклать, вăт сăвăлать вăл.

Тем тĕрлине те юптарать:
пĕр чух тытса кулан вара,
тепрехинче йĕрсе кулатăн
е шухăша путса ларан.

Нихçан та кăмăлсăр кайманччĕ.
Ĕнер вара... çук, çук, вăл мар...
старикĕн айăп çук. Калавçă
нимскер усал шухăшламан.

Микки ĕнер хĕрĕнкĕрехчĕ.
Хăй ватă икkенне манса,
юратусем çинчен ĕнерчĕ.
Ак мĕн вăл пачĕ каласа:

«Ман пек ĕçекенрех этем,
Кăнюк, пĕрре çырма çинче
çĕрле çултан аташнă, тет.
Йĕри-тавра — хура тĕнче.

Куçран чиксен те куç курмасть.
Хайхи-майхи, йитрит-кутрит,

ăш чикнĕрен çак тăр ухмах
ларма салтать йĕм кантăри.

Ларнах-и, çук-и, кам пĕлет.
Такам ăна ятран чĕнет.
Пăхать — лаша пуç купташки,
пĕрре... ха! иккĕ... виççĕнех.

Шап-шурă çӳллĕ юпасем...
Темле вуткуç куçран тĕллет.
Хăранипе йăлт йӳтесен,
илтет Кăнюк: — Эп Киремет.

Эп Киремет. Эп Киремет!
Ха-ха-ха-ха! Ха-ха-ха-ха! —
аслати мар кĕмсĕртетет,
сăмахсемех илтет хăлха.

Кăнюк çӳç-пуçĕ чăшăлах
тăрать те вирелле, çӳç-пуç
йăлтăр! та ялтăр! çеç çунать.
Тапса сикет вара çак тус.

Чĕмрен кайса ӳксен, айван,
пăанчушкă, тĕлĕкпе суйланнă.
Тĕлĕкĕнче çак çĕр çăтман,
мĕн тейĕр, çĕнĕрен авланнă.

Кив арăм хăтсăр, вată, вată,
ăçтан вăл çиттĕр пикене.
Çĕн арăмĕ кам иккенне
эп калама та вăтанатăп.

Тепӗр кунне куҫне уҫать те
ҫак йӗксӗк, вырӑнӗ ҫинче —
хӑй арӑмех. Анчах, аҫҫаптӑр,
пӗр ҫирӗм ҫул ӗлӗкхинчен,
тен, ытларах та, ҫамрӑкрах-тӑр...»

Вут уҫҫинче ларать Тамара.
Стена ҫине ӳкет мӗлки.
Палкарӗ ӳсӗрӗлнӗ Микки,
хӗр сӑн-питне асӑрхамарӗ.

«...хай амӑшӗ тӑван хӗрнех
хӑруш пуҫланӑ кӳлешме...»

Тамуҫ хӗп-хӗрлӗ хӗрелет,
юсам пекки тӑвать ҫӳҫне.

Шартах сикет, алли пымасть,
сасартӑк ҫухӑрать шари!
Ларнӑ ҫӗртех каять хӑй ласт!
Ним хускалмасть ик куҫ шурри.

Старик ялт! ҫаврӑнать. Инкек!
«Мӗн пулчӗ, хӗрӗм?» — тет аран.
Кӗл тӗслӗ... Кукленсе ларать.
«Алтымарри тапать-ха, — тет. —

Темех те каламарӑм та.
Эй, хоспоти, каҫар, эй, турӑ.
Эх, ӳсӗр пуҫ, ухмах, ӑҫтан
кун пек кирлӗ мара астурӑм?»

Сив шывпала йĕпетнĕ çĕтĕк
çамки çине пырса хурсан,
Тамара ячĕ хуйхăрса...
Эп мучие: «Мĕн-ма ĕçен?» — теп.

«— Сăлтавĕ пулнă... çамрăк чух...
Халь ĕнтĕ нумаях юлмарĕ
пурăнасси... Сан хĕрачу —
маттур. Анчах — мĕн юрамарĕ?»

«Ан ыйт, старик, ăçтан пĕлем.
Куратăн мар-и — хĕр телейсĕр.
Çак çулсенчех çук та телей,
кайран епле тупса илейтĕр?»

Ларса юлать ват çын пĕччен.
Хăй тĕллĕн мăкăртатрĕ темĕн.
Савни, хапха умне çитсен:
«Сыв пул, тек тĕл пулмастпăр», — терĕ.

Тытса чарма тăни те кăлăх.
Çат! çатлаттарчĕ аллăмран.
Тĕнче каллех тискер те тăлăх,
тем татăлчĕ кăкăрăмра.

Ытла сасартăк çапнипе
минренĕрен ним калаймасăр
çилле шăнараймастăп эп,
хам ăçтине те ăнланмастăп.

Йăл! ӳкрĕ çутă кантăкран.
Килсе капланчĕ курайманлăх.

Халь-халь йӗрес пекех, кăштран
кил еннелле уттартăм анлăн.

Пуç çӗмрӗлет. Сиксе чӗтреп.
Тăванлăх, туслăх — инçетре.
Мăнкăмăллăх та пăхăнманлăх
арасланаççӗ чӗрере.

Нумайлăха шăплантăм эпӗ.
Хӗрсем патне тус чӗннӗ чух,
ал çеç сулатăп — кăмăл çук.
Куллен-кунах сӳнеп, типетӗп.

Таçта шалта çеç, тӗпӗнче,
чун кӗлӗн пӗр хӗлхемӗ юлнă.
Асапланать ун çутинче
чӗре. Вăл татăк-кӗсӗк, юнлă.

Тамара — хăй те, хăй те мар.
Хăй чух ăна паллатăп çăмăл.
Хăй мар чухне вăл çын та мар.
Çӗçӗ хăйрать ман урнă кăмăл.

Çакна тин лайăх эп ăнлантăм,
юратуран кӗл çеç юлсан.
Хăй чух Тамара — кӗмӗл лантăш,
пуçне таять вăл ыр сунса.

Хăй чух Тамара — çутă çăлтăр,
йăлтăртатать, чӗнет, чӗнет.
Хăй чух ун йӳç хуйхи те çук-тăр,
çиçсе пăхать тӗнче çине.

Хăйне ăна каллех юратрăм —
чун хушнинчен ма пăрăнас.
Тӳнтерлине асран хуратрăм,
вара лăплантăм аранах.

Лăпланăçра çур çул çухалчĕ.
Хĕлхем сӳнес патнех çитсен,
пĕр ăшă, уйăхлă çу каçĕ
вут ялкăштарчĕ çĕнĕрен.

Тӳрем çаран. Сукмакĕ такăр.
Çирĕклĕхех илсе кĕрет.
Çирĕклĕхре — çырма. Каçатăп.
Хам пăлханатăп çав терех.

Кунтах çăлкуç шăнкăртатать.
Кăшт улăхсан, курнать юман та.
Чĕнес-и, çук-и? Мĕн тата...
Чĕнмерĕн — манăçа юлатăн.

Ши! шăхăратăп виç хутчен.
Вăраннă шăплăх кӳчĕ ахрăм.
Çук, çутăлмарĕ чӳрече, —
кӳрентĕм, хуçăлтăм, хăрарăм.

«Вăл маннă... Эпĕ манăçра.
Ах, ан кулсам, çухал-ха, уйăх.
Куçран пăхсах мĕн-ма эс суйрăн?
Эп пур — ĕнентĕм... çак каçра».

Сăваплă уйăх кӳренмерĕ.
Чупса анать ун çутинче

сăртран хĕр-вутăш, шур кĕпеллĕ,
эп кĕтрĕм çирĕк айĕнче.

Ай-хай, тивлетлĕ çут тĕнче,
хĕре çак хаттĕн сулхăн мар-и?
Тăванăм, тунсăхăм, Тамара,
каллех эс çеç чунри мерчен...

Хаваслăн пычĕ ман пата.
Хĕр йăпшăнчĕ çума йăвашшăн.
Пуç пĕкрĕ. Эп куçран пăхасшăн.
Вăтанчĕ. Шухăша путать.

Пуçне чĕрем çине хурса,
эп лăплантартăм, ачашларăм.
Сисетĕп: пурнăçĕ усал.
Вутра çунать ахальтен мар вăл.

Çăлкуç юрлать, шăнкăртатать.
Çырма леш енĕ — анлă улăх.
Пире чунран юратнă уйăх
тĕтреленсе çăвать унта.

Ачапча пек, алран-алла
каçмапала каçатпăр шăппăн.
Шӳте савмашкăн тăрăшатпăр —
ялан мĕскер кулянмалла.

Тип-тикĕс вĕтĕ шур шăлсен
хĕлхемсĕр, сивĕ ярăмне
вăйпах йăлкăштарса, чечен,
сатур пулмашкăн вĕренер.

Сар уйăх ăшăттăр куçа.
Çут ĕмĕт çавăртăр пуçа.
Хура-шурра манса каяр-ха.
Шăпамăра пулар хуçа.

Тамара çӳçенет: «Тăхта, — тет, —
тем сулхăнлатрĕ, вит хула.
Каçарнă. Пăрахман. Мухтатăп.
Анчах та мĕншĕн шав кулан?

Итле, пĕр япала калас-и?
Атте ман — йытă, йĕксĕк чун.
Муртан хăрушăрах ун влаçĕ.
Ун юнĕ — пăр, чĕри ун — чул.

Анне те, эп те уншăн тарçă.
Асать, урать, эрех лакса.
Ĕнер аннен пуçне шăтарчĕ
кăрман тимĕррипе çапса.

Лашапа мар, пире кӳлсе,
мĕн чухлĕ пĕрене кӳртерчĕ.
Вăрманĕ — ав ăçта. Çул тертлĕ.
Сывлама çук вĕри — кунсем.

Мана, «ман ача мар» тесе,
тĕпсакайне хупса хĕнет.
Хам эпĕ хăнăхнă, тӳсеп,
аннеçĕме пит хĕрхенеп.

Суда пама аннех чарать,
аçу вĕт — юрататăп, тет.

Çĕрле ун хыçĕнчен ярать,
ют аппасем çинчен тĕпчет.

Ӳсĕрскере виç-тăват хут
пĕччен Хвекла панче эп тупрăм.
Хвекли тухатмăшах, ах, турă.
«Аннӳ пекех, — тет, — вутлă кут.

Вăл кашни каç çыврать-ха, — тет, —
эп уйăхне те — виçĕ ăстрăм.
Çухал, атту тытса хĕнеп.
У, тăнсăр, аннӳ пекех ăссăр».

Ачаранпа йĕре-йĕре
типет те пулĕ мăшăр куçăм.
Аран чăтап чикĕнесрен,
илтеп — такам калать: ан хуçăл.

Эп хуçăлнă хуçăлмалли.
Эп çĕр çинче ултав çеç курнă.
Пĕрре пăхан — таса пек кулă.
Кайран вăл — тикĕт сăмали.

Пурин те çавăн пек... Санне те
шансах пĕтерейместĕп эп.
Сахалтарах кулма сĕнетĕп,
ыйтатăп туслăх ячĕпе.

Малтан пурте виличченех
ачашлама сăмах параççĕ.
Кăштран вĕсемшĕн эс е тарçă,
е кĕлмĕç, е чура текех.

Хăрушă. Калама та намăс.
Анне хыт чирлĕччĕ пĕрре.
Атте тени, çав çĕрĕк навăс,
ак мĕн тесе шăлне йĕрет:

— Вилеп тетне? Вилместĕн-ха,
вилсен, мĕнех, хĕрне илетĕп.
Эс виличчен ман чун тухать,
лăпăртатан — вилеп, вилетĕп...»

Тамара шăпланать. Ăнлантăм
ăнланмасан та... Чун улать.
Пуç — тăм чӳлмек. Хевте-хăватăм
пĕр чĕптĕм çук. Чĕре çунать.

Тамара мар ку çын. Ку — урăх.
Кĕлетки çеç, сасси çеç — ун.
Çаплах каларĕç аслă улăх,
çут уйăх, сывлăм... урнă чун.

Сентименталлă илтĕнсе,
калавĕ йăшрĕ, юхнă майăн.
Эп шутламарăм чăн тесе.
Суя пуль терĕм. Турăм айăп.

Ик уйăхран, илсен хыпар,
туйма пуçларăм аван мар.
Тамарăн — çĕн савни, эп илтрĕм, —
патвар ефрейтор Хундияр.

Патварĕ-мĕнĕ... Эпĕ хам та,
тухсассăн пĕччене пĕччен,

тем джиу-джитсу мар та, самбо
текеннине чухлап иккен.

Комбайн çинче çӳрет, тет, хӗрӗ
копнитель улӑмне тӑкса.
Салтакӗ те çӑтать тусан,
пӗрле пуласшӑн кунӗн-çӗрӗн.

Анчах мӗне-ши пӗлтерет
çак ӗç: Тамара салам янӑ
мана... Юптарнӑ-сӑвӑланӑ.
Каллех — ик тӗрлӗ вӗçтерет.

Мӗскер туртать мана, мӗскер?
Мӗскершӗн тус та вӑл, тус мар та?
Мӗн-ма, пӑр пек сивӗннӗскер,
пӑшӑрханатӑп, тунсӑхлатӑп?

Ката хыçне ӗçе кайсан,
Çирӗклелле пӑхатӑп вӗççӗр.
Тулли лавпах пыратӑп вӗçнӗн.
Хыçра мӑкӑрланать тусан.

Айра сип-симӗс куккурус.
Траншей ял тӗлӗнче анчах çав.
Çирӗклӗсем татах чаваççӗ.
Вӑл çук. Тухман Тамара тус.

Ӑна-кӑна чухлакансем:
«Пулас кӗрӳ, сывах-и?» — теççӗ.
Каçсах каяççӗ, эп чӗнсен,
вӗлтренӗпе хытах хӗртеççӗ:

«Начар. Мĕн-ма паратăн мах?
Асту, юлан, салтакĕ чăрсăр.
Курать те-ха: пике хуҫасăр,
пуҫланă, теҫҫĕ, ҫураҫмах».

Сисеп: шӳтлеҫҫĕ ыр сунса,
салху — эпир пĕрле марришĕн.
Ефрейторĕ, курпун сăмса,
пит ятлах мар иккен ялйышшăн.

«Мăшăрлама нимле май ҫук.
Тамуҫ санпа ҫеҫ селĕм мăшăр.
Хундиярпа утни чĕр мăшкăл», —
тесе хураҫҫĕ тепĕр чух.

Ҫирĕклелле пăха-пăха,
те чăн, те туйăнать анчах,
курма пуҫларăм хĕрача —
пĕве ҫинче кĕпе ухать.

Пĕви ҫап-ҫутă. Варринче
картан-картан хурсем юхаҫҫĕ.
Эпир тепре ҫаврăниччен
тăхтаччĕ, тусăм, ан ҫухалччĕ.

Шăранчĕ сăвă чĕрере.
Кĕрлет ăс-кăмăл ҫĕнĕрен.
Ҫав хĕр вăл — чăн-чăнах Тамара.
Умах тухса тăрать сăнарĕ.

Лирикăлла самант сипечĕ
мантарчĕ йывăр шухăша.

Шанманлăх чирĕ те сипленчĕ,
чунри суран та кушăхать.

Ă н а , ă н а çеç йыхăратăп.
Ун чĕрçине пуçа хуратăп, —
вĕри, чарусăр пуçăма.
Хурсан, илмешкĕн те хăратăп.

Куçран тинкер тăраниччен.
Куçăмсемпех каласа парăп
хам вĕçсĕр çĕнелни çинчен,
Тамара, ĕмĕтри Тамара.

Пирвайхилле уяр, чечен,
пулсам ахаль те, уявра та, —
тӳлек те тарăн куçсенче,
чăн тĕпĕнче, хама куратăп.

Унта эп сан ятна чĕнеп.
Унта эп — лăпкă тус, чыс, шанчăк.
Хĕрӳллĕ хӳтĕлевçĕ эп, —
санпа вĕçеп çӳлтен-çӳле.

Уçă чуна эс хирĕçлеймĕн.
Уяр сăнна эс тĕксĕмлетмĕн.
Эс иккĕ мар, пĕрре анчах
ун чух пулма пултарăн çав.

Тăри юррисĕр — тăлăх уй.
Чун идеалĕсĕр — пĕтетĕн.
Вăл эп — эс шыракан герой.
Урăххине ахаль кĕтетĕн.

Шанманлăху тĕтре пек çĕттĕр.
Çутаттăр шанчăк çеç çулна.
Эс те пулса тăрсам вĕр-çĕнĕ.
Эс хăвăнта ху çеç юрла.

Лермонтовла пăхни сан юлтăр,
анчах ан юлтăр хуйăх-терт.
Нихçан, Тамара, çутă çăлтăр,
ан парăн эс сĕм пĕлĕте.

Хиртен курни — кĕсле сассиллĕ.
Куç умĕнче, куç умĕнче —
шыв çиййĕнчи чечек, шур лили.
Çути ӳкет каçпа инçе.

Тамара ку. Е вăл, шур акăш,
таçта кайма пуçтарăнать.
Ĕçлет фантази акăш-макăш,
ялан Тамара курăнать.

Эп çапăçса вилме шутларăм,
Юратăва хӳтĕлесе.
Каçхи урам. Ак Хундиярăн
тусĕсем.

Ак хăй. Çапла. Кервен салтак.
Ик-виçĕ хĕр пырса тăраççĕ.
Илтеп те тĕлĕнеп шалтах —
тарма сĕнет Çимун-хыпарçă.

«Эпир, — тет, — тимĕр ункăра.
Тамара сутăнчăк. Куратни,

Хундиярпа вăл çывхарать,
ефрейтора савса пăрахнă».

Хăш чух хама мансах эп, ăссăр,
плаща илемлĕн вашт! сирсе,
тухатăп Д'Артаньян пек кăсăк,
юратупа хыт ӳсĕрĕлсе.

Пĕрре çапсах ӳкерейсен —
çĕнетĕп. Ĕçĕм ăнмасан,
хама килсе хуплать асап.
Çапла вăл пурнăç йĕркисем.

Пире курсан, Тамара хăвăрт
вĕçертрĕ, тăсрĕ аллине.
Туятăп — сывлăш пӳлĕнет,
анчах пăлханăва эп хăврăм.

Калама çук хавасланса
пырса çума та йăпшăнсан,
тăрап йăваш та пăхăнуллă:
епле капла — ытла ансат.

Хундиярсем — тем чăшăл-пăшăл.
Кайса пĕтеççĕ леш хĕрсем.
Теме сиссе, çан-çурăм ăшă,
чуна темскер илет хĕссе.

Çирĕклĕхе чакса кĕретпĕр,
ишетпĕр каçмана хыçран.
Хуса çитес тесен, кĕперĕ —
самай инçе, çул — тавраран.

Çапах та, пӳлчĕç улăхра.
Çирĕклĕхрен çĕкленчĕ уйăх.
Сиксе чĕтрет хĕр, хуйхăрать.
Çитет! Пĕр шит чакмастăп урăх!

Велосипечĕ шăлтăр-шалтăр!
Ӳкет те, Хундияр — умра.
«Ăçта, — тет, — кĕрт йытти, таран,
кала, тет, миçепе чупатăн?»

Тамара ĕсĕклет. Çимун
илет ăна хăй хӳттине.
Эп кăшкăрап: «Мăка сăнну,
кил, кил, тух уйăх çутине!

Эй, тусăм, патакпа нелçе...»
Çапать. Ярса тытап та — самбо,
ыр пирĕшти, сыхлать пĕлсе.
Ай! терĕ Хундияр-тăсланкă.

Айлатăн — аллуна пăрсан.
Ак çĕклесе çапатăп çат!
Пурĕпĕрех-ха çапăçать.
Сывлама çук тухать тусан.

Çӳлте — Çимун сасси хаяр.
Тăпăлтараççĕ хăшăл-хăшăл
пĕрне-пĕри. Тăшманĕ, ăншăрт,
самай мăнттай пулас, аяй!

Ефрейтор кайрĕ лĕнчĕрех.
Аллисене çыхса лартсассăн,

ĕсĕклеме пуçларĕ сасăсăр...
Çурăлас пек тапать чĕре.

Йĕлме кӳсекĕ — Çимунра,
леш мăнттайне çапса ӳкернĕ.
Юлташ кулать: «Ухмаха ернĕ —
чутах паратчĕ тăнлавран».

Çураннисем те инçе мар.
Васкас пулать. Велосипечĕ
иккех. Тамара, хăвăрт лар!
Часрах вăрман хĕрне çитесчĕ.

Тамара манăн пассажир.
Çимун — хыçра, йĕр пытаранçă.
Килме пуçларĕ хир шăрши.
Шăв-шав ӳсет: эх, чавтараççĕ!

Çимун патнех çите пуçланă.
Леш вĕçрĕ урăхрах çулпа.
Эшкер ун хыçĕнчен чупать.
Ман йĕп-йĕпе — пит-куç, каçанăм.

Тарса ӳкмешкĕн çăмăл мар.
Ых, йĕксĕк, мĕскĕн Хундияр,
тӳр кăмăллă тăшман пулмарăн:
хыçран хăвать мĕн чухлĕ çар.

Çил пек пыратпăр. Ах, инкек!
Велосипед, ак, — шăлтăр-шалтăр!
Тамарăна анма хушатăп:
ха! сăнчăр татăлнă иккен.

Çур çухрăм та çук пуль — вăрман.
«Ах, вилчĕ утçăмăр. Атя-ха,
пар аллуна, сывах тухатпăр», —
тесе чĕнеп Тамарăма...

Эй, Юрату, вутри Пике,
хăçан пĕтет çак вăрçă-харçă?
Тек урăх хĕр те çук пекех,
мĕн-ма ытла та хапсăнаççĕ?

Хĕвел пек ялкăшăн хăçан
пĕр маншăн çеç, нихçан сӳнмесĕр?
Çук çав... тытсан, тире сĕвеççĕ,
пĕрмай кăранклатать çăхан.

Пĕрмайваскатăп хăтарма.
Хăçан яланлăхах хăтарăп?
Юнаççĕ. Тӳр килет тарма.
Ма Юрату çавтер хатарлă.

Ăсанчĕ август. Эп каллех
вĕренӳре. Аксу çапах та
Аксу вăл: пурнăç — чĕрĕрех.
Халь вуннăмĕш класа чупатăп.

Анчах, хай, Бёрнс пекрех калас-тăк,
хам — Аксура, чĕре — ялтах.
Тунсăхласа çитеп часах:
тăват урокранах тарас-ха.

Ахаль кун мар-иç, шăматкун.
Ах, тĕттĕм-çке сентябрь каçĕ...

Клубра ман патăма пыраççĕ
пĕр çамрăк ачапа Çимун.

Ачи — хыпарçă. Кĕçĕр кайнă
Лява хăй свитипе вăрçа.
Тамарăшăн, тет, çапăçать.
Унпа Çеруш, Сашшук... нумайййăн.

Вăрман. Çурçĕрелле каçатпăр.
Çимун та эпĕ. Калаçатпăр
пăшăлтатса. Ак — шыв. Кӳлленчĕк.
Кунта çул питĕ хĕсĕкленчĕ.

Малта уç вырăн, çутăрах.
Çимун алран тытса чарать:
«Итле... сассем... Епле шавлаççĕ.
Вун çын кулать, пĕри — калавçă».

Тăнлатпăр та, Лява сасси:
«Халь Хундияр çук çав. Сикеймĕç.
Халь ялĕпе те ик-виç кĕлмĕç.
Тем мар, килет вĕт пурнасси.
Чи курайман тăшман — Мишша.
Çимунĕпе пĕрле çакатпăр».

Çакна илтсен, чун тулашать.
Уçăлăхран шала чакатпăр.

Ха, аçа çаптăр Лявуна та.
Епле вăл юншăн сăхланать.
Пухса хурап тем чул «граната».
Чи пысăккийĕ — Лявана.

Кĕсье хунарĕсем тăшманăн,
пĕлеп, çитмеççĕ пирĕнне:
куç уçаймастăн — хирĕç ан пăх —
суккăрланатăн, тирĕнен.

Чим, иртчĕр-ха кӳлленчĕкрен.
Ав... çут фонра мĕкĕлтетеççĕ.
Сисеп, Çимунăн «пистолечĕ»
шăк-шак! тăвать. Эппин, çĕклен.

Ял-л! çутă. Сурăх кĕтӳ пек
тăп чарăнчĕç. Çари! Лăй-лай! —
çак рыцарьсем. Ак нăч! лекет
пĕрне: «Ай-ай! Пуç! — теççĕ. — Ай!»

Çутта сӳнтертĕмĕр. Ан пĕлччĕр
миçеннине. Пĕлсен — капут.
«Гранатăсем» вĕçеççĕ тĕлсĕр,
тивекенни çапах та пур.

«Атакăна атя. Хĕнер», —
тесе пăшăлтатсан, тухатпăр
пăч-тĕттĕмрен çут фон енне,
вара сасартăк çутататпăр.

Прожектортан ăçта тарайăн?
Сиксе чĕтреççĕ куян пек.
Шывра шăмпăртатаç нумайăн.
Пĕри, ав, тухнă та — «типет».

Лява... туртса çапатăп меллĕн
тăнлавĕнчен. Çĕнрен ӳкет

çат! çатлатса кӳлленчĕке.
Ку кам? Кĕпи çап-çут тӳмеллĕ.

Кăштран пурте шыва чăмаççĕ, —
сысна кĕмен йӳç лапрана.
Ак «контратака» тапранать:
шыврах пĕрне-пĕри чăмлаççĕ.

Васкас. Вăрах тăрас пулмасть.
Тен, халлĕхе юрать те мар-и?
Эс ăслă, çирĕп çын, тăванăм,
Çимун, эс инкекре — алмаз.

Ĕç ăнчĕ. Тепĕр эрнерен —
çĕн мыскара. Çирĕклĕре.
Хайхи лаштра юман патне те
çитменччĕ-ха — такам йĕрет.

Тамара? Вашлатса çитетĕп.
— Мĕн пулчĕ? Ма çарран тăран
кĕрхи çак сив çанталăкра?
— Атте урать. Мĕнле атте-тĕр...

Кĕретпĕр. Ванчăк чашăк-тирĕк —
ăçта пăхсан та. Кĕтесре
арçын сĕтел çапать. Тĕсрен
кăшт Гитлер тĕслĕрех çав тирĕс.

Сиксе тăрать. Сĕтелĕ тӳнчĕ.
Алчăранă. Шăл çисе килет.
Хĕрне çӳçрен явасшăн пулчĕ.
А-ах! — шаплатрĕ месерлех.

Тепре çапма кирлех-ши? Тăчĕ.
Пукан çĕклет. Ха, йĕксĕк чун.
Кăшт ыйхăла — куç-пуç шăтатчĕ.
Епле упа, çĕнме те çук...

Çемçе çĕртен тапсан, минрерĕ.
Çыхса хуратпăр аллине.
Савни: «Мана хăвпа ил», — терĕ.
Эп килĕшрĕм хампа илме.

Анчах яла çитсен, хăйех:
«Халех качча тухма, — тет, — намăс.
Сана та, — тет, — ырах каламĕç.
Вун класс çапах пĕтермеллех».

Вара ăсатрăм Шуçăма.
Унта пурнать Виркка мăнаккăш.
Чунра — Тамуç çаплах шур акăш,
çут çăлтăр, лили, вутама.

Чунра вăл çеç, вăл çеç. Упрать вăл
унти вута ырми-канми.
Анчах хальччен кама юратнă,
çавсем те ма — ытарайми?

Мĕн-ма ĕнер сасартăк çутрĕ
яш чунăм тепĕр çăлтăрне? —
пултараймастăп сӳнтерме.
Кулянтăм. Шухăша эп путрăм.

Манпа хуçаланать Поэзи.
Эп çул çухатрăм. Çук чарма

ăс-кăмăла, пуçа, чуна, —
ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ.

Ăшаланап ăнланаймасăр:
Тамара пур çинчех мĕн-ма
сăвва кĕрет Истомина? —
о, нимфа! теп, сывлатăп ассăн.

Сывлатăп кăвар пек вĕри.
Теме сиссе, патне пымастăп.
Иллюзи эрешне пăсмастăп —
асра хĕвеллĕн юлтăр-и.

Савать-и вăл мана, савмасть-и,
ахаль те, вăрттăн та сăнап, —
куçне тартать эп пăхсанах.
Теме тăрать ун пĕр сăмахĕ.

Сар çӳçлĕ хĕрача. Çут тунсăх.
Телей мана ун йăл кулли.
Вăл ырă гений. Ун алли
сĕлтсен — эп пур. Эп вилĕ — унсăр.

Упрарĕ, çăлчĕ пирĕшти,
хĕрачана пĕлмерĕм çывăх, —
вилĕмлисен çук мар вăл çылăх,
ахальтен мар эп — чунăсти.

Пăхма хĕрӳ илемĕпе
сиплентĕм, ăшшăн улталантăм.
Такам юри çĕкленĕ пек
хускалчĕ çакă çул талантăм.

Çыратăп сăвă хыççăн сăвă,
яла манатăп, кил тĕлне.
Класра ларма хал çук, класс тăвăр.
Тухса утап урамсене.

Ăнланма çук, хуть выртса макăр,
чĕре каллех темскер ыйтать —
йăшкать, йăшкать, çавтер йăшкать.
Юрлап — пыра ларать сăмахăм.

Çĕн Çул çитсен, маскарадра
пăхап — Инанга Алшигусти!
Анчах мĕн-ма ун хăмăр — куçĕ,
ма çӳçĕ çырă мар, хура?

Çивĕтсенче — ик шурă роза...
Кулса ярсан, юр пек çиçет,
сăнне çутса, ик рет мерчен.
Çук, ку вăл мар, ытла чарусăр.

Епле илемлĕн алхасать!
«Ку Плотникова, — тет Асхат, —
ачам, кăна сăмах тивмен-ха.
Ку хĕрĕ сывлăм пек таса.

Анчах — инкек. Вун класс пĕтмесĕр
каччăсемпе вăл çыхланмасть.
Медальпе çеç вĕреннĕ несĕл
халь тин, паллах, ятне ямасть».

Ун чух чăваш ачи тухмастчĕ
вечерсене, маскарада.

Кам хĕрсене кăшт юратать,
хĕртен вăтаннипе ухмахчĕ.

Çӳретчĕ чĕмсĕр вăкăр пек,
куç айĕн сăнаса, мăнтарăн.
Хăй чунĕпе те чĕрипе,
пăхсан, вĕçĕ-хĕррисĕр тарăн.

Анчах хал çукчĕ калама.
Майра хĕрачине савсассăн,
пушшех çӳретчĕ курăнмасăр.
Мĕнех тăвайăн айвана?

Çав чир мана та хытă пуснă.
Çипуç пулман. Аттен пальтти,
çĕр хут сапланăскер, атти
тăрсан тăратчĕç çичĕ пуслăх.

Шалпар та çĕтĕкскерĕсем,
мана хавасланма чаратчĕç.
Те çавăнпах, чĕлхе чаракĕ
пит пысăкчĕ, сăмах тесен.

Ах, брюки çеç... атте авланнă
çав брюкипе... ах, брюки çеç
пăхса ытарайми аванччĕ.
Ах, танго, вальс! Епле тӳсес?!

Çав Асхатран пушмак илеттĕм
сайра-хутра, çап-çут пушмак.
Трюмо калатчĕ: «Ха, илемлĕ! —
хуть те çутăличчен ташла».

Черет çитсессĕн, брюкине
пушмак хуçи ташша каймашкăн
туртса хыватчĕ, чĕрĕ мăшкăл, —
лараттăм йĕмсĕр халлĕнех.

Хальхи маскарада юлташ
пымарĕ. Пушмакне хăварчĕ.
Çук мар иккен пушмак хăвачĕ.
Кулап çемçен. Утап вăш-ваш.

Пĕлмеççĕ брюки камăнне,
пушмакăм тусăн иккенне.
Эп те маттур иккен, çакас-тăк
шап-шур кĕпе çинчен çĕн  галстук.

Ал тытрĕ военком ачи,
сарçу завод директор йăхĕ
пуç сĕлтрĕ — чăркăш хураçи, —
пуç сĕлтрĕ те мăнаçлăн юхрĕ.

Тата пĕр-икĕ-виçĕ «ывăл»,
Евграфов прокурорăн, сывлăх
сыхлав хуçин куштан ачи,
тем сăлтавпа, пит пулчĕç çывăх.

Хĕрачасем «Молдовеняску»
ташлаççĕ, шуххăн ал çупса,
ман чĕрере хĕвел çутса.
Ах, Плотникова... ывтăн, ашкăн.

Йăл кулчĕ те, куç хăрпăксем
хура чаршав пек çĕкленсен,

ик куç асамĕ чăлтăр-чалтăр!
кăваккăн сапăнчĕ, çиçсе.

Юратрăм ăслăн пăхнине.
Чечен хавалăхне юратрăм.
Юратрăм хĕр пӳне-сине,
тĕрленĕ шурă кĕпине.

— Сывах-и, сивĕ сăнлă Байрон! —
тесессĕн, эп шартах сикеп.
Мана чĕнет-мĕн çав пике.
— Сывах-ха, Нина, — теп сăпайлăн.

Кайран уттартăм хыçĕнчен,
сăмах чĕнме те хăяймасăр.
Тем сăлтавпа, тем хăяматшăн,
пырса тытмарăм аллинчен.

Тытас... ятлассăн туйăнчĕ.
Тен, пăрăнас, вăрçтариччен?
Пырсан-пырсан, ак, юлтăм, юлтăм,
ал султăм — килĕ тĕлĕнче.

Сас-чĕвсĕр тĕттĕм урамра
йăл! çутăлсассăн хăйçути,
ума тухать умра çукки —
Тамуç кулса тăрать умра.

Ах, ӳпкелеççĕ куçĕсем,
ах, йăлкăшаççĕ, ах, çунаççĕ...
Чун пек пуль кĕтнĕ çакă каç вăл,
чунран ĕненнĕ çитессе.

Эп айăплă, паллах, Тамара.
Çĕнрен-çĕн çăлтăрсем çутса,
уйрăлура тек пулаймарăм
вутчуль пек çирĕп те таса.

Анчах сăлтавĕ çакă çеç-ши?
Эп: çылăхĕ вăл сан та, тесшĕн,
сахалах мар, тĕпрен пăхсан.
Вилĕмлисем-çке, мур илесшĕ.

Курнатăн иккĕллĕ, Тамара.
Пĕри вăл ху, тепри ху мар.
Тупа тăвап хăвна, тăванăм,
чуна ĕмĕрлĕхе хума.

Хăватлă, çӳллĕ, аслă эп
хăвпа чухне, таса та сывă.
Телей куркийĕ астивеп.
Эй, турăçăм, каçар, теем.

Хай, Лермонтов каларăшле,
чăн тӳпере турра куратăп,
хăш! сывламашкăн та хăратăп.
Юрлап, çыратăп, эрешлеп.

Пуçра вара çунать процесс,
чунра вара кĕрлет реакци.
Çветтуй эп. «Пархатаризаци»
чи çӳл шайра... Чăн турă — эс!

Тепри вара, леш хăвмарри,
Лява чĕрçийĕнче ларать.

Çав вăхăтрах, çав хушăрах:
«Сашшук, — тет, — аванрах мар-и?»

Пăшăрханса сехĕрленетĕп —
аса килет Микки старик.
Чун кăшкăрса ярать шари!
хваттерелле сĕнкĕлтететĕп.

Курнатăн иккĕллĕ, анчах та
эс икĕпитлĕ этем мар.
Часах, Тамара, курнăçатпăр,
эс çеç, эс çеç чăн тус, тăван.

Эс кĕрешетĕн, эс çĕнетĕн
усаллине, хăвмаррине.
Сана пĕрне çеç ĕненетĕп,
хурса чĕремĕн варрине.

...Çак ĕмĕтпех яла ăсантăм.
Ик эрнене. Каникула.
Каçпа Çимун патне каçатăп.
Çимун мăшкăлласа кулать:

«Тусна эс чуптумастăн штулĕ?
Эс кайсанах, Лява юлташ
пуçларĕ вĕт каллех шантташ.
Çакна пĕлет халь пĕтĕм шкулĕ.

Баянĕпе çĕн вальс вĕреннĕ.
Юрламалли. Юрлаканни
шăпах вăл, шăллăм, сан савни...
Хăвах пĕлен, çемçе чĕреллĕ.

Асамлă, чун çунтармăш вальс
сан тĕшсĕр сăвву мар, ăнлан эс.
Ачамккă, калама та намăс,
чăнах, чăнах вĕт, чуптăвать.

Çур çĕрчченех-тĕр — репетици.
Кайма хăракана Лява,
паллах, хăвармĕ хăй хӳттисĕр.
Çапла, тăванăм... чуптăвать.

Хам куртăм. Хам куçпа. Çут ӳкнĕ.
Хăпмаççĕ. Вăтанмаççĕ пач.
Мĕнех, пулин вăл кĕске пӳллĕ.
Вăл мемме мар, Вăл чуптăвать».

...Ак хатĕр сăвăлла çыру.
Çав самантрах, пуçрах çыратăп.
Ан кĕттĕр урăх каçару.
Çитет. Çителĕклĕ. Суратăп.

Хурав килмест. Тем тăршшĕ сăвă
каллех вĕçет. Каллех çĕтет...
Клубран анакансен шăв-шавĕ
мана вăл — юнлă вăрçă пек.

Ак хăй иккен, майра патши.
Йĕри-тавра — вăрман пек свита.
Ман çынсенчен кам-кам пур-ши?
Хăшне ан пăх, ашак та йытă.

Дон Кихот пек, пĕр шикленмесĕр
«ута хистеп» тăшман çине.

Шăтса тухать Çимун-Çемен,
хыçран кĕрет элес-мелессĕн.

Çула татаççĕ хăвăртах.
Такам пит вăйлăн пăвăртать.
Тем хыттипе пуçран çапаççĕ.
Çимун автан пек авăтать.

Чиксе хураççĕ юр ăшне.
Туяп чĕр юнăн ăшшине.
Тĕвеççĕ, хăпарса сикеççĕ.
Чĕм çухалас пек ĕшенеп.

Кăкăр çине пусать Лява.
Йĕрĕннипе сурса питрен,
шур хут чăмăрккипе перет:
«Çын пек çыраççĕ çырăва,

без оскорблений. Ясно-и?
Ялан пыл-çу пулаймĕ çав.
Ялан пулмасть ача вăййи.
Пĕлсе пурнасчĕ пурнăçа».

Ирпе-ирех хăйратăп çĕçĕ
шăла çисе, чĕтре-чĕтре.
Вуниккĕлле тапать чĕре.
Иксĕмĕртен пĕри çук кĕçĕр.

Лява е эпĕ... Çиллĕме
ниçта хурайманран, улатăп.
Кăштран ахăлтатса кулатăп.
Пуç мимине темскер ĕмет.

Чуна çиет. Çĕççе переп те
тухса утатăп хирелле.
Кунта кăшт çиллĕм сӳрĕлет.
Курап: шур хурăнсем ĕретĕн.

Хĕвел пăхать. Уй-хир çап-çутă.
Юр илĕртет инçе-инçе.
Пуçри Сив лагерь: «Эс, — тет, — суккăр.
Чи йĕксĕк çын пек кĕвĕçен.

Пурнăçупа кăтарт, тет, курччăр
кам ăслă, çӳллĕ чăн-чăнах,
кам ăслă пек, анчах ухмах,
кам тилпĕрен, кам ырă курăк,

кам чунĕпе патриций... Эсĕ
пĕр хушăн çуралман, ăнлан,
пурах теес пулсан талант,
ан чарăн тӳпине çитмесĕр».

Аçа çапса, урса çил-тăвăл
çĕн çутçанталăк уçăлать.
Чун аркатса, çурса, мĕн тăвăн,
çын çĕнелет, ăслăланать.

Эп чун хытартăм, пуç усмарăм,
ларса йĕрсен те хурланса.
Хăш чух йĕни те намăс мар вăл,
пулать вăл... тӳсмелле анчах.

Пĕччен çӳреп мĕлке пек шăппăн
ак ĕнтĕ Аксура каллех.

Ачаш сывларĕ çуркунне.
Тумла ана пуçларĕ шăпăрр!

Каçсем нӳрелчĕç. Пăчă-тĕттĕм.
Каç тĕпĕнчи хăйçутисем,
чуна лăпкатăр, чĕпĕтетĕр, —
асамлă юрă ăстисем.

Эп Нинăна тек йĕрлеместĕп.
Çĕрле вĕсен умне пырса,
çулпа утатăп. Мĕлт-мĕлт! эсĕр,
ыр çутăсем, çунса, пĕлместĕр:
эп пăтранман, çаплах таса.

Ялан ыр кĕвĕ шăхăратăп —
хăй Нина юрлаканнине.
Кунçул вăл шурă та, хура та —
кирлех-ши тĕлсĕр кӳренме.

Шкулта шăтарас пек пăхать.
Ахальтен мар. Ах, Нина, Нина...
Ăнланса ил самантлăха:
çут çамрăклăх пĕрре çеç çыннăн.

Мĕнех традици, мĕн медаль.
Эс тăххăрмĕш класра çеç, тусăм.
Ална парсам. Ак — манăн ал.
Кулса ярсам, мăйран та усăн.

Усал эп сунмăп нихăçан.
Тăрăхласам, чăнах эп — Байрон.
Кулса ярсам, пулсам ман майлă,
ачашласам кăтра пуçа.

Эп Байрон томĕпе çӳретĕп.
Каç-каç тем чухлĕ хут чĕретĕп.
Çырни пăч-пач курăнкалать
Хусан хаçатĕнче, черетлĕн.

Сĕмленкелетĕп вырăсла.
Пĕр каç çил шăв-шавне тăнлуçăн
ют чĕлхепе хĕрӳн пуçлап
импровизаци, çăлтăр куçлăн.

Çав йĕркесем халь те асрах,
мĕн виличчен асра, тен, юлĕç,
çурхи çилсем săваплăн улĕç,
хĕр пулĕ тăххăрмĕш класрах.

**3.**

Хальчченех эп хытă тĕлĕнетĕп:
мĕскерле майпа, шуйттан пĕлет,
музыкант, художник та поэт —
пултăм медицинăпа тĕлме-тĕл?

Чирпеле ялан тертленнĕрен-ши,
е Сашшук студент билечĕпе
мухтанни чуна кĕвĕçтернех-ши?
Хам та ĕнтĕ, ак, студент, студент.

Медучилище Чистай хулин
хĕрринче. Хваттер — пĕр тăйлăк-тайлăк
кив пӳртре. Майри — хăлин...
Урамра йĕрет кĕрхи çанталăк.

«Парнелет» мана майра баян —
çĕ-ĕтĕк. Виç эрне юсатăп-тӳрлететĕп.

Басĕ юрăхсăр. Аран ретлетĕп,
каламалăх турăм пек туяп.

Мĕн тери инкек! Сисмерĕм те,
купăс пулчĕ тăчĕ серепе:
купăс хакĕшĕн сысна пăхатăп —
хăй, майри, чирлеп, тет, чĕрепе.

Медицина вăл юмах каласси мар.
Кун каçах вулан, çыран, тĕпчетĕн.
Çĕрпĕр тĕрлĕ çĕнĕ ют сăмах
астăвас пулать те: «Эй, тĕнче!» — тен.

Анатомисем чăмла-чăмла,
вĕççĕр чир пуçа чике-чике,
кун каçа ӳт-пĕвĕм — мунчала,
тăн — пăтранчăк шыв. Вилеп иккен.

Туйрăм эп: каллех-çке — серепе!
Йăнăш турăм, ухмахла çаклантăм.
Ыйхă çук, çунатăп çĕрĕпе:
«Пĕтрĕ, — теп, — капла пур пек талантăм».

Тепĕр шухăш хирĕçле калать:
«Йăнăшман... Эс чирлĕ, ним ыратмасан та.
Куллен-кун йăшан, типен, хăсатăн.
Санăн сăв çырма пăрахмалла.

Сăввусем чунна ёмсе илеççĕ.
Нервусем — халь-халь татăлас пек,
музыка илтсен те чĕтренеççĕ.
Пĕтнĕ эс, хавшанă пĕтĕмпех.

Чĕрĕлес тесен, пĕлес пулать мелне.
Хăвна ху шанми пулса çитсен те,
çĕнесех тесе çĕкленмелле.
Унсăрăн — çухаласса кĕтсех тăр.
Сывлăхсăр — талант та пăчланать...»

Тусăмçăм, палларăм, эс — «Сив лагерь»,
пуç мими хĕрри, тул енĕ. Ма-тăр,
итлесех каймастăп эп сана.

Эсĕ ăс паратăн, вĕрентетĕн.
Йышăнмасăр, эп сиксе вĕреп:
пĕтнĕ ĕнтĕ... пурпĕрех пĕтетĕп,
кăлăх ма пурнас-ха тĕнчере?

«Мĕншĕн кăлăх? — тет çав шухăшах. —
Эс çынсемшĕн пурăн, сывлăхна упра,
пурăнма пулаймĕ хăвăншăн анчах.
Сăвăпа тек урăх ан аптра».

Чĕрене касса каять иртни.
Пĕтĕм хăвата пухса, ун чух эп тытса чартăм
хама хам. Ăнланма çук савни
умĕнче тăшманăма каçартăм.

Каярах хĕрпе чылай тĕл пултăм.
Пĕринче, шыв-шур вăхăтĕнче
Шуçăмран килеп. Çул путăк.
Иртме çук ейӳ хир варринче.

Ик хĕрачапа Тамара каçаймаççĕ.
Каялла кайма — ытла инçе.

Каçарап хайхи, йăтса илсе.
Ку — куçран пăхмасть. Лешсем — хăймаççĕ.

Тепĕр тĕлпулу — çулла, уçланкăра.
Йăмăкне çĕкленĕскер, Тамара ывăннă, —
çул хĕрне лартса, хăй пуçтарать
чечексем. Хĕвел пăхать. Кун ырă.

Хурт сĕрлет. Чĕвĕлтетет чĕкеç.
Тĕрĕллĕ шур кĕпепе — Тамара.
Мĕн тери чечен вăл. Курчĕ. Йăл кулмарĕ.
Эп чĕнсен те, нимĕн те чĕнмест.

Юлашки хут куртăм эп ăна
шкулпала сывпуллашса килӳçĕн,
çитеспе мăнтарăн ялăма.
«Велона» тăп чартăм. Култăм йӳççĕн.

Култăм та чĕнмерĕм урăх нимĕн.
Хĕрĕн пулчĕ чăн-чăн савăну.
Тутипе каларĕ: чĕрӳ тимĕр;
куçĕпе каларĕ: сывă пул.

Парăнни ан палăртăр тесе-ши
е ӳпкевĕм вĕççĕр-хĕрсĕртен,
вĕçрĕм-ыткăнтăм куçран çĕтесшĕн,
йĕтĕм-татăлтăм, сада çитсен.

Макăрсан, çапах та çăмăлрах.
Кăмăл та хытать, килет мăнаçлăх,
пуçăм каçрăлать, йăшни тарать,
таврăнать хаярлăх, пăхăнманлăх...

Мĕн тесессĕн те, çын вăл çынах.
Эп те пусрăнтăм: Тамара манăçрĕ.
Çĕнĕ туйăм, çĕнĕ шухăш, çĕн сăмах
майĕпен мана киле-киле вырнаçрĕ.

Чистайра нумай курса çӳрерĕм эп.
Килте çеç ларман. Шăп ик çулталăк
балсенче, вечерсенче, паркра сикме
çынсенчен начарах мар пултартăм.

Айвана каçартăр çак хула —
эп кунта инангăсем тупмарăм:
хăшĕ, хĕр пулсассăн та, хĕрарăм,
хăшĕ, вырăсла калас-тăк, блядь.

Сăвăсем халалласах пĕрне,
хаçатра çапсах сăввисене,
аслăларăм, ырăларăм, кăмăлларăм.
Сивĕнчĕ — пĕлсен чăвашшине.

Хусана лексен, каникулра,
паллашса, тытса хултан-хула,
икĕ кун пĕр пикепе çӳрерĕм.
Уйрăлсан, пĕр çул çыру çӳретрĕм.

Малтанах салху тесе йĕретчĕ
кашнинчех. Сăлтавĕ паллă мар.
Кайранрах пыма чĕнсе вĕлерчĕ.
Кайрăм та, тĕл пултăм — палламасть.

Мĕншĕнне те пĕлтĕм: качча тухнă
çывăх тантăшĕн упăшкине.

Юрату тени çухалчĕ туххăм,
тулчĕ йĕрĕнӳ ун вырăнне.

Кулăшла çак, мĕн калайăн, кăсăк.
Шăл йĕрес хавас анчах çукрах.
Кăмăл ман куллен-кун сӳрĕк, пăсăк.
Кулăш мар, ăшра туятăп хăсăк.
Çĕрĕк шухăш пуçăма çурать.

Чун йӳçет. Хытса, кахалланать.
Ним туйми пулса, сахалланать.
Ĕмĕтсем сӳнеççĕ, шанчăк сӳннĕ.
Çын, сисмесĕрех, выльăхланать.

Кĕвĕçме-çунмашкăн хал пĕтсессĕн,
нервăсем вĕлерес пек ыратнипе,
хăвна ху туртса çурас килет сан, эсĕ —
чĕтренке, кĕл тĕслĕ, йĕп-йĕпе.

Ĕнтĕ халь нимрен те тĕлĕнместĕн.
Хай, Сашшук, Свердловскă хулинче
Тамуçпа туслашнă тенине илтсессĕн,
эпĕ: «Ну?» — темерĕм тĕлĕнсе.

Савăшчăр, туслашчăр, манăн мĕн ĕç.
Манăн, пĕтнĕскерĕн, çакă çеç:
е çиçсе иртетĕп тилпĕрен çисе,
е çĕрес пулать вăрах та тăнăç.

Эпĕ мĕн, тек ачапча-и, арçын мар-и?
Мĕн инангăсем шырап — ухмах пăру.
Ӳтĕн тунсăхĕ, сана манман эп,
паянтан эп санăн рыцăру.

Çакă хушăра çыру килет.
Икĕ çул иккен ик кун пек иртрĕ.
Икĕ çул эп кив савнипеле
уйрăлни. Çыру çырать. Киле.

«Саша, — тет, — мана каласа пачĕ
санăн çĕнĕ тусусем çинчен.
Ирттеретĕн-мĕн Аксуринчен.
Юлашки савнин мĕнле-ха ячĕ?

Аксура Истомина, тет, çывăх.
Нинăсем, Венерăсем... вуншар.
Илтĕпĕр-ха, пуç пулсассăн сывă,
эс те курăн-ха ман пек типшар.

Сăвă çырнăран сана саваççĕ.
Пысăка вĕреннĕрен тата
вĕççĕр çакăнаççĕ мăюнтан.
Хăвна мар, чапна сума сăваççĕ.

Эп сăввуна мар, хăвна юратрăм, —
сассуна, куçна, ачаш йăл куллуна.
Çырă кăтруна юрра хывса юрларăм,
чăтрăм эпĕ, усала хумарăм
вут пек çиллӳне, сив кăмăлна.

Тĕнчере, атте-анне пулсан та,
эп хама туятăп тăлăх пек.
Саврăм эп, халь те санах саватăп
юлташ пек, тăван пек, пичче пек.

Сансăр пурнăç маншăн пурнăç мар.
Эх, айван, епле эс сисеймерĕн:

Лявапа кайса, кĕвĕçтерес çеç терĕм,
пуçлĕ, терĕм, тен, чăн юратма».

Фу! епле сентименталлăх!
Вулăн — ярăн макăрса.
«Мĕскĕн» хĕр, çунать, мăнтарăн, —
култăм ятăм ахăрса.

Çырăва вута перетĕп,
пăртакран — манатăп веç.
Васкаса «ута кӳлетĕп» —
вăрттăн вырăнта кĕтеç.

Нумаях пулмасть авланчĕ
вĕçкĕн каччă Микула.
Пурнăçĕ хальччен аванччĕ.
Пурнăç — кăсăк япала.

Микулан пит чаплă арăм.
Верук пек чаплăрахне —
Верук пек пӳ-силлине —
эп хальччен тĕл пулаймарăм.

Хитрех мар вăл сăнĕпе,
пӳ вара ачаш та выçкăн.
Кăкăрсем тулли те пысăккă.
Пилĕкĕ сăпсанни пек.

Хулĕсем авкаланни,
пĕçĕ-купарча тӳлеккĕн,
утнă майăн, чӳхенни —
куçшăн ытарми илемлĕ.

Тăвăр юбкине çурассăн,
ун тапаççĕ вĕчисем.
Урисем, ах, чим, ан васкăр, —
балерина урисем.

Куçĕсем, ансат калас-тăк,
икĕ тĕпсĕр авăр пек,
е — каçхи хура тӳпе.
Чăн-чăнах çапла. Кулмастăп.

Ăс тени çукпа пĕрех.
Каçхине ăспа мĕн тăвăн?
Çилленсен вара — çил-тăвăл.
Тараймастăн. Пĕтерет.

Ĕнтрĕк пусрĕ. Анăç çутрĕ
шăппăн çеç каç çăлтăрне.
Вăрттăн çулăн хĕррине
пахчаран Верук, ак, тухрĕ.

Июньти каçа пĕлетĕр —
ытлашши вăрăмах мар...
Картаран йăтса илетĕп
Верука. Куçсем — кăвар.

Велосипедпа вĕçетпĕр
çереме, çăкалăха.
Ах, вăрман, айван тесе-тĕр,
хӳтĕлен шух халăха.

Мĕнешкел аван ку вырăн.
Ял чылай аяларах

çутсемпе кăшт палăрать.
Ах, çерем... лĕп сывлăш... ырă.

Кăкăр çаккине вĕçертрĕм.
Ыттине хăй хывса çапрĕ.
Тутапа питне пĕçертрĕм.
Хăвала пуçларĕ чаплă.

Эп çакна хальччен курманччĕ.
Çакă ĕç, кала, мĕн ятлă?
Мĕн тери Верук асамçă!
Савăнса эп йĕрсе ятăм.

Мĕн тери çак ĕç вăл лайăх!
Пурнăç туйăнчĕ юмахăн.
Сиккипе сиктернĕ майăн
çĕрĕпех ӳксе юлмарăм.

Савнăç тулнипе ĕшеннĕ,
тĕлĕрсе эп кайнă лăпкăн.
Вут пек пӳ — çемçе тӳшекĕ.
Ăш минтерĕ — ик çӳл кăкăр.

Ĕнтĕ вăрăм çул пуçланчĕ.
Кашни каç çула тухатпăр.
Эп çаплах хĕрӳ те харсăр.
Вăл çаплах — пике-асамçă.

Çук, епле аван пулсан та,
эпĕ йăлăхрăм çапах та.
Чун кӳтсе килет сасартăк —
питĕнчен туртса çапатăп.

Вăл хама питрен сурать те,
çавăнтах умри шур акăш —
акăш мар, хаяр тухатмăш.
Тармасан, туртса çурать вĕт!

Чăн-чăнах туртса çурать!
Тăмана эп — хама сутрăм
çакă ăссăр-пуççăра.
Ланчашка пăру эп, сурăх...

Мĕншĕн-ши çийе сиктертĕм
выçă йытă амине?
Ĕнтĕ сывлăш пӳлĕнет —
çакăнас патнех çитетĕп.

Чун — пуш-пушă, пуç — чукун.
Пуç мими хытса чулланнă.
Пурăнăç палли çук ун.
Пулмĕ, ан кĕт çутă кун.

Каçхине клуба пырсассăн
васкамасăр, кинона,
алăк умĕнче пĕр саслăн
клуб хуçи те Микула
ахăраççĕ: «Мăшкăллать!
Укçи çук — кино курасшăн!
Харампыр! Ах, кĕççепит!»

(Укçи пур-ха, тавăрасшăн
арăмшĕн, йитрит-кутрит.)

Çухинчен çăлса илеп те,
Микула ăх! çеç теет.

Сывлăш кăларать илемсĕр.
Çитрĕ тусăм, телее.

Тепĕр  кун пĕри каларĕ:
«Эс çаплах-мĕн хулиган.
Ăс кĕмен-мĕн хулара.
Ырантан тек курам мар эп —
лайăх чух тасал ялтан».

Сăмах майăн пĕлтерем,
çакă çын, Тамара куккăш,
каярах тата пĕр кулăш
кăтартсассăн, чĕререн
ухмаха курайми пултăм.

Халлĕхе ялтан çухалтăм,
фельдшерта çӳреп инçе.
Юратмастăп хам ĕçе.
Халăм çукран мар, пур халăм.

Пĕлĕвĕ те пур, çук мар,
практики те пулнă тĕплĕ.
Эп çуралнă сăв çырма,
кĕрлетмешкĕн сассăма.

Тахçанах пăчланчĕ сăвă.
Писрĕç, тарчĕç музăсем.
Пуш тĕнче салху та тăвăр.
Çавăнпа пуль, питĕ хăвăрт
йăлăхтарчĕç чирлисем,
шприц, укол таврашĕсем.

Тивĕçе пула ĕçлетĕп.
Икĕ çул ĕçлемелле.
Чун урать те, спирт ĕçетĕп
хама-хам шелле-шеллех.

Тĕттĕмре галлюцинаци
чĕрене çурать çаплах.
Çĕнелесчĕ, улшăнасчĕ, —
спирт ĕçни çакна хуплать.

Аннерен чирпе çуралнă —
вăрçă панă ырлăх ку:
çураличченех çаратнă
ирсĕр Гитлер, пăхлă кут.

Пĕтнĕ нерв системине халь
спиртпала антăратап.
Çынсене эп юратап,
хам пĕтни тем мар, мĕнех вăл.

Ыр ят юлтăрччĕ хыçран.
Шăл çыртса хама хистетĕп —
чун туртмасть, анчах ĕçлетĕп
(ял калать, эп мар) аван.

Суя чун главврач, мошенник,
улталарĕ çамрăка:
пилĕк çул, тет, çакăнта
çын каймашкăн килĕшмен-мĕн.

Эп çур пин киле пĕччен —
тухтăр. Каç та, ир те канăç

çук мана. Чун тухиччен
ăшталан — пĕрех мухтамĕç.

Чирлĕ çын айăплă мар.
Чĕнесех пулать. Пыратăп.
Тапратаççĕ ятлама.
Хурланатăп, аптăратăп.

Çын вилет те, çĕрĕпех
хваттерте эп макăратăп.
Çакăн пек шелленипе
хама хам эп типĕтеп —
хăрушла сиен тăватăп.

Ик çулта эп йăл кулман-тăр
ик хутчен те. Хай главврач —
чикан пек хура Гильманов —
йăпатать, пуç çавăрать.

«Тĕрĕс» çулпала ярасшăн
куçарать ялтан-яла:
(авланман, авланмалла, —
пулăп ун чух çеç пĕр ялшăн).

Тимушкел те Анат Саврăш,
Çĕн Аксу, Кӳшшӳ... вара
хамăр ялăма эп «саврăм»
главврачран ыйтмасăрах.

Секретарь пулса çӳрерĕм.
Хĕсрĕç — тартăм хаçата.
Самаях каяш та эрĕм
хыпрăм çакă ик çулта.

Ĕç çинчен те мар поэмăм,
сăвăсем çинчен те мар.
Пăтратмасăр тивĕç эпĕ
йĕркипе йăлт калама
Юрату çинчен, атьсемĕр.

Авланма-и? Тур ан хуштăр...
Çĕнĕ Аксăва кăшт таврăнар:
ман умра — пĕр çут сăнар,
тусчĕ эп унпа пĕр хушă.

Тусăм! Римма-Мефистофель!
Хирĕçлӳ турри! Сана ялан
хампала пĕрле курас килет-çке ман.
Ах, тепре хăçан-ши килсе тухăн?

Килсе тухмăн çав тепре нихçан та.
Ĕнтĕ маннă пуль, ах, маннă пуль.
Эпĕ, ак, çаплах-ха калаçатăп
санпала. Умра хальччен эс пур.

Эсĕ отпускраччĕ, Пермь майри,
пĕчĕк хĕрӳпе, ват аннӳпе килсеччĕ.
Каçĕ мĕнле каçчĕ! Мĕн тери кĕрлетчĕ
вăйă сассипе урам варри!

Çывăх туслашса, эпир хăрарăмăр
ял тем каласран, аннӳ те пĕлесрен:
имĕш, сан, ачаллă арăмăн,
пăрăнас пулать ун пек ĕçрен.

Усал куç тĕлне çакланасран,
çирĕклĕхелле каçатпăр пĕве урлă.

Сылтăмра сукмак, утсан-утсассăн — улăх.
Юрă илтĕнет анаткасран.

Эс, нумай вĕреннĕскер, аспирантура,
ăслăлăх пирки калаçнипе,
тăлăх ача пек йĕрет çав юрă.
Эпĕ, темшĕн, хам та — мĕскĕн пек.

Те эп хам сахал вĕреннĕрен,
те эс аслăран темиçе çул,
ытларах эп — чĕмсĕр чĕмере.
Пуплейместĕп тан — сăмахăм çук.

Сĕртĕнме те, куçунтан пăхма та
хăяймарăм, çунтăм пĕр эрне.
Мĕн тери хĕрӳлĕхпе ăнлантăм
иментӳ вăл пурнăç иккенне.

Чĕрĕлтĕм. Типсе, асап çăлкуçĕ
тулчĕ киленӳ асамĕпе.
Сăн салхуллă та, чун, кăмăл, — уçă.
Эп юрлап эс сывлăх суннипех.

Çуллахи каçсем ытла кĕске.
Ир енне, киле каяс чухне,
пĕвере шыв шăппăн чӳхенет,
тухăç ялкăшать вуншар тĕспе.

Кĕçĕр, тен, сан пысăк куçусем,
тухăç хĕмĕпе татах та çутă.
Сывлăм сирпĕтсем, кулса илсем,
сывлăмран таси нимскер те çук-тăр.

Тăхăнсамччĕ çак пуçкăшăльне.
Çивĕтне те чечексем тирем-и?
Типĕтсем, тăванăм, куççульне.
Унсăрах та çурăлать чĕремĕм.

Ан йĕрсем, мĕн-ма йĕрен? Таянтăн
ват йăмра çумне. Пар аллуна.
Карт! туртса илетĕн — ма? Туятăп,
ах, аллу! — кăвар пекех çунать.

«Темĕн... сулхăн... Миша, эс каçар», —
терĕн те пач улшăнтăн сасартăк...
Халиччен хĕр курман мар пулсан та,
ĕмĕрлĕх астурăм çак каça.

Эс сăнри кашни йĕрех сăнарăн,
куç илмерĕн, темшĕн хуйхăрса.
Пăхрăм та, хуйху сан тарăн-тарăн,
тĕпĕнче — таттисĕр хĕн-асап.

Çывхарсан туту патне тута,
пĕтĕм пĕвĕпе тăрр! чĕтренсе эс илтĕн.
Малалли пит хăвăрт пулчĕ, питĕ.
Çунтарса яраттăнччĕ чутах.

Уçă кăкăрăм çинче мĕн чул
чие пек те, çырла пек те çăлтăр...
Хăпрăн та сасартăк, чăлтăр-чалтăр!
çупрăн питĕмрен. Аллуччĕ чул.

Юлтăм — тăм юпа. Эс кайрăн, кайрăн.
Ир пулсассăн — кайнă терĕç пĕтĕмпех.

Эсĕ манăçмăн, тĕлĕнмелле хĕрарăм,
гениллĕ ятсем манăçман пек.

Пĕр минут кăшт маларах çитсен те
çăмăлрах пулатчĕ пуль чĕре çинче.
Тен, çавна туйса çапах çĕклентĕн,
алă сĕлтрĕн самолет чӳречинчен.

Эпĕ йăнăшман иккен. Эс тĕрĕс тунă.
Эрнерен эп илтĕм те çыру,
ытарми юлташăм, чун пек тусăм,
каçару ыйтатăп, каçару.

Савнăшăн-юратнăшăн каçар.
Эп сана пĕлмен-мĕн, ăнланман-мĕн.
Пурпĕрех çав юлашки каçа
манмăн эп, мĕн виличчен те манмăп.

Эс çыратăн: «Çакă çĕр çинче
Юрату — трагеди. Çуралсассăнах вăл —
пĕтме пӳрнĕ сарпике, хăрас чечек».
Малалла вулатăп та, чăнах-мĕн:

«Эп сана юратрăм, — тетĕн, — курсанах.
Иртнĕ, вилнĕ юрату кун пек синкерлĕ марччĕ,
кăткăс марччĕ. Ку — çиçсе хăпарчĕ
йăлтăр-ялтăр! Аçа çапрĕ! Ах!

Тĕппипех çунса каяс темесĕр,
хальрех çеç çунса тертленнĕскер,
пултăм эп санпа вăр-вар, тискер.
Эсĕ ăнланатăн, каçаратăн эсĕ.

Эс, паллах, сăмах пама пуçлаттăн,
юратма тупа тăваттăн ĕмĕрне.
Кирлĕ мар тупа тума, пул паттăр,
ăшунта упра тупасене.

Эп вунçиччĕреччĕ. Тупа турĕ
çирĕм çиччĕри ман Леша та.
Çĕçĕпе чиксе пăрахрĕ виç çултан.
Ӳсĕр те пулман вăл, тăп-тăр урă.

Сăлтавне ыйтсан, судра: курас килместчĕ, терĕ.
Мĕншĕнне хăй те пĕлмест иккен.
Эп пĕлеттĕм те, пĕлсе — мĕскер? Чĕнмерĕм.
Паллă ĕнтĕ... çĕçĕпе чиксен...

Выляса-кулса ирттернĕччĕ çулталăк,
каччăпа хĕр пек: туй хыççăн та
ачашлаттăмăр пĕрне-пĕри чунтан.
Пурăнаттăмăр çын ăмсанмалăх.

Вăл шахтерччĕ. Эпĕ — çĕвĕç те студентка,
ĕçлесе килсен, чупаттăм лекцине.
Ăсатса калатчĕ: ан шăнсам, чечекĕм.
Тĕл пулма пыратчĕ институт умне.

Пурнăç улшăнчĕ Светлана çуралсан.
Ĕçлейместĕп. Лекцине кайсан,
ачапа ăна юлма тивет те,
ун çинче — ача пăхас мĕнпур асап.

Кинопа театр — манăçра.
Ташăсем аваллăхра пурнаççĕ.

Куртăмăр: çут яшлăхăн çуначĕ
авăсмасть — хевтесĕр те çара.

Ĕçкеле пуçларĕ Леша. Таврăнмасть.
Таврăнсан та нимĕн ырри çук:
çĕрĕпе, куççуль кăлариччен, çумран хăпмасть,
çиййĕмех хăсса ярать хăш чух.

Пĕринче сăлтавсăрах пуçтарчĕ ĕçкĕ.
Эпĕ чирлĕччĕ. Шăмарчĕ: «Хатĕрле!
Студент мар эпир, эпир, — тет, — ĕçлĕ,
ĕçменни нумай пулать пĕрле».

Ӳсĕрпе мăшкланине каçарнă эпĕ.
«Харампыр», — теет те урăллах,
тарăхса турилккепе перетĕп.
Çухалать. Килте виç каç уллах.

Харкашу, йĕрӳ те çапăçу...
Кĕсйинче фото, çыру тупатăп —
шăл йĕрет: «Ку çамрăк, эсĕ ватă,
ни кăкру, ни çурăму сан çук».

Çырмăттăм та пĕтĕмпе çакна,
пирĕн кăна мар çав çакăн евĕр
тӳрĕ килчĕ тамăкра çунма.
Юлташсен те çаплаллах кĕрлерĕ.

Тантăшсем патĕнче пултăм та пăшăрхантăм:
пӳлĕмĕн сĕмĕнче, тĕпĕнче,
Юрату типнине-çуннине эп куратăп.
Ах, мĕн-ма... мĕн ĕçпе килнĕччĕ?

Васкаса вырӑнсем саракан
мӗскӗн сасӑллӑ тарҫӑ,
ӗмӗрсен саккисем сарлака,
санӑн ансӑр ҫав, сан вӑрӑм мар ҫав.

Сӑмахна та чӗнмешкӗн хӑран.
Урамра та вӑрҫаҫҫӗ, вӑрҫаҫҫӗ.
Ҫутӑ кун та сана хуп-хура.
Ҫук, хӗр мар эс, — хӗрарӑм тарҫӑ.

Ҫакӑн пек халлӗхе — Юрату.
Авлансассӑн — питех юратмаҫҫӗ.
Шухӑшлап эп: начар ҫынах марччӗ
манӑн Леша. Ӑҫтан — ҫухату?

Вӑл ҫеҫ мар, эп те писрӗм унран.
Ҫӗҫӗсем вӑл кайран, унчченех-ха
эп пуҫларӑм пӑхма сивӗреххӗн.
Кил... хуҫалӑх... ача... эп сывлаттӑм аран.

Машшинпа ҫӗлесе анраса ҫитнипе
лекцире тӗлӗреттӗм. Ҫӗтетчӗ хаваслӑх.
Упӑшка ҫинчен мар, хӗрача ҫинчен эп
ытларах шухӑшланӑ, калаҫнӑ.

Бытие вӑл ялан бытие:
ӑстӑна хӑйле ҫеҫ, хӑйле ҫеҫ вӑл унать ҫав.
Бытие вӑл усал та чее,
самантрах хӑварать бытие
ҫамрӑка Юратусӑр, ҫунатсӑр...»

Ҫакӑн пек ҫырӑва вуласан,
ман йӗрессӗм килет уласа.

Авланма-и? Кай, кай, тур ан хуштăр!
Авлансассăн — мĕн чухлĕ асап!

Шӳт мар çав «бытие». «Бытие»!
Хăй, майри те, ача, пит чее.
Эх, çырать вĕт, эх, епле çырать вĕт.
«Эпĕ, тусăм, ухмах мар», — теет.

Хам та сиснĕ-ха ухмах марне.
Çавăнпа пуль, чăтма çук çунатăп,
çич çултан та вĕçсĕр асăнатăп,
сăнарне хурса чĕре варне.

Хирĕçлӳ туррийĕ Римма-Мефистофель,
«Юрату — трагеди» текене ялан
ман, сана, хампа курас килет, тăван.
Ах, тепре хăçан-ши килсе тухăн?

Килсе тухмăн çав тепре нихçан та.
Ĕнтĕ маннă пуль, ах, маннă пуль?
Эпĕ, ак, çаплах-ха калаçатăп
санпала. Умра хальччен эс пур.

Эсĕ çырнăччĕ тата, юлташăм,
эпĕ тусăмăн тиранĕ пуласран:
«Юратусăр Ирĕклĕх вăл маншăн
хаклăрах Юратури чуралăхран».

Ĕнтĕ вăхăчĕ те иртрĕ, эсĕ ху та
халĕ урăх çын пуль? Эп — çавах.
Иртнине савса, паян, ак, юрă хутăм,
эсĕ тивĕç мухтава, юратăва.

Тивĕç те... мухтанине итлес темерĕн,
юратма пулмарĕ, кайрăн эс.
Сыпăнмарĕ юрату кĕперĕ —
ишĕлнĕ, никам та çӳремест.

Хĕвеланăç вутăн-хĕмĕн çунчĕ
эс вĕçсе ăсаннă кун, каçпа.
Тухрăм та вăййа, пĕр çын та çукчĕ.
Пĕлĕтре — йăл-ял! шевле чупать.

Çил уларĕ, çумăр чашлаттарчĕ.
Аслати кĕрлерĕ çĕрĕпе.
Çĕн Поэзи кĕрлесе хăпарчĕ,
çĕнĕ хăватсем вăранчĕç чĕрере.

Таптаса тăкаяс çук ăна нихçан та
ни савни, ни цензор, ни тиран.
Сакăр самана çунтартăр, çуртăр, çаптăр —
пурпĕр ӳкереймĕ урараn.

Çавăнпах пуль, çав тери йӳç кулăш
килчĕ манăн капланса кăштран
хăтана пырсан Тамара куккăш —
клуб хуçи, ялти хайхи кuштан.

Эп хĕр мар та, çураçмашкăн пынă:
«авланасшăн», имĕш, йăмăкĕ.
Мухтанать, мухтать те йӳтетет —
авлансассăн, пурнăç, имĕш, пыллă.
Чим... эппин калам-ха йĕркипе.

Кĕр енне мана тăван ялта
çамрăк-кĕрĕм пуçлăха суйларĕ.
Çитрĕ майĕпен Октябрь уявĕ.
Вăхăт тăхтамасть, хĕлленелле юртать.

Концерта пырсан, çыру тыттарчĕç.
Ха! пашалу пек кӳпшек конверт.
Праçнике асилнĕ ĕнтĕ тахăш...
Кам çырать? Часрах пĕлес килет.

«Ырă кун! Сывах-и, хаклă çыннăм?
Пирĕн Юратун кĕç юбилей.
Пирĕн Юрату... сӳнми телей...
Ăнăçмасть. Çаплах-ши турă çырнă?

Тĕлĕкĕмсенчи сар йĕкĕт, акă халь те
ыталасшăн пултăм та сана,
эсĕ кӳренсе аяккалла пăхатăн,
такама шыратăн, хапсăнан.

Тĕлĕкре те манăн мар. Макратăп
вăрансан та, чарнаймасăр темĕнччен.
Вăрансан та сана çеç куратăп.
Эсĕ — инçетре, эп — пĕр-пĕччен.

Ялта чух эп Ляваран кулаттăм.
Халь манран кулатăн пулĕ — эс.
Кулăсăн, пурĕпĕрех пыратăп,
шухăш-кăмăл пурпĕр сӳрĕлмест.

Кам патне пырас? Атте патне-и?
Вĕлереп тесен те... чун туртмасть.
Ик çултан та йĕрĕнӳ пĕтмерĕ,
пĕтессин те вĕçĕ курăнмасть.

Йĕрĕннишĕн çĕçĕпе пусаймĕç.
Аннене пит йывăр — мĕскĕн çын.
Эсĕ çеç, эс çеç ман пысăк савăнăç.
Сан патна кĕретĕп. Кулĕçин.

Савнисем пулсассăн, пăрахса тăр.
Саншăн мар ют çын арăмĕсем.
Ах, юлташăм, иксĕлми асапăм,
пур-ши ман пекех телейсĕрсем?

Иванов Сашшук Якутире халь.
Кашни кун çырать унта пыма чĕнсе.
«Эпĕр, — тет, — романтиксем». Хăравçă чăхă.
Тупăннă иккен романтиксем...»

Çакă кĕвĕпе вуник страница
шăрантарнă хаклă савнă тус.
Тарăхать те тĕлĕнет çур пуç:
«Вăт тăхлач! Качча килет вĕт ирĕксĕр!»

Тепĕр çурринче: «Ăçта, — теç, — намăс?
Çавăн пек хĕрачана пулăшмасан,
тиркесен, суйсан, юратмасан,
эсĕ ху та этем мар, эс — навăс».

Тирĕс камăн пулас килтĕр? Тислĕк...
Лермонтовăнни пек куçĕсем,
хĕрĕн, тунсăхпа тулса, ыйтаççĕ тĕрĕслĕх.
Эп чĕтретĕп, Лермонтов тесен.

Çит... тархасшăн... эпĕ хирĕç мар...
Ку мĕскер? Ах, çĕнĕрен — записка:
«Тусăмçăм, эс ĕнтĕ пысăккă.
Уллаха чĕнетĕп. Шуçăма».

Тĕлĕнсе, хута алран ӳкертĕм.
Тамаша! Вăл Шуçăмра иккен!
Эй, Çимун, тăрантаса кӳлер те...
Тен, пике хăрать унта пĕччен?

...Вĕçтерсе çитсе яри уçсассăн
тĕттĕмре шыранă алăка,
илтĕнет шалтан ах! тенĕ сасă.
Иккĕн тан кĕретпĕр уллаха.

«Тăхтăр! — тет. — Тупам-ха, — тет, — халат».
Тупрĕ. Чĕрне вĕççĕн вĕçсе пычĕ.
Мăйăмран ачашшăн уртăнать.
Сĕртĕнет пите кăвар пек пичĕ.

Чĕмсĕр упана, юлташăма,
систермерĕ те, чăп-чап! чуптурĕ.
Леш, куçне мăчлаттарса, тăрать тӳп-тӳрĕ.
Темĕншĕн кулмасть хăй, ютшăнать.

Чей ĕçме ларсан та шавламарĕ.
Хĕр таçта тухсан кăна, хуллен:
«Эпĕр пĕлни мар ку, — терĕ, — ку Тамара
тул енчен — хĕвел, шалтан — çĕлен».

— Эсĕ мистик, тусăм. Аташатăн.
— Хуть те кам пулам — чĕре суймасть.
Сывă юл-ха, эп каям. Лаша та
канчĕ пуль...
— Сан, тусăмçăм, сунас.

Шӳт те витеймерĕ. Тусăм кайрĕ.
Хĕр, кĕрсен, шăртланчĕ: «У, шпана!
Çĕр çинче тăмписменсем нумай вĕт,
çын тесе шутланă эп ăна».

Лăплансан, хуллен калать Тамара:
«Хывăн, — тет, — тумпа-çке пăчăрах.
Икĕ çул, ик çул асран каймарăн.
Халĕ ĕнтĕ, ак, çумрах, çумрах.

Сăвă çырнăран сана саваççĕ.
Пысăка вĕреннĕрен тата
вĕççĕр çакăнаççĕ мăюнтан.
Хăвна мар, чапна сума сăваççĕ.

Эп сăввуна мар, хăвна юратрăм, —
сассуна, куçна, ачаш йăл куллуна.
Çырă кăтруна юрра хывса юрларăм.
Чăтрăм эпĕ, усала хумарăм
вут пек çиллӳне, сив кăмăлна.

Тĕнчере атте-анне пулсан та,
эп хама туятăп тăлăх пек.
Саврăм эп, халь те санах саватăп
юлташ пек, тăван пек, пичче пек.

Сансăр пурнăç маншăн пурнăç мар.
Эх, айван, епле эс сисеймерĕн:
Лявапа кайса, кĕвĕçтерес çеç терĕм,
пуçлĕ, терĕм, тен, чăн юратма».

Фу! епле ялан пĕрьевĕр,
йăлăхтармăш япала!
Ма Поэзийĕн кĕрлевĕ
саншăн ют вăл пулмалла?

Ман Поэзи — манăн тупсăм,
манăн чун, ăс-кăмăл, вут.
Эс, эппин, хисеплĕ тусăм,
эс... вĕсемшĕн çичĕют.

Чунсăр эпĕ вилĕ. Вилĕ.
Пурнăçăм — Поэзире.
Ман виле çеç сана кирлĕ.
Чăн — çĕлен, хура çĕлен.

Шалкăм пек килсе çапать те
çакă шухăш пуçăма,
ялт! сиксе тăратăп, хăй çутатăп,
тарăхса, пуçтарăнап çула.

Ман енне халь, каласа ĕненмĕн,
янăрать çурас пек хăлхана:
«Эсĕ те çавах-мĕн, тăмписмен-мĕн,
çын тесе шутланă эп сана!»

Тепĕр каç клубран чĕнтерчĕç
пĕр çĕре. Пыратăп — пĕчченех
куккăшĕ. Мĕскер амакĕ-терчĕ
тухнă-ши тата праçник чухне?

— Лар, — тет, — сывлăхсем мĕнле? Килте епле?
Сывă-и аçу, аннӳ, ытти çемье?
Секретарь ĕçне хвершăлтинчен элле
саварах паратăн-и? Чее...

Эс ку линипе инçе каймашкăн
пултаратăн. Тăрăш, ан пăрах.
Тамуçа итле, ытах ан ашкăн —
çын тăвать сана вăл, ан хăра.

Пĕр-пĕрне пĕлетĕр ачаран.
Иксĕр те ачаш ӳсмерĕр. Тӳсрĕр.
Ху куран, епле хитре хĕр ӳсрĕ.
Ĕнтĕ пиçсе çитнĕ, час татан.

Куçĕ... ах, шуйттан... кăкри, хул-çурăм...
Ĕçлеме тата... Вут. Пăрăç. Пăрчăкан.
Ан вĕçерт! Эс ху та вутлă чунлă.
Асăрхан, ак, улталать пĕр-пĕр чикан.

— Улталать? Кама? Ăна-и е мана?
Эпĕ ĕнтĕ улталаннă — улталанмăп.
Урăх тек пулмастăп тăмана,
çакăн пек хушать кăштах пур пек талантăм.

— Чим, тăхта! Ку мĕн тени? Çĕр каçнă
эс унпа, киленнĕ... Халь — таран?
Так эс, дорогой товарищ, какшă?
Эп апла-тăк, тусăм, хуптарап.

Эсĕ сăмах панă, тархасланă,
çурнă, татнă, кăвакартнă... Халь,
вăрă пек, айккинелле пăхан?
Ха, епле чее вăл, ăслăланнă.
Пăсрăн-тăк, хăвах илетĕн пуль?

— Мĕн тери суя эсир, пуклак та чыссăр.
Сарăмсăр меслет... Талант — ним чул...
Çыхрăр та, ытла та сӳтĕк çыхрăр.

Тамуçа савап, савмастăп мар.
Вăл та юратать, анчах та пĕрлешмелĕх
пирĕн чĕресем туслашайман.
Шухăш-кăмăлра та çук-ха пĕрешкеллĕх.

Пĕрлешсен тин ан кĕт килĕшӳ,
вăл пĕрлешиччен те çук пулсассăн.
Пӳ-сие, сăна юратни çеç (ак шӳт!),
чăн калатăп, нумая пымасть вăл.

Тупсăма — Поэзие, ăс-кăмăла, чуна —
йăмăку манран хуса ярасшăн.
Ӳт-пĕве анчах, пушăскере, савасшăн, —
хăй сисмесĕрех, вилешĕн вăл çунать.

Тарçă вăл тăвасшăн вилеме.
Пĕр хăйне çеç итлекен ыр тарçă.
Пĕлĕрсем! Çут тĕнчипе ыйтаççĕ —
поэта, вăл пухнă илеме.

Вăл — тĕнче тарçи. Ан кĕтĕр
«ăслăланасса», «çаврăнасса».
Юрату, ытла айван-тăк, — пĕттĕр;
паттăр-тăк, — кĕрлетĕр çуталса.

Эх, упрасчĕ те... итлес теместĕр.
Уйрăлатпăр-шим яланлăхах?
Ăнланмастăр, çавăнпа чĕнместĕр.
Вăхăт суймĕ, вăхăт калĕ-ха...
Кайрăм эп, ыран çула тухап.

* * *

Шурă-шурă пушхирте утатăп.
Эпĕ — лăпкă. Лăпкă — çĕнĕ юр.
Иртнĕ пурнăç... пулнă-иртнĕ... кайрăм, сывă юл.
Мал енче малашлăха куратăп.

Тухăп эпĕ паттăр та вĕри
çав малашлăха, çунса арканмăп.
Çакă, хальчченхи, йăваш айван пăлхавлăх
пурнăçăм прологе пултăр-и.

Ытарми Инанга Алшигусти —
çӳçĕ çырă, куçĕ çăлтăр кучĕ —
кĕркунне, хĕлле те çуркунне, çулла,
халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрне,
хам мĕн виличчен, çутатĕ кунçула.

Эй, сăваплă, чаплă курăну!
Ик алла тăсса, патна пырасшăн пултăм.

Ăшшăн култăн та... эп çунтăм, çунтăм.
Вăхăтра эп турăм чарăну.

Хуйхăрни-мĕскĕнленни саланчĕ.
Макăрмастăп тек, малтанхилле.
Тутлă-тутлă ырату саманчĕ
чĕрене ыталаса илет.

Эсĕ çеç мĕнпур калассине,
эсĕ çеç тĕпрен ăнланăн халь —
итлĕн тăлăх чунăн сассине,
итлĕн те ытах хурламăн-ха.

Эпĕ — эс пуласшăн. Эс пул — эп.
Ман пекех пăлхан, ман пекех тĕлĕн.
Ун чухне çеç, ун чухне çеç пĕлĕн
мĕншĕн Юратусăр — çын пĕтет.

Эс Поэзи пул, ман пурнăç тупсăмĕ.
Юрату пул, Юрату-Хĕвел.
Ан çĕт эс куçран, анчах та, тусăм,
эс Инанга пул малтанхиллех.

Ăслă пул, маттур, хастар та çепĕç.
Хӳтĕле мана, урсан эсрел:
аннесем сан пек хыт хӳтĕлеймĕç
ахрата тĕксе сирпĕтесрен.

Эс аппа та пул. Эс пул юлташ.
Санăн... çывăх тус та пулмалла.
Пурнăç ятлă кăткăс кунçулта
эс хамран та хӳтĕле мана.

Пĕтерме пултарăп хама хам.
Эй, таса хĕр, ан ятла, ан ывăн.

Эп — анне куççулĕ, савнă ывăл —
яланах çунатăп хурлăхра.

Пул Тăван çĕршыв. Пул пысăк парăм.
Пурнăç пул. Анне пек пул чечен.
Килĕшсен, ыйтатăп, пул эс арăм,
парнеле хĕвел пек ачасем.

Эсĕ таврăнсан, манпа юлсассăн,
эп те хӳтĕлĕп сана чи вăрттăн тăшманран.
Мĕншĕн пурнăç тупсăмĕ сив хурлăх мар, хаваслăх —
эп çавна та калăп пур чунран.

Мĕншĕн Юрату шăпи — салху камит,
мĕншĕн вилмесен чĕрех вăл юлмалла,
эп çавна та, эс килсен (кам эп?),
каласа паратăп пулмалла.

Чăн-чăн Юрату час аманать.
Йышлăн палламаççĕ-ха ăна.
Йышлăнах пĕлмеççĕ, хĕрхенмеççĕ.
Самана шеллет, пĕр самана.

Эп çавна та калама пултарăп
хам мĕн курнă, хам мĕн илтнĕ пек.
Эп Юратăва чăн вилĕмсĕрлĕх парăп.
Юрату!
Эс вĕççĕр аслă, тарăн,
ачаран эс манра — Хĕвел пек...

*1967 çул,*
*Хусан—Саврăшпуç—Шупашкар.*

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

### 1.

Мухтав сана, тăван кĕтесĕм,
Пӳлер таврашĕ, Саврăшъен!
Мухтав, мухтав! Нумай кĕттертĕм,
эп ĕмĕре нумай кĕскетрĕм
мăшăрланса таврăниччен.

Çул килтĕмĕр. Малтан — ракета,
унтан — автобус. Çул инçе.
Çуран та утрăмăр: ӳркентĕн —
пулмасть авланасси, тесе.

Хам ĕçлекен çуртрах хĕр тупрăм.
Юсатчĕç пӳлĕм пикесем —
ремстрой кантурĕ хушнисем.
Юрлатчĕç. Паллашмашкăн тухрăм.

Унччен ăçта кăна пулман эп,
ăçта кăна хĕр шыраман —
Раççей, Германи, Казахстан —
ăçта çитсен те, ĕç ăнмарĕ.

Хусан тата, Хусан! Сахал-и
хĕрсем мĕльюнлă Хусанта!
Асран тĕтре пекех çухалнă,
инангăлла курăнсан та.

Мĕн чухлĕ чаплă хĕр ĕречĕ
пуçтарнă университет?!
Унта эп пилĕк çул вĕреннĕ.
Ну, çитĕ... туйрăр пуль... çитет.

Ну, ăслă, яш, хитре... Пытармăп.
Анчах та çук ăшши, çути.
Анчах та, каласан ытарлăн,
чун темшĕн пулчĕ çăтăрти.

Тиркешрĕ, килĕшмерĕ темшĕн.
Ма темшĕн? Мар-çке, темшĕн мар.
Хамра çукки патне иртесшĕн,
унта çитсе чыса кĕресшĕн
çунтартăм эпĕ чунăма.

Эп, çын пулса, тăрасшăн пултăм
ура çине çавтер патвар.
Эп турăм утăм хыççăн утăм,
эп пултăм çивчĕ те вăр-вар.

Ĕçлерĕм вăкăр пек. Кăлартăм
(епле чарсан та ирĕке,
арсланăн талпăнтăм, хăлатăн),
кăлартăм пилĕк кĕнеке.

Унччен поэтчĕ эпĕ, халĕ...
халь — член. Ан кулăр. Союзра.
Эппин — çыравçă. Эпохаллĕ
çырмашкăн парти йыхăрать.

Анчах çырмастăп эпохаллĕ.
Мĕскер пулса тухать, пăх-халĕ,
эпоха шайĕпе çырсан —
поэзире поэт çухалнă,
çырни-чĕрнийĕ — кĕл, тусан.

Йӳҫ тётём... Шыв... Тата мӗн тем-ши?
Мӗнне пӗлетӗр хӑвӑрах.
Унта кӗрес текен этемшӗн
сипетлӗ сывлӑшсем ҫукрах.

Пуҫ кӑлар ҫеҫ, кӗрслеттереҫҫӗ
кӳсекпе мар, чукмарпала.
Кӑшт тӗрӗс ҫыр — тӗрӗслеттереҫҫӗ.
Аллать пӗр шелсӗр вӗт ала.

Малтан ҫумлать сана редактор,
унтан — главред та облит.
Вара, тиркевҫӗ ҫулӑхать те,
тӳррен е вӑрттӑн ҫӑхавлать те,
ярса илет обком алли.

Ку шутланать телейлӗ автор —
усса ҫапах тӳсни-чӑтни,
хайлавӗ курчӗ кун ҫути.
Мӗн чухлӗн — нимӗнсӗр юлатпӑр?!

Ҫапса хуҫни кӑна та юрӗ,
КГБсем сӗтӗрмесен.
Пичетленмен юрра та юрӑ
теме пулать, тепӗр тесен.

Хупса кӑна ан лартчӑр; лагерь,
тӗрме вара, туссем, мӗн мар;
унта лексессӗн, тур сыхлатӑр,
питех юрлаймӑпӑр хастар.

Унта лексессӗн, шӑп пул эсӗ,
пулмарӑн — парӗҫ те хушса,

тухаймӑн ӗмӗрӳ иртмесӗр,
тупаймӑн чӑнлӑх тавлашса.

Тавлашӑн, тупӑшӑн, харкашӑн —
кӗтсе илеймӗн тур сутне.
Пуҫна пӗкменшӗн, парӑнманшӑн
ӑсатӗҫ ухмахсен ҫуртне.

Ятна ҫӗртсе, ӑна мантарӗҫ
тӑван ҫӗрте яланлӑха.
Епле хальччен, епле, мӑнтарӑн,
эп сывӑ та ҫунатлӑ-ха?

Ҫунатлӑ ҫеҫ-и, авланатӑп.
Эп хӗр ҫураҫрӑм Елчӗкре.
Шупашкартан халь таврӑнатӑп.
Малта ман туй халь, черетре.

Ак ял. Йӑмра та хурӑн. Ҫирӗк.
Ял ҫумӗнче пӗве ҫап-ҫут.
Калай та шифер, чус — ҫурт ҫийӗ.
Ак клуб. Ак шкул. Ак пирӗн ҫурт.

Карти-сапурӗ тӗссӗрленнӗ.
Хапхийӗ вырӑсла хапха.
Кӑшт тайлӑк — вӑхӑт тӗрӗсленӗ.
Салхуллӑн ыр сунса пӑхать.

Виҫ чӳрече те кӗтсе илчӗҫ
пире саламлӑн куҫ хӗссе.
Кашнийӗнчех — такам сӑп-пичӗ.
Часах, ак, тухрӗҫ сирпӗнсе.

Чăматана та, хутаççа та
ярса тытаççĕ йăмăксем.
Аптранипе ĕнсе хыçатăп:
пуплес пулать-ха мĕн тесе?

Анне тухать, атте. Хавшанă.
Пăхаççĕ ăшшăн, юратса.
Хăйсем çине пăхма та шалккă,
ыталăттăмччĕ юрасан.

Сăпайлăн алă çеç чăсатпăр
хавасланса пырса эпир.
— Чăваш-и юлташу? Чăваш-тăр?
— Чăваш! Чăваш-çке! Çăлтăрпи.

— Апла маттур. Иртсемĕр, кĕрĕр.
Тинех вĕçленчĕ вăрăм çул.
Кам йăхĕ пултăн-ха, кам хĕрĕ?
— Ял йăхĕ... Тăлăх. Атте çук.

Анне текех ним те ыйтмарĕ.
Атте те тăчĕ шăпăртах.
Çул килнĕрен, мунча юмахĕ
кăштран тапратрĕ çавăнтах.

Ăна халь çеç хутса пултарнă,
малтан каяççĕ арçынсем,
вĕсем тухсассăнах уттарĕç
мунча кĕме хĕрарăмсем.

Ал çурăмăр. Атте тултарчĕ
апат анма пĕрер черкке.

Апат çисен, анне тыттарчĕ
кĕпе-йĕм — кăсăк, мерекке.

Тăван килтен кайман та тейĕн,
çаплах ача, айван ача,
аттепеле тухап телейлĕн
пахчаналла. Унта — мунча.

Улма йывăççи те, чие те
ӳсет мунча çывăхĕнче.
Шап-шурă çеçкере! Çӳретĕп
пĕр вăхăт сад ырлăхĕнче.

Атте кулать: «Ху вăтăра, — тет, —
часах çитен, пăхсан — мужик,
ачапчалла вилсе тăратăн,
куçусенче — салхулăх, шик.

Сан пек чухне эп хам çаплаччĕ,
юрать-ха, ăнăçрĕ кунçул,
аннӳ пит путлĕ çын çакланчĕ,
аннӳ пекки тĕнчере çук.

Вунçиччĕре кăна пулсан та,
ытла та ăслăччĕ аннӳ,
кӳрентерен — тăватчĕ сапăр,
чуна кӳместчĕ чăлхану.

Вун çул кĕçĕнрехрен, шанманччĕ
хисеплесе пурăнасса.
Ачам, ĕç çулра мар, аванччĕ
çав пурнăç сан та ăнăçсан.

Анну́ эп вăрçăра чухне те,
илтсен те пĕтнĕ тенине,
асаннŭнне те, хăй чысне те
куç пек упранă, çĕтермен.

Ачи-пăчи те чыслă ŭснĕ...
Калатăп-ха хăра-хăрах,
таçтан çичĕ ютран тем тĕслĕ
этем ку — тур сыхлатăрах.

Куç-пуçĕ пит çунать. Хĕрарăм
çапла терех çунса тăрсан,
ак ĕнтĕ эп каллех хăрарăм,
ун ăшĕнче ларать шуйттан.

Эп ватă çын, татах калам-ха,
асту, кая юлман-и-ха,
юлман пулсассăн, тен, хăраххăн
тата кăшт пурăнса пăхан?

Ытла та васкаса çураçнă,
пире чĕнмен ху, васкакан
макра-макра тулта çĕр каçнă,
арăмĕнчен вăл савăнман.

Эс каснă чĕлĕ. Пур та пирĕн
пăхаканни ватăлăхра,
çапах чун ыратать-çке питĕ,
ан çунччĕ, тетпĕр, хурлăхра...»

Атте шăпланчĕ. Нимĕн эпĕ
ăна пĕлмерĕм калама:

«Автобус ыранах кӗтетпӗр,
шанса хӑвартӑм шӑллӑма.

Туй халӑхӗ килет. Тӑватпӑр
ҫак виҫ кунта туйне-ҫуйне», —
аттепеле кӗрсе тӑратпӑр
тинех мунчамӑр пӑлтӑрне.

Атте ачи вӗт-ха, ҫуратнӑ
мана аттепеле анне,
хыт ҫапӑнатпӑр та, ҫӑватӑп
хырса аттемӗн ҫурӑмне.

Мӗн пытарас, атте пӑхать те
пӗр ҫӗрелле тӗсесерех,
эп вӑтанса тула тухатӑп,
вӑтантарать атте сӗре.

«Ялан кӗҫентӗр йӑрӑ ӑйӑр
тесессӗн, — сӗнчӗ пӑлтӑрта, —
майне пӗлсе вылят эс вӑйӑ,
вылятӑн — ҫӳрӗн паттӑрта.

Вылятаймарӑн — чӗрӗ хурлӑх
эс курӑн, пулмӗ каҫару.
Урӑххисем вылятӗҫ урӑх,
вылятӗҫ — пулмӗ-ҫке чару».

Эпир кӗрсе килсессӗн кайрӗҫ
йӑмӑксемпе ман Ҫӑлтӑрпи.
Унччен питех пӑхманччӗ, харӑс
халь пӑхрӑм та, вӑтанчӗ пит.

Çӳçне салатнă, хумлă-хумлă
ун пурçăн çӳçĕ пилĕкрен.
Çып-çырă вăл, çăра та хулăм,
юхать, юхать чӳхеннĕрен.

Пит-куçĕ хĕрĕн питĕ хӳхĕм;
сăмси, тути, янахĕ ун
талантлă скульптор илем кӳнĕн
курнать çак савăнăçлă кун.

Куç хăрпăкĕ... Куçсем... Çунаççĕ,
вут сирпĕтеççĕ хăрушла.
Атте систернисем чăнах-ши?
Атте... Ытла та кулăшла...

Кулса ярать те, ик рет шур шăл
çиçсе илет çăварĕнче.
Пике сасси чĕрешĕн, чуншăн —
асамлă; хăй вăл — пĕр тĕнче.

Тата çӳл кăкăрне ăмсантăм;
сăпсанни евĕр пилĕкне,
яштак пӳне-сине курсан та,
пытармăн, сывлăш пӳлĕнет.

Пĕççи-каççи таран сăнарăм.
Ури пит пĕчĕк-çке çарран.
Вĕчи-купарчипе сăнарĕ
пушшех вăйланчĕ ун ара.

Алăпа мар, куçпа та эпĕ
ăна хальччен хыпаламан.

Арçын вăранчĕ пуль халь тетĕп,
унччен пăхман та — вăранман.

Сĕртĕнменпе пĕрех ăна эп.
Йăлт писнĕччĕ те хĕрсенчен,
тӳрех епле-ха ăшăнайăн,
шăнса кӳтсен сив хĕлсенче.

Çан тавăрса ĕçре ĕçлеттĕм,
килте ĕçлеттĕм ирчченех.
Хаяр кĕрешӳре irttертĕм
Шупашкарти самантсене.

Тăван-пĕтен, кукка ман çукчĕ
ни союзра, ни обкомра.
Кут çуламан, çуличчен луччă
ӳксе вилем тытăçура.

Кăкăрăмпа çул уçрăм эпĕ,
йĕксĕксене юраса мар,
çынна сутма, пăвма хĕрхентĕм,
куç умĕнчех улталама.

Ман вырăнĕ пит меллĕ пулчĕ;
издательство ку, ан васка,
çын, ват лаша-и, яшă пуç-и,
куçран пăхать кунта, ваçка.

Малтан самай эп тĕлĕнеттĕм.
Эп кам? Вăрăмтуна... Вĕсем —
слонсем. Анчах, часах, сĕмлентĕм:
слонсен те пур-мĕн хырăмсем.

Çав хырăмсем, иккен, выçаççĕ,
хăйсен выçаççĕ, арăмсен,
ачипчисен, мăнукĕсен;
çав хырăмсем-мĕн хыт вăрçаççĕ.

Мĕн чухлĕ эп тасатрăм тислĕк!
Унран канхвет тăва-тăва,
час-час ере пуçларĕ ӳслĕк,
курпун та авăнчĕ аван.

Çапах пултараймастăп: анлăн
çул уçрĕç, пулăшрĕç теме.
Пĕр арăслан кăна хăватлăн
кар тăчĕ те, çын пултăм эп.

Çав арăслан вăл мансăрах та
пин çул пурнатчĕ пуль-и те,
темме мана савса юратрĕ,
çĕкле пуçларĕ пĕлĕте.

Унран пур кайăк та чĕтретчĕ...
Пĕр пухура — хастар куян —
эп тискере: «Ăçта черетсĕр
эс сĕкĕнетĕн, — теп, — ялан?

Сĕнетĕн çирĕм лист е вăтăр,
сĕнместĕн, чиксĕр пусмăрлан,
тепри виç листине те тăтăр
çич çул кĕтсе... Мĕн хăтланан?»

Пуху пĕтсен пырса ал пачĕ:
«Маттур!» — тет. Вăт çавăнтанпа

пулмасăр арăслан апачĕ,
туслашрăм эп арăсланпа.

Ну, юрĕ, ку халап мĕн мар-ха.
Халь авланас пирки сăмах.
Хальччен ниçта памарăм маххă,
тен, малашне тивет памах.

Шăл хăйракан шакал эшкерĕ,
тухмассерен ман кĕнеке,
йĕрлет те хуптĕрлет тискеррĕн,
çиет шăл çĕрĕ-кунĕпе.

Шакалсенчен эп хăрамастăп,
хал çĕтесрен кăна хăрап,
паян эп сывлăхлă, хаваслă,
паян-ыран, ак, авланап.

Тĕлĕнмелле хитре хĕр тупрăм!
Поэзи ялкăшать чунра.
Телей ку, идеал, хĕр турă...
Халь çăвăнать-ха мунчара.

Мунча кĕрсе кăштах кансассăн,
тумлантаратпăр пӳрт-çурта —
унта-кунта чаршав карсассăн,
каратпăр шторăсем тата.

Пулас çĕн кинпеле ик йăмăк
халтан яраççĕ аннене:
ах, теççĕ, çакас марччĕ йăнăш,
епле, теç, хăвăрт вĕренер.

«Асаннӳне ма асăнмастăн,
çукрах-им асаннӳ килте?» —
тесе ыйтас-тăвас пулсассăн,
туяймана тӳрех мĕн тес?

Çукрах çав... Чун пăчăртанать те
чĕре çунать... Ыр асанне
курасшăнччĕ ачамсене.
Туя та кураймарĕ Ватă.

Пехил парасшăнччĕ, пиллесшĕн...
Сунса ыр-сывлăх çав тери,
пулма чăн çын çӳлти Тӳрешĕн
вăл хушĕччĕ, рехет кӳресшĕн...
Ах, çăмăл пултăрччĕ тăпри.

Ах, аслăях аннеçĕм, эсĕ,
Турхан таврашĕ, асанне,
ан юл, ан юл сăвва кĕмесĕр:
яту сан пулнă Крахвине.

Чĕрçи çинче мана сиктернĕ,
сиктереймен атте-анне —
фронтра, ĕçре, мурта çӳренĕ,
мана ӳстернĕ асанне.

Ачамсене сиктереймерĕн,
сахал эс курнă ырлăхне,
хаяр чире çĕнтереймерĕн,
пирте эс пурнăн ĕмĕрне.

Фатта текеннине кăларчĕç
чăматана чипер уçса.

Кăларчĕç те, йăл-йăл кулаççĕ:
пăхаççĕ, ак, тăхăнтарса.

Пĕр йăмăк — çамрăк арлă арăм —
самай чухлать ăна-кăна,
канаш парать, виçет, сăнарăм,
майлать, хушать кана-кана.

Вара хывса хăй тăхăнать те,
пулать-тăрать çап-çамрăк хĕр.
Пĕр каçрăлать, пĕр ухăнать вăл.
Ку кам, мĕнле эхер-мехер?

«Çина-çке! — тет анне. — Ах, турçăм,
эп хам та сан пекех матурччĕ,
анчах та иртрĕç вăхăтсем,
ак халь маттур-мĕн ачамсем».

Кĕçĕннине черет çитет те,
шур фаттапа тăрать Лисук.
Йăмăкăма ытарма çук!
«Лисук, часрах пĕве кĕр!» — тетпĕр.

Фатти халь кăшт шалпартарах...
Виç пикере мĕн асăрхарăм?
Темме ик кĕлетки — хĕрарăм.
Лисук анчах... мур çаптăрах...

Тата — йăмăкăмсем пăхаççĕ
йĕркеллĕ, лăпкă, чип-чипер.
Ма Çăлтăрпи хаяр пăлхавçăн
вылять куççен хăвачĕпе?

Çав ырă мар вута курсассăн,
чун темшĕн сиввĕн çӳçенет.
Хĕрарăм ку, хĕр мар ку санăн,
теет пекех вăл хăш чухне.

Чăматанран татах кăларчĕç
(вĕлт-велт! тăвать кашнин алли)
кĕпе те тутăр, шоколачĕ,
кримплен-капрон, саттин-кăтачĕ —
парне тăван-пĕтен валли!

Ĕçми-çимийĕ, кучченеçĕ,
тум-юм, çипуç тата ытти
тирпейлесе хума чĕнеççĕ.
Тирпей пулсан, пулать пайти.

Атте, анне, кил-йыш çырлахрĕ —
йĕркеллĕ килнĕ, намăс мар,
кун пек майпа туй-çуй та, ахăр,
иртейĕ пысăк хаваспа.

Вĕçне çитех йĕркеллĕ пултăр
тесе пуль, çывăрас чухне:
«Кĕçĕрлĕхе çывратăр уйрăм», —
пăшăлтатать мана анне.

Анне сăмахĕнчен нихçан та
тухса курман, халь те — саккун.
Арçын-тăр, хама хам хуçа-тăр,
ма варланас юлашки кун.

Çул килнĕскер, мĕн ирчченех эп
«хуп сĕтĕрнĕ» те вилнĕ пек,

ирпе-ирех садра çӳретĕп,
ларса пуплетĕп аттепе.

Вара апат çиме чĕнеççĕ,
çĕн вырăнта вĕçмери, теççĕ,
никамăн ыйхă... çук, тавах,
вĕçмерĕ, çывăрнă аван.

Апат тусан, анне каларĕ:
«Халь çӳрĕр, ак, туя чĕнсе,
савса çитерĕр туй саламĕ
вĕр-çĕнĕ мăшăр ячĕпе.

Тăванĕ те, тăван марри те,
кам килес тет, тайма пуçах...»
Эп аннене ăнлантăм питĕ.
Çула та тухрăмăр часах.

Ăçта пырса, ăçта çитсен те
пире ыр сунчĕç çав терех,
тав турĕç, уйрăлчĕç хисеплĕн,
шантарчĕçĕ çитме ирех.

Сăн-пичĕсем çиçсе çуталчĕç,
пăхса юлайрĕç юратса.
Ентешсене миçе çулталăк
курманччĕ пуль, чĕре, тапсам.

Чун, савăн, шухăш, вĕç те çаврăн,
эп тупрăм хамăн Çуттăма,
эп тупрăм хамăн Чунăма,
çут — çавă, Çăлтăрпи; чун — çавă.

Эй, Çăлтăрпи, туяп, туятăп,
эп чĕрĕлтĕм пулас йăлтах.
Сан çутупа çĕн çут туянăп
эп малашне татах, татах...

Ăçта пырсан та пуш-пушахчĕ,
ялта та хулара, килте,
тек хăвалатчĕ, тем хушатчĕ
такам, таçта, темле тĕлте.

Манран кам ăслăрах-ши, теттĕм,
унта çитсе, кунта пырса.
Çак хулă ăслăрах-тăр шет, тет
пĕр çĕмĕрт, туратне парса.

Турат кăтартрĕ, çăлтăр куртăм.
Чăнах, вăл ăслăрах манран.
Йăлтăртатать çав çăлтăр çуттăн,
вăл — Çăлтăрпи çиçет умра.

Вара ăнлантăм, пушă мар-мĕн
тĕнчен ниçти кĕтесĕ те —
чунра пуш-пушă пулнă манăн
ялта та хулара, килте.

Вара ăнлантăм, хăвна çеç-мĕн
çут тĕнчере шанма пулать.
Хăвна шансан кăна çиçеççĕ
çӳл çăлтăрсем çап-çут ялан.

Санпа пĕр шухăшлă пулаççĕ
шыв та çĕр, сывлăш, вут, çаран.

Сана, таҫтан курса, палласҫӗ
чуну-чӗрӳ тап-тасаран.

Хушать хама кӑна шанмашкӑн
тивлетлӗ Ҫутӑ, Ҫӑлтӑрпи.
Ку — тӗрӗс ҫул хыпса ҫунмашкӑн,
чи Аслӑ Туррӑн ҫӳл тӳпи.

Эп турӑ хушнипе ҫуралнӑ,
пурнатӑп, ҫитӗнтӗм ӳссе,
вӑл хушнипех вилсе ҫухалӑп.
Ҫав Турӑ — Ҫутӑ вӑл, туссем.

Эп турӑ аллинче, хама эп
хам ҫӗнететӗп ӑнтӑлса.
Нумайӑн-и эпир? Нумаййӑн!
Ҫутта пурнатпӑр ӑнланса.

Чуна эс, Ҫӑлтӑрпиййӗм, витрӗн;
акса унта чечек вӑрри,
Ҫутта тымар яртартӑн вирлӗн:
Чечекӗ — Ҫутӑ, чун варри.

Чечек, тӳпе, ӑс, туйӑм-шухӑш,
ҫерҫи, пике е урхамах
пурте пуласшӑн Ҫутӑ, шуххӑн
пӗрлешнӗ ҫутӑ юхӑма.

Чупать, тӑрать, вӗри е сивӗ,
туять, туймасть, чӑн мар е чӑн —
пурте пӗр ӗмӗрлӗх тӗс илнӗ:
ҫав тӗс вӑл — Ҫутӑ; ҫутӑ чӑлт.

Çав самантра эп пур та, çук та.
Ниçта та мар, таçта хавал.
Çав самантра куратăп Çутă.
Вăл ĕмĕрлĕх, яланлăх вăл.

Эс, Çăлтăрпи, хăйне пĕр уйрăм
тĕнче, эп хам та пĕр тĕнче.
Анчах та пĕр-пĕринсĕр, туйрăм,
пурăнаймастпăр-мĕн пĕччен.

Ма тетĕн? Ма тесессĕн Çутă
санра та пĕр, манра та пĕр.
Ма тетĕн? Ма тесессĕн чун та
пĕр пек — пĕр пек юратăпăр.

Çеçке вĕçсе тĕв чăмăртаннă,
татса илетĕн — çук тăван,
ан тив, юрат; анчах та маннă
этем тени Юратăва.

Эс, Çăлтăрпи, шап-шурă çĕмĕрт,
эп çумăнта хавас тăрап.
Эс çеçкере, эс çутă, çĕнĕ,
упран Турра-Юратăва.

Савса пăхатăп, сĕртĕнетĕп,
акатăп чунăн варрине
Чечек вăрри, ӳсме сĕнетĕп, —
акатăп Çутă вăррине.

Шăтса ӳсейтĕр Чечек-Çутă,
вăл савăнтартăр чĕрене,

тĕнче çути пек çиçтĕр, çунтăр,
вăл савăнтартăр çынсене.

Çак самантран ӳтӳ — тăнпуçлă.
Санра ӳсет Çутă вăрри.
Çак самантран эс ĕмĕр куçлă,
санра ӳсет Çутă вăрри.

Çак самантран эс — çутçанталăк.
Ун ирĕкĕ — сан ирĕкӳ.
Çак самантран пĕр пек çуталăр.
Ун ирĕкĕ — сан ирĕкӳ.

Çут вăрлăха ӳстер, ан ман эс,
вăл пурăнать — эс пурăнан,
пурăнмасан, куратăн намăс:
вăл вилсенех эс те кăнан.

Çав вăрлăх ыр ĕçе савать вăл.
Çав вăрлăх тасана савать.
Çут вăрлăх Юрату сунать вăл.
Турра хурса сума сăвап.

Турра айăккинче ан шырăр,
вăл хăвăрта, вăл — Çут вăрри.
Е ан пуççапăр, чăн турри
вăл хăвăрта, кĕлтăвăр ыррăн.

Çут вăрлăхĕ те çын пĕр чунлă,
пĕр чунлă — турă та этем.
Сан чунупа ман чун пĕр чунлă,
ах, Çăлтăрпи, тата мĕн тем?

Çут вăрринчен ӳссе пулар-и
тĕнче илемĕ, йывăççи.
Ах, Çăлтăрпи, савса пурнар-и,
мĕн ĕмĕр пул эс чунуççи!

Вăта каспа киле анатпăр;
яштай та хӳхĕм пӳсене
юри ярăнтарса утатпăр,
кăсăхтарса ялйышсене.

Кăнтăрларан автобус çитрĕ.
Вун мăшăр килнĕ елчĕксем —
ытарайми хĕрхыççăнсем.
Пурте, ырсан та, ыр сăн-питлĕ.

Ак — тетĕшĕ, ак — инкĕш. Хăвăрт
анать арçын, леш чух анать.
Ыр инкĕшĕ — хисеплĕ повар,
ыр тетĕшĕ — ветеринар.

Ыр тетĕшĕ вĕшле пек, инкĕш
лутра та кутамас катка.
Хреснашшĕпе хреснамăш килнĕ.
Сăпай çынсем. Пур ик кукка.

Мăшăрсемпе. Ытти — тус-пĕлĕш,
ратне тавраш. Сикет чĕре.
Салам! Хуть кам пулсан та, пĕлĕç
кĕтсе илме кунта сире!

Хĕрçумĕсем. Ик хĕр чĕппийĕ.
Вунулттă-вунçиччĕсенче.

Кĕтсе илетпĕр те ăшпиллĕн,
пăха пуçларĕç ăшшăн питĕ,
ырни çухалчĕ сăнсенче.

Пурте тухсан, арча антарчĕç,
вара — пĕр пичĕке сăра,
пĕр фляга пыл, вара... вара
диван та кресло ярăнтарчĕç.

Трельяж та шифоньер. Пухман-ха.
«Сив шкап» та телевизор... Ух!
Ытла та пулчĕ пĕр тăрук.
Куç хуралса килет. Хумхантăм.

Курма иртен-çӳренĕ тачă
капланчĕ... Çĕн тăхлач, хăта —
питсем çăваççĕ, тасалаççĕ,
унтан лараççĕ апата...

Ĕçсе-çисен, пĕр ушкăн юлчĕ
хăна-автобуса çума.
Тепри манпа пырасшăн пулчĕ
эпир çырăшнине курма.

Çĕр метрта çеç ял Канашĕ.
Тамара куккăш — ун хуçи.
Малтан хирĕçкелерĕ: какшĕ,
çапла, тет, час çырăнаççи?

Ыйту çырсан, тет, кĕт пĕр уйăх,
калла пулатăр, тен, кăштран.
Çимун çур литр тыттарсан,
текех кутăнлашмарĕ урăх.

«Туя чӗнетпӗр, пыр!» — тесессӗн,
пушшех те савӑнчӗ ҫӑхан,
куштан, эрехҫӗ, ҫӗрҫӑтман, —
кунтах «Шампански» ӗҫтерсессӗн.

Эрех тесен сутма пултарӗ
хӑйне ҫеҫ мар, пур канашне,
хӑй ашшӗне те амӑшне,
эрехпеле вӑл улӑштарӗ
арӑмне мар, партбилетне.

Хутсем туса ик ылтӑн ҫӗрӗ
пӳрнесене тӑхӑнтарсан:
«Чуптӑвӑр та ҫӗр ҫул, — тет, — ҫӳрӗр
ҫак ҫӗр ҫинче ыталанса».

Туй лашисем тулта тӑраҫҫӗ —
пӗр «Волга» та ик «Жигули».
Парторг та пред хисеп тӑваҫҫӗ —
ларса тулатпӑр шӑкӑрин.

Ял-ялӗпе кайса килетпӗр,
вара — ката-вӑрман тавра.
Ҫирӗклӗрен вӗҫсе иртетпӗр.
Ҫимун тӗкет айӑкӑмран.

Тамара курӑнмасть кунта халь.
Пурнать Тамара инҫетре.
Хушшӑмӑрта — ҫулсем, тӗтре.
Салху кулса илеп ухмаххӑн.

Пыратпӑр — чӑн мар пек йӑлт ҫакӑ.
Пулни-иртни те чӑн мар пек.

Сисетĕп, çĕн чаршав уçатпăр
пурăнăçра Çăлтăрпипе.

Анчах пулайĕ-ши спектаклĕ
яшлăхри пек чун вĕçмелле.
Ăш вĕçмелле час-час пулкалĕ,
ан килтĕр çеç ăш пиçмелле.

Çимун, Лява, ытти пур тантăш
ача-пăчаллă тахçанах.
Çимун, Лява машшина чарчĕç
сасартăк ял курăнсанах.

Виç тус ыталанса тăратпăр,
сăртран пăхса ял çинелле.
Куççуль шăлса, кулса калатпăр:
пурнас пулать халь çĕнĕлле.

Нумай-и пурнăпăр, сахал-и,
мĕскер хăварăпăр хыçран?
Пулайăпăр-и шур сухаллă
е турă нумай кун паман?

Ыр ĕç, ыр ят çеç хăварасчĕ,
йăха тăсма — ыр ачапча.
Чăн тӳпенех-çке хăпарасчĕ
çунса, çĕнсе те тытăçса.

Вара ларса кĕрлеттеретпĕр,
умра вĕçсе пырать хăю,
вĕçсе киле пырса кĕретпĕр.
Хусах шăпа, хыçа, теп, юл.

Килте тур айӗнче ларатпӑр,
çумра — хӗрçум-хӗрхыççӑнсем.
Умра — атте-анне, çынсем.
Пехил сӑмахсене тӑнлатпӑр.

Пире сунаççӗ вӑрӑм ӗмӗр,
хӗр-ывӑл — аттепе анне,
курма сунаççӗ пайтине,
тулайтӑр, теççӗ, пӗтӗм ӗмӗт.

Пӗрне-пӗри хисеплӗр, теççӗ.
Пӗрне-пӗри хисеплесен,
телейлӗн вӑхӑтсем иртеççӗ,
иртмеççӗ — вӗççӗр хирӗлсен.

Ун чух пурӑнни те харам вӑл
çӑкӑр çӗртсе çак çӗр çинче.
Чӑваш чунне, ӑсне куратӑп
атте-анне сӑмахӗнче.

Чунне-юнне парса калаççӗ
яла-йыша сума сума.
Çынна сума сӑван пулсассӑн,
хӑвна та сӑвӗçӗ сана.

Управлӑ, перекетлӗ пулӑр,
тени пуçран туха пӗлмест.
Тирпейлӗн ӗçлӗр, выльӑр-кулӑр,
тенисене манас килмест.

Юратӑр, савӑр, сапӑр тӑвӑр
пӗрне-пӗри мӗн ӗмӗрне.

Кил ҫӳп-ҫаппи килтен ан тухтăр,
ан итлĕр ҫын сăмаххине.

Кăшт-кашт пире те астукалăр,
ан манăр аҫăр-аннĕре.
Сире ҫуратнă, пурнăҫ панă
эпир ҫак аслă тĕнчере.

Тĕнче сире ан пултăр тăвăр.
Пиртен пехил сире, пехил.
Ытти ĕҫе чухлайăр хăвăр.
Сире ӳстерчĕ тăван кил.

Ҫавна нихҫан манса ан кайăр.
Ан манăр аннĕр чĕлхине,
чăвашăн кăмăл ăшшине.
Эпир вилсен те пурнăр лайăх.
Телей ҫеҫ ҫутăр пуҫ ҫине.

Аттемĕр ĕнтĕ шурă ҫӳҫлĕ,
аннемĕр те шур ҫӳҫлĕ-ҫке.
Ан пултăр, теҫ, хăйсем мĕн тӳснĕ
ҫав ҫеҫ — ҫĕклеҫ ĕҫме черкке.

Вара — тăван-пĕтен пехилĕ.
Вара — тус-йыш сăмах калать.
Кашни укҫа чиксе-мĕн килнĕ:
сăмах калать — укҫа хурать.

Сăмахĕ кашниех-пĕр — ылттăн.
Вăл хаклăрах пуль укҫинчен.
Ав — Микула. Верук, ав, ыррăн
пăхать — куҫҫулĕ тухиччен.

Çак вăхăтра мĕскер астурĕ?
Мĕскершĕн чунĕ хурланать?
Каçар мана, каçар эс, турă,
эп ун чухне ясар ĕç тунă —
хама ăçта халь хумалла?

Ах, намăс, намăс... Ак çĕклеççĕ
пурте пĕр харăсах черкке,
хăватлăн: йӳçĕ, йӳçĕ! теççĕ.
Кăрт! сикрĕ, туртăнчĕ пике.

Ыталаса илсе чуптурăм,
тур хушнă пек, эп виç хутчен.
Хĕр хыпса илчĕ урăм-сурăм.
Вут тăкăнчĕ куç-пуçĕнчен.

Шур пирĕшти, пулса тухатмăш,
çунтарчĕ ăшăм-чиккĕме.
Мĕскер ку? Мĕн? Пуçа çухатмăш?
Пĕлмерĕм-ха вăл иккенне.

Çакна çырнă чух çеç, ак, халĕ
пĕлетĕп ĕнтĕ пĕтĕмпех —
мĕнле тискер шуйттан-усал эп
туянтăм çак Çăлтăрпипе.

Хăватлăн туй юрри пуçлаççĕ.
Тапранчĕ туй та пысăк туй.
Ик ен ăмăртланса юрлаççĕ.
Ан пулччĕ, туййăм, пăсăк туй.

Тулти йĕрке хуçиййĕ — шăллăм.
Шалти йĕрке хуçи — туйпуç.

Лява. Вӑл куҫ хупмарӗ чӑлкӑм —
ирччен баян лӑскарӗ, чӑтрӗ,
вылятрӗ-тӗк вылятрӗ уш.

Вӗшле, хунь ролӗнчи хӗр пиччӗш,
хурчӑка пек пӑхса ларать.
Катка (хунеме ролӗ) ҫивччӗн
ӑна сӑнать сулахайран.

Ҫӑлтӑрпипе Вӗшлен пӗр амӑш,
анчах та уйрӑм — ашшӗсем,
теме те темшӗн аптӑрарӗҫ,
ыйтсассӑн, кӳршӗ-аршисем.

Усрав ывӑлӗ пек ӑнлантӑм
ун чух эп ҫакӑ этеме.
Паян ҫирӗплетсех калатӑп,
сӑлтав нумай ҫапла теме.

Катка тумлам та ӗҫтермерӗ
эрех-сӑра хай Вӗшлене,
чӗнме памарӗ, хуптӗрлерӗ.
Ҫак ӗҫ мӗнпе, теп, вӗҫленет.

Туй тепӗр килелле кайсассӑн,
ҫапах та ыйтрӑм Каткаран:
— Мӗн-ма?
— Контролӗ ҫухалсассӑн,
тухать ҫав йӗксӗк картаран.

Туй мар вара ун чух, чӗр тамӑк
теме пултарӑпӑр туйна.

Епле вăл пĕтиччен чăтам эп,
эс ху тата чăтайăна?

— Эп чăтăп-ха. Ĕçсех кайманччĕ...
— Халь пит ĕçеççĕ çамрăксем.
— Эс ху та ватă мар. Аванччĕ,
паллах, пĕри те ĕçмесен.

Инке чылай чĕнмесĕр тăчĕ,
вара чăр! пăхрĕ те куçран:
— Мемме ан пул! — теейрĕ, тăнчă
аптранине курса, кăштран. —

Ан пул мемме! Татах калатăп.
Калатăп, шăллăм, хĕрхенсе.
Сан пек çынна шалтан паллатăп,
палламĕç урăх арăмсем.

Куç ан вĕçерт...
Сăрлатрĕ çурăм
хунемене итленипе,
тинех хам ăçтине астурăм;
анне килет Çăлтăрпипе:

— Ӳксе юлакансем, — тет, — пулчĕç,
шăллу ăсатрĕ-ха пĕрне,
ялканашра лараканне.
Ĕçсен, кăнтăрлара ун пурнăç.

Атте кăштăртатса, ак, кĕчĕ;
умри çĕн хăтăш-тăхлаччи,
вăл хистесен, çапах кăшт хĕрчĕ,
атте кăшт турĕ кулançи.

Темме мана мухта пуçларĕ
çĕн хурăнташĕ умĕнче.
Вĕшле тăнларĕ, тапăçмарĕ,
чĕнмесĕр ларчĕ темĕнччен.

Вара пĕррех шан! шанлаттарчĕ
ĕçме-çимеллĕ сĕтеле,
тăрса урамалла уттарчĕ,
тухса та кайрĕ сĕмелле.

Шар! çурăлчĕ анне чĕрийĕ,
атте чĕри, ват салтакран,
питех сикмерĕ, нĕрсĕр çилĕ
пăлхатаймарĕ ним çукран.

Ухмахпала ухмах пулаймăн.
Çынна атте шалтан паллать.
Ху çав пулсан, питех паллаймăн.
Пăшăрханмасть атте, кулать.

Тепрер черкке парас пулатчĕ
тесе утмарĕ хыçĕнчен.
Анне кăна хыт пăшăрханчĕ
ят каясран ял умĕнче.

Катка тӳрех тухса чупмашкăн
пултараймарĕ, чупрăм — эп.
Садра кама ку, пĕтрĕмех,
Вĕшле пуçланă чуптумашкăн?

Шур уйăх çутинче, куратăп,
чĕркуççипе пĕççисене

хирсе, тӗрелесе тӑратнӑ
хӗрарӑма мунча ҫумне.

Пыма... епле пыран... вӑтантӑм...
Эй, тӑччӑрах улах ҫӗрте.
Пӑхмарӑм, каялла уттартӑм.
Пӑхать шур уйӑх ҫеҫ ҫӳлтен.

Ҫеҫке шӑрши. Уҫ сывлӑш. Ёнтрӗк.
Лере юрлаҫҫӗ туй юрри.
Ӑҫта ман ҫамрӑк арӑм ҫӗтрӗ?
Хапха уҫса ярап яри.

Ҫук урамра та, ҫук пӳртре те.
Тухать Катка, ак, сирпӗнсе:
— Кӗрӳ, хальччен ӑҫта ҫӳретӗн?
Эп тупрӑн пуль ӑна тесе?

— Лерех вӑл кайнӑ-тӑр.
— Каям-ха
эп те ҫав килӗ еннелле...
Суяп та ирӗксӗр, туятӑп —
хӑлха таран пит хӗрелет.

Тепӗртакран пырса пӑхсассӑн,
никам та ҫукчӗ пахчара.
Итлерӗм те, темле ик сасӑ
пӑшӑлтатать пек мунчара.

Аван мартан пӳрте эп кӗтӗм.
Эп каламарӑм аннене
мӗн курнине, мӗн илтнине,
Ҫӑлтӑрпие шырарӑм, кӗтрӗм.

Пĕр сехетрен сасартăк çитрĕ
куçне-пуçне вылянтарса.
Сăн-пичĕ ун телейлĕн çиçрĕ
хĕлхем те çулăм, вут тăкса.

Леш килĕри туйран, ăнлантăм,
вăл çитнĕ кĕçĕн йăмăкпа.
— Юратнă тусăмçăм, хăлатăм, —
тесе вăл чĕнчĕ хаваспа.

Кăштран Катка кĕртсе вырттарчĕ
хуллен вил ӳсĕр Вĕшлене.
— Мемме, — тесе мана тыттарчĕ
тулта такамăн плавкине.

Ун чух эп ним те чухлаймарăм,
халь тин ăнлантăм, ик çултан:
ма арăм ман хĕр марччĕ, — арăм,
ма эп меммеччĕ хам ялта.

Ун чух хĕре эп çупăрларăм
сад пахчине илсе тухса,
пĕрле шур уйăха сăнарăм,
çунса хĕрӳ, çап-çут, таса.

Çӳл тӳпене вĕçсе эп кайрăм
телей тулса тăкăннăран.
— Хĕртен тăвас-и, — терĕм, — арăм?
Вăтанчĕ, чĕнчĕ вăл аран.

— Ан васкасам, пӳрт-çурт лăплантăр.
Ак ăсатар тетесене,

вара сана хамах калатăп,
хĕве хупма хамах сĕнеп.

Ик кун эп кĕтрĕм чăтаймасăр.
Салма çисен, хĕрхыççăнсем
Елчĕкелле тинех хавассăн
тухса каяççĕ кĕçенсе.

Епле кĕçенмĕн-ха: хĕр пачĕç
тăватçĕр çухрăмран килсе,
мĕн чул тупра тăкса хăварчĕç,
мĕн чухлĕ чыс, мĕн чул хисеп.

Чи хаклă мулĕ те туприйĕ,
паллах, вăл хĕрĕ — Çăлтăрпи.
Вăл маншăн пулчĕ чун турриййĕ,
вăл маншăн пулчĕ чун çути.

Ун чух яланлăха пĕрлешрĕ
ман Çутă унăн Çутипе.
Кайран кăна кунçул тĕрлешрĕ —
виçсессĕн турă сучĕпе.

**2.**

Учĕпе мухтанаканĕ —
çур ухмах, арăмĕпе
пикенсех мухтанаканĕ —
тăр ухмах ĕмĕрĕпех.

Çăлтăрпи яшка пĕçернĕ —
тутлă, çирĕм юратса.

Çăлтăрпи пăру ĕçтернĕ —
кĕтĕм витрине йăтса.

Чăхсене сапса парать те
ывăç сарă туллине,
савăнса пăхса тăратăп,
чуптăватăп аллине.

Шăматкун мунча хутатпăр.
Эп шывне йăтатăп, вăл
çăвакан машшин хускатнă —
çурăмăр, йăпантăмăр.

Кантăра çакса паратăп —
çуни-пĕр вĕл! вĕлкĕшет,
ма тесессĕн хыт пăратпăр,
чухласа ку тĕлĕше.

Типшĕрсессĕн якататпăр
простăнне, минтер питне,
тутрине, кĕпе-йĕмне,
çĕклемшер туса йăтатпăр.

Лисукпа аннешĕн çитрĕ
ырă пурнăç халлĕхе,
иккĕш те пĕлеççĕ çирĕп:
кин, инке вăл чăн рехет.

Уйăхпех пурăнтарасшăн
(чап-чап! уйăхĕ, пурнар!).
Кам ĕçрен пăрăнтарасшăн?
Çук! Епле-ха пăрăнар!

Ĕмĕрте пĕрре хуть туйччăр
ачăпчийĕн уссине.
Ĕмĕрте пĕрре хуть курччăр
кинпе ывăл ăссене.

Шăллăм туйпалах ăсанчĕ,
кайтăр, ун вĕренмелле.
Каччăри Çина та тарчĕ
хăйĕн Виччипе пĕрле.

Çул çитмен Лисук кăна-мĕн
аттепе анне алли.
Йывăр, нимĕн те калаймăн,
йывăр! Мĕн каламалли!

Çĕнĕ кин кил-терĕшре-мĕн
пултарать, пытарар мар,
çук тиркев ку арăма:
ку тери ăçта вĕреннĕ —
çĕлеме те арлама.

Тĕрлеме те, йыт туртасшĕ,
Çăлтăрпи пĕлет паха.
Ĕнтĕ унпа çеç утасшăн
эп çап-çут малашлăха.

Аннепе тата епле вăл,
аннепе епле тату!
Аттепе те пит пĕлет вăл
калаçма — чее ахтур!

Йăмăкпа вара... унпа-и,
уйрăлмаççĕ çур минут.

Арӑмшӑн кичемлӗх ют.
Кун пекне ӑҫтан тупайӑн?

Юрласа йӑран ҫумлаҫҫӗ.
Юрласа урай ҫӑваҫҫӗ.
Каҫхине, хыт ывӑнса,
йӑмӑкпа пӗрлех ҫывраҫҫӗ,
эп ҫӳреп ӑшталанса.

Вуник кун пӗччен ҫапла эп
йӑвалантӑм кӗлетре.
Ҫакӑ мӑшкӑл вӑл тетре?
Ҫук! Ун пек епле калайӑн.

Выльӑх мар вӗт, ҫын вӗт эпӗ!
Ма ҫынна ирӗксӗрлес,
памасассӑн ма илес?
Ҫавраймастпӑр — сивӗтетпӗр.
Так ахаль ма сивӗтес?

Каччӑпа хӗр пек татах кӑшт
савӑнса ҫӳрер-ха, ма
ӳт канӑҫлӑхне тупасшӑн
пусмӑрлас чуна, хама?

Ир-ирех туссем килеҫҫӗ,
кашкӑр евӗр мужиксем,
илтрӗмӗр туй каҫӗ теҫҫӗ,
тӑтӑмӑр пурте сиксе,

темӗн ҫурӑлса шаплатрӗ
хыттӑн сирӗн кӗлетре...

Юрĕ, тетĕп. Килетре —
пусă тасатма шутлатăп.
Илĕр лум, пусма, витре...

Çыхăнса пусса анатăп,
пуçланса каять сăмах.
Виçĕ кун пус тасататпăр,
вунă çул-мĕн тасатман.

Тăхăрвун витре тăм тухрĕ,
умĕнчен — патак-çатак.
Тусăмсем анмаççĕ — мухмăр.
Эп тӳсеп, тӳсеп-чăтап.

Ал-ура ним пĕлми пулчĕ,
ним туймасть çанçурăм та.
Темĕн йывăрланчĕ пуçăм,
сывлăш пӳлĕнет, шăнтать.

Аранах ĕç вĕçленет те,
эп ӳкетĕп чирлесе.
Ик эрне эп ĕçлейместĕп,
тăраймастăп чĕрĕлсе.

Çименрен, пит халсăрлантăм.
Арăм, ăшăт çурăма.
Ĕнтĕ хам камне те мантăм.
Арăм, ăншăрт, çук вăй ман.

Нĕшкесе ан лар-ха, кай-ха,
манăн халь вăл шухăш мар.
Ӳсĕретĕп кăх-хăм, ках-хăм!
Пултараймăн пулăшма.

Сив шывпа йĕпет те, хур-ха
çĕтĕкне çамка çине.
Хурлăх çеç манпа, чĕр хурлăх.
Лар кăшт, кайăн каçхине.

Каласа парсамччĕ: кам эс?
Кам ачи, миçе çулта?
Ах, шăпах вунсаккăрта?
Эп-и? Калама та намăс.

Çирĕм саккăрта-ха эпĕ —
Павăлпа Виркка ачи.
Пысăк çулĕсен хисепĕ.
Пулнăччĕ эп шухă çын.

Çак кунччен, айван, шырарăм
идеаллă юрату,
суйласа çĕр хĕр, хĕрарăм,
халиччен те тупаймарăм —
чун шав тӳсрĕ çарату.

Çаратаççĕ те тараççĕ.
Чун яш чух иксĕлмирен,
тав тăвап, тарсан, турра çеç,
çараттармăп ӳлĕмрен.

Шанăça татах кĕреççĕ,
кусем мар, урăххисем,
чăннисем эпир вăл, теççĕ,
суйисем — леш юххисем.

Суяпа чăна илеймĕн
ниепле те уйăрса:

çиелтен пăхма илемлĕ,
пирĕшти ăна иленнĕ,
шал енчен — суя, ясар.

Чунсăр. Чунĕ пур та, пушă.
Пушă чун çукпа танах.
Пуш чунпа мана Тамуççă
çавăрса илесшĕн пулчĕ —
эп ĕнентĕм малтанах,

шантăм, туртăнтăм, хĕрхентĕм,
саврăм эп ăна чунтан,
ашшĕччĕ ун — чĕр шуйттан.
Тамуçа телейсĕр теттĕм.

Çав телейсĕр хĕр пĕлмерĕ
хăй пĕрре те шеллеме,
вăрттăн иккĕпе çӳрерĕ
икĕ куяна тĕллерĕ,
виç куян персе илме.

Виççĕмĕш куян çакланчĕ
иккĕшне ăмсаннипе,
хĕр пире «юратнипе»;
çаклансассăн тин ăнланчĕ:
ма хĕр чупнă иккĕпе.

Чару çук-тăр чупаканшăн.
Чун тени мĕнле-тĕр камшăн,
маншăн вăл тăрать, ялав,
кайра мар, малта ялан.

Ӳтшӗн ӳт çунни аван вăл.
Чуншăн чун çунни вара...
Пăхрăм та... ман арăм кайнă.
Пашалу та сӗт умра.

Çикеле те пуçлаяп-ши?
Чӗрӗлеп те-ши элле?
Çырткалатăп та кăшт, ятшăн,
тин, ак, хама хам шеллеп.

Эх, юрать-и, теп, тӗнчешӗн
пӳлӗхе ӳпкелеме:
эсӗ çын чунне тӗпчесшӗн,
хăвăн хатӗр ӳлеме.

Халӗ çеç çич пӗлӗтреччӗ,
ӗнтӗ анчӗ-и персе?
Урăх пурăнăç черечӗ
килчӗ çитрӗ — çук хӗрсем.

Сан çемье тăвас пулать халь,
чӗрт вучах та яр тымар,
тек çӳреймӗн йăхăл-яхăл,
хӗрсемпе чупмалла мар.

Арăму мӗнле маттур та,
мӗне кирлӗ ыттисем.
Килйыша упрас ыр туртăм
тăтăр санăн хӗмленсе.

Малтанах çуралӗ ывăл,
хӗр унтан çуратăпăр.

Пулĕç сывлăхлă та сывă
çуралсан юратупа.

Ăслă та илемлĕ пулĕç,
çитĕнĕç яштак, патвар.
Тĕпренех ăнсассăн пурнăç,
ма хитре çитĕнес мар?

Ывăла та эп ӳстерĕп,
хĕрĕме те пит чипер.
Ӳснĕ Хусанкай Атнерĕ
чунлă — ашшĕ-амăш пек.

Хулара ӳссен те, çăмăл
калаçать вăл чăвашла.
Чăваш чунлă ырă кăмăл
çав çынра, хăш чух çеç тăвăл
чĕринче кĕрлет-чашлать.

Тăван халăх ăрăскалĕ
пĕрмаях шутлаттарать.
Халăхăм — пĕтес шăпаллă.
Çавă тăвăл кăларать.

Ӳснĕ Элли, ӳснĕ Ида
хуларах чăн чăвашла,
улшăнса пулман Иуда —
халăха сутман кăшт та.

Халăхăмăр пĕтрĕ мĕншĕн
çак терех, тус-тăвансем?
Халăхăн хутне кĕмешкĕн
ӳсчĕр пирĕн ачасем.

Чăвашла халь вĕрентмеççĕ
ютра мар, тăван ялта.
Вĕренсен, тет, кĕреймеççĕ
ачасем вуза ниçта.

Чăвашла пĕлни ма кирлĕ?
Перспективăсăр чĕлхе.
Вырăсла вĕрентĕн вирлĕ —
пултăн çын ĕмĕрлĕхе.

Пур культура та наука
çӳллĕшне-тарăнăшне
тĕнче шайĕнче эс тупăн
мансан çеç ху чăвашне.

Тьфу, чăваш! Пăхма та шалккă,
йĕрĕнтермĕш, сан çине.
Мĕн çӳретĕн шăкăр-шакăр,
варласа çут тĕнчене?

Çук культура, çук истори.
Вăл пулман та, пулмĕ те.
Аталанмĕ, чурăс тăрĕ
чун-чĕрӳ те, упăте.

Телерадио, çырулăх —
мĕскĕн, питĕ кулăшла,
примитивлă, пăхăнуллă,
янрасассăн чăвашла.

Чухăн туййăм, чухăн шухăш...
Чăваш мĕскĕн... Вырăс-и,

вырăс ăслă, вырăс шухă,
вырăс пиçĕ, матькасси!

Хура пит хăçан шуралĕ?
Хура пӳрт — чăваш тĕнчи.
Кĕнеки, хаçат-журналĕ
мамонтсен вăхăтĕнчи.

Сăввисем — сысна апачĕ.
Юррисем — шăри-шари.
(Пур хуçи, партаппарачĕ,
халăхран пытанчĕ, тарчĕ, —
пуçлăхĕ, тӳри-шари.)

Пĕттĕр халăх, вырăслантăр,
сыв пул, интернационал;
туслăха çеç аслăлатпăр —
çирĕп тыттăр алла ал.

Чăн интернационалистшăн
наци çук. Пĕр Союза
тăрăш çывăхлатассишĕн
эс ăна, ан пыр юлса.

Кашкăр Хуначийĕ, ăншăрт,
ма мухтатăн чăваша?
Чăвашла ан çыр, пул шăпăрт,
кай институтран, ил шăпăр,
шăл урам эс, апăрша.

Ав Элкер часах ăнланчĕ,
шăпăртланчĕ тахçанах,

çакăн хыççăн, теç, ăсанчĕ
хуйхăрсах вăл çăвана.

Çухаран ярса илсессĕн,
хĕнесен тапта-тапта,
çирĕм çул ларса килсессĕн,
ăслăланнăччĕ Митта.

Питĕ шел, пурăнаймарĕ —
чĕри кайрĕ çурăлса.
Айхи ятлă пĕр айванĕ
халь мухтать ăна çунса.

Мухтĕ, ак, мухтаттаратпăр;
партирен кам хăраман,
кирпĕчĕ шутлаттаратпăр,
парти — пирĕн утаман.

Эс мухтакана мухтатни,
самозванец Сениэль?
Эс сыхăлăхна çухатнă,
юрламастăн çĕнĕлле.

Партие пыратăн хирĕç
диссидентшăн тăрăшса.
Хирĕпĕр, хиретпĕр, хирнĕ.
Сукмаку хăрушă сан.

Хыççăмах çырса хăтланнă,
вуласан, чун çӳçенет,
çавă автора-çке анлăн
пичетленине эс маннă
Солженицын, «Континент».

Ав Ильин-Юхма нихҫан та
сан пекех чĕрре кĕмест,
кĕтĕр ҫеҫ, тытса хыҫатпăр.
Ăслă. Хыҫтарас темест.

Мĕн тума сана вăл — лозунг —
кирлĕ чăвашла паян?
Мĕн тума сана вăл, кăсăк,
мĕн тума, Талвир, Уяр?

Иван Яккăльча пĕлеҫҫĕ.
Мракобесчĕ вăл, ҫăрттан.
Иванов — кулак поэчĕ,
чаплă Иванов-Пăртта.

Хак пама хушать те парти,
хак параҫҫĕ тарҫисем.
Ҫеҫпĕле ҫапса антарчĕҫ.
Ячĕҫ Юмана ҫисе.

Тăхтие те авса хуҫрĕҫ
авăнми коммунистсем.
Рсай та пулаймарĕ хурҫă.
Пĕтрĕҫ Комиссаровсем.

Шăн чĕреллĕ, вил чĕреллĕ
ҫăпаталлă пур улпут,
чăвашран тухса черетлĕн,
чăваша тăвать  капут.

«Тăванне те астумасть» вăл,
«чăвашла та калаҫмасть».

Пичĕ те пит мар ун, маска,
чунĕ çук — хыпмасть-çунмасть.

Фарисей тесе каларăм
вĕсене эп библилле,
тĕллех мар ку, асăрхарăм,
чунилли тес-и элле?

Чун илме эсир хунанă
сумсăр халăх хушшинче.
Халăхран çапах хăранă
сăнсăр влаç хулхушшинче.

Ленин пысăк йăнăш тунă
вăхăтсăр вилсе выртса.
Вилес умĕн, теççĕ, туйнă
Сталин каясса урса.

Халиччен хăтăлаймастпăр,
курăнмасть хăталасси.
Хăçанччен-ши парти-маска,
хăйне хăй ытараймасăр,
хăйшĕн çĕклĕ тост-тавсси?!

Чечеклентĕр кашни наци,
теейсе çав икĕпит
тĕнчене халь улталас тет,
çӳçенмест те — кĕççепит.

Ленин партине вăрçмасăр,
вăрçăр Сталин партине:
халăх халăх мар-мĕн, масса
çав кунтан мĕн хальчченех.

Уйрăм çын — шуруп е гайка.
Хăй анчах — атте. Айван.
Çав «аттен» халь ячĕ кайнă,
партин çеç-ха кăшт кайман.

Пурпĕрех унта кĕместĕп,
Николаев Андриян,
пурнăçа парне кӳместĕп
эпĕ уншăн пустуях.

Эс салтак. Приказ — сан пурнăç.
Хушрĕç — пурăн. Хушрĕç — вил.
Эс вилмерĕн, пултăн хурăç,
вилчĕ вилĕмĕн çави.

Партире тăратăн эсĕ,
çирĕп пултăн хурçăран.
Шăппăн: чăваш мар, теместĕн,
пахчунта çӳрен çарран.

Космоса çити çĕклерĕн,
Андриян, чăваш ятне,
тĕнчипе курса çӳрерĕн,
пытармарăн чăвашне.

Хӳттӳпе çĕклерĕ халăх,
тăван халăхăм пуçне;
савăнмалăх, мухтанмалăх,
хăй камне те ăнланмалăх
уçрĕ халăхăм куçне.

Пĕр кунта çĕр çул пуль иртрĕ
кĕрлесе ăстăнĕнче.

«Эп те — çын! Хăватлă, ирĕк!» —
терĕ турă умĕнче.

Сĕмлĕхре манман-ха халăх,
пĕтĕмпех манман турра.
Шанăç пуррисем хавaслă.
Мĕншĕн хурланас ара?

Турă пăрахман чăвашăн
шанăç пур-ха нумая.
Туйăр: хушшинчен тухасшăн
çĕнĕ Çеçпĕл, Андриян.

Вĕсенчен пĕрне ӳстерĕп
санпала эп, Çăлтăрпи.
Эпĕ, Хусанкай Атнерĕ, —
Шелепийĕн шерепи.

Сан аçу та çавă пулнă.
Вăл та ларнă тĕрмере.
Ман атте те ларса тухнă,
хам ларман-ха, чĕмере.

Самани çаплах тăрсассăн,
ларасси те инçе мар.
Малашне мăнаçлă сассăм,
шет, пĕтерĕ пуçăма.

Ма чирлеп? Ма суптăркарăм?
Чим, сĕтне татах сыпам.
Чир-чĕре юратмĕ арăм,
арăм умĕнче сан парăм
пысăк. Эй, часрах сывал!

Кĕлете текех пымарĕ
кунĕпе те Çăлтăрпи,
пулчĕ пуль сăлтав — Тамара.
Кусрĕ пурнăç урапи.

Кӳлешсе çӳрерĕ вăрттăн;
ăшă та çак, ырă та —
чĕре тапрĕ кăрттăн-кăрттăн;
кӳлешет-тĕк — юрататъ.

Чăттăр, пултăр адаптаци,
хăнăхтăр мана пуçпех.
Тулăксăр пырса тытсассăн,
юлăп айăплă эпех.

Шарт! сиксе пĕрре писсессĕн,
урăх çаврăнмĕ вара;
савнăçăм, тăван кĕтесĕм,
ку, паллах, телей марах.

Ирĕксĕр хăвна ху тăнлăн,
ку, паллах, халь-халь вĕçес
хӳринчен тытмашкăн тăнă
юмахри Вут-кайăк çеç.

Кайăка ярсах тытасчĕ;
чăвашла кана-кана
ĕç вĕçне-хĕрне тухасчĕ —
«вĕлересчĕ упана».

Çапларах калаççĕ мар-и
авлансассăн вырăссем?

Куншăн эп питех çунмарăм, —
йышлăланчĕç вăрăсем.

Тăтăшах ăна вăрлаççĕ.
Хĕрача вуниккĕрех
(хаçатра çырать шкул врачĕ)
хĕр мар тет иккен, эре...

Чĕреме тытса калас-тăк
ĕнтĕ икĕ аллăмпа,
тек манран вăл лăстăр-ластăр
тарчĕ — çав хура упа.

Куçа-куç пĕрре çеç куртăм,
вĕлереттĕмччĕ чутах.
Туртăнтăм. Тăнлантăм. Вутăм
сивĕнчĕ вара унтах.

Çав пĕр каç йăпанассишĕн
ма пăсас çын пурнăçне?
Пĕр кĕрсен ӳтне пыл-сисĕм,
ăçта чикĕ хĕр пуçне?

Кулленех шыра вăл пуçлĕ
лăскакан-йăпатакан.
Хальчченех çав çăлтăр куçлă
хĕрача ума тухать.

Хальчченех эп мухтанатăп
упана тытманнипе.
Психологие манатăп:
вут пек курайми пулать хĕр
хам ĕçе туманнипе.

Вăраха ямасть вара вăл, —
мĕкĕрме пуçлать упи, —
хуть кама ăна парать вăл...
Вăт çапла, вăт, Çăлтăрпи.

Эп тытман упа тирне те
ĕнтĕ сӳрĕм — ан ятла.
Ма ку ыйтăва тирнетĕп
(тьфу! çук намăс) ясарла?

Ĕнтĕ эпĕр ар та арăм.
Ху çук чух-çке эп калап
пĕтĕмпех çакна, тăванăм,
эс килсессĕн шăпланап.

Турă çеç, çакна илтет те,
çилленсе пăхса илет.
Турă та аван пĕлет-тĕр —
ма чури хыт сӳтĕлет.

Шухăшпа, ăспа, ӳтпе те
пиçсе çитрĕ ун чури!
Çĕтĕке çĕре эп петĕм.
Эх, мунчаччĕ! Хутчăр-и?

Çăлтăрпи çитсен, чуптурăм
хыттăн-хыттăн... тутаран.
Сан ăçта, Мишша, культура?
Эс тухман пуль тутара?

Вырăнпа выртма пăрахрăм.
Атя, арăм, кĕлетрен.

Ĕнтĕ, ылтăнăм, хăрахăм,
анмалла пуль пĕлĕтрен?

Çĕр çине анар та, кĕçĕр
хĕрттерсе мунча хутар.
Нишлĕх тухтăр та, хал кĕтĕр.
Кĕçĕрех упа тытар.

Упана мĕнпе тытаççĕ?
Сăнăпа тесен, сĕре
хирĕçлес килет, каласшăн:
ăйăрпа, тесе сире.

Кĕçене пуçларĕ ăйăр!
Ăйăра вылятмалла!
Каçхине тапранчĕ вăйă
мунчара — хĕрӳ те вăйлă!
Çĕр кисренчĕ тавралла!

Тĕсĕ те упан пулмарĕ.
Пулнăччĕ хăçан упи,
каласам, саккунлă арăм,
вĕри кутлă Çăлтăрпи?

Учĕпе мухтанаканĕ —
çур ухмах, арăмĕпе
чарăнми мухтанаканĕ —
тăр ухмах ĕмĕрĕпех...

**3.**

Хула хĕрри. Барак пекки. Пурнатăп
кунта эп чылай çул. Çавăнтанпа
такам чĕнсен те, пуçăма пăратăп
уç кăмăлпа, сисчĕвлĕ ăстăнпа.

Пахча пекки юнашарах та, курнă
Ука аппа мана хăй пахчинчен.
Чĕнсе, ак, илчĕ те хуллен, культурлăн:
— Эс ан вăтан та-ха, — тет, — чĕннинчен.

Хваттер хушшийĕмĕр хăма кăна та,
йăлт илтĕнет эсир мĕн хăтланни,
хуçайккуна систерĕттĕм, хăратăп,
унпа çыхланиччен çыхланманни.

Уйăхранах сана çиме пуçларĕ,
хыпса çăтса ярассăн тулхăрать.
«Кама, — тет, — сĕтĕртĕн манччен, тăсланкă,
çак шăтăка?» — шутлап та, чун хăрать.

Виç уйăх иртрĕ, пахчана тухмасть-ха.
Ак халь сентябрь, каллех — вĕренмелле.
— Çапла... Юлашки çул... Пуласшăн мастер.
— Мĕн мастерĕ? Ай-уй! Тĕлĕнмелле.

— Строитель...
— Айторох! Епле вара эс
тупмарăн-ха хупа пĕр танлă çын?
Пин тенкĕ туй укçи! Ăсран та кайăн,
ун чул мула ăна тыттарасçи?

Шалу — çĕр утмăл сан. Ытти нухрачĕ,
çав гонорар тени, унтан ытла.
Йăлт сăптăрать вĕт, кассăна хурать-ши,
пĕрре ырлинччĕ хуть, ялан ятлать.

Апат тума мĕн чул парать?
— Пĕр тенкĕ.

— Ну, шăллăм, хыт çакланнă эс, малай.
Эс ан çиллен те-ха, капла пĕтен-тĕр?
— Халь мĕн тăвас? Çемье-и пăсмалла?

Ачашăн эп. Ача кирлех. Пĕр ывăл,
пĕр хĕр малтанлăха. Эп вăтăрта.
Укçи вăл пулĕ, пуç пулсассăн сывă.
— Ну, шăллăм, тĕрĕс те çак тупата.

Тур патăрах, ман хамăн, ху куратăн,
çукрах та... çавăнпа сунап телей, —
тесен Ука, эп çĕрулми кăлартăм,
пĕтертĕм çеç, ав, Çăлтăрпи килет.

Ĕçлет те, вĕренет те арăм. Эпĕ
килти ĕçе тăватăп унсăрах:
магазина чупатăп, шыв кӳретĕп,
яшка çакатăп, кĕпе-йĕм çăвап.

Те çавăнпа, кун иртнине сисместĕп.
Кун иртнине сисмерĕм çăвĕпе.
«Часах, — тет Çăлтăрпи, — пĕтет семестр,
эп халĕ те çунап курсовойпе».

Хăш чух каçа юлса килме хăрать те,
çав курсовой ĕçпе çуна-çунах,
эп килĕшсе пуç сĕлтнине кура-тăр,
юлать хăй пурăннă общагăнах.

Эп нимĕн те курмастăп та илтместĕп,
те пур, те çук вăл маншăн çав хула.
Çăлтăрпие, хам анана, ӳркевсĕр,
пит тĕплĕ, тарăн, вирлĕ сухалап.

Анчах анамăн пӳчĕ çук-ха темшĕн,
мĕн чул аксан та, вăрлăхăм шăтмасть.
Калчашăн вут пек хыпăнан этемшĕн,
çакна ытла та хурлăх-çке чăтма.

Каллех, ак, хĕл те çитрĕ, çитрĕ-иртрĕ,
каллех йăмра çӳçне шывра чӳхет.
Сăнап та арăма эп каçлă-ирлĕ,
çаплах хулăмланмасть, çаплах çӳхе.

— Эй, сар автан, е эсĕ таптамастна
кăвăлтатса тăран сар чăххуна?
— Таптатăп-ха, таптатăп, аптрамастăп,
вăл териех юлман-ха чухăна.

Анчах тем çитеймест, мĕнне пĕлместĕп,
ăçтан пĕлес, ку кăткăс япала.
Шет, ăнăçмасть те пуль диплом илмесĕр,
диплом илсен вара ăнăçмалла.

Диплом руководителĕн сăнарĕ,
хăйне куçпа курман пулсассăн та,
куç умĕнчен самантлăх та каймарĕ,
халь те пулин тăрать, паян-кун та.

Вăл утмăлта е çитмĕлте, е, паллă,
вăл аллăра, унтан çамрăкрах мар.
Вунтăхăр çулшăн нумайрах-тăр аллă.
Ма нумайне çырма çитмест графа.

Çав çын хусах. Хваттерĕнчех çыраççĕ
хĕрачасем диплом. Ик пӳлĕм ун.

Калас килет: хваттерӗнчех ҫуратӗҫ,
анчах туртмасть апла темешкӗн чун.

Этем чысне эп хисепе хуратăп,
шанмастăп ҫын нисепсӗр тенине,
эп халиччен ăна умра куратăп,
куҫпа курман пулсан та ӗмӗрне.

Ҫав хваттертен киле пуҫларӗ арăм
кун сиктерсе, вара ик-виҫ кунтан.
Вилсе каять пуль ку, тесе хăрарăм,
сăмси те куҫӗ юлнине курсан.

Пусма ларсассăн, хур ами ҫăп-ҫăмăл
тăрса юлать ҫапла ҫуркуннепе.
Е йыт ами... хӗлле тулли, чăп-чăмăр,
ҫурпа хухать, чупать те кунӗпе.

Ҫитет, ҫитет! Епле танлаштарайăн
Ҫăлтăрпие хурпа, йыт-качкапа!
Юратнă арăм — ҫӗр ҫинчи ман райăм, —
ту качаки эс, хӳхӗм качака.

Эс ҫӳллӗ ту ҫинче. Унта ҫитме те,
сана хуса тытма та тур ҫырман.
Мӗн-ма тата хăҫан мана ҫиллентӗн,
кайма кăна пăхса тăран ҫумран?

Каҫхи хăвалусем сăнна лараҫҫӗ,
час-час хуса тытаҫҫӗ пулмалла.
Туту кӳпченӗ. Куҫусем кулмаҫҫӗ.
Кам аллине ҫакланнă эс, кала?

Ман ӗмӗтӗн ҫути пуласшӑн мар эс,
урӑххине паратӑн ҫутуна.
Кам ҫумӗнче сана хӗрӳ, шӑнмастӑн?
Уҫса парсам каҫхи вӑрттӑнлӑхна.

Куҫу — ту качакин. Унпа анрать пуль,
чунне витернӗрен, хӑй арӑслан.
Сана йӗрлерӗ-ха мӗнле караппӑл?
Ма каламастӑн эс, ма анаслан?

Аллин артакӗ халь те асӑнтах-им,
ачашланса пӑхатӑн ман ҫине.
Яштак хӑва, сана кам салтӑнтарчӗ,
кам хывӑнтарчӗ иртнӗ каҫхине?

Хӗвелӗн питтинче куҫҫульсӗр, ӑшшӑн
кулатӑн юратса ӗшеннӗскер.
Куллу ҫапах та туйӑнать пит ӑшӑх,
тата вӑл туйӑнать мана тискер.

Чӗре чӗлӗхсене пӑсатӑн эсӗ,
йӑлт пӗтерсе чӗремӗн шанчӑкне.
Шар! ҫурӑлать чӗре. Тарма пӗлмесӗр,
чун лекрӗ сан хӗрхевсӗр читлӗхне.

Чун юн кӑна. Суран ҫине хаяррӑн
тӑвар сапатӑн тек. Кала, кала,
эс кам чунне сиплерӗн те юмларӑн,
кам асапне пайларӑн ҫурмалла?

Ҫук, чӑн-чӑн юрату юратура вӑл
хӑйне патша тӑвасшӑн тӑрӑшмасть.

Вут пек хĕпĕртӳре телей тупать вăл,
хĕн-асапра çунмашкăн та хавас.

Çав чăн-чăн юрату — пĕр пĕтĕм пурнăç.
Хĕн-асапран ним чуль сехĕрленмест.
Юратулла вылякансем те пулĕç,
ăна чăн-чăн тееймĕп, май килмест.

Пул çепĕç, сав мана, о, чун чечекĕ!
Пĕр пит хĕвел сан, уйăх — тепĕрри.
О Çăлтăрпи, çăлтăрланса çиçетĕн,
ăсран кайса пăхатăп çав тери.

Юн, юн чĕре... Чĕркуçленем-и шăппăн?
Чĕнмесĕр кĕлтăвам сана, сана?
Çутăличчен калаçчăр шăпăл-шăпăл
шур хурăнсем — лăпкаччăр ыйхуна.

Чĕреçĕм шанчăкне çухатас мар тет.
Ăна эс аркататăн хурахла.
Эс, Çăлтăрпи, эс урăхла Тамара,
ăна эс аркататăн урăхла.

Чун çурма вилĕ. Чĕрĕ пек курнасшăн.
Ялан сана, сана хăй асăнать,
пуçа, мĕскĕнлетсе, умна таясшăн.
Лăпкас килмест пулсан, эс кас ăна.

Кассан та, касмасан та, ĕмĕр иртĕ.
Эс, ĕмĕр, шăпчăк юрри пек кĕске.
Савнин сасси те, шăпчăкĕн юрри те —
самантлăх та пĕррелĕх тенĕскер.

Савса курман пулсассăн, эпĕр çын-и?
Çын мар, чĕрчун, тараймăн пурнăçран.
Чăваш кĕнекине ĕне, тет, çинĕ,
вăт çав ĕне шăпах савса курман.

Ыр ĕмĕт, ырă шухăш, ырă туйăм
юратупа пĕр кĕвĕллĕ ялан.
Кĕвве тупмарăн — аркану эс тупăн,
йăлтах арканăн, шанчăклăх юлман.

Чуна çапса ватас та, пĕр-пĕр ванчăк
мăнкăмăллă савни куçне-пуçне
сирпĕнейсе кĕрсен питех аванччĕ,
пытармĕччĕ çав ванчăк савнăçне.

Тиркешĕр! Эпĕ арăм адъютанчĕ,
тарçи, мĕнле калас, ка...ça тарçи.
Ан тив, мана тиркевĕр йăлăхтарчĕ,
çапах юратанскершĕн — чунуççи.

Юрланă пек ташлаттарать мана вăл,
ташланă пек юрлаттарать вара.
Юратнине пурĕпĕрех манаймăп,
юратуран чунпа тара-тара.

Хĕçне ан кăларах. Эп унсăрах та
юлма пултарăп пуççăр пĕр ыр кун.
Тарасшăн та санран, тарма хăратăп —
каллехваскать чуну патне ман чун.

Эс, талăрса, килтен хăпма васкатăн;
васкавлăх çавра çилĕн варринче,

ăçтан эп юрату çинчен хускатăп,
ярса тытса кĕпӳ аркийĕнчен?

Ăçтан эп туйăмсем çинчен калайăп?
Тытăçура вилеççĕ туйăмсем.
Ăçтан эп ăшшăн йăлкăшса кулайăп,
юратманни — чĕр вилĕм, теейсе?

Юрат, юрат! Эп те юратăп вĕççĕр.
Çӳре, çӳре чунун савнийĕпе.
Пĕлместĕп: ĕçлĕ çын-и, ĕçкĕç, вĕçкĕн,
е паттăр вăл; йĕретĕп, куç — йĕпе.

Кӳлешӳпе супса чуна çуратăп,
ыйха та, канăça та çухатса.
Вилес килет, ах-ахлатса чаратăп
вилме — чун макăртса та çухăртса.

Тархаслани пустуй, эп — кăвакарчăн —
вĕçеймĕп акăш хыççăн аякка.
Чие шап-шур, сирень те кăвакарчĕ,
çухатрăм пулĕ тетĕп кайăка.

Халтан кайса, путас патнех çитетĕп.
Путмасть тесе, памастăн аллуна.
Асап çăварĕпе хама çиетĕп,
куратăн — пушатмастăн тăллуна.

Эп вилĕ тейĕн, шăтăк чавнă эсĕ
мана персе чикмешкĕн тахçанах.
Персе чикен, анчах та вĕçертместĕн.
Çук, акăш мар эс, чăн-чăн çăханах.

Юратура упа тытас пулсан та,
ку чăн-чăн юрату теме пулмасть.
Юратса мар иккен йăха тăсатпăр —
графит тенĕскертен туса алмаз.

Чĕре хуйхи, эс чĕрене пĕтертĕн,
вăй-халсăр пĕвĕме эппин хĕрхен.
Илем шевлийĕ евĕр манăн тертĕм,
вăл ялкăшсан, асап ăшне лекен.

Инкек кăна кӳрет куçсен асамĕ,
кăваррăн чуптуса сăхан тута.
Кĕтет пире синкер, тĕнче асапĕ,
пушхир пек пушă сив кунçул тата.

Пĕтетĕп! Кирлĕ-ши пит йăлăнмашкăн?
Кама-ха йăлăнас пушăлăхра?
Ах, чунсăрскер! Малашлăх паллă маншăн.
Ман санра мар юласчĕ, халăхра.

Кам хуйхăрма пĕлет, çав хуйхăрни те
пыл пек пылак ăна, савăнтарать.
Хăйех хуçи те вăл, хăйех хăни те —
çав вăрттăн ирĕклĕх вăй-хал парать.

Эп те çапла — хама хăна тăватăп,
хуйха-суйха мухтап, черкке йăтса.
Вилмен-ха эс, Мишша, эппин — тавах, теп,
мĕнех, пулин, теп, арăму ясар.

Черкке ак. Ĕç те, теприне тултарăн,
анчах та ӳсрĕлĕн ĕçнипе мар.

Кӳлешӳпе, юратупа, мăнтарăн,
вĕреннĕ вилĕ ӳсĕр эс пулма.

Ак ĕнтĕ чун çухалчĕ, уттăм — лăнчă.
Ак ĕнтĕ юрату хуйхи мана
йĕвенĕпе çăвархласа утланчĕ.
Те ĕнтĕ ăмăрт эп, те тăмана.

Юратнă тус! Ĕçнишĕн ан ятла эс,
епле-ха ĕçмĕн — сутрĕ Çăлтăрпи.
Эрех темле имрен-сипрен те лайăх,
ĕçсе кăна хама, тен, çăлăп-и?

Ак таврăнчĕ, ман енелле пăхмарĕ.
Асап та, савнăç та çакна курма.
Çаплах тулличчĕ Çăлтăрпи сăнарĕ,
татах та туллиленчĕ çунтарма.

Куç ывăтрĕ, умран иртсе кайсассăн.
Хӳхлет, тет, шăпчăк розăна курсан.
Эп хӳхлемерĕм арăма курсассăн,
чĕре çеç тапрĕ тилĕрсе, урса.

Асап та хуйхă килес çук аса та,
кам вĕсене антарчĕ пĕлĕтрен?
Анчах та çавă терчĕ, хĕн-асапĕ
вăл тутлăрах пуль пыллă шерпетрен.

Вут-туйăм — шелсĕр. Чĕрене çиет вăл.
Чĕре кĕлленчĕ вутлă çулăмра.
Çапах нихçан ан сӳнтĕр, пурнăç евĕр,
çав çутă çулăм вутлă чунăмра!

Ытла пăтраштарать çынна чĕр хуйхă,
пĕр япалах çĕр хут та каланать.
Алчăраса, эс ухмаха та тухăн,
савакан çын çапла вăл яланах.

Вилес пекех юратаканăн куçĕ
курмасть курмаллине — сĕм-суккăр пек.
Кайран кăна, нумай кайран вăл уçă.
Йăнăшсене юсать çын сиккипе.

Диплом илсен, ăна «çума» чĕнмерĕ
юратнă арăм, пытăм пурпĕрех.
Кунта прорабĕ, мастер-инженерĕ
тăп-туллиех; шыв пек юхать эрех.

Майор пур, МВД майорĕ, килнĕ
ХОЗО текен пая çын çураçма.
Хуçалăх енĕпе строитель кирлĕ.
Оклачĕ пысăк, ĕçĕ йывăр мар.

Çăлтăрпипе куçран куçа лараççĕ.
Чĕвĕлтетет ман арăм, куç пăвать.
Леш пуç сĕлтсен, тăрать те, вальс ташлаççĕ.
Татайрĕç те пулас хай ыйтăва.

Эп кĕвĕçмастĕп, ĕçшĕн кĕвĕçес-и,
мана та лайăх арăм вырнаçсан.
Камах кăшт куç çиçтермĕ кăшт ĕçсессĕн?
Çиçтерчĕ арăм — кайрĕç çураçса.

Майор кайсассăн, шутсăр тĕксĕмленчĕ,
çĕткеленсе кăна тăрать, айвай!

Çине пăхсассăн, çурăму сӳлетĕ,
эп юрамашкăн тăрăшрăм — айван.

Çавнаниссе, пушшех те хаярланчĕ:
шпион, тет, вĕççĕр йĕрлесе çӳрен.
Килтен тухма памасть, мĕнле йăла-ши,
тесе çын умĕнче хăртать çĕлен.

Вăтантăм çĕр тĕпне анса каяслăн —
çав ушкăнра ыр çын та пуль тем чул.
Чун тăвăлса килет, килет калассăм
куçран, анчах тăхтать, тӳсет-ха чун.

Пулаймăн çын çинче кĕске турталлă.
Çыравçă хăй, ăспуçĕ чĕптĕм çук,
темешкĕн те кунта вĕсем пултарĕç
ĕçсем-пуçсем çапла айлашнă чух.

Айлашрĕç те ĕçсем, çапах майлашрĕç,
чип-чиперех ăсантăмăр киле.
Килте, кравать çинче, пурте шайлашрĕ.
Тăр-тăр! чĕтренчĕ кил яланхилле.

Тигрпа арăслан ку тулашаççĕ тейĕн!
Ах, çутçанталăк, эс хистен, хистен,
ан сӳнтĕр пурнăç, тетĕн; чун телейĕ —
ĕрченинче! Çапла хушаç çӳлтен.

Пĕтмелле мар, ĕрчемелле кирек хăш
чĕрчун та, йывăç-курăк та ялан.
Инстинкт вăл çак, ăнлантарни кирлех-ши?
Пурăнаканăн — пурăнас йăла.

Юратура çуралнисем телейлĕ
тесе те мар, çавна пĕлмесĕрех
эп хамăн çутă тĕллеве тĕлленĕ —
тĕвве тĕвĕлентересчĕ кĕçĕрех.

Çав сĕм çӳрет пуль этемре стихийлă,
каланăнах: «Çуратăр юратса,
арăмсене пăчăртаса хыт тыллăр».
Кунта çапла тени те тап-таса.

Çук таса мар сăмах, анчах та пур-мĕн
ăна варалакан, чыссăрлакан.
Чысра — илем. Епле-ха унсăр пурнăн?
Пурнаççĕ. Йышлă чыссăр пурнакан.

Юратрăм та, чыс тупрăм, çунатлантăм.
Юратрăм та, чун вĕçрĕ уçлăха.
Юратиччен ăспуçăм та талантăм
урахчĕ; улшăнтăм, анрарăм халь.

Халь ӳсĕр эп, халь чĕрене тивертнĕ
асаплă вут, çунать те ялкăшать.
Хавасăма вăл синкерпе витернĕ,
витернĕ канлĕхе, чăтăмлăха.

Вăл — юрату — татах та-ха витерĕ.
Юнра хускатĕ те ăшталану,
рехетленсе ăшалĕ, кĕллентерĕ.
Килсе капланĕ хурлăх, куляну.

Мана çапла ма, юрату, касатăн?
Ма типĕтетĕн, тилмĕртен çапла?

Мĕн ĕмĕр шыраниййĕ тупăнса та,
ма курăнатăн пушхирле, çукла?

Эп, ак, çӳç ăшĕнче питпе выртатăп.
Эп мар пуль ку? Мĕлкем кăна, мĕлкем.
Мĕлке те мар, ман сывлăш палăрать-тĕр,
кунта та мар, таçта — маттур, ĕлккен.

Юратăва тунсăхлакан чылай-тăр,
ăна астивекен ӳсрĕлетех.
Чунĕпеле ăçтан кунта юлайтăр,
вĕçсе каять вăл ĕнтĕ инçете.

Тулашура чĕмрен кайса çитсессĕн,
илетĕп тĕлĕрсе ытамĕнче,
анчах нумаях мар, часах сисмесĕр
тăрса юлан шухăшунта пĕччен.

Час-час ыйху çĕтет те сан каç-каçăн,
каллех, ак, шухăшлан, касан, виçен.
Юратнă чух куçа та курăнмаççĕ
тĕлĕксенче, курнаççĕ сивĕнсен.

Курăнманни, кӳрсе кулянчăк тунсăх,
куçа чавса кăлар хуть, курăнмасть.
Курнин е курăнмин, çапах та, тусăм,
чĕре кăкăрăма таврăнаймасть.

Ăçта чĕре? Ăна камсем вăрланă,
ĕрĕхтерсе ăсатнă ăçталла?
Хăçан чĕрешĕн юрату вăраннă,
ярса илсе васканă юталла?

Хăçан, хăçан? Çапла ыйтатпăр шăппăн
юратнă арăмсен ытамĕнче.
Хăçан? Кутна хыççан. Кĕрсессĕн шăрпăк.
Ытарайми тусна ытариччен.

Анчах ăна, туса, хăçан ытарăн,
çав тус юратнă арăм пулинех?
Сăмахĕ çавнашкал, хĕрхӳ, ытарлă,
унран хăш чух эп хам та тĕлĕнеп.

Пĕлетĕр-и, вăл кам — дипломлă арăм?
Вăл шуткă мар, унпа чипер калаç.
Ăçта ĕçлет? МВДра. Чухларăн?
Милицире. А милици вăл — влаç.

Ярса илсен, питех кăшкăрашаймăн.
Ну, кăшкăраш, мĕскер тума хал пур?
Яш чух курнасшăнччĕ хĕрӳллĕ, шавлă,
çӳреттĕмĕр иртсе маттур, сатур.

Çав влаçпала шăв-шав та пулкалатчĕ,
ай хытă-çке унта тенкелĕсем.
Эп пулăпин сăвăçă мар, калавçă,
çырса кăтартмалла тахçан хальччен.

Есенина хĕненĕ пек, мана та
ислетнĕ; касмăкланăн Урташа,
милицисем, курнăçланса, мăнаçлăн,
тен, халь хытах хĕнеççĕ Айташа?

Ухсай ӳсĕрпеле лекмест, леçеççĕ
ăна обком хушнипеле килне.

Обкомрисем хăйсем те хыт ĕçеççĕ,
анчах ăçтан пĕлейĕн ĕçнине.

Дачисенче хăш чух шăрсах вырташĕ,
çапах ĕçмен курнаççĕ тупата,
ним ĕç тумаççĕ, хывăх авăртаççĕ,
милицисем тăраççĕ хуралта.

Ĕç тунă пек курăнайса çӳреççĕ
мĕн чухлĕн кастарман каçтакисем.
Уллахалла каяççĕ, сĕтĕрнеççĕ
мĕн чухлĕн кастарман вăкăрĕсем.

Мăнтăррипе ниçта кайса кĕмешкĕн
пĕлмеççĕ те, майра кăна пуçра.
Ĕнер кăна пĕр вăкăрпа кĕрешрĕм,
вут-хĕм вăл сирпĕнтерчĕ куçпуçран.

Эп — мĕн? Эп хут çинче ларатăп. Эпĕ
паюк илместĕп. Вăрттăн лавкка çук.
Совмин столовăйне те çӳреместĕп —
кĕртмеççĕ пропусксăр, картланнă çул.

Шӳрпе сыпса ăçтан вăй пултăр манăн?
Вĕсем çиеççĕ сервелат, вăлча.
Эпир курмастпăр çавсене пачах,
çитмест калори кĕçенсе тăмалăх.

Унччен те илтнĕ, МВД тесессĕн
вăл халь те чун сивлеккĕн çӳçенет:
мăшру унта ĕçе пырса кĕрсессĕн,
сан мăшру мар вара текех, ĕнен.

Мĕнле лекен, çав шеппĕн «тĕрĕслеççĕ».
Ыйту пĕрре: юрлатни вĕсен май
е юрламастни — меслетне пĕлеççĕ
юрлаттарма, меслет унта нумай.

Эп вĕсене тĕпчес тĕллев лартман та,
çапах калатăп шăппăн чарăнса:
строительство таврашĕнче пулса
укçа çапман çынсем çукрах, пулман та.

Ман Çăлтăрпи шăп çавăнта çакланнă.
Акт çырмалла, ал пусмалла пĕрле.
Пуçлăхсемпе ялан тухать çула вăл.
Ирех каять те, таврăнать çĕрле.

Яштакаскер, мăнтăрлана пуçларĕ —
вĕçсе пымасть халь, уткалать мăран.
Пуçлăхсемпе чухне пырать ĕç лайăх,
ĕç пĕтерсен — кафе те ресторан.

Ресторантан киле леçсе яраççĕ,
анчах темме вунпĕрте мар, пĕрре-
иккĕсенче, килех кĕме хăраççĕ;
çăварĕнчен эрех шăрши кĕрет.

Эп хăнăхрăм, куçпа курман — ятлаймăн,
тытман, епле пустуй кӳлешмелле.
Ĕç çавăн пек-тĕк, юнтарса юнаймăн,
ĕç-пуçпала веçех килĕшмелле.

Пĕр уйăхран-мĕнрен-и, çав çуллах вăл
пытарайми те пулчĕ çылăхне.

Ик уйӑхран кӗсре тапа пуҫларӗ,
тапать, ҫыртать, ямасть хӑй ҫывӑхне.

Эп арӑм пур ҫинче типсе пурнатӑп.
Тем шухӑш та кӗрет ун пек чухне
вӗри пуҫа, эп майпенех уратӑп;
ҫапса ярать, вара тытса хӗнеп.

Командировкӑна тухса каятӑп
уйӑхлӑха, килеп виҫ кун малтан,
ҫӗрле ҫитсе, темме пур пек туятӑп
Ҫӑлтӑрпипе пӗрле такам шалта.

Уҫма тӑрсассӑн, юрамарӗ уҫӑ,
пӑхатӑп та — вӗр-ҫӗнӗ ҫӑраҫҫи
хваттерӗме сыхлать, пӑхма хӑрушӑ!
Ак мӗнешкел-мӗн Елчӗк хӗрачи!

Атте каларӗ: васкаса ҫураҫнӑ,
пире чӗнмен ху, терӗ, васкакан
йӗре-йӗре вӑл урамра ҫӗр каҫнӑ,
арӑмӗнчен пӗртте савӑнайман.

Ак ҫитрӗ те ҫав вӑхӑт. Ак шаккатӑп,
ют ҫыннӑнне шакканӑн, алӑка.
Каҫ сулхӑн, ҫӳҫенеп, самай шӑнатӑп,
шакка-шакка ырса ҫитсен, лӑкап.

Апла та ҫук, капла та ҫук сас-чӗвӗ,
форточкинчен чӗнет Ука аппа:
— Халь ҫеҫ тӑватчӗҫ-ха, ак, тӗпӗр-тӗпӗр,
ӑҫта ҫухалчӗҫ-ха тӳрех апла?

Ал сул. Кĕрсем кунта эппин. Чей лартăп.
Выçса та çитрĕн пулĕ, çул килсе?
Элле пĕрремĕш хут-и, мĕн çуйлантăн?
Кама мĕскер тăвайăн çилленсе?

Пĕр уйăх ĕнтĕ сабантуй рехечĕ
кайма пĕлмест сăпка пек койккунтан.
Хăш чух ытла та хытă ĕрĕхеççĕ.
Хăш чух темме калаççĕ: «Кай кунтан».

Ачам, пурне те каласан, е çакăнăн,
е çакса суллăн майруна, çампа
мĕн калани мăй таранах пуль çакă,
сунап сана — çирĕпленме чунпа.

Куссан-куссан, шăма тула тухаççĕ.
Ман енеллех пырать те, ăйăр пек,
леш, кăларса хурать. Ука, Укаçăм,
тееп хама, чăтсам, ан пул йĕпе.

Ватта пуссан та, шăллăм, чун хусканчĕ,
тархасшăн, килӳнтен текех ан кай... —
тесе Ука аппа тинех лăпланчĕ.
Вара, уçса, пӳртне те кӳртрĕ хай. —

Майор Макаров, — терĕ, — тен, паллатăн?
— Паллатăп.
— Сан майру пĕрремĕш мар,
йăли çапла — вĕлерес пек тыллать те,
ваcкать çамрăкрахпе кĕç улăшма.

Ку урăхне куçать — канса вăй пухнă
çав майлă ăйăрах сиксе ларать.

Унтан, çак тăрансан, теприйĕ шуххăн
кĕсрӳ çине черетлĕн утланать.

Кансĕрлеме ан та шутла. Çухатăн
пуçна — итле мана, чунран калап,
хут чуль те çӳхелмест, çитет сана та.
çитет кăна-и, çитме мар, юлать.

Хĕрарăм вăл, ураканни, вунна та
чăтать, эп хам та чăтнă яш чухне.
Ак халь ачасăр ватлăхра çунатăп,
тем тур памарĕ ĕнтĕ ачине...

Ука такмакĕ юхнăçĕм юхать те
пулса тăрать, ак, секс новелли.
Ăна хăйне такам тес? Те юхха тес,
те урăхла сăмах пур ун валли?

Туйма пуçларăм: кăшт çеç ӳстермест-ши?
Тахçан вăкăр курман ват ĕнелле,
Фрейд сĕмĕпе теме вăл систермест-ши,
туртса психоанализ еннелле?

Сиплетĕр-ха мана Ука, сиплетĕр
сăмахĕпе те тутлă чейĕпе.
Неврозĕ астăр-ха вăл, чун сӳлетĕр,
çӳретĕр çавра çил пуç çийĕпе.

Анчах та ма çапла терех урать-ха,
ма çав тери лăскать-ха çавра çил?
Ука халапĕнче чăнни пурах-тăр,
унпа çеç уçăлмасть-ши çăраççи?

Элеклемерĕ, вĕрентсе каларĕ:
ама тени кăна тăсать йăха,
хăй хĕсĕрне туйса илсен хĕрарăм,
ун организмĕ çĕклет пăлхав.

Активлăхĕ вара ӳсет çĕр хут ун!
Вăт ак ăçта сăлтавĕ арăмун.
Апртранă кăвакал чăмать, теç, кутăн,
çуратасси килсе асать-тĕр, мур!

Эп ӳснĕ чух ялта çукрахчĕ йĕкĕт.
Аслăрахсем пуç хунă вăрçăра.
Кĕçĕнрехсем çарта е ФЗУра.
Пĕр Кавăрлеччĕ пур яла, пĕр йĕксĕк.

Арăмсене ĕрет тухсан, пуçларĕ
ват хĕрсене, вĕсем пĕтĕленсен,
пире, çул çитменнисене куçларĕ
хăрушă çав этем, курпун эсрел.

Эп ир ӳте кĕрсе те, чĕчĕ шăтрĕ
вуниккĕрех, çăхан çавна курса
çухатрĕ канăçне; хуса тытса
уйра çапса ӳкерчĕ те, кут шăтрĕ.

Вара килех пыратчĕ, пусмăрлатчĕ.
Çич класс пĕтертĕм — пултăм валашка.
Малтан вутран хăранă пек хăраттăм,
кайран тăвас килетчĕ упăшка.

Эп тăлăхчĕ. Анне вилсен пушшех те
тискер сĕтĕркелерĕ вăл мана.

Этемле мар мелсем тупса ишетчĕ.
Эп... савăнаттăм — тăнсăр тăмана.

Йăттарчĕ хырăм — урăх тек пымарĕ.
Пĕр карчăк пăрахтарчĕ хырăма.
Çавăнтанпа ача-тавраш пулмарĕ.
Ман ĕнтĕ пурăнни те — харама.

Шăпам арканнăшăн ун чух ылхантăм
курпуна мар, вăрçа, хаяр вăрçа.
Аттем пулсассăн, кам мана хăяйтăр
пырса тытма, кам кайтăр явăçса?

Анне те ир вилместчĕ. Кавăрле те
иртĕхейместчĕ. Вăйпитти яшсем,
хĕрĕрсене мĕн ĕмĕр хӳтĕлетĕр,
анчах хӳтĕлейместĕр пĕр вилсен.

Кайран вара мунчалана кăларчĕç.
Кайран тăмарăм хирĕç хам та эп.
Хĕсметсенче çыруçăра кăначчĕ,
çапах хатарлăччĕ те пит чее.

Арçын-улпут ясар, анчах хăравçă,
çав МВД вăл — аскăнсен йăви.
Çакланиччен арăслан пек ахăраççĕ,
лексен йăслаççĕ мĕскĕнлĕх юрри.

Апла пулин те, питлеме ан кай-ха.
Тăхта. Е автокатастрофа, е
ытти инкек килпетсĕр те ункайсăр
килсе ан çаптăр — курăнĕ хăйех.

Кайран, пĕрре пĕтсен, тĕлне-йĕрне те
тупмашкăн пулмĕ, кам эс — пĕр пĕтсен?
Паллах, эс кулянан, паллах, йĕретĕн.
Тек ĕнтĕ ан шыра юратусем.

Тем чул шыра — тупаймăн. Манăн пĕтрĕ
пулмасăрах. Эп юрату курман,
эп ӳтĕме анчах кантарнă, пĕтĕм
ăс-кăмăл, чун — сĕм-суккăр, хытнă ман.

Эс те чунна хытар, тĕп пулăн хăвăрт
йӳле ярсан ăна, хытармасан.
Тултан — тултармăш пек, шалтан вăл хăвăл
çав юрату, итогĕ ун — масар.

Паллах, эс мордуна манран пăрасшăн, —
кулса илет Ука, сарса тӳшек.
Çак пурнăç философийĕ Укашăн
мĕн виличчен те улăшăнмĕ, шет.

Ăçта каяс? Киле кĕртмеççĕ. Уйăх
тунсăхласа хĕрарăм ăшшине,
юххаланса, курнăçланмасăр урăх,
кĕрсе выртап Ука хулхушшине.

Çак самантра кĕлленчĕ чун, çухалчĕ
чĕр туйăм, кăмрăкланчĕ юрату.
Сив курайманлăх тăвăлса çуралчĕ;
чуна эс, курайманлăх, чура ту.

Чура та тарçă — юрату. Макаров,
ыр кур çав, ăйăр, эп ыр чух, майор.

Ирпе тăрса, каллех кайса шаккарăм.
Уçмарĕç. Уçăр! Эп сире ма ют?

Ма йăвана варлатăр, ирсĕрлетĕр?
Сана, майор, мĕнле вĕлермелле?
Тăр кăнтăрла та эсĕр, сĕм çĕрле те
канмасăр кĕртлешетĕр-и элле?

Тĕнче пĕтсе килмест пуль? Урса кайнăн,
куллен тискерленсе, теме кĕтсе,
çӳретĕр-çке маччанăн, тĕпсакайăн,
хуçи çук чух — тӳрех пӳртне кĕрсе.

Пароди-Çăлтăрпи, карикатура,
çак мăйунтан пур ылттăн-кĕмĕлне.
Вăл хак тытать. Укçа йӳнелмелле.
Шуйттан-усал та саншăн çук, çук турă.

Вĕсем çукран — çук намăс. Намăс-симĕс
пулать-ши-ха совет саманинче?
Ак утмăл çул кĕтетпĕр çĕнĕ çимĕç
этем кăмăлĕнче, çын чунĕнче.

Çĕн çимĕç мар, кивви унта ĕрчерĕ —
кахаллăх, аскăнлăх тата ытти.
Çĕршыв пĕтет, çывăхарать элчелĕ,
элчелĕн хамăн та кунтах утти.

Пусран çĕрет пулли, çӳлтен çĕрет вăл,
вара çитет хӳри вĕçне майпен.
Эпир — хӳри. «Мораль» тесе çӳретпĕр,
çӳретпĕр «нравственность» тесе иккен.

Харам пырсем — шыври шуйттан ăрачĕ —
хырса выртаççĕ халăх укçине.
Пăсса та усаллантарса яраççĕ,
хуть мĕн тума та ирĕк вĕсене.

Арăмсене пиртен илсе каяççĕ
курортсене, дачча та мунчана.
Патшалăх пурлăхпе тытса тăраççĕ
тем чухлĕ еркĕн-тĕркĕн тахçанах.

Эпир — çара çерçи. Йĕркеллĕ арăм
епле вăл пурăнтăр-ха пирĕнпе?
Ăмсантарма та илĕртме, мăнтарăн,
пĕлместпĕр çав, кĕтетпĕр çĕрĕпе.

Куллен кĕтетпĕр, кунĕпе кĕтетпĕр,
кĕтсе илме пахча хыçнех тухса,
килет-ши кĕçĕр е килмест-ши, тетпĕр,
темччен тăратпăр тилмĕрсе пăхса.

Ача çураттарасчĕ, çуратмасть-çке!
Ăçта, мĕнле çĕрте тăкса-акса,
киленӳпе супаççĕ, çăрăлаççĕ,
утса çӳреççĕ канлĕн, сарăлса?

Уçмарĕç. Чӳрече куçне илетĕп.
Ак тамаша! Никам та çук шалта!
Йăлтах йĕркеллĕ пӳрт-çуртра, йăлтах
тĕрĕслесе, эп хытă тĕлĕнетĕп.

Тӳшек-минтерĕ, простăнĕ... йĕркеллĕ...
Йĕр мар, этем пулнин палли те çук.

Пĕр ахалех эп арăма тиркенĕ,
чее кӳрше эп ĕненмерĕм чут.

Ука, Ука, йӳтенĕ ват тухатмăш,
арçыншăн тунсăхланă пуçупа
вăрçа ылхан парса тӳрре тухасшăн,
ултавпала эс киленӳ тупасшăн,
мĕн ĕмĕр чупнă, халĕ те чупан.

Эс шанăçа кĕме ытла пĕлетĕн,
чунах кĕрсе каятăн чĕлхӳпе.
Пырса лексессĕн, çавăрса илетĕн,
йĕпе кут пулнă, халĕ те йĕпе.

Ик кун чӳречерен кĕрсе çӳрерĕм,
кама мĕн ĕç вара пит, çӳрĕпин.
Ука та темшĕн чей ĕçме чĕнмерĕ.
Ик кун киле килмерĕ Çăлтăрпи.

Çав ик каçра мĕн чухлĕ шухăш иртрĕ
çурăлас пек кӳпченĕ пуçăмра.
Хама туртса çурас самант та çитрĕ
çунса кӳлешӳри вут-çулăмра.

Кӳлешекен этем ытла вăл мĕскĕн.
Вăл кĕлмĕç пек, вăл чирлĕ вилес пек.
Пулман ĕçех куçне курнать çĕр тĕслĕн,
хăйне çын сусăрлатнă çав ĕçпе.

Тăва-тăва вара ним çукран нимĕр,
вăл çакăнса вилес патне çитет.
Çын тимĕр мар, кала: пиртен кам тимĕр
çав тамăк аллинче, синкер çĕрте?

Рак чирĕ пек сана çисе ярать вăл,
эс хăвăнта тĕрек тупаймасан.
Юратрăн эс кама, мĕн-ма юратрăн
хӳтĕленме хăват çукрах пулсан?!

Ăçта ан пăх, хăват, хăват ыйтаççĕ.
Çав хăвата ăçтан-ши илмелле?
Кăшт йăвашне сиссессĕнех тытаççĕ
ярса, тек вĕçертмеççĕ нимĕнле.

Ашак тăваççĕ, утланса çӳреççĕ;
çитсессĕн те чуну тухас патне,
йăпат та килентер, укçа пар, теççĕ,
тарса тухма тăрсан, тапса кӳртеççĕ,
тупаймасассăн эс чун хăватне.

Каларăм ĕнтĕ, юрату халь — тарçă,
чура, мĕн-ма тесен çын хăй чура.
Правасăра ялан ăна тытаççĕ
чуралăхра, ялан, мĕн ачаран.

Ман мĕн прави пулма пултарĕ. Эпĕ
мĕн виличчен — правасăр упăшка.
Ак кĕçĕр те пӳрте пĕччен кĕретĕп.
Каларăм ĕнтĕ, алăк — укушка.

Çутта сӳнтернĕ, ыйхăсăр супатăп.
Кăшт кăтăш пулнă пулĕ çур çĕрте,
кĕç сасă илтĕнчĕ тулта, тур патăр,
такам шăлт-шалт! уçса кĕрет пӳрте.

Кĕпе-йĕме кравать айне чикетĕп,
аэродром пекех вăл сарлака,

минтерсене тӳрлетрĕм те, сикетĕп
хам та унта — малтанлăха чĕтретĕп,
кăштран пулатăп тикĕс сывлакан.

Мăкăртатаççĕ. Кухньăна вырнаçрĕç.
Сыпаççĕ-мĕн, çыртаççĕ суханпа.
Шăрши кунтах çитет. Епле ырмаççĕ —
тек какалаççĕ хураçи хурпа.

Тем вăхăтран кăна зала кĕреççĕ.
Ах, мачческай! Кусем — ик хур ами!
Хураçи çук-çке! Куртăм куçкĕретĕн —
тум-юм хываççĕ нимĕн хăрами.

Хура пике, анчах та ӳчĕ шурă.
Шăр-çарамас — пĕртен-пĕр плавкипе
тăрса юлать те ăшă пулнипе —
тутар-и ку, еврей-и? Ĕçнĕ — урă.

Кулаççĕ.
— Эп пĕр случай хыççăн, — терĕ
йĕм резинне туртса ман Çăлтăрпи, —
шур плавкие, ала пекне, тиркерĕм,
çĕр çăттăр урăхран тăхăнăпин.

Пĕрремĕш кунхинех-ха асăрхарăм,
тĕлме-тĕлех лараççĕ сĕтелсем,
пăхать-пăхать ман енелле Макаров,
пăхать пĕр шуралса, пĕр хĕрелсе.

Куçран тĕллет, унтан пуçне чикет те
пăхать-пăхать, ак, ман сĕтел айне.

Ан чар пӑхма, сан урусем чипер, тет;
суять; туяп сӑлтав ура марне.

Апат вӑхӑтӗнче хаҫат каратӑп
хушша, йӗм тӗп ан курӑнтӑр тесе.
Тухатӑп ҫеҫ, кӗрсен ҫукне куратӑп —
Макаров хӑвӑрт пӑрахать илсе.

Ҫав фактпала, ак, вутланать юн хамӑн,
майор пӑхни кайса тивет чуна.
Шур сетка витӗр хуп-хура ҫӑмха-мӗн
тӑнран яраслӑн майора курнать.

Ҫак эрнинчех ҫуралнӑ кун халапӗ
кӑларчӗ те, ик мӑшӑр — эп унпа,
эс лешӗнпе — ӗҫ хыҫҫӑн, ак, юлатпӑр
кабинетра...

— Эп туйнӑччӗ шӑпах.
Ревизора ҫӳле илсе хӑпартӑм.
— Эсир тухнӑ-тухман вӑл, алӑка
шалт! питӗрсе, мана хӑйне хӑварчӗ.
— Вара мӗскер хӑтланчӗ, кала-ха?

— Вара... Епле чее, Регина, эсӗ,
сӑмах та кӑлармастӑн хӑв ҫинчен,
секретсене питех сутас теместӗн.
— Эс, Света, сексуаллӑ пуринчен.
— Асту...
— Асту-и, ҫук-и, арҫынсемӗр
ҫавна таҫтан пӗлеҫҫӗ пит аван.
Эп хам та ҫапларах, ан ҫилленсем эс,
эпир вунтӑххӑрта-ҫке, мӗн тӑван.

— Вара эп алăка уçасшăн пултăм;
йăшт! шăвăнтăм та пурçăн кĕпепе,
алăк панче чĕлхе кăтартрăм, култăм.
Вăл пычĕ те хĕстерчĕ упа пек.

Эп çапăçрăм... Ура тăррин... Эп пăртăм
тытса ун янахне айккинелле.
Чуптăваймарĕ... Макăрса эп тăтăм.
Пĕç тăрăх алли шурĕ çиçĕмле.

Хура çăмка тĕлне çитсессĕн, хăвăрт
ярса та тытрĕ, чикрĕ пӳрнине.
Алпа питне хам тăрмалатăп, хамăн
çăмхам ăшне, сисеп, йĕке кĕрет.

Йĕке те мар-ха, ăйăр шĕлепкиллĕ
хăруш турта, вилеттĕм хăраса.
Вăл măн арçын, эп — хальтерех активнĕ
хĕрарăм, эп почти что хĕрача.

Сасартăк туртинчен ярса тытатăп,
сиксе чĕтретĕп, шăппăн макăратăп,
ят каясран хăранипе кăна
эп çапăçма пăрахрăм пĕр кана.

Çакна çеç кĕтнĕ тейĕн, алла пăрчĕ,
шалта тем татăлчĕ те, эп хамах
ăна пуçларăм хăвăрт чуптума;
вара диван çине куçайрĕ «вăрçă».

Унта йăтса хурсан, пăркаланмашкăн
хал çукчĕ, — килтĕм эпĕ çакăнса

ун хулăм мăйĕнчен. Ачашламашкăн
лиф салтрĕ те, эп вытрăм саланса.

Регина, эс тем ан шутла...
— Ну, Света...
— Ятлар-и... юлнă пулччăр савăнса.
Ак халĕ çук майор та, ревизор та,
пĕрле тĕп пулчĕç, вилчĕç çапăнса.

Айта тепрер ӳпĕнтерер... Тӳшек пек
тăприйĕсем тăрайччăр çеп-çемçе.
Вăт маттурсем! Пире мĕн пынă шеппĕн
шалча çапса, вăрларĕç çимĕçе...

Çап-çарипех калла кĕрсе каяççĕ,
чанклаттарса ĕçеççĕ те тепрер,
çут сӳнтерсе вырăн çине чăмаççĕ,
пуçлаççĕ сĕтĕрмешкĕн хуп тӳрех.

Сых чунлă вулакан, манран кĕтетĕн
эс драма е трагеди. Эп вара
çапла тĕвтурăм хам засадăра:
ман çĕçĕ тытас мар, апла — пĕтетĕп.

Вута вутпа пĕтермелле, шыва та
шывпа, тен, пĕтереççĕ, кам пĕлет,
тесе кравать айĕпеле шăватăп.
Ав савăла та савăл кирлĕ тет.

Эп майор мар, паллах, анчах ăнланăр,
тӳрех калатăп: лайăх ревизор.
«Декамерон» вуланă-и? Кулатăр.
Вăл енĕпе эп хам та первăй сорт.

Поэмăма ясар теме те пăхĕç,
ясар пуль кăшт, пулин, вăл чыссăр мар,
виçеллĕ вăл, хумхантарать самай,
пылак çырли те пур, пур йӳçĕ пăрăç.

Пичетлеме ĕмĕтленмесĕрех, ак,
вĕçне çитсе пыратăп пулмалла.
Чапа тухас тесе нумай çӳре-ха,
пĕр сăвă та çыраймăн малалла.

Сăвва чапа тухас тесе çырмаççĕ,
çыраç чуна уçса парас тесе.
Чуна эп уçса патăм. Савăнаççĕ
тус-тăвансем, ятлаççĕ тăшмансем.

Тăшман нумай этем телейлĕ çын вăл.
Савни нумай этем вара такам.
Пĕлетĕп эпĕ хам: нумай ман çылăх,
анчах: кам çылăхсăр, кала-ха, кам?

Христос каланă, чулпа перĕр, тенĕ...
Каçарнă турă Магдалинăна.
Çылăхпала кăна этем ĕрченĕ,
çампа çухатрăм пуль Инангăна.

Эй, ытарми Инанга Алшигусти,
çӳçӳ сан çыră, куçу çăлтăр куçчĕ,
эс кĕркунне, хĕлле те çуркунне, çулла,
халь те, кирек хăçан та, ĕмĕрне,
мĕн виличчен çутатăн кунçула.

Эй, эс, сăваплă, чаплă курăну!
Алла тăсса патна пырасшăн пултăм.

Эс ăшшăн култăн та, эп çунтăм, çунтăм,
пит вăхăтлă эп турăм чарăну.

Тин хуйхăрса мĕскĕнленни саланчĕ.
Текех йĕместĕп халь малтанхилле.
Халь тутлă-тутлă ырату саманчĕ
чуна, ак, сансăрах тытса илет.

Эп эс пулаймăп, эсĕ эп пулаймăн.
Ан çун эс, ан пăлхан эс ман пекех.
Эп пĕтнĕ, эп хавшанă, çунса кайнă,
пĕлетĕн: Юратусăр — çын пĕтет.

Анчах Поэзи пул, ман пурнăç тупсăмĕ,
пул Юрату Юрри, Сӳнми Хĕвел,
çĕтсем куçран, çухал, анчах та, тусăм,
Инанга пул çаплах, малтанхиллех.

Эс ăслăччĕ, маттур, хастар та çепĕç.
Хӳтле мана хуптĕрлесен эсрел.
Çĕр ангел та сан пек хыт хӳтĕлеймĕç
ахрат тĕпне тĕксе сирпĕтесрен.

Эс таврăнăн; ун чух, манпа юлсассăн,
эп хӳтĕлĕп чи вăрттăн тăшманран.
Ма пурнăç сивĕ хурлăх мар, хаваслăх —
çавна та эпĕ калăп пур чунран.

Хаваслă эп! Ик Евăна пĕр харăс
рая кĕртме пултарăп-и — Адам?
Каккуй туйма, чей ĕçрĕм, ним туймарĕç.
Хăниййĕ ма пач витĕнмен тата?

Шур плавкине шутартăм, лайăх шурĕ,
йăлтах вĕçертрĕм, тăп-тăп кăкăрсем
тулли те чăмăр, именеслĕ шутлă,
тарассăн туйăнаççĕ тĕкĕнсен.

Эп тĕкĕнтĕм, эп зонăсем шырарăм;
ачашласан пĕççин шал енĕпе,
сывларĕ ассăн хĕрача-хĕрарăм,
çăмхи патне тӳрех пыма хăрарăм,
лектертĕм тутана хĕр тутипе.

Кун пек тусан, татах та тутлă çыврĕ!
Çумне выртса, хуллеççĕн çупăрлап.
Пĕççе пĕççи çумне хурсассăн çывăх,
пĕр çеккунта сывламан пек пулап.

Урлах хуратăп. Йăшăл! та тумарĕ.
Çăмхи тавра çӳрерĕç пӳрнесем.
Туйма пуçларăм выртнă пек Тамара.
Кăкра кĕç перĕнчĕç кăкăрĕсем.

Алра — çăмха! Пĕççисене саратăп!
Тĕллерĕм, тăрăнтартăм йĕкене!
Пĕр кăлармасăр виççĕ, ак, яратăп —
çук, пĕлĕртмест вăраннă иккенне.

Геракл пек хама эп тыткалатăп.
Эй, Çăлтăрпи, Геракл эпĕ, эй!
Пĕр палламан хĕр тĕлĕкпе кулать, ав,
вăл те тутарччĕ ĕнтĕ, те еврей.

Пĕрех... Ытла та пурпĕр тутлă, ырă.
Эп савăла кăлартăм савăлпа.

Эп тавăртăм сана. Çухатрăн. Шырăн
мана тăр кăнтăрла эс хунарпа.

Эп çумăнта пулсассăн та, тупаймăн
мана эс хунарпа та малашне.
Епле хурлантарсан та, хур тăваймăн,
чăваш ватти сăваплăн калашле.

Çутăласпа диван çине каятăп.
Кĕç арăм кăшăрт! çеç пырса выртать.
— Ма тартăн, — тет, — час ухмаха тухатăп?
Пăшăлтату, йĕрӳ халь тин кая-тăр...
Кĕç арăм йĕкене ярса тытать.

## Финал

...Регинăпа тепре кăна тĕл пултăм.
Юлашки хут çĕкленчĕ чун-хавал.
Савни! Юлашкине кĕрлерĕ вутăм.
Кĕрлерĕ те, лап! сӳнчĕ çав финал.

Мана курса, хăвна паллантă эсĕ.
Тĕл пултăмăр уйрăласса пĕлсех,
анчах кайран мĕн пуласса пĕлмесĕр.
Ан йĕр, савни, ан йĕр ĕсĕклесех.

Мĕнлеччĕ эс? Калатăн: пурте пурччĕ —
кил-çурт, юратнă мăшăр та ача.
Халь çук-им? Халь те пур вĕсем. Мĕн пулчĕ?
Ма чи телейсĕр çын пек калаçан?

Чун кантăкĕ яр уçăлчĕ-и, куç-и?
Чĕрӳ вăранчĕ-и сасартăк ыйхăран?

Иртет-ҫке пурӑнӑҫ. Кӗр. Алӑк уҫӑ.
Хӑратӑн. Хӑвӑнтан эс ху хӑран.

Эс асаил мана... Вутсем кӗрлеҫҫӗ.
Вӗри асап пӗҫерчӗ ӑшӑма.
Тӗл пулсанах уйрӑлмасса пӗлесчӗ,
ӗмӗрлӗхе савасчӗ тусӑма.

Мана эс асаилӗн:
  вӗрин пӑшӑлтатса,
  ӑспа ӑнланаймасӑр,
  куҫпа курса,
  эп ҫуккине туймасӑр.
  Эп пулӑп яланах.
  Эп пулӑп тунсӑх,
  хӑв тунсӑх пулнӑнах,
  юратнӑ тусӑм.

Сана эп асаилӗп:
  куллен пӑшӑрханса,
  пӗлнишӗн, тӗл пулнишӗн
  чунпа ҫунатланса.

  Эп пулмӑп умӑнта,
  эс пулмӑн.
  Хӗвел ҫутачӗ тӳпере —
  йӑл куллӑмӑр.

  Ӑҫта ҫӳренӗ эс,
  эп хам ӑҫта ҫӳренӗ?
  Халь ӗнтӗ ман мӗн тес?
  Шар ҫурӑлать чӗремӗм...

Ĕмĕрĕнче пĕрре кăна
çеçке çурать-и
чун чечекĕ,
ытти —
чăн мар-и,
е пĕри
ытла та хыт
çиçет-и?

Ман чун чечекĕ
çеçке çурнă
е çурман?
Е, хам вилсен,
тăпрам çине
шăтса тухать вăл,
çĕрçăтман?

Эп тĕлĕнĕп,
паллах, эп тĕлĕнĕп,
ниçта кайса кĕмешкĕн пĕлмĕп
тарăхса,
ман иртнĕ пурнăç,
пурнăç тенĕ тĕлĕкĕм,
тăпрам çине,
пиçен пулса,
шăтса тухсан.

Анчах та —
ним тăваймăп, ытарми тăванăм,
эс татса ил ăна
тытса пемешкĕн мар.

Вут пек пĕçерĕ вăл,
çара алпа татаймăн, —
эп хам вилсессĕн те,
сӳне пĕлмен кăвар...

Эс çиçĕм куçлă пуль,
чуна ялкăштарса ярса çутатрăн.
Эп кĕтĕм яшлăха.
Яр уçрăм эп чуна.
Эс ăрăмчахлă пуль,
пĕтнĕскере ура çине тăратрăн,
чĕрттертĕн çĕнĕ вут.
Çунать кăвайт, çунать.

Ан тив, мĕнех,
эс сутнă хăвна ху,
эп пуррине пĕлмесĕр,
эс савăннă ĕçӳ пит ăнăçуллăран.
Ан тив, мĕнех,
хирĕçлессе пĕртте шута илмесĕр,
пăхатăн куçăмран,
тытатăн аллăмран.

Шанмарăмăр малтан,
шанма пулатчĕ çирĕп —
яр уçнăччĕ чуна, кĕрсе çут яшлăха,
мăнтарăн пурнăç та пĕрре кăначчĕ пирĕн.
Ак халь шанмастпăр çав шанманлăха.

Чунри ылханлă тĕттĕмлĕх кĕтесĕ!
Çутат е ан çутат, çакна иллюзи тет.
Шанманлăха шанса, каллех, каллех пĕтес-и?

Иллюзи пуль,
анчах мана вăл —
килĕшет....

Эп асаилĕп:
ку чăнах-ши пулчĕ —
пĕрпĕтĕм музыка —
çурхи лĕп ăшă,
лăпкă каçсенче —
йĕри-тавралăх кĕвĕлĕхпе тулчĕ,
чĕнмерĕ хырлăх,
чăштăртатрĕ çулçă,
шур хурăнсем хуллен çеç, темĕнччен
пире сăнарĕç, сăрăхтарчĕç çутă...

Çăкалăх тунсăхлă.
Чунсем çине
çума пуçларĕ те
çут çепĕçлĕх —
соната, —
Бетховен мар,
Чайковский мар,
камне
ак ĕнтĕ çĕрĕпе хĕпĕртесе сăнатăп;
сăнанă май,
çитеп çунса каяс патне,
хыпса илсе, кăварланса çунатăп.

Йăлт килчĕç:
туйăмсăр пулма вĕренеймен
чунри айванлăх,
именӳ,

ачашлăх,
асаплă çепĕçри черчен илемлĕх;
çук, яшлăх мар, прологĕ —
ыр ачалăх
çитсе капланчĕ хытнă чĕреме.

Эп çывăрнă-и?
Вилнĕччĕ пуль?
Асилмелĕх
мĕн пурччĕ ман
юлашкинчен?
Илемĕм,
эс килтĕн те
пĕр вăхăт тăтăн чарăнса:
нимскер курмасăр,
ним илтмесĕр,
ним туймасăр,
калаçаймасăр,
антăхса кайса,
чи çепĕç ĕмĕтĕм,
пĕрремĕш юратса,
мана та куç шартартăн эс
сасартăк...

Уйрăлмалла.
Уйрăлаймастпăр.
Каçĕпех
чĕре çумне эс йăпшăнан —
хăранă ача пек.
Уйрăлмалла.
Çил варкăшĕ...
Вĕçев...

Чӗтрев...
Ҫурӑмунтан лӑпкап,
эс лӑпланса ҫитмен.

Ҫӗр иртӗ те,
нивушлӗ ҫакӑ пулӗ
нихҫан курман тӗлӗк ҫути,
хыпса пӑхман ҫырла тути?
Ҫӗр иртӗ те,
нивушлӗ ҫакӑ юлӗ:
сас кӑлармасӑр ҫапнӑ
аслати?
Шанмастӑп,
ҫук,
чарӑнаймастӑп тӗлӗнме.
Ҫул иртнӗҫем
татах та йывӑр пулӗ ӗненме.

Эп калӑп:
пулчӗ вӑхӑт, пӗр самант,
манра юлашки хут кӗрлерӗ,
асрӗ вут —
пӗрремӗш хут юратрӗ ҫын мана,
тен, кам пӗлет,
юратрӗ вӑл
юлашки хут...

Шӑпамӑртан вӑрларӑмӑр самантлӑх юрату.
Хӑравҫӑсем. Чӗтретпӗр. Ҫын ан пӗлтӗр.
Самант илемлӗхӗ, ун хурлӑхӗ, яту
ӗмӗрлӗхе-и пулӗ тупсӑмсӑр ыйту?
Самант ҫеҫ тӗллӗ-и, ытти пур вӑхӑт тӗлсӗр?
Нивушлӗ чӑн-чӑн пурнӑҫ — ҫухату?

Каятăп эп. Чăтсам. Нумай юлмарĕ.
Каллех суялăха эс таврăнан.
Эп таврăнап суялăха. Мăнтарăн.
Час хăтăлап санран, манран эс хăтălан.
Вара хăрамăпăр. Анчах — мĕнрен, тăванăм?
Шăпамăртан вăрланă вутсенчен?
Пĕртен-пĕрре вăрланă, юлашки вăрланă
нихçан та таврăнми минутсенчен?

Эс пулăн ирĕклĕ, эп — пулăп. Пирĕн
чи тăвăр читлĕхрен тăвăртарах çак ирĕк.
Ан тив, вăл — ылтăнран та кĕмĕлрен.
Чуна чуралăхра тытма вăл кирлĕ.
Чуралăх —
хăрушрах чĕр вилĕмрен.

Хальхаççăн пирĕн çапларах халсемĕр.
Çут тĕтрере юлан, асаплăхри юлташ.
Тен, эпĕр ĕмĕт çеç, таçти телейсĕр çемĕ?
Тен, пĕтĕм пурăнăç — иллюзи е мираж?

Мĕн-ма каллех пурăннă пек туймастăп?
Мĕскер парас пурăннă пек туйма?
Илсем мана, мĕн-ма эс йышăнмастăн?
Мĕн-ма хăвна ыйтмастăн йышăнма?

Калаççĕ: пурнăç — пурнăçах. Пĕлетĕп.
Пурах иккен сăлтав та калама.
Сана курса, хама астурăм эпĕ.
Тĕл пултăмăр... яланлăх уйрăлма.

Хама каллех эп манăп-ши, тăванăм?
Хама манса, сана та манăп-ши?

Çук, пуç çĕклем те, туслăхран тăвам эп
ĕмĕрлĕхе — хаваслăх, чун ăшши!

Пуçа çĕклем те тавралла пăхам эп,
унтан пăхам шăп та лăпваррине,
тĕтрине мар, чăн пурнăçне курам эп —
иллюзи те, мираж та маррине.

Пурнатпăр-ха эпир, халех вилместпĕр,
чăн пурнăçа савар пуранна чух.
Чăн пурнăç — чун кăварĕ; чун сӳнмесĕр
чăн пурăнăç хĕвелĕ сӳнес çук.

Чăнах-тăр, пурнăç — çухату, анчах та
мĕн тăвăн: çухатмасăр çук тупма.
Пирте тасалăх пултăрччĕ, ан чактăр,
чĕре ан чарăнтăрччĕ вут тăкма.

Вара хал çитĕ читлĕхрен тухмашкăн,
тупма чăн пурнăçри чăн ирĕке,
юратăва чун пурнăçĕ тумашкăн,
пурăнăçа тумашкăн кĕреке.

Кĕрекере — ĕçчен туссем. Юрлар-ха,
пĕрле пулар, мухтар чĕрĕлĕхе.
Пĕртен-пĕр пурнăçăмăр, ыткăн, ахăр,
çунатлă ирт, кĕрле ĕмĕрлĕхе!

*1977 çул,*
*Шупашкар—Переделкино.*

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ

### 1.

Тулмарĕ ĕмĕт, пурнăç ăнăçмарĕ.
Тӳрре килмерĕç эп каланисем.
Ан тив, хуть мĕн палкатăр çын çăварĕ,
чăтса тӳсме хал пĕтрĕ, тăвансем.

Ак ĕнтĕ вунă çул эп — Урçа-каччă...
Çапах та тухса тартăм тамăкран:
тарман пулсан-и, тилмĕрен-макран,
пĕтен — таптатчĕç е тытса çакатчĕç

савнийĕсем... хăй çакăннă тесе
тăватчĕç документ... пуçа çиетчĕç...
Шутлаттăм: пĕтĕм сăтăрçă-суеçĕ
унта капланнă, çитнĕ йӳтесе.

Йӳтенипе нимскер тума аптраççĕ:
ĕçлес çан тавăрса — ĕçлес килмест,
йĕрке тăвас — хăйсем ăна пăсаççĕ,
сипет-нисепĕ çук, арканнă веç.

Çӳлтен çĕрсе килет — лере асаççĕ,
кунта асаççĕ... пĕтнĕ, çĕтнĕ çул;
генсек кăкри çине куллен çакаççĕ
митал хыççăн митал — пĕр намăс çук.

Миçе хутчен герой? Миçе çут çăлтăр?
Шыва лаплатнă тет-и вăрçăра,
çур ĕмĕртен, аса илсе, çĕр çăттăр,
çакса яраççĕ çăлтăр вăр-варах.

Тăваттăччĕ-ши йĕркерен е пиллĕк?
Паттăртарах-мĕн пулнă Жуковран.
Камит! Пуплес тесессĕн те ăшпиллĕн,
пуплеймĕн çав, тапас килет кутран.

Кĕнекине эшкер çырать, çак «маршал»,
хăй çырнă пек туса, тута çулать,
утса çӳрет мăнаçлăн, мăшăл-мăшăл;
илет, ак, преми «Малая земля».

Çерем çĕре те Хрущев мар, вăл уçнă.
Çав эшкерех — çырать, çырать, çырать.
Анчах вăрман хăлхаллă та уй куçлă —
хуть мĕн ан ту, кирлех иккен чарак.

Авторсенчен пĕрийĕ ĕçсе супнă —
пур Переделкинăна янратса,
кăшкăрашать, кăкăр çапать: «Эп уçнă
«Целинана»! — тет. — Çыртăм юратса,

анчах тӳлерĕçĕ хреново, орден пачĕç,
машина... чаплă ĕçшĕн — сахалрах.
Вырăнлăрахчĕ Ĕç Геройĕн ячĕ.
Эп çавăнпа: «Çаратрĕç! — теп. — Хурах!»

Эп çавăнпа ĕçетĕп, кăмăл юлчĕ,
хурлантăм эп: чи малтанхи кунах
вăрçа кĕрсен те, тăкăнсан та юнçăм,
эп маршал мар, эп лейтенант кăна.

Эп тăват çул алран пăшал ямарăм,
ямарăм перома эп алăран.

Йăпăлтатмарăм та, шăпам ăнмарĕ:
ниçта та пулаймарăм генерал —

литературăра та, армире те;
ялан хăратрĕç темшĕн тĕрмепе.
Халь, ватлăхра, хӳрешкере çӳретĕп.
Çук, çуралман, туссем, эп кĕпепе.

Çарапакка та çаракут çуралнă.
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпе — çара, çара.
Хам çаратман, мана текех çаратнă.
Эп хирĕç тăрайман тытăçура.

Хăравçăлăх е намăса пĕлнилĕх
паман-ши май сĕмсĕрленсе кĕме?
Мунча кĕме кайсассăн кирлĕ милĕк,
кирлех пуль чыссăрлăх — сĕмсĕрленме.

Чыссăррисем суялăха путаççĕ,
питсĕррисем вара — пуççăрлăха.
Кам çамрăкла улталама вăтанчĕ,
телейсĕр çавă çын яланлăха.

Ултав, ултав! Ăçта пăхан, унта эс
паран пире суялăх аллине.
Леш тĕнчере те айвана улталĕç:
рай тейĕç — уçĕç тамăк алăкне.

Тамăкĕнче те шутарса хăварĕç,
хăйсем чи лайăх хурана лексе,
сана шăршлăрахне, вĕрирехне хăвалĕç.
Кулса çеç ларĕçĕ лĕкĕртетсе.

Хуралӗнче хӑйсен ҫынни пулсассӑн,
тухса та тарӗҫ хурантан вӗсем.
Эс хуйхӑрӑн, кулянӑн, сывлӑн ассӑн.
Сисмесӗрех йӑлт кайӑн эс пиҫсе.

Турра анчах, Ҫӳлти Турра тунаймӗҫ.
Вӑл пӗтӗм ултава та суяна,
ҫак ывӑҫ ҫинчи пек курса пит лайӑх,
чӑн парӗ хак кашни хура юна.

Мӗн — тамӑк, мӗн — тӳре влаҫра вӗсемшӗн?
Шанмаҫҫӗ ни турра, ни шуйттана.
Тухса ӳксен, ҫӳреҫ рая лекесшӗн
те чӑнласах, те юрилле  кӑна.

Ав, Маленков, чи юнлӑ, чи каварлӑ,
чи хӗрхенӳсӗр чунсенчен пӗри,
чиркӳ пусми ҫине иккен хӑпарнӑ
йӳтес патне ҫитсессӗн, куртӑр-и?

Турра хыт йӑлӑнсассӑн, тен, каҫарӗ
тесе-ши пур хӑрушӑ ҫылӑха,
хыт пуҫҫапать тет, питӗ чун уҫать тет
кӗлле пухӑнакан ыр халӑха.

Ун ҫук тет айӑп, айӑплӑ — пӗр Сталин.
Вӑл хушнине ҫеҫ тунӑ пур палач.
Епле суять... Хӑй пеккине пуҫтарнӑ
леш ҫынҫиен... пӗрлешнӗ — пулнӑ влаҫ.

Кутне ҫула-ҫула влаҫа хӑпарнӑ
пур йӗксӗк те яваплӑ унпа тан.

Влаç çавă йĕркепе ялан хатарлă —
чыс çухатса, час пуç та çухатан.

Тăшман сахал шыратăн, хĕрхенетĕн
пулсассăн «çăткăн халăх тăшманне»,
идея умĕнче ху чыссăрне те,
ютне те кăтартан, таса марне.

Вара... пуç çухатан. Ак ĕнтĕ мĕншĕн
эшкер ĕçлет чи лайăх сехет пек:
ĕçченшĕн çын чунне илеççĕ, тĕншĕн,
кут çулайманшăн пăхĕ-мĕнĕпе.

Çынна сутманшăн, выçă пурнайманшăн,
талантшăн... Пĕтереймĕн каласа.
Çав путсĕр самана вăл пулчĕ маншăн
сĕм тĕпсакай, эп пултăм кĕрисса.

Нăш-нăш! шăршларăм сывлăша: мĕн шăршă
кĕрет тулта? Камран хăрамалла?
Мĕнрен шикленмелле? Хура кун тăршшĕ
хăш майăн юхса пырĕ малалла?

Хальччен вăл юхса пычĕ-ха пĕр майăн:
çук ирĕклĕх, çук савнăç, пурнăç çук.
Тĕп тăвакан сословишĕн — кун лайăх.
Тĕп пулаканшăн, халăхшăн, пĕр çул —

вăл коммунизм, çав çул, концлагерь,
тĕрме, психушка, çуклăх, йӳн эрех.
Аван ĕçлеме мар, аван вăрла пĕл,
ним те сан мар вĕт, саншăн — пурпĕрех».

«Расул килет!» — тесен анчах тĕпленчĕ
çак хӳрешке, генсек хĕрне: «Сучка,
преступница, — тесе хăртса пĕтерчĕ, —
пĕрмай качча каять — кив валашка.

Ку ухмахне те тĕп тăвать-ха, акă,
сиссе те юлаймасть, пĕтет чурбан;
ахаль те пысăкчĕ карьера хакĕ,
часах пулать вăл пурнăçĕпе тан».

Бара поэт кĕрсен, этем пуçларĕ
ун умĕнче пурне те... ырлама.
Этем хальччен те асăмран тухмарĕ,
асрах çӳретрĕ тепĕр пулăма.

Çав Пултарулăх çурчĕн барĕнчех-ха
шăв-шав çĕкленĕччĕ ман Çăлтăрпи.
«Тытман-ха ĕç, килсе вырнаçнă çех-ха,
ĕç пуçличчен канас кăштах эппин», —

тесе эп кайса ларнăччĕ пĕччен çĕ,
коньяк та кофе илнĕччĕ тата —
сĕтеклĕ çыртмалли... Часах кĕçенчĕ
умра майра, кĕç пычĕ ман пата:

«Епле шăпасемпе? Мишель! Ăстаçă,
чăваш таланчĕ, — терĕ, — чăн талант!» —
тарам эрех ĕçес тесен мухтаççĕ
вĕсем кунта сан талантна ялан.

Тăлмач. Мускав хупахĕсен каяшĕ.
Çап-çамрăк пуçĕпе ĕçет, туртать.

Кавказ йӗкӗчӗсем йӑтсах каяççӗ
курсан, хатӗрӗсем кашнин — турта.

Ярса паратӑп. Шалт! ӗçет. Çыртмасть-ха.
«Çыртсассӑн, — тет, — эрех вӑл ӳсӗртмест.
Ман ӳсрӗлес килет. Пит меллӗ маска
çав ӳсрӗлӳ — ӑна пӗлетӗн эс.

Ун чух нихçан нимрен те вӑтанмастӑн,
нимрен те хӑрамастӑн. Ӳкӗнӳ
кайран пулать вӑл. Çывӑха ямастӑн
эс халь ӑна — сан çӗтнӗ именӳ.

Мускавсенче анахронизм теççӗ
именӗве, чыса та совӗçе.
Кунта ялан çын шутӗнчен ӗçеççӗ,
тумаççӗ тӗплӗн нимӗнле ӗçе.

Пӗрне анчах тӑваççӗ тӗплӗн, тусӑм!
Т ӑ в а ç ç ӗ çитерсе тӗпне çити.
Мишель, Мишель! Ку пурнӑç-и? Хӗн-пусмӑр.
Курмастӑп чун. Курмастӑп чун çути!»

Сисмерӗм те, хӗр ӳсрӗлчӗ те кайрӗ.
Сисмен те, пӑхрӑм: кам ку? Çӑлтӑрпи!
«Епле майпа?» — «Самолетпа! — хаяррӑн
хӑрлатрӗ вӑл. — Поэм çыран эппин?!

Юхха! Мана хурласшӑн-ха! Пӗлесчӗ
кӑшт та пулин сан хӑвӑн намӑса!» —
ак ӳсӗр тӑлмачпа чӑваш поэчӗ
тухса юлатпӑр туххӑм навӑса.

Урай кисрентерсе таплатрĕ арăм,
кĕрс! кĕрслеттерчĕ йывăр алăка.
Эп ăсатма каймашкăн та хăрарăм.
Ăҫта каять? Киле е аякка?

Ыйтса ĕлкĕреймерĕм. Кайрĕ. Ҫĕтрĕ.
Ылхантăм тăлмача, хама — айван.
Кайран ҫеҫ пĕлтĕм: эпĕ мар-мĕн ҫĕрĕк,
юхха. Вĕсем. Вăлах. Анчах — кайран.

Халь — тăмана — ҫӳрерĕм ҫырăн-варăн
лăплантарас тесе ăша-чикке.
Мĕнех калас: поэма ҫырăнмарĕ,
ҫине-ҫинех чанклатрĕ ҫут черкке.

Ялан ĕҫсе те ĕҫ тухмасть-мĕн. Хуйхă
ĕҫнипеле пачах та пусрăнмасть.
Фрейда вулам-ха, терĕм те, пĕр хушă,
ҫук, ăш вĕҫсессĕн Фрейд та вуланмасть.

Мĕне пула урать этем? Хĕрарăм?
Сăлтав мĕнре? Тĕшши? Ăҫта секрет?
Тӳрех ăҫтан калайăн. Аптăрарăм.
Ҫапах та тупсăм пур. Ăҫта ҫӳрет?

Ҫынрах ĕнтĕ, ăҫта пулма пултартăр.
Сисетĕп эп — ҫынра та турăра.
Эппин ҫав сĕм кăштах чуна пусартăр,
упратăр кĕҫ картран та тухасран.

Ах, Переделкино! Тарса килетĕп
кунта эп пурнăҫ хĕсĕнсе ҫитсен.

Ĕçе те чун туртмасть пĕртте, киле те,
чун çӳçенет издательство тесен.

Кунта кашни утăмăма сăнаççĕ,
коридора пĕр минута тухсан:
«Ма сулланса çӳрен? — тесе ыйтаççĕ, —
миçе процент план тулнăччĕ-ха сан?»

«Çĕр аллă. Иртнĕ уйăхра — çĕр çитмĕл».
— «Ненай, ненай, суятăн пуль кăштах».
«Унчченхинче вăл икçĕре те çитрĕ...»
— «Ма вĕçкĕн эсĕ, ма суеç, куштан?»

Çапла мăшкăллашса иртет директор.
Чухса тăраççĕ иккĕн. Хам çумрах
пĕри ларать. Çак намăссăр, чĕресĕр
этем çынна сутма хавас чунран.

Пĕр-нимĕн ĕç тумасть, ирех пуçлать вăл
килрен киле кĕрсе элек пухма.
Каç пулттипе вара элекĕн лавĕ
хуçа патне çитет, ниме пăхмасть.

Хăш чух тăмасть унччен те — йăпăр-япăр
анчах кĕрсе каять... Леш яланах
кĕтет ун пеккине. Кам йăкăл-якăл,
пурте унпа туслашнă тахçанах.

Ĕçе хăçан килсессĕн те, кайсан та
юрать директор «савнă» çынсене.
«Савманнисем» кăшт çеç ĕçрен юлсан та,
пухусенче илеççĕ чунсене.

Минутпала шутлаççĕ: виççĕ... пиллĕк...
Вара катаççĕ преми. План тулни-
тулманнине питех пăхмаççĕ пиллĕн,
кунта чысра — çын пилсĕр палкани.

Кунта чĕлхе малта, ĕçпе юраймăн, —
йăпăлтатма пĕлместĕн, апăрша,
ĕçлен, ухмах упа. Эс манса кайнă
хĕрарăм иккенне Майра Патша.

Вунпилĕк-вунулт çул çеç аслăрах вăл
санран, шутлас-тăк, пĕтнĕ упăшки —
пултараймасть, ĕçсе хупланнă, явăл,
халь хăй те çӳлтисемшĕн ватăрах-мĕн —
обкомăн юлашки те тĕлешки.

Пĕр пысăк вырăнтан кунта «антарнă»
«штрафник» туса, директор пенсиччен
пул, тенĕ; ха! сысна çури вăрланă!
Эпир хыт айăплатпăр ку енчен!

Нельçе-е! Коммунистсем апла тумаççĕ —
вăрлаççĕ, ну, лекмеççĕ ухмахла,
вараланмаççĕ, шанчăкран тухмаççĕ
юратнă парти умĕнче, тăнла.

Сан партбюро пур хĕсметре, местком пур:
нивушлĕ çаклансассăн вăрăпа
кам та пулин, лару пухмастăн кăпăр!,
нивушлĕ каçаратăн ырăпа?

Сăмах çинех, чăн та пулсаччĕ вăрă
пĕр çулхине: вăрланă сăвăсем

халăхăнне. Алли ун питĕ вăрăм.
Анчах темме ĕç кайрĕ сĕврĕлсе.

Тытмарĕçĕ, айăпламарĕç, ячĕç —
хăтарчĕ партбюро айăпласран.
Ĕçрех хăварчĕç, çав чысрах хăварчĕç —
çаплах çӳрет пуçне хурса асла.

Çăхан куçне çăхан чавмасть. Вăрра та
курать, тет, вăрă аякран-таçтан.
Çук намăса епле майпа вăратăн —
ăçтан тапса, ăçтан çапса, ăçтан?

Намăссăрсен эшкерĕнче тертлентĕм
вуникĕ çул! Кашни куна хĕнпе
ирттертĕм эп. Хам чун çине тĕрентĕм,
çĕнтертĕм тăшмана ун вăйĕпе.

Тăшман тени çулран-çул нумайланчĕ:
чап тетпĕр, чап ӳсет — тăшман ӳсет,
тус тенĕ этемех сутса хăтланчĕ,
кĕвĕçӳпе хисепсĕр минресе.

Пул пĕрехçех — вăрçса темех каламăп,
мĕн тăвăн: çын вăл çын кăна, хавшак,
вăл турă мар; çӳретĕп, пăхкалатăп,
çук, пĕр çын мар эсир, вуншар ашак.

Нивушлĕ ăслă лашана эп хурлăп?
Мана вăл ма кураймĕ — ĕç лаши?
Ухмах ашак, сана мĕн кирлĕ: хулă
е юн сирпĕтекен кĕтӳç пуши?

Кирлех пулсан, ăна та эп, кăна та
сана çитерĕп тăраничченех!
Питне-куçна хуçкаласа, куратăп,
ыратнă пек тăван çапичченех.

Кулап тен ĕнтĕ, хăрамастăп тетĕн
хăйне хăй хӳтлеймен ман пек çынран,
анчах мĕн ĕмĕр тăршшĕпех тӳсетĕн
инкек, хыт йăнăшса, пуçна çуран.

Пăхма кăна хӳтлевсĕр курăнатпăр —
Нарс, Çеçпĕл, Волкова, Айхи, Митта.
Эпир хăватлă, ĕмĕр пурăнатпăр
çын асĕнче, чунне тупта-тупта.

Вилсен те пурăнатпăр. Эсĕр вилĕ
виличченех, айваннăн йăпанса
çӳретĕр чĕрĕ пек. Сире тур пилĕ
тивĕçеймест, лекмест çав вăл ансат.

Ăна илме ытла хĕн-хурлă, тертлĕ.
Улталама май çук, пуç хумалла
сăваплă ĕçшĕн е, турра çитернĕн,
чӳкленмелле — хăвна йăлт памалла.

Апла тума ăçта вăл сирĕн чунăр?
Çук чунпала турра йĕрлекенсем,
эсир, вăлтас тесе, мĕн чул ан чупăр,
вăлтаймăр — тĕрĕс ун Шăпа Кĕнекисем.

Унта чипер, яланлăх çырса хунă
кам мĕн хакне, кунçулĕн шăпине.

Вăл çапларах çын чунĕ, тур саккунĕ,
пĕлсе тăсасчĕ пурнăç çиппине.

Чун пулмасан та, пуç тенийĕ мĕншĕн
ларать халтăртатса мăйу çинче?
Е пуш хуран вăл? Чун çунса йĕменшĕн
явап тытмасть асаплăх умĕнче?

Тĕнче асапланать. Пĕрпĕтĕм чун вăл.
Асапланать пĕтесшĕн мар нихçан.
Аталанать. Ноогенезсăр çук вăл
тивлетлĕ ноосфера, шутласан.

«Сверх-Я» тесен, «сверх-жизнь» теме пулать-тĕр.
Патриархаллăха савакансем,
каçарăр-ха, тархасшăн, тĕрлĕ латсăр
çӳп-терминпа тулнишĕн сăввăмсем.

Епле тусан мĕнле юрать — пĕлместĕп.
Ятлатчĕç ĕлĕк, çук халь ятлакан.
Терминсене чăвашлатманшăн эсĕр
тăрмалăр мана мар, филолога.

Этем чи çӳллĕ пусăма хăпарĕ
чун вăйĕпе, тăнпуç хăвачĕпе.
Пĕрне-пĕри çиес эсрел хатарĕ
çухалĕ вăл, çухалĕ пусĕпе.

Çавна шанатăп эп, шанса пурнатăп,
пĕлтерĕш пултăр, тетĕп, пурăннин.
Хал пур таран санран эп пăрăнатăп,
йăх-ях, анчах усси мĕн пăрăннин?

Ăçта ан пыр, унта явса илет вăл.
Никам сыхланаймасть пуль усалран.
Сократ пулса çуралайман, пĕтетпĕр
танатара, — тĕп пулнă хăй Сократ.

Чи ăслă çынсене те тĕп тăвать-мĕн
ниме тăман алланчăк, тупата.
Шăмма-шакка ватса, кунçул тăпачĕ
чун-чĕрене унтан малтан ватать.

Пăхсан, халь кам эп: çамрăк çын е ватă?
Невротик, мизантроп е пессимист?
Эп çук е анлă утăмсем тăватăп
поэзире? Камитçă, тен? Артист?

Е — пĕтнĕ çын? Пĕтнĕ чун мар, чĕп-чĕрĕ
юнпа пĕвеннĕ чунлă апăрша?
Асать усал... Епле чăтать-ши çĕрĕ
çав пĕтĕм синкере, шăрша-марша?

Эп — катемпи, манран пурте кулаççĕ.
Кулаççĕ чи ухмах катемписем.
Чул тыттараççĕ, кăтартса кулачă.
Куллен сутаççĕ, юратап тесе.

Ман пек ухмах çут тĕнчере миçе-ши?
Мана хĕнеççĕ — эпĕ тав тăвап.
Кулса-мăшкăлласа манран ĕçесшĕн,
эп ĕçтереп, тататăп ыйтăва.

Мана сивлеççĕ, сивлĕçин, тӳсетĕп,
вараламастăп сумлă ыр ята.

Сивлеççĕ çеç-и, йĕрĕнеççĕ. Эпĕ
çавна пăхмастăп, пурпĕр юратап...

Ах, Пултарулăх çурчĕ! Бар çеç мар-ха
кунта чуна çĕкленĕ манăнне.
Çак Ирĕклĕх Оазисĕ юмаххăн
кĕрсе юлайнă шухă чĕрене.

Кунта чăнах п у л т а р н ă эп. Пултарнă!
Тăвата-пилĕк пысăк япала
çырса тăкса кăмăлăма тултарнă.
Янрать кашни тăнран йăлт ямалла.

Тăнран кайса аптăраса ӳксессĕн,
ан тивтĕр пĕрĕхме сип-сив шывпа.
Çырма ахаль чухне çук вăхăт тессĕм
килет — çапла чăваш ачин шăпа.

Хĕсмет çиет, çемье пăвать, обкомĕ
тăлланă сăнчăрпа ал-уруна.
Чи мĕскĕн кĕлмĕç пек, хăватлăх хумĕ
çапса кисретессе кĕтен-пурнан.

Анчах мĕнле ан тĕмсĕл — кисретеймĕ,
килме май çук, пусарнă арман чуль
чун-чĕрӳне; вăтам талант этемĕ
йăл илеймест, сӳнет вăл кун пек чух.

Шăнăрĕсем хурçăран мар, пырши те
çинçе — çулăмланмасть кăвар чĕри.
Çулăмлансан — пĕтес пулать. Пĕр шит те
тăваймĕ урăх, ӳкĕ лăчăрин.

Ялкăшаймасть-тĕк, çурăлать. Ку паллă.
Ăçта эсир, вут-тăвăл чĕресем?
Эсир... эсир ялан хĕрхӳ шăпаллă.
Тăрайăр-ши тек ĕнтĕ чĕрĕлсе?

Тăраймăр çав — тăр çеç, çапаç, ан çухăр,
çур утăм та ан ту эс ытлашши.
Кăвар чĕреллĕ чăн-чăн сăвăç çук халь,
хăçан, хăш ĕмĕрте çуралĕ-ши?

Вăл киличчен, каçарăр та, эп тухрăм
çак тĕнчене савма та питлеме.
Пур пек вăя пĕр чăмăра, ак, пухрăм,
курса утатăп çывăх вилĕме.

Хĕрхӳ шăпа! Телейлĕ эп тăванлă
пулнăран мар поэзипе, туссем;
телейĕм — тĕлĕк, пурнăçăм — тăварлă,
телейлĕ эп хам халăхшăн пĕтсен.

Пăлхар-и вăл, шумер-и пулнă, халăх,
начар-и халь, пăчланнă-и тĕпрен,
мĕн калăр та, выльăх марах; пахалăп
ăна чи çӳл шайпа. Чăваш, çĕклен!

Ан çывăр эс, вăран. Çĕршыв вăраннă.
Тăрсам, утсам ыттисемпе пĕр тан.
Эс мĕскĕн мар. Çĕн ăрусем çуралнă.
Пиншер маттур хĕр-ывăлу пур сан.

Эп те маттурччĕ. Ачаллах эп лартăм
ышт! утланса Пегас çине, тĕнче;

анчах... анчах юрлатăп вăрттăн-карттăн:
кашни-пĕр юрă ман — хуп хушшинче.

Ялта чухнех ярса илме хăтланчĕç.
Тутар обкомĕ илнĕччĕ çăхав
хам тусранах. Мĕн ăмăрчĕ, хăлачĕ —
çерçи эс пул, пул сутăнчăк, юхха.

Вара ма тивĕç-ши сана, ма лартĕç
сăнчăрласа çыхса сив читлĕхе?
Кушак аçисем пек, тавра мăрлатĕç:
«Сисетĕр-им? Пĕтес килмест? Хе-хе!»

Пĕтес килмест... Анчах мĕн чухлĕ «бомба»
арчамăмра, мĕн чухлĕ «динамит»?!
Эсир камне ялан эп чухлăп. Пурпĕр
аркатмаллах сире. Çырлах... Аминь...

Калаçмăпăр... Çав Ирĕклĕх тенийĕ
кунта, иллюзи çеç пулсассăн та,
самай сиплет: те сывлăшĕ, те пилĕ,
туяп, тапса тăрать пек çакăнта.

Пĕр срок пĕтет. Татах юлан. Пурнатăн
хăш чух ик уйăх та. Сайра-хутра.
Çамрăкланатăн, савнăçлă курнатăн
ирĕклĕрен — çак сиплĕ вăхăтра.

Сан хăвăн пӳлĕм. Лăпкă. Ăшă. Çутă.
Каç-каçĕпе ытла та шăп вара —
пурте ĕçлеççĕ... Хытă калаçу та,
шăв-шав та йăннă. Ырă таврара.

Апат пирки шутласси çук, йӑлт янтӑ:
пыран та — çитереççӗ мӑй таран.
Столовӑй çӗнӗ, аслӑ. Эс туятӑн
хӑвна хӑнари пек — сӑйланӑран.

Калас пулать, чӑн та, аван сӑйлаççӗ:
мӗн ыйтнӑ, пур — параççӗ, чару çук.
Ку пӗтнӗ, леш пулман тесе суймаççӗ;
эп хам ыйтаттӑм кофе, услам çу.

Çиес килет — çиен, килмест — çиместӗн
е каярах пыратӑн, кам чарать?
Наçтук аппа, вырӑс майри, çиллессӗн
уткаламасть, чӑтать вӑл, каçарать.

Атте-анне çинчен ыйтса пӗлет те,
пуçне суллать, мӑнтарӑн, шеллесе.
«Çич ывӑл, икӗ хӗр! Мӗн-мӗн кӗтет-тӗр
сире кунçулӑрта, малта! — тесе. —

Ан пултӑр вӑрçӑ çеç е революци —
сая каятӑр, çурални харам.
Мана мӗн ӗмӗр пӑтрашулӑх ютчӗ,
пӑтрашуран паян та чун хӑрать».

Çӳлти хутра — кино, библиотека,
хаçат та телевизор, бар, бильярд.
Чӑн ырлӑх маншӑн, манӑн чун чечекӗ —
вулав сӗтелӗ, çӗн тӗнче, çӗн ят.

Сентресенче — куç виçейми пуянлӑх!
Ниçта тупма май çук кӗнекесем

(вула кăна!) умрах тăраççĕ янтă —
вулап, вулап, вулап, пĕрре кĕрсен.

Хампа та çĕклемпех илсе тухатăп, —
парса яраççĕ, реххетлен, ыр кур!
Тен, каярах пуль те-ха, ăс пухатăп
çапах та — ăс пухнин пĕлтерĕш пур.

Ухмах пуça, паллах, тăваймăн ăслă
тем тĕрлĕ кĕнеке вуланипех,
çапах пайти çук мар-тăр çакă аслă
пăтрашура — пĕр çын калană пек.

Пĕри çапла курна пуçлать виçеллĕ —
тупать йĕрне, чăн сасă янкăсне.
Тепри, тăнлăскерех, вуланăçемĕн
таçта кайса чикет пур пек ăсне.

Вула-вула ырсассăн-ывăнсассăн,
кам савăнман-тăр турă кунĕпе?
Апла та çук, капла та çук пулсассăн,
ан тыт эс, ăссăр, ăслă кĕнеке!

Студент чухне нумайччĕ чун апачĕ,
çук, тăранмастăмăр çав апатран.
Фрейдпа тытсассăн, кăларса çапатчĕç
кирек кама университетран.

Врач пулнă, çуннă сывлăхне юсасшăн
этемĕнне, сипленĕ пит ĕлккен.
Мĕн айăп пур психоанализ ашшĕн?
Интимлă пурнăçа «варлать» иккен.

Секса пач урăхла тĕпчет — йĕркесĕр.
Чун арканать унпа çынсен, ами.
Ăс-кăмăл управçи хисеплĕ Геббельс
вута перет пĕр кĕнеке юлми.

Нацист та, коммунист та курайманçĕ
Фрейда, анчах тĕнче савать — вулать.
Тӳрех калатăп, вăл мана вăй пачĕ,
куç уçăлчĕ чылай ăна пула.

Е — Фромм неофрейдист... Е — Сартр... Е — Ницше...
Е — Достоевский... Кафка... Пруст... Камю...
Çын ăш-чикне, ирĕклĕхне савнишĕн
ма пулмалла вĕсен тĕнчешĕн ют?!

Е — «В поисках утраченного времени»
çырса экзистенциализмлă Пруст
пире коммунизмран писме вĕрентнĕ?
Тӳрех калатăп, вĕрентмен. Вăл — тус.

Монтень, Карлейль, Бердяев, Кафка маншăн
авторитетлă юлнă хальччен.
Тӳрех калатăп, ахаль мар тăрмашнă
эпир тупса вуласшăн вĕсене.

Ак халь — Флоренский, Федоров... Усранă
Леонтьева, Вернадские тата
кама-кама çапла тытса? Хăранă.
Мĕнрен хăранă? Чăнлăхран. Чăн та.

Пастернакпа Шаламова вуларăм
илсе пĕр-ик каçа эп Айхирен,

çук, килте мар, кунта, килте леш — арăм —
вулаттарать унта — çиет, хирет,

вара каять те евитлет... Пыраççĕ:
«Эс мĕн вулан-ха пытанса?» — тесе
ик-виçĕ кантуртан та, тавăраççĕ
пур çылăхшăн та харăс — сĕмсĕрсем.

Е — Лосев. Социализм пĕтсен, анархи,
шуйттан-усал пусса илессине
пĕтичченех, пророк пек, курнă лайăххăн.
Юратнă хуть хăçан та çынсене...

Мускав — çумрах. Унта райра пурнаççĕ
провинцие ĕмсе, ним çук çукки.
Кузнецкий мост урамĕнче вырнаçнă
çыравçăсен Тĕп кĕнеке лавкки.

Ниçта тупаймăн, кунта пур. Тăсан та
член билетне, параççĕ пĕр çĕклем
тем тĕрлĕ çĕнĕлĕх. Е ал пусатăн,
е унсăрах илен — хăш чух мĕнле.

Мускав... Çапла... Анчах турхан мăнукĕ
чи мĕскĕн тарçă пек тӳсет хĕн-терт.
«Москва, Москва, как много в этом звуке»
тени мана, суймасп, йĕклентерет.

Пĕрех, хуть те мĕн чухлĕ пичетлетĕр
кунти хаçат, журнал та альманах
сăввăмсене, Мускав влаçне питлетĕп,
çич ют мана Мускав ялан, хурах.

Пĕрре кăлартăм, ак тухать тепре те
çĕн сăвă кĕнеки... Хавасăм çук.
Темле харам ĕç тунă пек çӳретĕп —
мĕн-ма, теп, сăвăç, çĕтрĕ савнăçу?

Çĕтмен. Пулман та вăл. Хĕссе пусарчĕç
ăна тӳрех тăрлавсăр сӳтĕксем,
сăввăмсене ӳсĕрпеле куçарчĕç,
ним уямарĕç — вырăс сыснисем.

Пĕртен-пĕр çут хĕлхем — поэзи каçĕ
ЦДЛра. Вуларăм савăнса
ик чĕлхепе. Куратăп: ал çупаççĕ
виç-тăват çын малта урса кайса.

Унта ансассăн, патăма, ак, пычĕç.
Чечек парать пĕри куççуль шăлса.
Кашнин çунса тăрать, хĕвел пек, пичĕ,
кашни куçран пăхать савса, шанса.

Ватăраххи чăн чăвашла каларĕ:
«Тăван чĕлхе хускатрĕ кăмăла.
Нумайранпа илтменччĕ. Тыткăнларĕ.
Çĕклерĕ. Тав! Мухтав! Янрат ялан!»

«Маттур!» — тесе çурăмăмран лăпкарĕç.
Пуçран та шăлчĕç-çке: «Маттур!» — тесех.
Камне-мĕнне ыйтасшăнччĕ те, кайрĕç
кĕпĕрленсе таçта, пĕр кĕтесе.

Хыт пăлханса, хыçран каяс тумарăм.
Тен, аванрах та пулчĕ кайманни.

Хальччен юмахри пек çӳреп, мăнтарăн:
илт-ха çавна, мăнаçлăх туймăн-и?

Кĕвĕçекен хаклавçă мар хаклавçă.
Уç кăмăлпа хакланă япала
анчах чуна йывăрлăхран кăларчĕ.
Мĕн ĕмĕрне çапла вăл пулмалла.

Çырса та вуласа кăна — типетĕн.
Тула та тухмалла пĕр вăхăта.
Эп турă кунĕпе те, каçĕпе те
мĕн чухлĕ савăнмарăм пуль кунта!

Сукмакпала пыратăн. Вырăн — тайлăк.
Утан хĕлле, çулла та кĕркунне.
Ах, Переделкинăри çутçанталăк!
Епле аван тата çут çуркунне!

Çуллаччĕ ку... Хĕвел хĕртетчĕ. Шăрăх.
Анчах та хырлăха хĕвел ӳкмест.
Пырса тухатăп — Сетунь. Шывĕ тăрă.
Шăнкăртатать, шăнкăртатать, типмест.

Лере, ав, пур çăлкуç. Унта юратнă
шухăшласа тăмашкăн Пастернак.
Виç хырă айĕнче çыврать халь ятлă
çак сăвăç. Ав, кунтан та курăнать.

Сăртра — керменĕсем. Çав вырăсланнă
иудейсен маттур ывăлĕсем
пурте килсе дачăсене вырнаçнă.
Майпен халь вырнаçаççĕ хĕрĕсем.

Мĕн калăн, тур суйласа илнĕ халăх.
Пĕрне-пĕри çимест вăл чăваш пек.
Мĕн чул ăна ан тăпăлтарччăр, халлă.
Пуçпа ĕçлет, пурнать те çав ĕçпех.

Эп чăваша хурласшăн мар, ăнланăр,
çитменлĕхне-çке пĕтерес килет:
пĕрне-пĕри çимелле мар ăнманнăн,
ун чух çеç çăвĕ пуç çине тивлет.

Çук, унсăр май килеймĕ. Тур тивлечĕ
пуçăмăра пĕрре те тивмесен,
măйкăчсене яланлăх тĕвĕлеççĕ,
пăвса лартса, выç куçлă тăшмансем.

Тăшман нумай чăвашăн. Хăй çеç ăшшăн
хальччен те йышăнать пур йăх-яха,
хăйне хисеплемест, чунне уçасшăн
темме ялан каварлă ют йăха.

Хăйне хăй хурласа чунне сутаслăх
ытти çĕре — çак мар-и ĕнтĕ рак?
Çак чир иртмест, чăвашăн çук пуласлăх —
пĕтессĕмĕр апла юнашарах.

Ĕмĕрлĕхе эп канăça çухатрăм.
Ăçта кайса, ăçта çитсессĕн те,
пĕр сан пирки пуça вататăп, халăхăм.
Чăваш, чăваш! Чĕрт шанчăк, ан сӳнтер!

Çĕн ывăлу-хĕрӳ айван ан пултăр,
ухмах ан пултăр — шанчăкне çутса,

пĕтеслĕхрен ахăлтатса вăл култăр,
çӳретĕр, маттурскер, пуç каçăртса.

Ан тив, хăраттăр влаç, çапах тухаймăп
çак шухăш-ĕмĕтсен тыткăнĕнчен,
ытарайми йăваш, юратнă халăх, —
кăвар чĕрем тапма чарăниччен.

Пĕртен-пĕр шанчăкăм эс хуть хăçан та —
çулла, хĕлле, кĕр-çурлă, яланах —
кунта килсен те, хуть ăçта пулсан та,
турра, турра пĕр саншăн йăлăнап.

Пĕр саншăн эпĕ çула тухнă. Çулăм
выртать тертпе асап хутлăхĕнче.
Чун-чĕрере иксĕлмесен вут-çулăм,
лап! сӳнмесен, çĕнтерĕп эп, тĕнче!

Сӳнсен, ăна хаяррăн сӳнтерсессĕн
тăван чăвашăн пилсĕр чунĕсем,
килес сениэльсем, пуç çĕклĕр эсĕр —
ман вутăмран вут чĕртчĕр чĕрĕрсем.

Халь çеç хисеп çукрах; сисеп-шанатăп:
мана та савĕç малашне çынсем.
Ма çӳçенетĕн, чун, мĕн-ма шăнатăн?
Çиçес пек мар-им, вилĕме çĕнсе?

Кăварлă чун ӳтпе сӳнмест; пытарĕç,
çĕрсе те кайĕ ӳт, анчах та чун,
пулсассăн халăх чунĕн вут-кăварĕ,
нихçан та, ĕмĕрне те сӳнес çук!

Каç пулчĕ... Çитрĕ çĕр... Ак чан çапаççĕ
Колычевсем тутарнă чиркӳре.
Ман йывăç коттеджра ташша çапаççĕ
юрла-юрла ик шăрчăк — чĕререн.

Тĕнче çине кам çĕтĕк виткĕç витнĕ?
Эп хам та лăпкă мар чун-чĕрепе.
Чан çапнă май, хама туятăп вилнĕн,
шăрчăксене итлеп те — чĕрĕ пек.

Мĕнле-ши ĕнтĕ кил? Киле халь кĕртмĕ
ăçта туса кăларнă çăраççи?
Тен, пусĕпех унтан мана катертнĕ?
Нивушлĕ килсĕр-çуртсăр çӳрĕп-ши?

Ăçта кайса кĕрес? Кампа ватаççĕ
ик ырăнлă ман йывăç кравате?
Шутлатăп та, ярса илет вăтанăç —
намăсланатăп, хĕретеп пите.

Вĕсемшĕн, хамшăн мар, хăрап; ыйтатăп
ыр турăран: «Каçар, çырлах, каçар...»
Тур каçарать, вăл ăнланать пыйта та,
кусем пыйтăсем мар, уçар куçа.

Кусем — выç йытăсем. Хӳрелешеççĕ
кĕрт йыттилле, манса çынна, турра.
Этем те, турă та ӳпкелешеççĕ
хисепсĕр юлнăн, юлнăн начара.

Эп çеç ӳпкелешместĕп, çук ӳпкевĕм,
апла эп турăран та вăйлăрах?

Чунра янрать виле кĕвви, пĕр кĕвĕ,
чун çурăлса тухать, туссемĕр, ах...

Ĕçре тата мĕнле-ши? Наборланă
е çук кĕнекеме? Чарса юри,
ăна, тен, çапса хуçнă, касмăкланă?
Тухайĕ-ши ман «Юрату юрри»?

Е «Юратупа Ирĕклĕх», поэма,
епле шуса пырать-ха журналта?
Хăçан, хăçан капла чăваш этемĕ
курса ăнланĕ манăн хăвата?

Эп çамрăк-ха, пулас килет-ха шухă,
вĕçес килет хатарлăх йĕрĕпе.
Анчах ямарĕ — вĕçертмерĕ — шухăш
çеккунтлăха та чăн-чăн ирĕке.

Шупашкара вăл куç умне кăларчĕ,
чуна лăскарĕ хурлăх хумĕнче.
Кунта килсен ялан ман чун канатчĕ,
пачах та канаймарĕ хальхинче...

Вун çул, ак, унтанпа вĕçсе çухалчĕ.
Киле эп килнĕччĕ самолетпа.
Йышра пата палланă сăн çывхарчĕ —
ман Çăлтăрпи... Тĕреклĕ Арçынпа.

Час çитрĕ «Волга». Ларчĕç. Кĕрлеттерчĕç.
Мăя пăрса эп юлтăм ушкăнра.
Çул тăршшĕпех виле кĕввийĕн терчĕ,
çĕнрен асса, чуна хăшкăлтарать.

Килте — пахча çум айӗнче. Кашлаççӗ
унта çын çӳллӗш армути, мăян.
Хăярӗн-купăстин юлман ним лачӗ.
Ахлатрăм пӳлӗмре, сас кайрӗ ян!

Кансан, çырткаласан, хуйха манасшăн,
çумкурăкпе пуçларăм тытăçу.
Хресчен ачишӗн, Сениэльшӗн, маншăн
мӗскер вăл пахчари тем тӗрлӗ çум.

Эй, çӗрулми, пурнăç улми, ӳс, ашкăр!
ӳссем, хăяр, сухан та купăста!
Пурне те йӗркипе хитре шăвартăм.
Эп вăл енчен, тӳрех калап, ăста.

Чиемӗмсем, эй, хурлăханăм, слива,
мӗнле сывлатăр? Груша, панулми?
Хӗвел хӗртет пулсан та, мана сивӗ,
сире мӗнле? Эп йăшнă паллами.

Туратăрсем çинче сӗтеклӗ çимӗç
хавассăн çитӗнет, ăшша савса.
Пухса илес кунсем те час, ак, çитӗç,
эп çимӗç татăп хытă савăнса.

Панулмисем, эп чуптуса ачашлăп
сире чăп-чăмăр, хӗрлӗ питӗртен.
Е, тутлă груша татнă майăн, ташлăп
чунран хӗпӗртесе; кун çитӗ, тен.

Çитсен çав кун, хурлăханпа чие те
хур пулмӗç — тăвăп эп тытса тӳрех

компот, варени йышлă, слива чейĕ.
Тата эп тăвăп флягипех... эрех!

Кĕр мăнтăрĕпеле вара пуçтарăп,
пур инкеке манса, хăна-вĕрле.
Ялтан та, хуларан та... Йăлт каçарăп
хама курайманa — чăн этемле.

Каçарнине йышăнмана та эпĕ
каçарăп — савăп, чĕнĕп хăнана.
«Каçарнинче — хăват, Мишша, — теетĕп, —
пĕрре анчах хăтармĕ вăл сана».

Аса килет Христос, Махатма Ганди,
аса килет анне, атте... Вĕсем,
вĕсем мана çапла ăс панă, пачĕç,
параççĕ... Асанне тата... Çавсем...

Хăват параççĕ... Çаплаллах пуль халăх,
ман халăхăм, чуралăхри чăваш.
Вăл, çичçĕр çул авсан та, — тăтăрхаллă.
Вăл хуçăлман. Ан тив, вут мар, йăваш,

ан тив, хыпса илмест Кавказ манерлĕ,
анчах, кирлех пулсан, тупать вăй-хал
хăйне хӳтĕлеме. Ăспа минренĕ
темех ăна май çук пуль тетĕп халь.

Тунсăхласа çитни нумай пулатчĕ,
ярса ĕç тытрăм икĕ алăпа.
Ыраш çăкăрĕ мар умра, кулачă
вырта пуçларĕ, ак, каçалапа.

Сухан чĕрсе, кефир кайса илетĕп,
туса ĕçетĕп ялтилле уйран.
Çарран юлса, туятăп-сĕмленетĕп
шалт ĕшенсе таврăннăнах уйран.

Ман пултăран та пур. Каçпа пĕçертĕм
юрма ярса çиме пултран яшки.
Анчах ăна пĕччен, пĕччен çиетĕп.
Ăçта эс, арăм, яшка пиçнĕ, кил?!

Анчах килмерĕ Çăлтăрпи, çухалчĕ.
Ăçта каяс-ши ĕнтĕ шырама?
Ука аппа каçпа каласа пачĕ:
кайса-мĕн арăм кăнтăра канма.

Паян çеç çитнĕ каялла, çӳренĕ
министр çумĕпе, Язаровпа.
«Каллех усал хыпар та, ан кӳрен эс», —
тет кулянса хуллен Ука аппа.

Пай пуçлăхне курса калаçрăм. Пуçлăх
канаш парать: «Тарса, — тет, — хăтăлсан,
авантарах пулмасть-ши? Çураçулăх
текех кĕтсе илеймĕн, ăнлансам.

Савниййĕ те, Язаров, пит каварлă,
хăрушă çын, министр хăй унран
асăрханать. Сан пуçлăху та варлă
çав юлташпа. Асту, ачам, упран.

Тата çавна калам: мана курман эс,
сана та, ылттăнскерĕм, эп курман.

Манса ан кай: эс шалăппа, айван ăс,
кунта, МВДра, пачах пулман.

Ăнлантăн-и?» — «Ăнлантăм». «Питĕ лайăх.
Тепре ан кил, ман сăмаха итле...»
— «Паллах, итлетĕп, хирĕç мĕн калайăп,
килместĕп, ĕненсем, ан ӳкĕтле».

Тухса суллантăм, куç хуралчĕ, пуçăм
шавлать, чĕре вуниккĕлле тапать.
Шăпрах, шăпрах, теп хама хам, ан хуçăл,
асту, ан ӳк, ут çирĕп утăпа.

Хуçăлмасан ӳкместĕнех, калаччăр:
«Касса ярсан та вăл ӳкмест, тăрать».
Пĕр ӳркенмесĕр пуш сăмах аллаччăр:
«Парсан илет, çапсан вара тарать».

Ик енĕ те пуш чунлă, ыр сунмаççĕ,
çут тĕнчере юлман ыр сунакан.
Пай пуçлăхне тĕл пулнă кун саманчĕ
хальччен йĕклентерет, йĕксӳ ялан.

Хăравçă юс! Хăй тирĕшĕн сана вăл
вилме те канаш парĕ, çакăнма.
Пурăнăçра эп акă мĕн сăнарăм:
пасар пырать, улталĕ кам кама.

Улталама пулать кирек кама та,
пулать кирек мĕне те шĕвĕртме.
Улталама пулмасть, тӳрех калатăп,
улталама пулмасть... чĕр вилĕме.

Çавна манса, суятпăр-улталатпăр
ĕмĕрлĕхе каймаслăх килнĕ пек.
Кăнса выртатпăр та, лăштах пулатпăр —
çĕрсе выртатпăр вилĕм кĕввипе.

Çинех — Катка. Çын сăнĕ çук. Кĕл тĕслĕ.
«Мĕн пулчĕ?» — «Хуйхă. Çирĕ-çирĕ те
çынна, мана (кун çаврăнчĕ пĕтеслĕ),
тĕп пулчĕ, йытă, — чупрĕ-чупрĕ те.

Хăйне те турă курчĕ, шеллемерĕ,
Вĕшле тĕпленчĕ, çук текех Вĕшле,
çĕр çăтрĕ Вĕшлене — машшинĕ-мĕнĕ
çĕр çурăкне вăл сикнĕ сĕм çĕрле

еркĕнĕпе...» — «Пытартăр пулĕ ĕнтĕ?»
«Пытартăмăр. Тăхăр кунне чĕнсе
çӳретĕп халь. Кала л е ш н е те, пĕлтĕр.
Асра-и-ха туй каçĕ, мунчасем?

Вăт, чаплă арăму туй каç кĕртлешнĕ
мунча тавра, унтан шалта, — унпа...»
Эп пултăм Катката пӳрте кĕртесшĕн,
анчах ал сулчĕ çеç тарăхупа:

«Пурнатăн, айванкка, пурна пĕлместĕн.
Вăл амăшпе те «пурăннă» — Вĕшле...»
Эп тахçанах нимрен те тĕлĕнместĕп,
шак хытрăм халь, анне каларăшле.

Те чăн, те çук, чăнах пуль, ма суять-ши,
кун пеккине хальччен пĕлмен, туйман,

вĕсем-мĕн йăхĕпех тĕнче каяшĕ —
йĕрĕннипе йӳç хăсăк килчĕ ман.

Çавăнтанпа курман, Катка пурнать-и
е çук — илтмен. Эп кайрăм уйрăлса
Çăлтăрпирен. Шутларăм эп: урнах-тăр,
тăвăрласа тек пурнас мар, çунса.

Ыр куртăр, ирĕклентĕр, ак виç хурăн
çурт умĕнче, ак çурт, ак сад, пахча.
Эпир пурте пурнасшăн, сарăл, пурăн,
епле пулсан та — ту пĕрер ача,

ӳстер ăна, калатăп-çке, ыр кур, теп;
пĕчченлĕхре пĕтмешкĕн ăсанап —
чуна ермерĕ курайманлăх хурчĕ,
эп ырлăх-сывлăх çеç сунап сана,

çак çĕр çинчи ман юлашки юратăвăм,
сыв пул, сыв пул, сыв пул та пуян пул,
телейлĕ пул... Этем тӳсми ыратăвăм
вун çул касать, вăл чĕрĕ паян-кун.

Çав кун темме, хĕвеллĕччĕ те, çилччĕ,
кулюк тумастчĕ çурт çинче кăвик!
Иван Егоров, шăллăм, «кӳлсе килчĕ»
пĕр хăлтăр-халтăр кивĕ грузовик.

Ним те илмерĕмĕр пуль, сив шкапне те,
шифоньерне те, диванне те — веç —
хăвартăмăр. Илсен, хама йӳнетĕп.
Юлашкинчен çеç йӳнелес килмест.

Кĕнекемсем тата кĕнеке шкапĕ.
Выртса тăма — кив койка, кив матрас,
кив утиял. Ак ман тупра. Ал-хапăл
тытса хурас та, мĕн туса тăрас?

Костюм шеп мар, çири кĕпе те çĕтĕк.
Эп — хам каяп, мана хăваламан.
Пуç сыв пулсан, мул пулĕ, тенĕ ĕнтĕ
хĕрĕхелле çитсе пыран айван.

Каллех пĕччен, каллех кил-çуртсăр эпĕ.
Хваттер вăл пулĕ, тетĕп, ху эс пул.
Куççулĕме шăлатăп, ал сĕлтетĕп —
эп пурăннă кунта шăп вунă çул.

Çĕн пурнăç пуçлаймарăм. Ĕмĕт сӳнчĕ.
Телейлĕн тăсаймарăм йăхăма.
Мана каçармĕ куншăн турă сучĕ.
Май çук. Ăçта кайса кĕрес-ха ман?

Пулин! Пус, кас, эп хама хам сутмарăм.
Поэзие хăвартăм хăтарса!
Эп мăнтăр пурнăçпа пурнас тумарăм,
унран эп тартăм, тухрăм хăтăлса.

Чунсăррисем мăнтăрпала аптраççĕ,
вара çӳреççĕ мăнтăр шăратма
курортсене, анчах часах ураççĕ,
пуçлаççĕ, хухаймасăр, выç тытма.

Капла та пулăшмасть. Урсах каяççĕ —
ясар вăя ниçта чикейменрен,

асса, кам килчӗ унпала выртаҫҫӗ,
ӗҫсе-супса тухаҫҫӗ чикӗрен.

Апла кӑна-и, ҫаратса пухаҫҫӗ
арча шӑнӑҫайми пехетсӗр мул.
Ҫӑткӑнланса, тус-тӑваннех сутаҫҫӗ,
девизӗ «эс пул» мар вӗсен, «тӗп пул».

Грузовикчен тата пулма тӳр килчӗ
диспансерта — чун ыратса пӗрмай,
ман ыйхӑ ҫӗтрӗ; шурӑ минтер пичӗ
пӗҫернӗрен, эп макӑртӑм чылай.

Унта пулни чуна самай йӑпатрӗ,
анчах эп килӗшмерӗм сипленме.
Унти хала пӗлни ҫапах юрарӗ:
ҫут тӗнчерен пӑрахрӑм шикленме.

Ман чирӗм «фоби» терӗҫ. Пӗрре-иккӗ
кайсах ӑнлантӑм: хама хам анчах
ҫӑлса кӑларӑп инкекрен. Ан иксӗл,
ан сӳн, хӗлхем — эп парӑнмӑп пачах.

Килте кӑвар пулсан, ӗҫре чукмар-мӗн,
чӗнтерчӗҫ — шанлаттарчӗҫ пуҫранах:
«Эс ма халь те тухмастӑн, чӗчӗ мар-и
сана парас? — тееҫҫӗ куҫранах. —

Анчах эпир шеллемӗпӗр пӗрре те
арӑмӗпе уйрӑлакан чее

усал антисоветчика — ĕретĕн,
типтерлĕн çумлăпăр ухмантее.

Кĕнекӳне обком бракланă. Эсĕ
пире хăртан «фарисейсем» тесе.
Юратăва эс ирĕклĕх кӳресшĕн,
сăпайлăха ярасшăн сĕвĕртсе.

Эс амораллĕ нравственнăç йыхравĕн
республикăри паллă чĕнӳçи.
Коммунистла поэзин таса храмĕн
ятне яни вăл саншăн чунуççи.

Эс чирлĕ мар иккен, эс... эс — элекçĕ,
чипер çыннах унта-кунта кĕрсе
тикĕтпеле варлан. Çынсем пĕлеççĕ:
ун-кун юри çӳрен чире персе.

Издательствăра эсĕ кам, хăна-и,
работник-и, в конце концов, кала?
Кĕнекӳне — çунтармалла. Хăвна-и,
хăвна — кутран тапса ывăтмалла!»

Юлашкинчен каларĕç: «Эс прогульщик,
«хам ирĕкпе каятăп» тесе çыр,
мана, директора, тав ту эс куншăн,
статьяпала яманшăн шăлна çырт...»

Шăла çыртса, каллех тухса суллантăм
диспансера — чун çурăлать, туссем.
Этем камне татах аван ăнлантăм.
Умра — хĕвел, ытарайми тĕссем...

## 2.

Эй, алччамуй алпастăсем! Тур-сулу!
Мана çиет чун ыратса касăлу.
Ашшĕ тăван хĕрĕпе «пурнасси» те пур иккен.
Мĕн, тилпĕрен çини вĕсем е кикен?
Урăх арçын е хĕрарăм тупайман-и,
пуçĕ пулни вĕсен е пулман-и,
пуç пулса та нимĕн шутламан-и?
Çынран именмесен, турран хăраман-и?
Е, никам та пĕлмĕ тесе, иртĕхсе,
унччен ыттисемпе сăтăрăнса пĕтсе,
вĕсем патне туййăм юлманран,
е тaçта шырасран, юлхавран,
ал айĕнчех тесе йĕкĕрлешнĕ,
яланлăхах тачă пĕрлешнĕ?

Илткелеттĕм унччен, ĕненместĕм,
кулса манран, шăл йĕреççĕ пулĕ, теттĕм.
Пĕрре Нăрлат текен хулара
кăлтах тĕкрĕ юлташăм хулран
каçхи шкула сăвă калама кайсан.
«Ма тĕкен-ха вара?» — тесе ыйтрăм хăйса.

— «Тĕлпулу йĕркелекенĕ, çав хĕрарăм,
упăшки пур çинчех тăлăх, аре,
кулса каламастăп, ĕнен, ан ĕнен, —
терĕ тус сывласа тарăннăн, —
тăван хĕрех упăшкасăр хăварчĕ,
ашшĕпеле Çĕпĕрелле тарчĕ.
Вырăн çинче тытса, амăш суда панă,
судра хĕрĕ амăш ятне янă:
ни кĕлеткӳ, ни çурăму, ни ăшшу çук,

лере тата, шăп варринче, — темле шыçă;
суян эсĕ, мана атте пусмăрламан;
юрататăп — вăл чи савнă çын ман,
вунвиç çултанпалах унпа çывратăп,
выртассăм çук урăх нимле арçынпа та...»

Кĕçсе питлĕ пике ян! ярать, тет;
залри халăх анранă пек тăрать, тет,
сăмах чĕнме, пăшăлтатма хăрать, тет;
амăшĕ çех урнăçемĕн урать, тет...

Тĕнче пĕтсе килет тесе-ши,
ватăрах этемсем: «Ку мĕн тамаши?» —
терĕç тет те пĕтрĕçĕ, тет, саланса.
«Эп те аран тухрăм, — тет тус, — çăлăнса».

Кала-халĕ, сексопатолог:
этем тени мĕн-ма пит тăлăх,
ма çапла хăтланать, мĕскер çитмест,
чунĕ кӳтнĕрен-и, пĕлетни эс,
е чун савăннăран, мăнтăррипе,
ниçта кайса кĕреймесĕр, хăй хĕрĕпе
йыт аçилле урса кĕртлешет —
чухлаятни эс çав тĕлĕше?

Шăп пулас-и ман е ылханас-и,
çакна сура-сура вăрçас-и?
Е, ăслă пек курнас тесе, ним чĕнмесĕр
иртсе каяс — ан тив кĕртлешчĕр.
Е, чун ыратнипе, пуçа ярса тытас,
куç ан куртăр тесе, тарас. Тарас
путсĕр ирсĕрсенчен тĕнче хĕрне,

этем ури пусман çĕрсене?
Унта та тĕл пулсан çав йăх-яха,
ăçта кайса кĕрес, ăçта юхас,
малтан тĕп тăвас пуль вĕсене,
вара ал хурас пуль хам çине?

Кулса илет тухтăр, çамрăк çын:
«Пирĕн мĕн ĕç, — теет, — çыврĕçин.
Тавах турра, çутă тĕнчере
ун пекки тĕл пулать мĕльюнра пĕрре,
ытти халăхăмăр, мĕнле калас,
чипер пурнать, ун пек хăтланмасть.
Çавăнпа та кирлĕ мар пуль çыхланмашкăн,
кирлĕ мар пуль питех тĕп тумашкăн.
Мĕскĕн çынсем вĕсем, мĕншĕн тесен, —
турă кӳрентернĕ чирлĕ çынсем.
Çутçанталăк çапла туса янă —
кантăрине тепĕр майлă явнă:
пулса тухнă ни çăпата, ни калуш.
Сапăр тăвах эппин, ан вăрç уш.

Каçар кӳршĕ тухтăр этемĕ,
эс — мĕн ĕçре, миçе кăласс пĕтернĕ,
мĕн нушапа çӳрен; пурăнăçра
мĕнрен хăрамастăн, мĕнрен хăран,
мĕнрен тĕлĕнетĕн, тĕлĕнместĕн,
мĕскер тĕлленетĕн, тĕлленместĕн,
арăмлă ар-и е пĕччен ар?
Атя, пĕлтер, чунран калаçар.
Калас тесен — кала ятна-шывна,
калас килмесессĕн — çыртсам шăлна,
итле каланине: ăнланан-тăк, ăнланап, те;
ăнланмастăн пулсан, пăтранап, те».

— «Ĕçĕм тăрăх пăхсан, туссем тăрăхлакан,
влаçсем пусмăрлакан, такмак такмаклакан
ĕççĕр этем эпĕ, ик класс пĕтернĕ,
унтан тата — пиллĕк; çĕтернĕ
леш мур аттестатне шутламасан,
вĕренӳре çич çул курнă асап,
ăнланапах пуль-ха, атя, кала,
ăнланмасса туйсан, астукала,
систер, эп тăрăшăп ăсланма.
мĕн-мĕн каланине йăлт ăнланма.
Нуши манăн тем мар, калас темле:
пурăнассăм килмест, вилес килет.
Вилесрен мар, хăрап вилеймесрен,
тĕлĕнместĕп эсĕ тĕлĕнесрен,
ялан пĕр тĕлĕк çеç тĕлленеп:
арăм выртать урăх çын айне;
анасшăн мар нихăш ун çинчен,
çав сăлтавпа ĕнтĕ эп пĕччен».

Чунран итлет тухтăр юррăма:
«Çакăншăнах вилме кирлĕ мар, —
тесе кулса илет хуллеççĕн, —
эсĕ вара, айван, вилесшĕн.
Пит çамрăкла курнă, çавăнпа
ăна куллен çĕнрен-çĕнĕ арçын пар —
чи малтанхи шайне лараймастăр,
çавăн пекне шырать, ăнланмастăр,
тупăнать те пек, анчах... вăл мар,
тӳр килет вара тепĕринпе выртма.

Ун пек арăм хăртса типĕтет.
Урăх туп та, ĕçĕ те пĕтет.

Пирĕн пата çӳрекен йышра та:
«Çирĕм çул тетепе çывăратăп, —
текенни пĕр-ик хĕрарăм пур, —
çиччĕ качча кайрăм, пурпĕр, мур,
пĕринпе те путлĕн тăранаймарăм,
вăйлăрах киленĕç тупаймарăм».

Ку та — чир. Сăлтавĕ — турăра.
Тĕрĕсрех-и? Çутçанталăкра.

Психологи мĕнне пĕлен пулĕ?
Психика мĕнне те пултаруллăн
шĕкĕлченĕ пуль институтра,
миçе сий теетчĕç-ха чунра:
«либидо (оно)» та «я», «сверх-я»?
Фрейд пирки эп çырнăччĕ статья,
темшĕн-çке, халь те пичетлемерĕç,
те ялти çынсем ăнланмĕç, терĕç,
ютшăнса психоанализран.
Ухмахсем лараççĕ, мĕн тăван.
«Ашшĕ — хĕрĕ», «пиччĕш — йăмăкь», тетпĕр,
çавă ĕç тĕп сăлтавне пĕлместпĕр.
Йĕрĕнме пĕлетпĕр, ылханма, —
вĕренесчĕ пулăшу пама.

Либидо (оно) — этеммĕн чун çуначĕ.
Ку — ясарлăх туртăмĕн хăвачĕ,
организма ялан тытать вутра.
«Я» — вута йĕркелесе тăрать.
Тăнсăрла хăтланасран хăрать вăл.
Инкеке çакланасран упрать вăл.
Чăтăм çитерсе хӳтле-хӳтле,
чун пурăнăçне «сверх-я» шайне çĕклет.

Çакă шай — шалти чарак вăл, совесть.
Вăл пулсан — çын пулăн, сума сăвĕç;
пулмасан — эс тухăн выльăха.
Эп мĕн тесшĕн — ăнланан пуль халь?

Кунсăр пуçсăр, «я-идеал» пур.
Ку унтан та ăслăрах пуль, мур:
этемме йĕркелĕхре тата
иксĕлми сăпайлăхра тытать.
Общество моралĕн нормисем
уншăн — пурнăç принцип çутисем.
Нравственность тени те çав шутрах.
Унсăр çын вăл çын-и, айтурах.

Ак эс: «ашшĕ — хĕрĕ», терĕн; паллă:
ку — Электра комплексĕ; явапллă
çутçанталăк куншăн — хĕрĕ ашшĕпе
çывăрасшăн арăмпе упăшки пек,
юрататъ ăна, савать, ачашланать,
пĕве кĕриччен ăшталанать,
амăшне сивлеккĕн кураймасть.
Амăшĕ сисмест çавна, туймасть.

Грек трагединче Электра ашшĕпе
çаплалла хăтланнă тăршшĕпе.
Ашшĕ, амăшĕ çакна ăса илмеççĕ,
тăван юн юратăвĕ пуль, теççĕ,
савăнаççĕ иккĕш те чамасăр:
«Ютшăнмасть, савать, — тесе, — ачамăр».

Çĕр-пиншер пикен çак чир иртет,
ашшĕнчен вунултсенче писет,

писиччен те, мĕн тери туртсан та,
йăнăшмасть, «оно» мĕнле урсан та.

Хĕрĕ «ăсли» çеç сахал, пайтах
ашшĕнчен нумай килет кунта —
чаракна пĕрре çеç йăвантартăн,
йĕкӳне чармарăн, тăрăнтартăн:
«ӳсĕр пулнă эп», — тесе ан лар,
хĕрӳнтен пин çухрăма эс тар.

Пăрахса кайма вăй тупаймарăн,
тăван хĕр пулать тăрать сан — арăм.
Сыватаймĕ, çук, сана, арçын-этем,
нимĕнле эмел те çак чиртен.

Ак, кунта çӳрет пĕри, кабинета:
«Çуратас е çук?» — тесе ыйтать.
Тухтăрсем — калатпăр: «Идиот çуралĕ —
çавăнпа та çуратма юрамĕ.
Туп арçын, çурат, аçу патне
çӳрĕн вăрттăн — хăпайман енне...»
Мĕн калас-ха, сăмахпа чараймăн,
туйăнсассăн ашшĕпе çеç райăн...

Çав тери хитре пике пăхмашкăн,
айăпĕ çукрах та пуль теп ашшĕн:
Библири Лот хĕрĕ пек, эрехпеле
улталанă, çывăртнă хăйпе пĕрле.

Çав тери маттур, анчах мĕнле качча
хур кăтартĕ çакă хĕрача —
шутласан, çӳç-пуçăм вирелле
чăшăлах тăрать — тĕлĕнмелле.

Эс кăсăкланман-и арăму пирки,
вăл пулман-и асăннă пике пекки?
Ан имен, тĕпче, мана та — шан.
Шантăн-тăк, тĕпчерĕн, — пулăшан.
Çакă ыйтупа тĕпчевлĕ ĕç çырасшăн,
хĕн курансене кăшт пулăшасшăн...»

— «Тухтăр, ан çиллен те, ӳкĕнес теп.
Мĕн калас: курман, илтмен, пĕлместĕп.
Ашшĕ çук ун, тетĕш вилнĕ, инкĕш пур.
Амăшĕ те курнă пулнă хур,
халь çапах юсаннă, ураланнă.
Ĕмĕрĕн сакки ун пултăр анлă,
пурнăçра ман ырă хунеме
мăшăрне юратнă хĕнеме,
хăш чухне пусса выртса тӳпкенĕ,
тепĕр чух ура çинчех ислетнĕ.

Вăл вилсессĕн, иккĕ харăсах —
чут вилмен-мĕн хырăм пăрахса.
Камранне-мĕнне катка пек кинĕ
ял çинче, хĕр чух, тĕрлĕрен илтнĕ —
пĕрмĕшне пăрахнă имĕш избачран,
тепĕрне... лаша пăхаканран.

Хăй курман, хăй акă мĕн вăл курнă:
кӳршĕсен мунчи юнашарах-мĕн пулнă,
хĕрача, вылянă хушăра, çĕрле
пытанать пĕрре мунча çумне.
Кантăкран пăхса илет те вăрттăн,
хытă тĕлĕнсе сикет, ак, кăрттăн,
мĕн курать? Аппа, хĕрĕхрискер,
Вĕшлепе мунча кĕрет тискер.

Усрав ывăл çак ача, Вĕшле;
кĕтĕрех, анчах та мĕн ĕçлет
мунчара, кунта, амăшĕпе?
Малтанах çак йĕксĕк, ашшĕ пек,
плавкине хывса пăрахрĕ, тет.
Çап-çарах çӳрет, тет, лешĕ те,
пуç çуса ăшши пама хатĕрленет.
Мăнтăр шурă купарчи çине
шыв сапса, пĕç хушшине çăвать.

Ывăлĕ ларать-ха çав-çавах
сăнаса ăна таçта, сĕм кĕтесре.
Хĕрача такам, çын, килесрен
пăрăнам кунтан тесе шутланă
самантра шалта... ак мĕн пуçланнă:
кантăк тĕлĕнчех тăрать Вĕшле,
хыттăн ыталанă амăшне —
чуптăваççĕ. Чылайччен çулашнă
хыççăн, акă, кăкăрне хыптарнă.
Лешĕ, итлесе, ĕммешкĕн пуçласан,
«лешĕнчен» аппа тытать ярса.

Курнă хăй çакна Катка, суймасть,
малалла мĕн пулнă — каламасть.
Курманскер унччен кун пеккине,
тĕмсĕлсе кĕтет çак каççене.
Каçĕсем пит ясартан ытла,
вăрттăн хăй те шухăшра пуçлать
пăсăлма, курма аппа вырăнĕнче
пĕр хăйне. Вăт çакăн пек тĕнче.

Каярах, ӳсерехпе, хăй те тӳрех
Вĕшлепе вăйпах мунча кĕрет.

Сăн-питрен те чаплах мар, пӳрен те, —
çакăншăн Каткамăр ан кӳрентĕр, —
пăсăлнă тесе никам та илмесрен,
кӳршĕ ачине чеен сĕре
улталать — леш, пăрахас тесе,
пĕринче пит хыттăн хирĕçсен,
систерет Вĕшленĕн çылăхне,
амăшпе мунча-мĕн кĕнине.

Туй тусассăн, пурнăç майлансассăн,
ватах мар хунемĕш пулнă сассăр:
çав ĕçех-мĕн кинĕ вăрттăн систерет
аппана та: хам куçпа хам куртăм, тет,
вăхăтлă пăрахăр, пăрахаймасан,
курса пĕтĕн кинӳнтен нумай асап.

Пĕринче, тытсан йăмăкĕпе,
уйрăлса тухаççĕ Вĕшлепе.
Çакăн пек юмах Катка инке
панăччĕ ярса — инкек, инкек...»

Эй, алччамуй алпастăсем! Тур-сулу!
Мана çиет чун ыратса касăлу.
Амăш тăван ывăлĕпе «пурнасси» те пур иккен —
мĕн, тилпĕрен çини вĕсем е кикен?
Урăх арçын е хĕрарăм тупайман-и,
пусĕ пулни вĕсен е пулман-и,
пуç пулса та нимĕн шутламан-и,
çынран именмесен, турран хăраман-и?
Е, никам та пĕлмĕ тесе, иртĕхсе,
унччен ыттисемпе сăтăрăнса пĕтсе,
вĕсем патне туйăм юлманран,

е таçта шырасран, юлхавран,
ал айĕнчех тесе йĕкĕрлешнĕ,
яланлăха тачă пĕрлешнĕ?

Илткелеттĕм унччен, ĕненместĕм,
кулса манран, шăл йĕреççĕ пулĕ, теттĕм.
Пĕрре Шупашкартах, тĕп хулара,
кăлтах тĕкрĕ тус-хĕрарăм хулран
чиаттăра спектакль курма кайсан.
«Ма тĕкен-ха вара?» — тесе ыйтрăм хăйса.

— «Çав ватах мар хĕрарăмпа çамрăк ача —
амăшпе ывăлĕ, ют мар пачах,
амăш судра ĕçлет, ачи — инженер.
Патнерех пырар-ха, сăмах чĕнер.
Манăн тантăш-тус-ха çав хĕрарăм.
Хальччен унран нимĕн пытармарăм.
Вăл та манран нимĕн пытарман,
шалта нимле вăрттăнлăх та хăварман.

Калас-ши сана е калас мар-ши,
çилленсе ан ларт та каламаншăн,
меллĕ мар ытла та калама,
ан хисте, пухам-ха халăма.
Упăшки — хыт ĕçекен этем —
импотент, «пăшалсăр», урăхла мĕн тем;
арĕ пур çинчех çак арсăр арăм,
чăннине калап, — хĕрӳ хĕрарăм,
туйăмлă та çепĕç. Ачине
ĕмĕртет вăл сакăр çулччене.
Кăкăрне хыпать ача-арçын,
леш оргазм текеннийĕ амăшин

çавăнтах каять, арçын та кирлĕ мар,
çĕрлесем пуçлать çине те вырттарма.

Малтанах хăрать-ха сисесрен:
çывăрса туйми пулсан, çире
çӳретет — шак хытнă семекне
лектерсе лере, шăпах тĕлне.
Малтанах сисмест леш нимĕскер;
вуникке çитсессĕн, хайхискер
чĕч ĕммешкĕн пăрахать сасартăк,
ашшĕне юна пуçлать çак анчăк.
Амăшне калать: «Тапса кăларса яр —
халĕ ытлашши вăл, кирлĕ мар».

Пытанмасăр тытăнаççĕ «кĕрешме»
çĕрĕ-çĕрĕпе, кăраватьсем ишме,
çамрăк амăшĕпе çамрăк ывăл;
хальчченех çапла — телейлĕ, сывă...»

Çакăн пек пĕлтерчĕ тус-хĕрарăм.
Нимĕн калама та эп хăрарăм.
Хам курман, пăхса тăман, çампа
килĕшес килмест калавçăпа —
çав тери ĕненмелле калать,
пытармаççĕ тет, ыйтма пулать.

Ку та комплекс-мĕн. Ку Эдип комплексĕ.
Авалхи грексен патши, пĕр тулăксăр,
тăван ашшĕне вĕлернĕ, амăшне
арăм тунă, çавăнпа та чир ятне
унăн ячĕпе калаççĕ — пин-пин çул
çак чиртен хăпмашкăн майĕ çук.

Сӑмахран, вӑйпа халь уйӑр ҫаксене —
хуйхӑрса, тунсӑх пусса чунӗсене
тепӗр чирпеле пӗтеҫҫӗ, неврозпа,
ухмаха ереҫҫӗ, хавшаса ӑспа.

Тухтӑр тӗлӗнмест, итлет, итлет.
Эпӗ каламасӑрах, йӑлтах пӗлет
пӗтӗм ӗҫпуҫа, ӑнлантарать вӑл:
ҫук пӗлӳ, чи аялта тӑратпӑр
кӑмӑл-сипетпе, культурӑпа,
ӗҫлеме пӗлместпӗр халӑхпа,
пулӑшас чухне шӑла йӗрсе кулатпӑр,
пытарас чухне урса ҫӑвар каратпӑр.

Саккунпа — арҫын ачасене
амӑшпе выртма мӗн пӗчӗккӗренех
чармалла; ытти хӗрачапа та
ҫывӑрма хушмаҫҫӗ. Саккӑртах чамасӑр
вӑранать иккен чылайӑшӗн ар енӗ.
Ҫак ӗҫе ученӑйсем тӗпченӗ.
Ачаллах ан курччӑрччӗ тесе,
хулара, ав, уйрӑм пӳлӗмсем
парасси йӗркене кӗнӗччӗ аван —
халь ҫав пӗтрӗ, май-шыв ҫуккӑран.

Арҫын ачасен те, хӗратьсенни пек,
комплекс ҫав иртет вӑл; пинӗ-пинӗпе
амӑшпе выртас текеннисем
сивӗнеҫҫӗ вунултта ҫитсен,
хӑйсенчен хӑйсем пуҫлаҫҫӗ вӑтанма —
амӑш куҫӗнчен тараҫҫӗ; пытарма
куҫсене, ак, пикенеҫҫӗ именсе.

Хăйсенчен хăйсем тăраççĕ тĕлĕнсе:
çавă намăса мĕнпе виçес —
амăшпе тăвасшăн пулнă-çке инцест.
Тамаша! Пулать çав пурнăçра —
хывăх-и, мĕн пулнă ăн-пуçра?

Хăтăлнă кусем, турра мухтав.
Хăтăлайманни, пирĕн пата уттар!
Тăрăшăпăр сиплеме, ăнлантарма.
Тульккӑш, кирлĕ мар пиртен ним хăрама.
Хулара çеç мар, ялта та пур-мĕн,
ĕмĕртен пырать иккен çак пурнăç.

Упăшки вилсен е уйăрсан,
икĕ-виçĕ ачапа юлсан,
арсăрскер чăтать-ха чылай хушă —
ял çинче ят каясран хăрушă,
пĕрре çеç эс кӳрт ют арçынна,
арăмĕ çисе ярать сана.
Арăмсăррине çывăхартсан,
ытти тăлăх пĕтерет хăртса —
вĕсене те кирлĕ, юн ыйтать,
конкуренци çатăрлать тытать.
Кĕвĕçсе пуçлать çапма, тапма.
Питĕ йывăр халь арçын тупма.

Вăтăртан иртсен, ачапа мар,
эс ачасăр та харам тавар,
халь хĕрарăм йышлă, шучĕ çук.
Ачаллах ар пулнă çын, Ваçук,
авланасшăн çуннă — амăшне
хĕнесе те пăхнă, авланман,

авланмашкăн майĕ те  пулман:
арсăр вунă çул ытла чăтса,
упрайман çав амăшĕ чыса,
ывăлĕ клуба тухса çĕтсен,
каçсерен анать вĕре çĕлен —
вилнĕ упăшки... Пĕрре çапла
таврăнать те ывăлĕ çулла
амăшне курать урайĕнче —
такама çĕклет пек хăй çинче
çараскер...

Ачи, вунпĕртискер,
çак ĕçе пит ир ăнланнăскер,
вилнĕ ашшĕ ырăнне выртать,
ик алпах йĕвен ярса тытать.
Сиктерет те сиктерет вара
вунă çул ытла... Çĕлен — тарать
çав пĕрремĕш уйăхлă каçах.
Амăш халь сып-сывă, тур каçар.
Ваçук çеç авланаймасть хальччен.
«Эй, авланăп-ха, — тет, — хĕрĕхчен».

Ман пата ялтан кабинета
амăшпе те килнĕччĕ, унтан —
хăй пĕччен те... Амăшĕ кулать:
«Пĕрер çул çӳретĕр, мĕн пулать,
миçе çул, — тет, — упраса усрать
ухмаха тухса эп каясран.
Арăм çĕр те пулĕ тĕнчере,
анне çеç вăл пурĕ те пĕрре».

«Çын сисмест-и, тетĕп, — ял çинче?»
— «Хунеме сисетчĕ виличчен,

вилчĕ те — никам сисекен çук.
Хăш чухне кумма: «Мăнтăр, çап-çут
эсĕ, — тет, — вĕрент-ха, юн вĕрет,
ят сутам та — киленем пĕрре.
Типрĕм-çунтăм, çитрĕм, ак, алла.
Каласам, кама çавăрмалла?
Пысăк йытă туянса элле
пĕрех хут, кумма, киленмелле?
Е пурнар, атя-ха, ик хĕрарăм,
арлă-арăмлă... йăлт антăрарăм».

Калăттăм ăна: «Ман пур Ваçук,
çавăнпа эп мăнтăркка, çап-çут», —
калăттăм, анчах та юрамасть,
ял çинче — хăрушă уйрăмах:
кайĕ ят вара ламран лама;
хам — тем мар, шеллеп ывăлăма.
Ĕçкеле пуçларĕ те, хĕнет
арăмне хĕненĕ пек... хĕне
кайса вилмĕ-ши, теп, нервăпа?
Авлансан, мĕн тăвĕ арăмпа?
Çав кaçах пырса выртсан, ай-уй,
кăшкăрмах тивет вара распуй.
Кинĕ уйрăлса тарать ирех.
Ваçука ярса илет эрех...»

Çапларах пуплерĕ именми
çитмĕле çывхарнă кинеми.
Ĕмĕрте вăл виççĕ качча кайнă.
Иккĕш вилнĕ, виççĕмĕшĕ тарнă.
Ывăлĕ тармасть, ăçта таран
анне ятлă вăрттăн арăмран...

Тухтăрсем — эпир çынна шеллетпĕр,
сăнаса тăратпăр, эмеллетпĕр,
вăрттăнра тытатпăр ят-шывне;
тĕл пулсассăн çавăн йышшине —
ăнлантар, вĕрент, кунта çул тытчăр,
ан хăраччăр, именмесĕр пыччăр.
Пирĕншĕн ку ĕç те чăн пекех,
иртĕхсе тунă ĕç мар, инкек,
инкекрен вара, хуть мĕн кала,
этемме ялан хăтармалла
умăнта кам тăнине пăхмасăр,
йăнăшнă-и-мĕн-и — уямасăр.

Пулăшрăмăр амăшне те, ывăлне те.
Халĕ пурсăмăр та тĕлĕнетпĕр:
чиперех майлашрĕ пурнăç, мур,
кинемин мăнукĕ, кинĕ пур.
Пуринчен телейлĕ çын — Ваçук.
Амăшĕ те... мăнтăр та çап-çут.

«Пиччĕш — йăмăкь» тандема илсессĕн,
«аппăш — шăллĕ» тандем та пур, тессĕм
килетех; халь çеç, чипер ачах,
ывăл, çуратса пĕр тăр ухмах
шăллĕне хăй упăшкийĕ турĕ.
Ма апла хăтланнă — пĕлтĕр турă», —
тетĕп тухтăра, сăмах тăсса.

Шăп ларать. Вара калать тăрса:
«Энгельс çырнă-çке çемье пирки.
Тĕлĕнтермĕш мар вăл кун пекки.
Çуратма анчах тăхтамалла:

юн çывăххипе час çуралать
идиот-асси; çич сыпăкран
кая мар пулсассăн тет аван.

Йĕкĕтсем хăпаççĕ-ха, хĕрсем, ак, хăпаймаççĕ.
Çуратма сайра, ан тив, хăяççĕ
ашшĕнчен, пиччĕшĕнчен е шăллĕнчен —
пурпĕрех ураççĕ тăн çухатиччен.
Мĕн туртать çавтер? Сăлтавĕ пур.
Çав сăлтав вăл çутçанталăк, мур.
Ачаран ытла ачашласа
ӳстерсен, вĕç-хĕрсĕр чуптусан
амăш ывăлне, ашшĕ хĕрне,
инфантиллĕ сексуаллăх тӳррĕнех
яшлăха çак çивчĕшпех çитет,
çавă объектсемшĕн кĕçĕтет —
либидо тени, ясар вулканĕ,
çавăрса илет çынна кал-каллăн,
кисретет, шалтан тăрать тапса, —
çын асать вара, пуç çухатса.

Кирек мĕнĕн пур иккен виçи,
ашшĕ-амăш пултăр ăс хуçи,
çывăха ытла ан ятăр пепкине,
сахалрах вырттартăр хăй çумне;
пĕр-пĕрне те ачисем ан ачашлаччăр,
мĕн чул кирлĕ ăшă — хыт чухлаччăр.
Мĕн пулсан мĕн пулнине мĕн ачаран
вĕрентсен, сиенлĕ мар ара.
Ӳркенмелле мар, ăс памалла.
Ĕç патне ир явăçтармалла.
Ĕçпеле пиçсе ӳсекенсен,

аташма вăхăт çукрах вĕсен.
«Ĕç е спорт, — тет Фрейд, — чун çĕкленӳ,
хăй те сексуаллă киленӳ».

Шкул та тивĕç пулăшма, чиркӳ те.
Телевидени, хаçат, больница, кӳрĕр
усă, сиен çеç халь кăтартатăр-ха,
çутă парăр тĕттĕм халăха.
Халăх халлĕхе сире итлет,
пуç çĕкле, ăсчах, писатель те поэт.
Пĕтĕм халăх туслăн кар тăрсассăн,
пулатех чарма. Чараймасассăн,
чир пусать майпен пур Раççее,
çаврăнать пур халăх ассие,
анраса йӳтет кăна та мар,
ку майпа хăрса ларать тымар.
Хăрнă тымартан шăтаймĕ йывăç,
хăрасси патне çитсен çеç йывăр
хăтармашкăн, çĕнĕрен чĕртме,
парăнмасăр сыв шая çитме.

Çавăнпа та пулар мар наян,
паянах пуçлар ĕçе, паян.
Секрет мар ку, кашни çын яш чух
тертленет вăл калама та çук
çав инцестăн илĕртĕвĕнчен
хăтăласшăн — астарăвĕнчен.
Ăслă, сывă вăрлăхран шăтсан,
хăтăлмашкăн шанчăк пысăк сан.
Вăрлăхĕ — генсем — чаплах пулман,
май та пулмĕ теççĕ хăтăлма.
Ĕçкĕçрен-мĕнрен, ясар йăхран,

тĕрлĕ вăрăран, сутăнчăкран
путлĕ çын ăçтан çуралтăр ĕнтĕ.
Кун пек йăх, чăнах та, çĕттĕр, пĕттĕр.
Çаплине çапла, анчах вĕсем
пĕтереççĕ ыр çыннах, ерсе.

Хутăшнă та сыввипе чирли,
пăхăсăн — çуралнă та темли:
çӳлти турă та асăрхиччен —
хырăм йăтнă пĕртăванĕнчен.
Йăтмасан та, ĕмĕре вăл савнă
пиччĕшне; качча каймашкăн кайнă —
мăшăрне савмасть, фригидлă, сивĕ.
Киленӳсĕр пурнăç мĕн усси вăл.
Аталаннă психосексуаллăх
йăнăш, пăсăк — куртăмăр, йăлт паллă:
çавăнпа фантазийĕ туртать
çывăх юн патнех, ăнах ыйтать;
чир айне пулать психоневротик;
çуралса тулать асси-урочĕ.
Ухмаха ерес патне çитсен,
шут çине илеç диспансерсем...

Çепĕç хĕрупраç! Эс хирĕçлесшĕн,
сивĕ эпĕр унтан мар, теесшĕн,
айăплă — телейсĕр юрату,
çавăскер — чун касмăш, çарату.
Çук! Психоанализа суяймăр:
вăрттăн тăван юн — чунри уявăр...

Эй, алччамуй алпастăсем! Тур-сулу!
Мана çиет чун ыратса касăлу.

Хĕрпе хĕрех «пурнасси» те пур иккен —
мĕн, тилпĕрен çини вĕсем е кикен?
Йĕкĕт-каччă, арçын тавраш тупайман-и,
пуçĕ пулни вĕсен е пулман-и,
пуç пулса та нимĕн шутламан-и?
Çынран именмесен, турран хăраман-и?
Е, никам та пĕлмĕ тесе, иртĕхсе,
унччен ыттисемпе сăтăрăнса пĕтсе,
вĕсем патне туйăм юлманран,
е таçта шырасран, юлхавран,
ал айĕнчех тесе йĕкĕрлешнĕ,
яланлăхах тачă пĕрлешнĕ?

Илткелеттĕм унччен, ĕненместĕм,
кулса манран, шăл йĕреççĕ пулĕ, теттĕм.
Пĕрре ЧувГУ текен çĕрте, пухура
кăлтах тĕкрĕ поэтесса хулран
сăвă пирки доклад итлеме кайсан.
«Ма тĕкен-ха вара?» — тесе ыйтрăм хăйса.

— «Доклад тăваканĕ, çав хĕр, авă,
тепĕр хĕрпе, ак çакăнпа, пит вăр-варрăн
питрĕнсе выртаççĕ пӳлĕмре.
«Мĕн çиеççĕ вăрттăн тĕттĕмре? —
тĕлĕнеттĕмĕр малтан. — Мĕн-ма — выртса?»
Илтĕмĕр çапах та тавçăрса:
поэтессăсем каç-каç «çиеççĕ кукăль».
Секрет мар хĕрсемшĕн ĕнтĕ ку халь.

Пĕринче вăрантăм кайрăм та
ир енне — пĕр хĕрĕ ахлатать
йынăшса яра-яра; çвет çутрăм,

тытнӑ чӗмере тесе шут турӑм,
пытӑм та, ах турӑ, мӗскер куртӑм:
ҫарамас выртаҫҫӗ кута-кутӑн,
«кукӑльне ҫиеҫҫӗ» пӳрнепе,
шаках хытрӑм эп мӗн курнипе.
Ҫав каҫран хама та темӗн пулчӗ —
тӗлӗкре курна пуҫларӗ кучӗ
ҫак докладҫӑн; пӗртте йӑкӑл-якӑл
туйӑнмастчӗҫ икӗ лесбиянка,
пӑхӑсӑн — Лесбос утравӗнче
пикесен пач урӑхла тӗнче.
Пӗр лексессӗн мӗн тессийӗ паллӑ:
«Сафо поэтесса» теҫҫӗ халӗ.
Пӗрре мар ҫав меслетпе йӑпаннӑ
«савнине» темме «Сарпи» ят панӑ.
Кашни каҫ выртаҫҫӗ ҫап-ҫара,
шыв сапса та уйӑраймӑн мӑшӑра.
Кӗрсе ӳкрӗм эпӗ те вута:
мӗн сапса кӑшт сивӗтес кута?»

Калавне вӗҫлерӗ поэтесса.
«Эсӗ ху та сексуалка», — тессӗм
килсе кайрӗ. Тухтӑр, ху шутла:
витерсе кала пӗлет ытла —
ху туймасӑр ҫакӑн пек калаймӑн,
ху курмасӑр курнӑ пек туяймӑн.

Тухтӑр йӑл кулать: «Паллах, паллах;
пур-ши тӗнчере хуть пӗр ухмах —
онанизм мӗнне пӗлмен пӗр сурӑх?
Пӗрре пур пуль, ытлашши ҫук урӑх.
Акӑ тӗслӗх. Ҫамрӑк хӗрача

амӑшпе ҫеҫ пурӑннӑ. Куҫа
курӑнман сӑнсем ӑна пуҫлаҫҫӗ
тӗлӗкре савма, ачашлама, тытаҫҫӗ
кап! ярса тытмашкӑн юраман
ҫӗрсенчен — кутран та кӑкӑртан.
Вӑранса каять, тӑр-тӑр! чӗтрет:
«кукӑлӗ» тӑртаннӑ еплерех!
Кӑшт сӗртӗнсенех, ток ҫапнӑ пек
туртӑнса илет пур ӳт-пӳпе.
Сӗртӗнет тепре... ах, ырӑ, ырӑ...
чӗчӗ пуҫ шак хытӑ... йӗп-йӗпе леш вырӑн...
Ҫавӑрса илет ӑна, ма суйӑп,
халиччен курман хӑватлӑ туйӑм:
урисем чӗтреҫҫӗ, ҫӑвар типнӗ,
пурпӗрех астивнӗҫем астивнӗ
ҫав япалана...

Пӗрре ҫапла
амӑшӗ ярса тытать ҫакна.
Вилес пек ӳкет леш хӑраса,
шухӑшлать: «Эп пӑсӑк хӗрача», —
хыттӑн ӳлесе-йӗрсе ярать.
Амӑшӗ ахӑлтатса кулать:
«Эх, ачамккӑ, эй, ухмах-айван,
эс кӑна тен пулӗ хӑтланан
ҫав ӗҫпе — сан ӳсӗмри пур халӑх
санни пек нушапала нушаллӑ;
ман ӳсӗмрисем те, эпӗ те,
эс каларӗш, пӑсӑк, упӑте —
арҫынна кӗтместпӗр, йӑпататпӑр
хамӑра хамӑр, ырлӑха путатпӑр.
Пурпӗрех каятпӑр харама —

кам чĕлхи хускалĕ хурлама:
пăсăкне кунта ним те курмастпăр,
амапа ама та пурăнатпăр.
Вырт-ха, вĕрентем, эп тĕрмере
приемсем вĕреннĕ тĕрлĕрен:
эпĕ «арçынниччĕ», тусăм — «арăм»,
чиперех меллешрĕм, аптрамарăм,
вырт, сарса хурсам пĕççӳсене,
çывăха ан яр арçынсене».

Хĕрача халь паллă врач, профессор.
Амăшĕ, концлагерьте ним уссăр
вунă çул çухатнăскер («тăшман»),
тăрăшнă хĕрин куçне уçма
ачаран — вак ыйтусем пулман ун,
пур ыйту та уншăн пулнă мăнă.
Пĕр пек арлăх савăшнин — инверсин —
çыншăн ним сиенĕ те çук теççĕ,
пĕр пулать иккен вăл, пĕр иртет,
эс каланă сăвăç-хĕрĕн те
секс объекчĕ арçын мар, хĕрарăм.
Ан хăра. Иртет вăл. Ма хăрарăн?
Сублимаци вăй илсен, хăйех, ак,
ясартан писсе, çырма пуçлать хăватлăн,
пур халне парса, шедевр хыççăн шедевр —
чарăнаççĕ иртĕхме иккĕшĕ те.
Сублимаци вăл энерги (вăй), секс хăватне
творчество йĕрне кĕртсе, хăйне
алхасма-урма чарса-чарса пырса,
чун ĕçне çăмăллатать, туптать ăса,
кăмăла ырăлатать, çĕклет çынна,
пысăк чунлăхшăн хыпса çунать.

Çавăнпа: «Ясар ку хĕр», — тесе
хурар мар нихçан та пĕтерсе.
Яш чухне, кала, кам ясар мар —
васкар мар çиленĕçлĕн сурма.

Акă эс, поэт, мĕн хĕвĕшетĕн,
ăслă пуçупах ӳпкелешетĕн.
арăм, тетĕн, савнисем, апла-капла...
Пăсăлман-ха арăму ытлах,
арçынсен айне кăна выртать-ха,
ак кунта килеççĕ тапхăр-тапхăр —
йытăпа асса пурнакансем,
çулăмлă психоневротиксем.
Чăнлăха хуть йышăн эс, ан йышăн,
çав хĕрсен ӳссех пырать халь йышĕ.
Ашакпа аваллăхра хĕрарăм
пурăннă, тет Апулей, вуларăм,
халь пурнать вунçиччĕри чипер
«Чарли» ятлă йытă аçипе
пĕр çул мар, шăпах тăвата çул,
ĕнтĕ, ак, хăпма та халĕ çук,
тухтăртан, тет, кирлĕ пулăшу —
каччăпа çӳреслĕ тунă шут.
Çӳрĕччĕ — каччи патне туртмасть,
çӳрессийĕ ку майпа пулмасть.
«Чарли» — дог. Кĕрет пăри пит тарăн,
ухмаха ерсе кайма пултарăн
хăнăхман пуçпа ăна утлантарсан,
хăнăхсан — пыратăн урнăçем урса.
Мĕн хăрамалла: юлмасть-мĕн хырăм —
арçынпа пĕр каç выртсан та хăрăн...»

Тухтăр кулса илчĕ: «Йĕрĕнместни?
Манăн ирĕксĕр пĕр çӳçенмесĕр
кашнинех итлемелле вăрах.
Ылханмастни? Ан ылхан. Çырлах.
Эс — поэт. Тĕнче хуйхи-суйхийĕ
сан чунна касать. Христос эс. Килнĕ
çĕр çине кашни чуна çутма,
хĕрхенме, савма та юратма,
çылăхран çăлма — апла пулсан,
турă пек таса пулмалла сан.
Ма кулатăн?»

— «Мĕншĕн кулас мар?
Турă тен... Атя-ха астăвар:
Библире чулпа çапса вĕлернĕ
çав ĕçпе тытсан, каярахпа пĕтернĕ
йăх-яха вутра сăваплă инквизици.
Халĕ, ак, хуть лектĕр çитмĕл çиччĕ,
вырăнтах çапса пăрахас чух
манăн ылханма та право çук.
Эсĕ сыватма çеç илнĕ право.
Çавă правăна сана кам панă?»

«Мĕн теес? Цивилизаци пачĕ,
гуманизм, плюрализм, демократи.
Юрамасть урмашкăн... вĕсене юрать.
Мĕн чул илтнĕ пуль эп çак юрра.
Сăвăшăн хăш чух хупса хураççĕ
е кунта илсе килсе яраççĕ.
Халăхран кулакана, сутакана
ырламаççĕ мĕн тесе кăна...»

— «Тӗрӗс, тухтӑр, тӗрӗс! Сиксе тӑтӑм,
куртӑн-и, ваштах. Ҫав путсӗр тытӑм
арканас пек туйӑнать тинех.
Курӑпӑр-ши, ҫук-ши, пӗтнине
ҫак ылханлӑ вӑхӑт?! Ылханап
халӑхран кулакана кӑна:
халӑха сутакана, ӑна йалт маннӑ
пӑрлӑ чунсене, ирсӗрлесе ят янӑ
йӗксӗк йӑх-яха, улпутсене,
пысӑка вӗреннӗ йытсене.
Халӑх ячӗпе ят илнӗ —
Мускавра реххет курса ҫӳренӗ,
хӳтерсе ярсассӑн калла килнӗ,
пурпӗрех вил чунлӑ, пӑх чӗреллӗ,
хырӑмӗсем параппан пек, ахтурах,
ырӑ турӑ, питлемешкӗн хал парах,
ҫӗр кӑшласа йӑлӑнатӑп,
куҫҫуль тӑкса парне кӳретӗп —
хӗрӗх те пӗр пӗрчӗ шӑрҫа сапатӑп,
куймак татса пӑрахап рет-ретӗн.
Ҫак хӗрӗх те пӗр пӗрчӗ шӑрҫана
кам хӑҫан та хӑҫан шыраса тупса,
пӗр ҫӗре пуҫтарӗ ҫуна-ҫуна,
ярӑмлӗ те ярӗ мӑйне ҫакса,
вара туйра тӑпӑр-тӑпӑр! ташлӗ —
ҫавӑн чух тин манӑн ҫакӑ ылхан
пӑрахӑҫ пултӑр, сӳнтӗр, йыт турташшӗ!

Аҫа чулӗ ҫӗре каять, аҫа ҫапсан,
ҫич ҫултан тин каялла тухать-мӗн, путсӗр,
ҫакӑн пекех манӑн ылхан та
ҫичӗ ҫулсӑр ҫын ҫине ан тухтӑр,

çичĕ çултан çиттĕр, вырхантăр.
Эй, турă, кĕллĕм вĕçне ан хăвар.
Ыран та мар ĕнтĕ, паян та мар,
халь те пулин халех чик хăлхуна —
манкурт çине çитер çак ылхана.
Каçхине тенийĕ каçах пултăр,
ирхине тени те ирех пултăр.
Чунтан тархаслатăп, туррăм, сана:
ылханнă ылханăм вырăнлă пултăр.
Хура тăмсем ӳктĕр пиçен çине.
Хаяр ылхан ӳктĕр манкурт çине.

Тăван чĕлхерен пистерсе ӳстернĕ
ачаш ачу — ни чăваш мар, ни вырăс мар;
система теттĕр те-ха, система,
система мар, ачуна ху ăс пар.
Ылханап: ар пулса çитиччен аркантăр,
каялла кайтăр пурнăçĕ, мала ан кайтăр.
Кахал пултăр ачу, ĕçке ярăнтăр,
нимĕне ан вĕренейтĕр, ясара парăнтăр.
Çула тухсан çул хаярĕ пӳлсе хутăр,
киле килсен кил хаярĕ каçăртса хутăр.
Эй, турă, ĕçес шывĕнчен тăррине ил,
çиес çиминчен тутлăхне ил.
Мĕн ĕçни-çини усса ан пытăр,
кĕтмен-туман çĕртен тытамак тыттăр,
алли-урине ийе чăмласа кайтăр,
хăйне ăншăртлă тул хаярĕ çаптăр,
синкер айне пултăр — чунсăр йытă,
ураланаймасăр мерччесе вырттăр.
Турăран ырлăх, этемрен сиплĕх пĕрре те
ан курайтăрах вăл, çавă «паттăр»,

вилмесĕрех йыт сассипе çӳретĕр,
хăруш мĕлке пулса хăраттăр.
Ачашкертен çур ăш сăмах ан илтейĕр,
çур пуслăх усă ан курайăр,
сире йытта хĕненĕ пек хĕнейтĕр,
пуçăрсене çапса çурайтăр,
вилме выртсан пĕр сыпкăм шыв ан патăр,
вилсен пырса тăпрăр çине ан таптатăр...

Турă парса, пӳлĕх пӳрнипе —
тăван чĕлхемĕртен йĕрĕнекен,
тăван халăхăмăртан кулакан
эсир ачашласа ӳстернĕ хĕр-пике
çавра кутне алла çӳрет иккен,
йыт çавăтса çӳрет — çĕрçăтман;
ылханап: хĕр пуççăн хырăм йăттăр,
хырăмĕех ӳстĕр кӳпшек-мăнтăр.
Каяс каччине ачаллă кайтăр,
туйла та мар, вăйпа кайтăр.
Упăшки эрехе тăрăнтăр,
пурăнăçĕ çĕр тĕрлĕ пăрăнтăр,
кăвакартман пит-куçпа ан çӳреттĕр,
хĕрĕре пĕрехмай тӳпелетĕр,
халне пĕтерсе шара кĕрттĕр:
«Вилеп, вилеп!» — тетĕр ачаш хĕрĕр.
Юхха илентĕр ăна, вутлă усал ертĕр,
чупман арçынĕ ан юлтăр,
çулла-çуркунне те, кĕркунне-хĕлле те
пĕрин панчен теприн патне юрттăр,
уйăхран-пĕр хырăм пăрахтăр,
типпи çулăхса типĕтсе ятăр.
Пĕвĕ хурама хуппи пек пĕрĕнтĕр,

сăнĕнчен шуйттан та йĕрĕнтĕр,
урамра ула йытă хăраса тартăр;
Атăлта шапа сасси мар,
хулара анчăк сасси мар,
хĕрĕрĕн кайнă ячĕ янратăр.
Хĕрĕр те ĕçкĕ ăшне путтăр,
тăнсăр-пуçсăр сурăх пултăр,
нимĕне те ан вĕренейтĕр,
хăвăра йӳçĕ парса вĕлертĕр...

Эй, çĕр çăтти, пурнăç, самана,
çăт манкурт ывăл-хĕр çуратакана!
Çĕр çăтса анса кай вĕсене,
аça çапса çунтар.
Касса пăрах çав çăпан-кĕсене,
ĕрчемешкĕн ан пар.
...Сирĕлĕр те-ха пĕрре, вăхăт çитĕ те-ха,
тĕп те пулăр, ак. Ылхан сире, ылхан —
хуть хăçан та — çĕршер хут, пин хут.
Каçхи эппин каçах, ирхи ирех пултăр,
ылханнă ылханăм вырăнлă пултăр.
Тьху-тьху! Тьху-тьху! Тьфу!

Чирĕ чирпе ĕнтĕ, хуйхи хуйхăпа —
чăвашран хĕн-терт вăл хăçан хăпать?
Темле чир те, темле инкек те пур,
çавăнпа та ĕнтĕ «турă» тетпĕр,
турăран килекен япалашăн,
çав инкеке сирсе ярайманшăн
епле ĕнтĕ хăйса ылханăн?
Намăс тени, совесть, пур-и манăн?
Ăнăçлă калаçрăмăр, тус, сыв пул,

психоневролог та килчĕ пуль.
Тав тăватăп турра: йăнăш кĕрсе,
çакăн чул япала тухрăм пĕлсе.
Тав тăватăп сана, тухтăр, ырă пултăн,
кӳтнĕ чун патнелле турăн утăм,
ĕнтĕ психоневролог та кирлĕ мар,
психотерапевт та, тур хăтар,
ытлашши пуль халĕ, çакăн хыççăн;
пушă куçлă вилĕм, ан пăх выççăн,
вилмен-ха эп, вилмен; тен, вилмĕп-ха;
тен, çав пурнăç тенин майне-шывне
чарараннах ярса илĕп-ха,
усалсем астарнă хуньăм хĕрне,
çунтарса кĕл тунă кĕнекене,
сӳнсе ларас патне çитнĕ сывлăха
турă шеллĕ тетĕп, сыхлĕ-ха,
çĕнĕрен çуралнăн амаланса
кайĕç аталанса-çунатланса.
Никама та, чунран калас-тăк,
усал сунман, сунмăп, сунмастăп.
Халăхăма рак шыççи пек çиекен
манкурта çеç сунап инкек-сиен.
Сăнна-пуçна курас килмест, хальхи Урасмет,
чун ыратса касăлать ман, вилес килет
сана курсан, кăмăл пăтранать,
тĕнче пĕтсе килнĕн туйăнать...

### 3.

Тата ăçта кайса пăхас? Шур çуртăн
вестибюльне кĕреп. Пӳлет çула
дежурнăй: «Мĕн ĕçпеччĕ, — тет, — мĕн шутлă?
Тыт трубка, ыйт кĕртме — шăнкăравла».

Петров кěртмерě. Вилěмсěр тăватăп
эп ун ятне халь çак поэмăра
усал çав ĕçшĕн. Тухрăм обкомран —
виле. Аран ура çинче тăратăп.

«Юрать тытса хупмастпăр-ха, а эсě
ыйтан кěнекӳне хӳтěлеме,
лăплан та, — терě секретарь, — чěнмесěр
çӳре, шăплан, тав ту пěр этеме».

«Этем» — Савельев капитан — çӳрерě
хыçран чылай, киле те пычĕ-ха, —
КГБран, чăваш ачи, чěреллě
çынах пек туйăнчě: «Пире çăхав

параканни — тусу, тепри — ун тусě, —
тесе кăларчě çăлтăрлă коньяк, —
поэзири сан улăпла уттусăр
çăхав çырмастчě çавă ик маньяк.

Кас çăкăр, çăкру пур-и? Ак — консервă.
Сухан пулсан юратчě. Калаçар.
«Эс ан хăра» теместěп, влаç вăл, çтервă,
паян капла, ыран апла... Каçар,

чееленместěп, куçунтан калатăп:
вуларăмăр — хăватлă сăвăсем.
Ан кул, ма ěненмесěр йăл кулатăн?
Асра та юлчěç. Акă, итлесем».

Виç сăвă шăрантарчě пěр пăхмасăр!
Ыйтсам, мěн кирлě, тетěп, пуçлăхна?

«Совет влаçне ма юратмастăн, ма сан
сăввусенче хура тĕссем кăна?»

— «Атте ман «ларнă», тӳснĕ вăл репресси
так ахальтен пĕр паккăça пула.
Халь те пулин çын хушшине кĕртмеççĕ —
ни ирĕк, ни тĕрме, пурнать çапла.

Ялтах хама та ачаллах пуçларĕç
касмăклама — шкултан темиçе хут
кăларса çапнă. Куç уçма памарĕç.
Ялта курман эп канлĕх пĕр çеккунт.

Комсомолсем секретаре лартсассăн,
колхоз пуçлăхĕпе партком çынни
хĕссе кăларчĕç, ĕçукçи памасăр —
йăлт паллă мĕншĕнни те камшăнни.

Аттешĕн. Вăл концлагерьте пĕтменшĕн.
Тавăрасран шикленнĕрен хытах.
Çапла. Эп ун чухнех-ха, мур илесшĕ,
çырса тăраттăм тĕрлĕ хаçата.

Эп çавăнпа калап: ку влаç пĕтет, теп,
мĕн-ма тесен, пулман ун тăтăрха,
мĕн-ма тесен, суя, утопи, терт те
асап кăна кӳрет вăл халăха».

— «ГУЛАГ» вуланă эсĕ!» «Виç томне те...»
— «Тата мĕн-мĕн?» «Пурне те, мĕн май пур».
— «Сана персе прахма пулать». «Тĕлле те
кĕрс! çеç тутар». — «Шӳтлеп... Ăçта майру?»

«Пĕлен вĕт... Уйрăлтăм. Ан ыйт, тархасшăн,
тăвар ан сап суран çине, ăнлан».
— «Сана Язаров та персе прахасшăн».
«Пăрахтăр. Хăй те пĕтĕ час, ăнман.

Пĕри те ăнланмастăр-ха, туймастăр,
хуранти пек час пуçлĕ вĕреме
Раççей, Союз, ак, кĕтмĕпĕр нумай та, —
туять, сисет, шанап эп чĕреме.

Нихçан улталамасть вăл. Вăхăт çитĕ».
— «Поэт чĕри... Апла-тăк тыт, ĕçер.
Куран пуль, нимсĕр эп, çырмастăп ним те.
Эп... малалла ямастăп ку ĕçе...»

Пĕрер черкке ĕçсен, тухса çухалчĕ.
Коньякĕ ларчĕ вунă çул, хальччен.
Çын тытрĕ сăмахне, ик тус-çăхавçă
эп пуршăн хурланаççĕ паянччен.

Эп пур! Эп пур! Татах та пулăп эпĕ!
Ӳт çухалсан та пулăп, айвансем.
Кулянăр çăвĕпе те, хĕлĕпе те,
мĕн ĕмĕрне кулянăр, эрленсе.

Кулянăр, куймак çийĕр. Эпĕ кайăп,
ӳтпе вилсе выртсан та, малалла.
Пуласлăхри телей — кăварлă кайăк —
вĕçсе ялан йăпатĕ кăмăла.

Малта — пуласлăх пур. Халь — çук. Халь чиксĕр
кĕртесшĕн мар пуласлăха мана.

Поэзи пултăр Саврăшпуç ачисĕр
тесе урать ят-сумлă тăмана.

Анчах ун пек пулмасть, пулмасть, Ефимов.
Ху шăтăкна ху анса кай, пичче.
Эп юншăн мар, каçарăп, эпĕ тивмĕп,
эп халлĕхе пурнап «сакайĕнче».

Подпольщик эп поэзире. Хӳтернĕ
мана саккунлă, чаплă ушкăнран,
анчах эс мар, эп чун патне çитерĕп
тĕп чăнлăха, поэзие, анра.

Малтан, чăн та, самантлăх анăрарăм.
Туртса çапаççĕ хытă питĕрех.
Тӳсме вĕреннĕ пуçĕ янаварăн —
кĕтмен çĕртен пек пулчĕ пурпĕрех.

Пуçра сасартăк чан кĕрлерĕ кайрĕ.
Шарт! сиктерсе, тем татăлчĕ чунра.
Пĕрремĕш хут эп, шалкăм çапнă майлă,
чĕлхе çĕтсе, шак хытрăм пурнăçра.

Сăмах та çавăрса эп калаймарăм.
Вут пĕрĕхрĕ кӳреннĕ пит-куçран.
Чăтма çук мăшкăл... Çухалса эп кайрăм.
Пăхса эп тăтăм тайăлнăн ăсран.

Тăна кĕрсессĕн, кӳренӳ те çилĕ
хăсас килтерчĕç, килчĕç тăвăлса.
Йĕклентĕм эп хам чунăма хам çинĕн,
яш чунăмпа хăруш ултав курса.

Ăнпуç пăтранчĕ, чунăм иккĕленчĕ:
пĕр ырă çын та çук пуль тĕнчере —
чи çывăх тус, сутса, мана пĕтерчĕ,
тĕппе пĕтерчĕ, хăй тус пек çӳрет.

Вăл халь те тус пекех. Парать вăл алă.
Çул хупă ман. Чăтатăп. Пуç сĕлтеп.
Хăтăласси пулмасть, йалт пĕтессийĕм паллă.
Паян-и е ыран, пурĕпĕрех пĕтеп.

Туса шанса, хăрушă йăнăш турăм,
тата хăрушăрах — парса чуна.
Пĕтмесĕр каçармасть номенклатура, —
талантсăр кĕвĕç чун, çĕлен, шăна.

Пĕр япала çеç татăклă та паллă:
çĕкленесси пулмасть, картларĕç кунçула —
танатара эп. Тăратмашкăн алă,
сăмах чĕнмешкĕн чарнă: ан шарла.

Çырмашкăн та чарасшăн — чараймаççĕ,
касса кăлараймаççĕ чĕрене.
Пичетленме чарса, панкрут тăвасшăн,
хуллен чавса чикесшĕн чĕрĕлле.

Анчах... анчах пур çыпçăнчăк пĕр шухăш,
сирмешкĕн тăрăшмастăп эп ăна:
эп тĕрĕс утнă, тĕрĕсе эп тухăп,
чун сивĕнсе типмен-ха, пурăнап.

Çав шухăш чунăма тивет те вăйлăн,
асамлă ун пĕлтерĕшĕ веçех,

унпа чӗре — хӑлат ман, чунӑм — кӑйкӑр,
каллех ҫунатлӑ эп, ҫӳлте вӗҫеп!

Яла утӑ ҫулма тухса каятӑп.
Ҫывӑх ҫӗр мар пирки, эпир киле
ҫулталӑкне пӗр-иккӗ ҫеҫ хӑятпӑр
(тӑватҫӗр ҫухрӑма!) кайса килме.

Ах, Саврӑшпуҫ! Германире ҫӳрерӗм,
Чехра та пултӑм, пултӑм Польшӑра.
Словакире хӗмленчӗ яш чӗремӗм.
Сан пек ҫӗклекенни пулман, ҫукрах.

Тӗлӗнмелле ҫӗрсем пур — пур Россия,
Эстони, Латви, Ҫӗпӗр; вӗҫ-хӗрне
курма ҫук тинӗс, хир... Анчах та ҫитӗҫ
ӑҫтан Саврӑшьенти Саврӑшпуҫне?!

Пырса кӗретӗп. Ҫурчӗсем хуралнӑ.
Ҫивиттисем шупкалнӑ, сӑрламан.
Машшин ҫӑрса пӗтернӗрен, урамӗ,
темле савса пӑхсан та, урам мар.

Лупашкисем тата! Ах, маччеснайӑм,
нихҫан типми выртаҫҫӗ кӳлленсе.
Хӑшпӗринчен аран каҫса эп кайрӑм,
каҫсассӑн тӑтӑм хытӑ тӗлӗнсе.

Ялйышӑм хӑй епле каҫса ҫӳрет-ши?
Выльӑхӗсем, ват ҫын, ачи-пӑчи
влаҫри кахал пӗр йӗксӗк хыт чӗрешӗн
нуша тӳсеҫҫӗ... Турҫӑм, ҫапӗҫ-и

е çапмĕç-и çав куккуна, Тамара,
вăшт! кăларса ăш вырăнтан пĕрре?
Ма урăх çын хальччен ялйыш тупмарĕ?
Мĕн, çав ухмах кăна-и тĕнчере?

Ма урама тасаттармасть? Çӳп-çапă,
вут-шанкă, пĕрене урам тулли!
Ма тикĕслеттермест вара? Йăлт çакă
ун ĕçĕ. Çук, ял мар ку, йыт кулли!

Ку урампа çын чупма мар, йыт чупмĕ.
Каллех калап, савса утас килмест.
Эх, ăнтăлчĕ, эх, çунчĕ тунсăх чунăм,
ак, çитрĕм те — мĕн тĕслĕ, ялăм, эс.

Укăлчара кăна пĕр йыт хамлатрĕ.
Кайран чĕнмерĕ тĕннĕ йыт-качка —
ытла та шăрăх çав... Кăшт сулхăнлатĕ
е çук çанталăк ут çинче каçпа?

Пĕрех... Эп çитрĕм ĕнтĕ... Хирĕç тухрĕ
аннеçĕм шăппăн: «Кин килмери?» — тет.
— «Килмерĕ, — тетĕп. «Утрăн миçе çухрăм
çуран?» — тет. — «Тăххăр, — теп, — тем мар, иртет».

«Аçу, — тет, — мунчара-ха. Çиччĕн кайрĕç,
пĕрремĕш кун, леçник валли çулма.
Вĕсем таврăниччен аçу янккарĕ —
хăвах пĕлен, ах, маçтăр çапăнма!

Ак, çикеле те, эс те тух. Ыр ку ĕç.
Вĕсем, шăллусемпе кинсем, кайран,

ĕне сусан, кил пуçтарсан, ыр курĕç.
Аçу вăл ватăлчĕ, ута кайман.

Суранĕсем сураççĕ... ху пĕлетĕн...
Пĕччен, ав, Хветĕр, утине çĕртет.
Юрать-ха, эсĕр ут çине килетĕр
кашни çулах, пĕр çын пек, çичсĕр те.

Мĕн пурăнни пĕччен, пĕччен, камалсăр —
ни ачăпчи, ни арăмĕ... енчен
ӳксен чирпе, выртсассăн тăраймасăр,
кам сыпкăм шыв тыттарĕ аллинчен?

Пĕччен çынран мĕскĕнреххи пулман та,
пулмасть те çĕр çинче, пĕлен хăвах,
сан ĕç-пуçу ку тĕлĕшпе аван-тăр?
Ак, çи те, ĕç те, тух-çке хăвăртрах.

Эх, пурăнăç, пурăнăç... Аçу — аçуччĕ.
Чăн кашкăр. Ăмăрткайăк. Пăхаттир!
Вутра та çунчĕ, тĕрмере те çĕрчĕ,
пĕрех пурнать — пит аваймасть-ха чир.

Анчах та кивелет — çулсем пусаççĕ.
Пулин, мĕн тăвăн, эпĕр кăна мар,
çынсем те кĕрешеççĕ — çапăçаççĕ
ватлăхпала. Пĕлетпĕр. Мĕн тăвар?

Ачапчапа кам савăннă-хурланнă,
вăл куртăрах ун ырлăх-уссине.
Мĕн чухлĕ пулĕ эп: «Тур пилĕ антăр, —
тесе кĕл тунă, — пуçăрсем çине».

Тăвата çул пурнатăр, туйăнмасть-и
майру хулăмланниййĕ халĕ те?
Ма шарламастăн? ӳкрĕ е юлмасть-и?»
— «Юлмасть. Ай-хай та çук-тăр май пĕртте.

Кусса-акса пĕтернĕ пулмалла вăл,
пит ир пуçланă — куснă пиччĕшпе...»
«Ай-яй-я-яй! Шуйттан мелкиййĕ, явăл,
эсрел! Хăтланнă ав мĕнле ĕçпе!

Ун пек пĕр ĕç кунта та вăрçă хыççăн
пулсаччĕ — ĕçкĕç Петĕрпе Клавти
яла култарнăччĕ. Фронтран леш выççăн
таврăнайса та — ернĕ çакă чир.

Ачи сывах, ав, тĕрĕс те, тĕкел те.
Ĕçме çеç хыт ĕçет, ытти — сывах;
ачи-пăчи те пур, пурте йĕркеллĕ
Санюкăн — катăк мар, турра тавах».

— «Илтменччĕ эп куна». «Шавланă, маннă.
Çапла вăл ял çăварĕ. Кӳршĕ шав:
Мишшан миçе-ха ĕнтĕ, мĕн çуралнă
юлашкинчен?» — тесе ыйтать курсан.

«Хĕр» терĕм пĕринче, тепрехинче те
«хĕр» терĕм, так-штă халĕ иккĕн тан
сан хĕр ӳсет — эсир чылай инçе те,
усал хыпар аякрах мар кунтан,

час çитĕ... Луччă хальтерех сармастни
ăна — чĕрем çирĕпрех чух: «Распуй —

чупса аптратрĕ, — те тӳрех, супмасăр, —
калла хут уйăрттартăмăр», — те, суй.

Халь ун пекки килрен. Халь вĕлереççĕ
амăшсене, ашшĕсене, ачам.
Çапса туса пурăннипе мĕн речĕ,
мĕн майĕ пулнă тĕнчере, хăçан?

Капла та майĕ çук кинпе, апла та.
Ун пеккине çĕр çăтнă халапра.
Пурăнăçра çăтман. Эп халаплатăп
ак мĕнлерех: эс хăтăл çав йăхран.

Хăрушă йăх вăл. Пӳлĕхе тав ту эс:
юрать-ха, хĕсĕр юлнă, çуратман.
Кайсассăнах, тӳрех, тиенсе тух эс,
çав паккăçа куçу ан куртăр сан.

Ним те ан ил, илсен хыçран вăл çӳрĕ
выçтахланса — кӳрес тесе калла
пур янтă пурлăха, вĕсем пит ӳрĕк,
ун пеккисем, пурнаççĕ сăхăлла.

Урса-урса, пуçна ан çитĕр аскăн...
Ĕç ăнăçман Тамарăн та пĕртте.
Ăна илнĕ пулсан та пӳт пулмастчĕ —
ĕçке ерсе вăл вилнĕ Çĕпĕрте.

Йывăрлăха тем час халь парăнаççĕ.
Ялта та питĕ ĕçекен нумай.
Лява ĕçет. Çимун ĕçет. Пурнаççĕ...
Çав пурăнни-и вăл? Пурăнни мар.

Ляви — кăçал-ши — çакăнса та пăхрĕ.
Циссе, ват амăшĕ лупас айне
чупса тухман пулсан, кăнса шăпах-тăр
выртатчĕ вăл — ним тăвайман енне.

Арăмĕ те ĕçет. Тата... чупать-мĕн —
савнисене килнех илсе килет.
Пĕр намăс-симĕсĕ те çук — çухатнă.
Шыçмак та мăнтăр хăй. Ляви — скелет.

Çимун... Ку ĕнтĕ Ляваран та мĕскĕн.
Кун арăмĕ, Çĕн Аксăва тарса
пурнать-пурнать те, Çимунран темешкĕн
килсе курнать — ача тăвать. Асать.

Ик тантăшу та, сан пекех, талансăр,
пĕрин те ăрăскалĕ çук вĕсен,
анчах... камалсăр мар, — ача тумасăр
ят кăларман чипер арăмĕсем.

Çамрăксене ятлатпăр-ха. Каяннăй,
мĕн хăтланмаççĕ пуль ватсупнăсем!
Ляван ик аккăшĕ качча каяççĕ,
ик карчăк тес пулать, çул сиктерсе.

Вăл та çитмест, Маруçĕ халь вĕреннĕ
кӳрше, Мулеев Элекçей патне.
Арçын тесе, айкашрĕ чул чĕреллĕн —
аркатрĕ чип-чипер ыр çемьене.

Ахтур-туртур! Хуть перĕн эс, хуть çакăн,
тĕнче юрлать çав нĕрсĕр пĕр юррах —

çĕкленчĕ турă çуккипе йалт çакă,
пĕтернĕ иртнĕ ĕмĕртех турра,

вĕлернĕ...» — «Ницше! Чим-ха, чим, аннеçĕм,
мĕн калаçатăн эс, ăçтан, камран,
хăçан илтсе çакна унпа йӳнеçрĕн?»
«Ăçта, камран, хăçан-и? Пĕр çынран —

çулпуç хытсан, амнисти турĕç; кĕчĕ
килне таврăнакан пĕр çулçӳрен,
каларĕ: «Тĕрĕс пурнăçа пĕтерчĕç
антихрист Ленин, Сталин çынçиен».

Çамрăкскере ним айăпсăрах лартнă.
Священник пулнă вăл Пӳлеркӳлте.
Ăнлантăм е ăнланаймарăм латлă:
каплах пырсан, иккен, тĕнче пĕтет.

Чаракан çук. Мĕн хăтлансан та — ирĕк —
юрать: вăрла, çарат, вĕлер те кус.
Раман вĕлерчĕ амăшне, ав. Пирĕн
хыçал касри. Хупман. Ăçта саккун?

Дояркăра хырăм йăтса çуратнă
партком Кеверкирен Сăрнай Нини
сып-сыв пепкех, анчах тазра путарнă.
Хупман. Килтех çӳрет. Ăнлантăн-и?

Пĕр кӳршĕ ял çынни кунта çаратрĕ
халь çеç-ха, иртнĕ эрнере, лавкка.
Хупмаççĕ. Ярса тытнă та, çураçнă.
Никам та кулянмасть, пурте лăпках.

Ăçта кайса кĕрес капла, кала-ха?
Кама кайса калас? Кулаççĕ çех...»
— «Анне, пиртен килмест ку, лăпăл-лапăл
саманара этем пĕтет вуççех.

Унччен те, кăшт йĕрке пур чух та, турă
çынна пăрахнă е çынни — ăна.
Пин çуллăх пынă çирĕп диктатура —
тур ирĕкĕ — арканнă тахçанах.

Пуçланнă çыннăн Ирĕклĕх Асапĕ.
Тĕнче çинчи саккун — çĕрти тусан.
Апла-тăк ху саккун ту, пур ăса та
ху тыт — çӳлте те тӳрлĕх çук пулсан.

Çĕртисемпе ылмашăннă, арпашнă
турран килен сипет халалĕсем,
ыр енлĕх... Ĕнтĕ кашни-пĕр аташнă
хăй майлă, супнă хăйшĕн хĕртĕнсе.

Пĕрпĕтĕм аслă тĕрĕслĕх арканнă,
черкке ванса арканнăн, пин пая.
Пуçланнă вак ăс вĕрентӳ: хуть камăн
хуть те кама хирме май пур паян.

Леш те тӳре, ку та тӳре. Ятлаççĕ
пĕрне-пĕри, шыраççĕ айăпне.
Çук çакă ирĕклĕхĕн пӳт, çук влаçĕ,
кĕтет сăлтавсăр айăп кашнине.

Пит йывăр ку çĕклем, ку тивĕç çыншăн —
чĕмрен йăлт кайиччен пĕр вырăнта

пӗччен чупни. Чӗмрен кайсан та, чуншӑн
нимскер пайти-ырри те ҫук унта.

Каллех ҫӳлти тӳре, патша-и кирлӗ?
Пӑрахрӑмӑр та сыхсӑр мӑнланса,
айванскерсем, ҫӗнрен, ак, — тур еккиллӗ,
ҫӗнрен Хуҫа шыратпӑр ӑнтӑлса.

Кунтах. Ҫӗртех. Тӳпере мар. Хӑтартӑр
пире вӑл ҫак ылханлӑ ирӗкрен,
чун-совеҫӗн таса ҫулне кӑтарттӑр:
«Ку, — тетӗр, — хамӑр ҫын, ак ку — лерен».

Ан тив, эпир, турра ӗненмесен те,
пурте, шанса, ӑна ҫеҫ пуҫҫапар.
Хуҫа! Хуҫа! Эпир кӗтӳ, эс ӗнтӗ
кӗтӳҫӗ — ҫӗрти турӑ — пул ҫампа.

Эс пул Плеханов, Ленин, Гитлер, Сталин...
Ҫак Достоевскийӗн «шуйттанӗсем»
турра вӗлернӗ; пӗрре мар ӑсталӗҫ
малашлӑхра та тамӑк-тӑмӑксем.

Анне, ӑнлантӑн-и?» «Аван ӑнлантӑм.
Апай! мӗн пулчӗ ку кайри шӑла,
туртать кӑна... ачам, итле, хӑлатӑм,
ҫакна тулта питех эс ан шавла.

Тухах эппин. Ак майккӑ, акӑ труҫҫӗ.
Аҫу кайса ӳкмен-и, пӑхкала...»
Капла чуна уҫманччӗ кутӑруҫӑн —
анне ӑшши ҫӗклерӗ кӑмӑла.

Ах, тăван кил! Кăҫал-ха, ун чух мар-ха,
эп ҫĕрулми кайсаччĕ кăларма.
Ĕҫ вĕҫленсен, анне ҫӳрет, чухларăм,
кĕҫ-вĕҫ вĕҫессĕн. Мĕншĕн? Каламасть.

Татах чухларăм: ун ҫуралнă кунĕ!
Ĕҫри айкашура, ялта, пачах
эп астуман. Астурăм та, саккунлăн
вут-шанкă йăтса кĕтĕм ҫавăнтах.

Шыв кӳртрĕм. Хурана ҫуса тасатрăм.
Анне чуста ҫăрать маттур кин пек.
Урай сĕрсе тарларăм та пĕр сăтрăм,
вут хутрăм — чунăм тулчĕ кĕвĕпе.

Анне вутти шăт-шат! тăвать кăмакара.
Мĕн-ма, анне, вутту апла тăвать ара?
Миҫемĕш ҫул — ҫуралнă кунунта
ҫич кинӳнтен пĕри те ҫук кунта.

Паян та, акă, пĕчченех ҫӳрен —
ху валли ху эс кукăль пĕҫерен
чăлт шурă ҫăнăхран, «вышши сортран»,
хăйма та ҫăмарта ярса ҫăран:

чĕр ҫĕрулми кукли те панулми кукли
мăнукăмсемшĕн, тетĕн, чи тутли,
пĕр кинĕм те ҫав кукăле хавас,
вăл (Нина кин) кĕрет кунта час-час,

халь ҫеҫ, ак, кĕрсе тухрĕ-ха: «Анне,
мĕнле-ха сывлăху? Килетпĕр каҫ енне?!» —

тесе хăварчĕ те вĕçтерчĕ килнелле.
Хăй килĕнче сахал-и ĕç элле?

Килти — сума сумасть. Таçта чупать,
килнĕренпе каясшăн çапăçать
Тимĕрпеле тухса хăйсен енне...
Сапăр тăвать, тӳсет, чăтать анне.

Эп çеç аннепеле. Эп — сăвă пĕçереп.
Аннем йăл-йăл кулса кăна çӳрет —
çитмĕлте мар, вунçиччĕре кăна.
Анне! çуралнă кун ячĕпеле сана

кил, ылттăнăм, çурăмунтан лăпкам,
çĕре çитмешкĕн ыр кунçул сунам.
...Шăт-шат! тусам, çун явăнса кăмакара,
анне вутти, çун, ялкăш, ан хăра!

Паллах, çунать, паллах, вăл хăрамасть,
вуттийĕ те аннемĕре хавас.
Ăна хавас, кĕрет те йăл кулать,
тăват ачаллă шăллăм Микула.

Хавас — Иван, хавас — Çеруш, Петюк,
хавас — Кришук, хавас — Çинук, Лисук...
Хавас — ытарайми мăнукĕсем те.
Уйрăммăнах — Пурис, Павлуш, Верук...

Пурне те асăнас, асăнмасан:
«Ăçта, мучейĕмĕр, чун, — тейĕç, — сан?
Ăçта çухалнă совеçӳ, кукка?
Паппа çине туман эпир какка».

Çаплах пуль çав, çаплах ĕнтĕ, Сашшук,
Унтри, Таня, Люда, Петя, Ленук,
Антун, Палюк, Çеркей те Улатимĕр,
Çветта, Алюн, — тăхта, кам ячĕ çук?!

Пурин те пур пулас. Тур сывлăх патăр!
Чечек пек ӳсĕр сарăлса хитре.
Хăва пек яштака, юман пек паттăр
сире умра курап çак сехетре.

Халь Мускавра эп. Вилес пек выртатăп
литинститутăн общежитинче.
Курссем тесе, пăх хыпрăм-ха татах, ак,
пăх хыпнăн медучилищесенче.

Килмелле марччĕ ватлăхра. Килеççĕ
ВЛКна яш чух, çич класпалан.
Эп аслă шкул пĕтернĕ. Тĕлĕнеççĕ:
«Ма килтĕн, — теççĕ, — çакă ăспалан?»

Мĕн ăсĕ? Ăс çукран ĕнтĕ çӳретĕп
секретарьте, курсра та фельдшерта.
Çаклантăм халь те пит начар çĕре эп —
бандит йăви пек сĕрлекен çурта.

Ĕçеççĕ. Çапăçаççĕ. Тĕрлешеççĕ.
Килсе вырнаçнă-вырнаçман, ирех:
«Папаша, чирик!» — терĕ пĕр студенчĕ.
Вун тенкĕ-мĕн çав «чирик» ĕмĕрех.

Ăна, паллах, вун тенкĕ тыттармарăм,
çула эс, терĕм, шĕвĕ манкуна.

Литинститут тени институт мар-мĕн,
вăл кăйттă институт пекки кăна.

Йĕркеллĕ вĕрентмеççĕ, вĕренмеççĕ.
Йĕркесĕрлĕх — анархи — пур çĕрте.
Кунта çӳлти хутран çĕре сикеççĕ
е пăрахаççĕ — çăлнăç çук пĕртте.

Кунти эшкерĕн тавракурăм пĕчĕк:
ĕçес те тусăнас — ватас, çĕмĕрес.
Милици тахçанах ал сулнă: «Пĕтчĕр
пĕтессисем килсен», — тет, çӳремест.

Çĕр хăвăль пек тискер те тĕттĕм пӳлĕм
мана çакланчĕ — çурăм виçĕ кун,
çуса тасатаймарăм; кайран пĕлтĕм:
урай пачах çуман-мĕн хуçи ун.

Кантăксене ларттартăм. Утрăм-утрăм
тирпей кӳресшĕн... Пулĕмĕм çумлах
туалетпа. Тĕлме-тĕл. Пĕр минут та
çук канлĕх: çын чупать те шыв шавлать.

Хупмаççĕ алăкне. Перет «ыр» шăршă.
Хуть вил, хуть тăхăн эс противогаз.
Кăшт ĕçлĕп тенĕччĕ, плансемччĕ чăрсăр, —
пулмарĕ, çук; епле, теп, хăтăлас.

Анчах хăтăлма çук. «Малтан çӳрерĕн
килесшĕн, — тейĕç, — халь калла тапан.
Чăваш ялан çапла — кĕске хӳреллĕ...»
Союз та калĕ: «Ма ята яран?»

Пулин стипендийĕ сакăрвун тенкĕ;
пулин хваттерĕ — чăн сысна вити,
çамрăкрах чух илмен пулсан та, тетĕп,
халь илчĕç — вĕренех эппин, ан тив.

Пĕрех эс килсĕр-çуртсăр та шалусăр.
Хуть Мускавра эс, хуть Шупашкарта —
хăрах этем. Çапах çак курс вăл усă.
Ик çул эс тутă пурăнăн кунта.

Астивĕн сĕт, какай та пĕçеркелĕн.
Йышра ирттерĕн пушă вăхăтна,
вара пурна та пуçлăн, ак, йĕркеллĕн.
Чунна кирлех-ши çукшăн пăлхатма?

Çапли çапла, анчах, турри çырман-тăр,
эп çӳреймерĕмех саркаланса,
урасăр пултăм, ишĕлтĕм те антăм, —
шăма та тăраймастăп, иçмасса.

Метро, йĕпе-сапа мана пĕтерчĕç.
Метро вăл маншăн путсĕр япала:
йышра тарлатăн — витĕр çил-вĕртеркĕч
пур ăшшуна хĕрхевсĕр сапалать.

Хĕлле те çумăр çурĕ... Ачаран эп
аптраттăм урапа — ак ӳкрĕм халь.
Тен, çуралма та йăвашрах çуралнă;
метросене тиркетĕп, тен, ахаль.

Шкула танкканă Аксăва... Шыв ашнă,
юр ашнă çирĕм çухрăм тупата,

ăçтан пирĕн пеккин, ялти чăвашăн,
упранĕ сывлăх? Тумĕ — çăпата,

тăла, кухвайккă... Эпĕ тĕлĕнетĕп:
епле кун чул пулайнă-ха, пĕтмен
çав вăхăтрах? Выртатăп-тĕлленетĕп:
çи халь те йĕп-йĕпе, халь те типмен.

Шăнтать. Тăр-тăр! чĕтретĕп. Вăранатăп.
Хакас ачи тăрать: «Чей лартрăм, — тет. —
Кулач, ак, çу. Çикелĕн. Вырăнна та
паян кăшт тӳрлетсе хăварăп, тен».

Тавах, тавах, юлташ, чăрмав кӳретĕп
пульницана каймасăр эп сана.
Епле каям? Хускалайми пĕрре те —
хăма пекех — выртатăп-çке, сăна.

Ку кĕркунне те эпĕ, ку çулла та
ялтаччĕ — халь, ак, тĕлĕкпе супап:
утайманран пуль ĕнтĕ, ут çулатăп,
пура пуратăп вĕççĕр, çум çумлап.

Чăнах та, çум çумларăм — кĕçĕн кинĕн
çум çумлама та юрамасть иккен.
Шупашкартан качча канма-тăр килнĕ,
витре йатни те уншăн, тет, сиен.

Ача тăвасшăн, тăваймасть. Айванĕ,
чи кĕçĕн шăллăм, мĕскĕн, ĕненет:
йывăр йатса маткийĕ, имĕш, аннă...
Сăмах тивет, паллах-çке, аннене.

«Шукне» те, нăррине, çырла пуçтарнăн,
пĕрерĕн пуçтаратпăр савăта —
анне тӳсет, чăтать, ун шухăш тарăн,
вăл ĕненет ырра та сăвапа.

Пура пурарăмăр... Малтан — ут çулнă!
Эп ытларах саватăп çак ĕçе.
Хĕвел — чи тӳпере, ĕшне — çап-çутă.
Тар тăкăнать, ĕçес килет, ĕçес.

Атте ялан меллет чи çивĕч, меллĕ,
сулмаклă çавине мана валли.
Каçчен çулсан та, ывăнтăм темелĕх
вăя илмест вăл... Ылттăн-çке алли

аттен... Ахальтен мар, атте, юратнă
аннемĕрçĕм сана мĕн ĕмĕре.
Çав юрату çĕн юрату çуратнă —
чунран эпир саватпăр халь сире!

Çав юрату пиртен хĕвеллĕн куçĕ
мăнукăрсем — ачамăрсем — çине.
Сире асилтĕм çеç — ман кăмăл уçă.
Эсир пур чух эп пур: чире çĕнеп.

Ах, Саврăшпуç! Тавралăх. Çутçанталăк.
Аркăр çинче эп сикнĕ пĕчĕкрен.
Хупап çеç куçăма — чун çуталмалăх
сăнсем ума тухаççĕ йĕркерен.

Ăçта пăхан, унта вăрман. Вăрманлă
çак вырăнта ӳссе пуль, шухăша

мала хума вĕреннĕ эп, йăпаннă
асăрхаса çынри пур-çук ăшша.

Çын ăшшине питех курман та, пурпĕр,
курас килсе пуль, туйнă пур пекех.
Этем тӳсмелле марччĕ йывăр пурнăç —
çапах тупаттăмăр майне, пĕрех.

Янплат Кукри, Çăллă Хăва, ак. Эпĕ
вăрман касса çӳренĕ ку енче
ача чухне. Турттарнă эп кĕлте те,
йĕтем те тунă Ката Хыçĕнче.

Кĕтӳ кĕтсе, эп сĕтĕрнĕ сӳс пушă
çак ик вăрман хушшипеле вăрах.
Раща та Раща Пуç. Ката. Ик Хушă.
Ката Хĕрри. Каври Юманĕ... Ах...

Тĕпсĕр Çăлпа Тилĕ Çырми çаранĕ.
Виç Хыр. Кун хыççăнах — Киреметай.
Вара — Чулпалăкçи. Халь те çуран эп
çак маршрутпа миçе утман-ши? Ай...

Кĕтӳ ăçта кăна çитмест вăл тенĕн,
кĕрен Лап Ĕшнине. Кĕтет малта
Кантратти Çăлĕллĕ Шупашкар Енĕ.
Пăлан Шурнех тухма пулать кунтан.

Инçех те мар ав Шупашкар Вăрманĕ.
Пур Ипашша, Курмил Вăрманĕсем.
Уяв Ĕшни пур. Тĕп Ĕшне — Арманлă
Енте. Пит йышлă — Утă Ĕшнисем.

Кай Таркӑн Çулӗпе, пырса тухатӑн
Кӑмрӑк Уçланкине, Тӑрна Шурне.
Кали Лупашкинче чечек пухаттӑм,
халь курӑк та ӳсмест — калап чӑнне.

Саврӑш çырми çинче пӗве нумай халь.
Ял çумӗ — тинӗс пек сарлака шыв.
Пӗве хыçӗпеле — варсем хураххӑн
курнаççӗ, ав. Çӑлкуç чылай хӑшин.

Юнашарах — масар. Иртме тӳр килчӗ
Хусанкайпа пӗрре ун айккипе.
«Ку мӗн? Масар-и?» — терӗ те, сӑн-пичӗ
сасартӑк шурса кайрӗ кӑтат пек.

Çавна, ак, çирӗм çул эп манаймастӑп.
Курӑк çинче çӳрерӗмӗр çарран.
Пурнас пирки калаçрӗ чарӑнмасӑр,
анчах куç хупрӗ виç çул çурӑран.

Ун умӗнчен алçырӑва аркатрӗ,
«Малтанхи юр» текен алçырӑва.
Çавна пӗлсе, Шавли ӑна юратрӗ —
рецензи çырса пачӗ тарават.

Халь леш те, ку та çук. Асра çеç юлчӗç.
Хӑварчӗç икӗ уйрӑм йӗр чунра.
Ик пӑхаттир, ик вут чӗреллӗ юрӑç.
Йӗретӗп, тӑлӑх эп вӗсем çукран.

Талвир, йӗретӗп, эс те çук, тетеçӗм,
мӑнаçлӑ чун, ытарайми талант...

Пĕри те çук... Эп пыrасса кĕтеççĕ...
Скворцов — унта... Марье — унта тахçан...

Çап-çамрăкла Шупашкара эп килтĕм
хам ӳсĕмри туссемпеле пĕрле.
Хăш та пĕри час мала кайрĕ питĕ —
шуйттан пĕлет мĕскер туса, тепле.

Ĕçлерĕм вăкăр пек — çук, юраймарăм,
юла юпсах, ав, тусăм хисепре.
Обкомрисен кутне эп çуламарăм,
эп шырамарăм кут çулас секрет.

Вĕсемшĕн кирлĕ çын тенийĕ — пуçлăх;
поэтшăн кирлĕ çын — чунсем пĕрри.
Нушаллă пĕр чунпа эп пултăм туслă,
касатчĕ хирĕçле ялан юрри.

Обкомсене те шутсăр юратмастчĕ,
ыттисене те хирнĕ, пуççапман.
Пуçлăхсене вăрçма ай! юрамастчĕ,
халь те пит юрамасть, çавна ан ман.

Çав сăлтавпах вĕсем пуян, эп чухăн,
çав сăлтавпах вĕсем чапра, чысра.
Çĕр кăшласа, хуть тапăртат, хуть çухăр,
çукрах усси, кăнан кăна часрах.

«Талвир йытти» тесе мана силлетчĕç.
Мĕн, япăх çынччĕ-и вара Талвир?
Вĕçкĕнленсе: «Эп кам!» — тесе сикетчĕç.
Сиксемĕр те, анчах камсем эсир?

Чун-чӗрӗр типнӗ, чулланса шак хытнӑ,
е хӗсӗр эсӗр, е ҫырни — чӗкре.
Ак эп — хӑватлӑ, эп ӗҫлетӗп хытӑ —
ҫӗн сӑвӑлла роман халь черетре!

Тӑван чӑвашӑн мӗнӗ аталантӑр,
пӗтсе ан лартӑр тетӗп тӗнчере?
Чӗлхи, паллах. Ӑна чӗртсе талантлӑн,
упрантӑр тетӗп чунӗ чӗп-чӗрех.

Чун хӑйнееверлӗхӗ. Ҫирӗпленнӗ
потенци. Кӑмӑл шайӗ. Ӑс. Ӗҫлев.
Пӗр сӑмахпа — менталитет, вӗреннӗ
Артемьев Юрий тусӑм калашле.

Шыратӑп тупсӑм. Ирӗк. Хама хам эп
вун ҫул пуль, ак, хуҫа, анчах та чир:
кун пек пурӑнӑҫа эс хӑнӑхман, тет;
чуптарас мар ялан, тет, каттаччи.

Ҫапса ӳкернӗ-тӗк, выртах, тет, ан тӑр,
ерҫмест сан Николаеву-хӑту,
ерҫсен — Кремль пульницинелле тапан-тӑр?
Тапмастӑп. Космонавтӑн вӑхӑт ҫук.

Чӑрмантармастӑп. Тӑрӑп-ха. Вилмен-ха.
Ан пӗлтӗр Андриян Григорьевич,
пӗлсен — персе ҫитет. Эп пӗвӗме халь
кӑшт кантарас теп, унсӑр — вӑйсӑр-иҫ,

тата (кӗтетӗп чӑтӑмсӑррӑн) патӑм
ЦКан пай пуҫлӑхне, ентеш ҫынна,

çунтарнă «Юрату юрри». Унпа та
калаçмалла-ха, уçмалла чуна.

Анчах кĕтсе илейĕп-ши? Манкуртăн
кутне вут хыпнă, теççĕ. Горбачев
влаçран тухасшăн. Ельцина хам куртăм —
урса сăмах калатчĕ курнă чух.

Мĕскер пулать ĕнтĕ, мĕскер тăваççĕ...
Мĕскер ан пултăр, халăха — инкек.
Пуçне çĕклет каллех хăруш каварçă.
Пурне те уртарасшăн хăйĕн пек.

Урсан-урсан хăй те пĕтет. Ку — паллă.
Анчах унччен хĕн тӳсмелле нумай.
Мал енĕмĕр халь çеçчĕ «вут юпаллă»,
тӳнчех те мар-и халăх урнă май?

Пăшăрханатăп эп, хăратăп хытă:
чăваш, чăваш, килет-шим пĕтмеллех?
Тăрлавсăр «аслă пиччене» мур хыртăр
хăйне çаплах ярсассăн, пĕсмĕлле!

Ĕçлесшĕн мар, çиесшĕн; пăлханасшăн
пăлханмалли сăлтав та çук чухнех;
пĕрле ыттисене те, йыт хыпасшĕ,
персе чикесшĕн, йĕксĕк, юн ăшне...

Каллех тĕлленнĕ эп — çыравçă-шăллăм
çыру вулать пек, илнĕ пек хыпар:
анчах — камран? Тĕшмĕртейсе нушаллăн,
пĕрет пек çамкине — тарăхупа.

Вулать-вулать, нимскер те ăнланмасть хăй.
Чĕнес теп, кăшкăрас теп, сас тухмасть:
«Иван, Иван, ку — эпĕ! Утаймасăр
выртатăп Мускавра!» — ăçта ман сас?

Юнашарах тăрать. «Çыру, — теп, — манăн!»
Çук çав, илтмест, курмасть, курмасть çаплах.
Юхать куççуль. Чĕнмешкĕн сас тупмарăм.
Вăрантăм та, йĕреп иккен чăнах.

Ах, шăллăм, шăллăм, чĕрӳпе сисен-шим
манпа кунта йĕркеллĕ маррине?
Е çакă телепати тĕсĕсем-ши?
Çакланнă пуль эпир чи варрине?

Пĕччен эс юлтăн, эп кунта путлантăм.
Унччен те хисеп çукчĕ те сана,
ак халь пушшех пуль пуç çине утланчĕç;
тен, çавăнпа мана халь асăнан?

Каçар, юратнă шăллăм, кӳренмесĕр,
пулăшайманлăха ан хур тĕпе:
«ман хӳтĕпе» ыр курайманăн эсĕ,
хĕн çеç эс куртăн «манăн хӳтĕпе».

«Ун шăллĕ вăл», — тесе плана кӳртмеççĕ,
хăш чух кӳртсен çапаççĕ кăларса
е ячĕшĕн, тетрадь пек, пичетлеççĕ
чипер кĕнекӳнех — лĕх-лĕх! кулса.

Çапах пуçна ан ус, Иван Егоров!
Сăпайлă та маттур талантупа

кунҫул ытаменче эс тивӗҫ урӑх
ята-чыса, сума та... асапа.

Мана, сана татах асаплантарӗҫ
усал чунсем, чирсем, тӗнче хуйхи.
Ҫынна савни пире ялан хӑтарӗ.
Вӑй парӗ вӑл. Ҫав пурлӑх — чи пахи.

Ан тив, сана вуник ҫул муталаҫҫӗ
члена илмесӗр улт кӗнекепе.
Ҫук кӗнеки, пӗр чӗптӗм ҫук таланчӗ —
ан тив, ҫӳреччӗр член билечӗпе,

эс пуҫ ан ус — кӗретпӗр, ҫӗнтеретпӗр,
ҫӳретпӗр вӗсенчен те йӑрӑрах —
ура ҫине тӑрам кӑна... Черетсӗр
лекетпӗр, ак, тӑванӑм, чи малах!

Кӑшт вӑхӑт пар тата пултар чӑтмашкӑн.
Тур тӳсӗм панӑ ҫын ялан чӑтать,
чӑтать те... ҫӗкленет хастар утмашкӑн.
Каппайчӑка эрех е ҫӗр ҫӑтать.

Пуҫтахланса ӑш вырӑн шырамастпӑр.
Эпир каппайчӑк та, пуҫтах та мар.
Тӑван патне услам ыйтма утмастпӑр.
Эпир — турхан, пит тарӑнра тымар.

Кала кӑна, ытарайми хӑтамӑр
ярса та илӗ пӗтӗм йӑх-яха
ҫухаранах, анчах эпир тӑхтатпӑр —
тӳсетпӗр хамӑр хамӑр хуйӑха.

Хăтан хуйхи хăйĕн нумай. Пытарчĕ
халь çеç вăл амăшне, ват тăхлачча,
ун умĕн — шăллĕне... Ватти — ватахчĕ,
анчах та шăллĕ — ватă мар пачах.

Мĕн тăвăн, кинĕн ашшĕ те ăсанчĕ.
Ку — виççĕмĕш инкек Андрияна.
Ку — ун кĕрӳшĕ. Хуйăхĕ-асапĕ.
Эпир çакна ăнланнă яланах.

Эп пултăм хăнара та, эс пулман-ха.
Ай-яй маттур иккен Çăлтăр хули!
Хваттерĕ саккăрмĕш хутра. Улах-мĕн.
Çук арăмĕ. Пĕччен. Мĕн япали?

Çав «япалах». Хăта та — урçа-каччă.
Çапах та Кремльтех эп туй туман.
Эп — мĕн... Эп тартăм. Тармасан çакатчĕç.
Хăта — епле? Ыйтман эп, шарламан.

Эс те ан ыйт. Килсе ан тухтăр кулнăн.
«Юрла, — тесем, — аннӳн юррисене».
Блокнот çинех-мĕн çырса юлнă пулнă —
маттур юрлать, хитре. Эс те сĕмле.

Эрех те кăларать вăл. Ĕçнĕ пек хăй
черкке çĕклет, асту, ĕçмест, сăнать.
Ун айĕнче — Владимир Джанибеков.
Çӳлте — такам. Юрла... Мĕскер сана...

Пур тĕрлĕ юрă вырăсăн, пур «Тройка» —
юрлаççĕ ĕçсе супнă вăхăтра.

Пур сăвă «Мишка, Райка, Перестройка» —
вун тенкĕпе сутаççĕ Арбатра.

Эс ан хускат ун пеккине. Çиленĕ
сăпайлăха юратакан хăта.
Леш вырăс пулнă вĕт, çумри çĕленĕ.
Çĕн ырлăхшăн халь тухнă похода.

Çăва патне! Пирĕн ĕç мар. Хăтлантăр.
Ятне ярса çӳретĕр вырăсла.
Эх, шăллăм, питĕ вăйлă хăналантăм!
Хăта пĕртте хумасть хăйне асла...

Сыв пул. Килсем. Кĕтетĕп. Ураланăп
тесе шутлатăп-ха унччен майпен.
Эп ӳсĕрле те, тăп-тăр урăлла та
юрлассăм çук пĕрле ун майрипе.

Кăçал çулла-ха, Анна Алексевна,
туйсах хăй ĕмĕрлĕх каяссине,
шӳтлетчĕ: «Ĕлĕк эпĕ сĕт ĕçейнĕ,
халь ĕçейместĕп, пĕчĕккĕн сӳнеп.

Сӳнни тарам-ха, вырăсла манатăп
куллен-кунах; лере пырсан, кайран,
ман чаплă кин каллех ĕнтĕ унта та
ятлать чăваш чĕлхи кăларнăран.

Кунта: «На тарабарском не болтайте,
болтайте на нормальном языке, —
тесе пире вăл шиклĕхре тытатчĕ —
хăйне «çисе» калаçасран иккен.

Çав нушапах пуль, вырăсла вĕрентĕм
пакăлтатма унран та кая мар.
Халь, ак, манса пыратăп куçкĕретĕн.
Леш тĕнчере мĕн курăп, хăямат.

Чыс çухатса пире вăл хĕсĕрлерĕ;
çапах эп, тур умне тăрсан, лере,
ăна каçарăп — чунсăр, нĕрсĕр темĕп;
пакăлтатма вĕренĕп... çĕнĕрен».

Çапла шӳтлетчĕ; шăппăн савăнатчĕ
Петяпала, мăнукĕн ачипе,
чĕнсе илсе çурăмĕнчен саватчĕ
чир сусăрлатнă вăйсăр аллипе.

Куна ху та пĕлен эс. Мĕн павратăп?
Мĕн юрату пирки те пăтранап? —
ялта-Шупашкарта та, Мускавра та,
çак çĕр çинче те çук вăл, ăнланап,

анчах... анчах чун тунсăхлать, шырать вăл
ăна çĕрте, çӳлте те тĕлĕкре.
Ун сăнарне кам ылттăнран шăратнă?
Кам чĕрене хускатнă ĕмĕре?

Кам пултăр ĕнтĕ? Çутçанталăк. Турă.
Турра юратмалла. Вăл — Юрату.
Эс ӳсрĕл илемрен, анчах пул урă.
Юрат çынна, юрат та ырă ту.

Ак — чăн-чăн Юрату. Чăнраххине тупаймăн
çак урса кайнă путсĕр çĕр çинче,

анчах пĕрех илемлĕ те сăпайлă
куç виçейми, чун виçейми — инçет.

Инçет вăл ăнтăлу, канма пĕлменлĕх.
Аталану. Унта сан çитмеллех.
Хăвах куран: хĕрарăм, секс — пĕр енлĕх.
Ку — вăйсăрлăх. Ăна çын çĕнмеллех.

Эс те çĕнсем. Романунти Тамара
вăл санăн та романтикла сăнар —
ăна, паллах, эс юратса унарăн,
çапах та çакă пурнăç мар, чăн мар.

Ку — санăн ĕмĕтӳ çапла илемлĕ,
сăпайлă та хĕрӳ ытарайми.
Сана та вăл ачаранах иленнĕ.
Ху виличчен çунтарĕ уйрăлми.

Çав ĕмĕтпе эпир, Иван, телейлĕ,
ан тив, пулсан та чи телейсĕрсем.
Эпир — чуна сутман, упранă; меллĕ
май шыраман, усал кутне кĕрсе.

«Тĕтреллĕ Лондон» тухĕ сан, шанатăп.
Тухаяс çук нихçан «Сӳнми хĕвел».
Халех, тӳрех сехĕрленсе шăнатăп
«чукмарсене» курса — тупаймăп мел.

Апла пулсан мĕн-ма чуна хĕнетĕп
ак ĕнтĕ çирĕм çул хушши? Мĕн-ма
шурă хута варлатăп та чĕретĕп?
Кама çак кирлĕ-ши? Кала, кама?

Тӳрех аташӑм — Çеçпӗл — аса килчӗ.
Телейлӗ эс, ир вилнӗ... ах, Мишша,
ӑçта кайса кӗрес? Чун пысӑкки те,
чун пӗчӗкки те — хуйхӑ, терт, нуша.

Асап... Эп пысӑк мар çав, пӑсӑк пултӑм.
Ниçта, нимле çӗрте те ӗç ӑнмасть.
Ӑçта, хӑçан эп турӑм йӑнӑш утӑм?
Нивушлӗ айӑпли пӗртен-пӗр власть?

Апла пулма пултараймасть. Эп хам та
пит айӑплӑ. Идеалист-этем
шар куратех кирек епле утсан та.
Эп хам хӳтлевсӗр — урӑхла мӗн тем?

Хӳтлевсӗрскер, хӑйне хӳтӗлеймесӗр,
епле пултарӗ хӳтлеме çынна?
Хӳтлӗхсӗрсем ӗмӗрӗпех телейсӗр,
хуть эс хӗне, хуть ан хӗне чунна.

Чун тенӗ те, пуçпа шутлас теместпӗр.
«Алла çитсе пыран, тепре авлан,
ухмах!» — тесе куллен асилтеретӗр.
Вун çул авланаймастӑп, мӗн тӑван.

«Эс чирлӗ пуль? Ӗçлет-и аппарачӗ?
— «Ӗçлет! Ӗçлет! Пачах эп чирлӗ мар,
анчах — чун пушӑ». «Чунсӑрах параççӗ
памаллине — пит йӳнӗ ку тавар,

мӗнех, хаклӑрахне шыра, мӑнтарӑн.
Хаклӑрахне, тутлӑрахне тупсан,

çемье чăмăртамашкăн та пултарăн».
— «Чун пушă...» «Кăмăл урăхла-тăр сан,

çемьесĕр çеç, çĕн хăмăт тăхăнмасăр,
туртасшăн пулĕ пурăнăç лавне —
«тутлисене» питех алран ямасăр?»
— «Çапла. Анчах хыт тустарать анне —

аскăнлăха чăтма пултараймасть вăл.
Анне саккунĕ — тур саккунĕ пек.
Лачлаттарса сурать ним тăваймасăр,
çунать çĕр-çĕрĕпе, кун-кунĕпе.

Унтан та ытларах... пурте пĕлеççĕ...
чик çеç пуçна арлă-арăмлăха,
вара, тӳрех калар, пĕтет поэзи,
ăна кил-çурт пăвать те пăрахать.

Франц Кафка ик муртан вутран хăранăн
хăранă: авлану тата хĕсмет.
Çак уншăн пулнă тамăкăн хуранĕ.
Ун пек пĕтетĕп эп те, чун сисет.

Пĕтмех пуçланăччĕ, хăтарчĕ турă,
халь сăнаса тăрать çӳлтен, упрать.
Çавна ялан, вун çул хушши, астурăм.
Поэзи — ман пĕртен-пĕр мул-тупра.

Вăл манăн чун, ман ăс, хăват та туртăм,
ман ĕмĕт-шухăш, хурлăх, çураçу.
Поэзи вăл эп хам. Вăл пурнăçăм та туррăм.
Вăл пур пулсан эп пур, вăл çук-тăк — çук.

Поэзие вĕлер — мана вĕлертĕн.
Поэзи — манăн савнăç, ырату.
Анне пĕлет, ăна пурте пĕлетĕр:
поэзи — ман чи аслă юрату.

Ак çакăнта пуль пурăнăç ылханĕ:
чăн пурнăç мар, иллюзилле сăнсем
мана ĕмĕрлĕхе тĕпрен пăлхатнă —
тухатнă та, ямаççĕ вĕçертсе.

Хăпма май çук. Кулленлĕхе чăтмашкăн
ытла та йывăр, вилесле кичем,
илемсĕр... Манăн, сăв çыран чăвашăн,
çапла айкашмалла мĕн виличчен.

Ман çеç-и... Чăн поэт пулса çуралнă
кашни çыннах авать пуль çав ылхан.
Ылханнă чун ылханлă чун марах вăл.
Унпа эс ĕмĕрлĕх садне тухан.

Кам ĕмĕрлĕх, вăл вилĕмсĕр... Kaçарăр,
сӳпĕлтетмех пуçларăм, юрĕ-ши?
Унта васкакансен хисепсĕр çарĕ
пирĕн пекне хиseплĕн итлĕ-ши?

Ылхан яраканне те тав тăватăп,
килтен хăваканне те, арăма,
тавах; ĕçре камсем кутран тапатăр, —
мерси! Ах, вăхăтлă! Аптăрам мар...»

Вун çул майра тесе эп пит çунмастăп.
Ихĕлтетеççĕ... Пултăр... Ыйхăлап...

Поэзи ман, пĕрпĕтĕм сублимаци
пулса кайса, илет пур вăй-хала.

Ĕçлет, ĕçлет поэзи автомачĕ.
Аврать, аврать асамлă шывармань...
Сăхлантарасшăн мĕн кăна тумастчĕç,
кама кăна тата илсе пыман?

Ах, вăрттăн ĕç! Сана кам çеç савмасть-ши?
Пăхма именмелле упăшкасен
арăмĕсем вăрттăнлăхпа супаççĕ,
чунне параççĕ вăрттăн ĕç тесен.

Туссем! Эсир те çав шутрах. Хăлатăн
курнатăр та, арăмăрсем — ахтур...
Çук, эп тивмен, тур умĕнче калатăп,
эп Ĕçхĕл мар-ха, манăн совĕç пур.

Тăлăхсене анчах хĕрхенкелерĕм.
Иртĕхнĕрен пыракана кĕртмен.
Анчах та тăлăхсем те хĕм кӳмерĕç,
унччен хĕмленнĕ-мĕн, мана кĕтмен.

«Хăçан çавтер, ăçта, камсем?» — тесессĕн,
пуç çеç усаççĕ, пытарса куçне.
Ан калăрах, пĕртте килмест тĕпчессĕм.
Ман хуйхă çук-и сирĕнсĕр пуçне?

Куçран пăхсах ĕç-пуçăра пĕлетĕп.
Ытла ыйтса пĕлме те кирлĕ мар.
Çук, тупăнмарĕ мăшăрлăх пĕрре те.
Аван çынсем, май çук пуль хурлама,

анчах та пăсăлнă... Нумай тăраймĕç
качакасем кăкарнă вырăнта.
Çăлтăрпиллех, тен, хырăм та йăтаймĕç.
Мĕскер çитмест, мĕскерĕ ыратать —

ялан нăшкаççĕ, юрататăп теççĕ,
анчах курап: шалта ларать шуйттан.
Арçынсăр тĕмсĕлеççĕ те типеççĕ,
ай хăвăрт йăлăхаççĕ-çке тупсан!

Чунне уçса пĕри кăна уларĕ.
Эшкеррĕн пусмăрланă хĕр иккен.
«Мĕн виличчен, — тет, — шанчăклă пулатăп».
Хăрарăм. Çамрăк. Çулĕ те çитмен.

Тепри тата урах (тен, мухмăрла-тăр)
хăю çыхса шкул формипе килет —
туалета чĕнет, кĕр, пусмăрла, тет.
Ман тăчĕ çӳçĕм-пуçăм вирелле.

Ăна çак килĕшет иккен. Шутлан та,
кунта тĕлĕнмелли каллех сахал:
кун пеккине «фиксаци» теççĕ. Латсăр
çав япала та савнăç-мĕн, паха.

Унпа пултарĕ ĕмĕр тăршшĕпе те
супма. Пулас упăшкине кĕтет
хăруш инкек — тату çемье сипечĕ:
петле (леш, суицид); тăнла, эстет.

А виççĕмĕш — чăвашлăхшăн çунан хĕр.
Ун ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачь —

чăн чăвашла. «Эп хĕр-ха», — тет. Чăнах-и?
Кун пеккине халь тĕл пулманччĕ пач.

Анчах... психоанализпах пултартăм
(калаçтарсах) пĕлме чăн ĕç-пуçа:
таса çак хĕр — истерикла хĕрарăм,
çӳлте мала тухасшăн çапăçать.

Çитет пуль. Мăшăр шыраса, сăнарăм
эп вĕсене чылай. Хам кĕрчесе,
кĕрченине тиркерĕм те, тупмарăм
юрăхлине — каçарччăр каччăсем.

Вĕсен варлисене эп астармарăм
курнăçланса, вĕçсе, поэт тесе.
Психоанализпа тăрлавсăр ĕç тумарăм,
«лере» кĕмерĕм, чуньсене кĕрсе.

Пур тĕрлĕ шай. Пĕрин яр-уçă алăк.
Теприн кăшт хупăрах е хупă тач.
Уллах та шăп çĕрте ăна уçмалăх
пурах сăмах тултарнă ман хутаç.

Куçсем сутаççĕ — хĕм сапма пуçлаççĕ.
«Хĕр» текеннин пуçларĕ вут сапма.
Сий хыççăн сий уçса пырап ытла çав,
ăçтан куç ан пултартăр-ха сутма.

Чун пусарса тухса каяççĕ шăппăн.
Ларса юлап тем айăп тунă пек.
Тен, чăн та, эп ухмах, кăшт тайлăк, шăтăк?
Пурнап йӳтенĕ çыннăн тăнĕпе?

Анне çуллен пĕрре ятлать: «Мĕн-ма, — тет, —
эсрелĕ, авланмастăн халĕ те?»
— «Кая пуль, ах, анне, эп ĕнтĕ ватă».
«Ухмах! Платтун авланчĕ çитмĕлте,

ав, кур, ачи чупса çӳрет. Арçын вăл
йăттарĕ хырăм тăхăрвун çулта.
Ехвин хăçан авланнăччĕ... Эй, çылăх...
Тăват ача тутарчĕ вуççă та».

Платтун, Ехвин... Вĕсем çĕрĕç вăй-халлă,
ни унталли, ни кунталли çын мар.
Шур хут çинче ларса ман чĕм çухалнă —
чĕмрен кайса эп тăрăшнă çырма.

Вĕсем çырман, çырма та пултараймĕç.
Ман хайлавсем вăл манăн ачасем.
Хам виличчен пуласшăн эп асамăç,
ачамăмсем — асамăç чунĕсем.

Алне сулать аннеçĕм: «Эй, санпа! — тет. —
Кам çуратса ӳстернĕ? Те — хамах?
Ачи ачахчĕ-ха, шуйттан апачĕ
пулса тăрса хур курчĕ тăр-ухмах...»

Эх, ылттăнăм! Сан пек анне тек çук пуль
никамăн та, иртсем, ална парсам,
эп савăнатăп, çитерсемччĕ çупкă,
мĕн тăвăн, савăнатăп хуйхăрса.

Анне мĕлки... Анне кулли... Каллех-им
эп тĕлĕретĕп? Ан çĕтсем, анне,

ан çухалсам... Ку кам? Шолом-Алейхем?
Ăçтан?.. Епле?.. Хĕлле е çуркунне?

Мĕнле тĕнче ку? Сарă Кун çĕршывĕ?
Мĕн-ма ялан пĕччен эп? Ма пĕччен?
Ăçта каяп? Ăçтан килеп? Чун сывă
е вилĕ манăн? Калăр маниччен.

Апла-и е капла-и, пурпĕр çывăр,
тееп хама, канан çывăрнă чух:
пĕчченлĕхе тӳсме çав тери йывăр,
хăшпĕр чухне пачах та чăтма çук.

Малтан пĕчченлĕхе хыт туртăнаттăм.
Пĕччен юлса ларасчĕ шăплăхра,
тесе ĕмĕтленеттĕм, пурăнаттăм
çунса кĕлленесле типшарлăхра.

Ак, юлтăм та, ларас килмест. Вил шăплăх
пусать чуна, пытарнăн чĕрĕлле.
Пăшăхтарать. Виçесĕр пăчă, шăрăх.
Тем тăрмалать ĕшенчĕк чĕрене.

Çур çул ĕç тытаймарăм: кăмăл сӳрĕк,
çынсем патне туртать, йыша, ĕçе.
Хăранăччĕ: нивушлĕ ĕмĕр çӳрĕп
хăнăхаймасăр çĕнĕ тивĕçе.

Майпен ĕçле пуçларăм. Пур ĕçченлĕх
чăмăртанса çитсен, пурнас килет,
юрлас килет. Пусмăрламасть пĕчченлĕх.
Чире ямасть мана вăл халь, сиплет.

Ĕçлеймесен мĕн тăвăттăм? Асмашкăн
тапратăттăм е пуçлăттăм ĕçме.
Тĕпрен йăлăхтарсан ясар амашкă,
пĕтсе çитсессĕн хал та кĕвĕçме,

ăçта кайса кĕрсе мĕнпе йăпанăн,
мĕнпе пусарăн пăтранан ăшна?
Эс чĕрĕ пек, анчах ӳксе йăваннă —
пач вичкĕн кăйкăр мар, кĕрхи шăна.

Авас тесе пĕччен хупса усраççĕ
çынна вун çул е çирĕм пилĕк çул.
Чылайăшĕ пĕччен юлма хăраççĕ,
ăсран та тайăлаççĕ темĕн чул.

Е камера хистенипе васкаççĕ
тайăличчен леш тĕнчене кайма.
Сервантессем «Дон Кихотсем» çыраççĕ,
Шаламовсем поэмăсем хайлаç.

Чул хутаçра пĕччен эп хам та лартăм —
сахал та мар, нумай та мар — вун çул.
Кушак та çукчĕ, таракан та. Лаптăк
вуник квадратчĕ. Такăрланчĕ çул —

çак пӳлĕмре пуласлăха эп уçрăм
ăна. Кĕç чăвашла та вырăсла
пĕр пек юрла пуçларăм. Кăмăл хуçрăм
юрланман чух кăна, тухса ăсла.

Çав çул валли хама эп хам туптарăм,
мана система хăртнă, шăварман.

Унта эп хам идеала тупмарăм.
Халь, шăп вун çул, пачах та шыраман.

Ăна хамра шыратăп та тупатăп —
идеалист-экзистенциалист.
Татти-сыпписĕр юхнă татăк-татăк
татти-сыпписĕрлĕх пулать вăл, сис.

Ман шухăш та çапла. Юхать-юхать вăл
килсе капланнă шурă пĕлĕт пек.
Такамăн, ют этемĕн, мар, йăлт хамăн
шур пĕлĕт те, тӳпе те — пĕтĕмпех.

Антихрист мар, футурист мар... Эп — чыслă...
Футурист мар-тăк, фашист та марах.
Эп коммунист та мар. Авангардист та,
демократли, эп пулаймарăмах.

Тавах, эп Айхи мар е — Маринетти;
верлибр пăтти пĕçернĕ хывăхран
ман пĕçерес килмест-ха пӳремечĕ —
хăтартăр пӳлĕх çавă çылăхран.

Хальхи влаçсем кĕнекеме çунтарчĕç,
килессисем çунтарĕç, тен, хама.
Лойол Игначĕсен тем тĕрлĕ тарçă
йĕри-тавра чупать — тытса пама.

Тем тĕрлĕ «изм». Суратăп. Йĕрĕнетĕп.
Суяççĕ, шăхăртаççĕ халăха.
Каяс теместĕп рынок йĕрĕпе те,
коммуна çулĕпе те — ырлăха.

Мĕн кирлĕ мар — аван курнать. Пĕлетĕп.
Пĕлмешкĕн халăм çук мĕн кирлине.
Каяс пулать пач урăхла тĕле-тĕр,
партисенчен тарса, чи айккине.

«Изм» — çухалать. Искусство — ĕмĕр чĕрĕ.
Политика — хăрушă япала.
Поэт унран, тăшманĕнчен, мерччерĕ.
Эй, ыр хĕвел! Хăтар! Хăтар ялан.

Вилмен-ха эп, пурнап, тăраймасан та.
Салам сана çак çĕр хăвăлĕнчен.
Сĕм тĕттĕмре выртатăп. Ку — масар-тăр?
Эп шăтăкра çĕреп пуль пĕр-пĕччен?

Ăçта Султрек хакас? Манса кайман-ши,
мана вырттармалла ун çавăрса.
Çак çын халь нянькка вырăнне те маншăн,
сиплевçĕ вырăнне те, апăрша.

Горчичникпа сиплет, чей ĕçтерет те.
Сăмси питех туртмасть те, палăртмасть.
Эшкерĕн пăхмалла пуль те черетлĕн,
килмеççĕ... Чăваша ытти картмасть.

Писательсем... Вилсе выртсан та эсĕ,
вĕсемшĕн пурпĕрех... «Инженерсем...»
Чуна тĕпчеççĕ... Тăрăшса. Ӳркевсĕр.
Хăйсен — пирченĕ, вилнĕ чунĕсем.

Савни тĕп пулнă ĕçкĕпе, пĕлетĕп,
вилет пуль арăм ясара кайса,

а эп поэзи чирĕпе пĕтетĕп,
чуна çисе, тусса та якалса.

Ним те юлмасть, иртет; пурте вилетпĕр,
пустуй персе çӳретпĕр пĕлмĕше,
юнатпăр, хапсăнатпăр та пӳлетпĕр,
ура хуратпăр çывăх пĕлĕшех.

Эшкер танатинче ху та ху мар эс,
çиелтен çеç юрлатăн юрруна —
кунта сана ним вырăнне хумарĕç,
пусарчĕç, пăвăртарĕç яланах.

Эп çавăнпа пĕчченлĕхе юратрăм,
Пĕччен чухне кăна эп чăн этем.
Пĕччен чухне юрра чунран юрлатăп.
Пĕччен чухне хама: «Эс — гений!» — теп.

Пĕччелĕх те пĕртте рай-пурнăç мар-ха.
Чĕнместĕп эп сире пĕччелĕхе.
Тĕп чăнлăхăн тĕшши пирки сăмахăм,
ăна никам тупман-ха халлĕхе.

Анчах шыраççĕ ĕмĕр çĕрĕн-пинĕн.
Пулсассăн акă хăвна ху хуça,
куçан, пач ирĕке тухсан эппин, эс,
пĕчченнĕн, шăплăхра, асамăça.

Эс музăпа, ĕмĕрсемпе тӳрремĕн
пуçлатăн калаçу тăнăçлăхра.
Ынатланса пуласлăха кĕретĕн.
Эс çылăхсăр, тасалнă çылăхран.

Кӗрсе, сăваплăх асамне ӗҫетӗн,
ăш кантаран тӗнче илемӗпе.
Кунта эс турă сассине илтетӗн,
тăратăн куҫма-куҫ... ӗмӗрлӗхпе.

Ан тив, тулта кӗрлетӗр тăвăл шавӗ;
ан тив, тапрантăр ахăрсамана,
хăвна кăна, хăвна кăна эс шанăн,
хӗвеллӗн ҫӗклӗн вутлă сăввуна.

Тур пулăштăр, тăрмаш анчах, вăй патăр
никам ҫӗнтерейми чăн таланта!
Кун хыҫҫăн шалккă мар вилсе выртма та:
тӗп чăнлăхăн тӗшши —
сан аллунта!

«Поток сознанья» тенӗ... Мӗнлерех-ши
куҫать вăл чăвашла? Тăнпуҫ пуххи
е шухăш юхăмӗ? Хитре, эрешлӗ
вăл пулмалла? Е — сăрă, ҫав юххи?

Пӗр чух ҫутах пуль, тепӗр чух пăтранчăк.
Кирек хăҫан «юхать», тăн ҫӗтмесен.
Юхăмӗпе киле ҫитсен аванччӗ
чӗртмешкӗн шанчăк, кăмăл ҫӗклесе.

Ӗнер каҫпа-ха, эпӗ тăн ҫухатнă...
Хут пӗтрӗ те пуҫ вӗҫӗнче, тăрса
илес тесе кармашрăм — ҫухăратăп!
Яш! чикрӗҫ пек хыҫран, ӳкеп кайса.

Тăна кӗрсен — выртап урайӗнче-мӗн
сив тытнипе пăру пек чӗтресе.

Пурнас килменлĕх хĕстерет кичеммĕн.
Килсе хуплаççĕ хурлăх çарĕсем.

Хальччен хама самай ĕненнĕ, шаннă.
Халь ăнланатăп: пурнăç тамăкран —
нерв япăхса, ун клеткисем хавшанă.
Çирĕплетмен — капла та тăн çукран.

Хăш та пĕри ай-яй хăйне упрать-çке,
йăрккать кану çуртне те курорта.
Эс кай кăна, тӳрех çăхав çыраççĕ.
Ыр курччăр, эп ыр курăп масарта.

Унта йăлт «çирĕпленĕ»: ку та, леш те —
миме те, нерв та, пуç, ӳпке, чĕре...
Анчах кăшт инкекпех каяççĕ лĕштĕр!
артаклă улпутсем — ачаш сĕре.

Çитет хăш чух çав «мăшкăл» çакăнмалăх
е тăнлавран пемешкĕн хăй хăйне.
Мĕскер хăтланĕччĕ-ши çакă халăх
курас пулсан эпир курнисене?

Тĕнче пĕтес чухнехилле алхасĕ.
Ав халь те мĕнлерех вăл янрашать.
Хӳтлевсĕр эп, хевтесĕр те вăй-халсăр,
пĕрех сысма та лармăп юнашар.

Пĕччен, пĕччен эп пулăп, самайланăп.
Ман пĕтĕм вăй-хăват — пĕчченлĕхре.
Калаçăп хампа хам эп, сăвă калăп,
çĕнрен-çĕн кĕвĕ шырăп чĕрере.

Хальхаççăн ялăма çитсе ӳкесчĕ
утан урапа мар-тăк, шухăшпа.

Анне, пĕçер! Çиес килет икерчĕ!
Çиес килет хуплу. Тата... кăмпа.

Атте, пар аллуна. Кил, ыталам эп
сана ĕлĕкхиллех хыт юратса.
Сан айăп çук таланăм та талантăм
чăлханнăшăн, тăманшăн янраса.

Эп ӳкнĕшĕн. Çул ăнăçманшăн. Чуншăн.
Хĕрхеннĕшĕн хама хĕрхенмене.
Каланăшăн: «Юл çаплипех, ан улшăн».
Каçарăрсам мана, атте, анне.

Каçарăрсам, эп ăслă пулаймарăм.
Каçарăрсам, кулянтăр пуль нумай.
Ăнмарĕ пурăнăç, ăнмарĕ арăм,
ăнăçтармашкăн та килмерĕ май.

Хам кайрăм та, чунпа унтах эп юлтăм,
ăсантăм чун-чĕре суранĕпе.
Ăçта пулсассăн та, упрарăм çуттăн
пехилĕре — чыса упранă пек.

Каяс килместчĕ, ял хыçа юлатчĕ,
тĕмсĕлейсе пăхаттăм каялла.
Чун йĕчĕ ман, çамкам нумай картланчĕ,
çула тухса çап-çамрăк ачалла.

Çул выртрĕ ман тумхахлă та юпаллă.
Ӳксе тăшман айне пулмассерен,
тăван кĕтес лăпкарĕ те йăпатрĕ —
çĕнрен пил пачĕ пил пĕтмессерен.

Атте-анне ан пултăр-ха, кам алăк
уçса кĕтет мана, тăван кĕтес?

Çынна эп кирлĕ мар, çав кирлĕмарлăх
чуна касать, çиет — пурнас килмест.

Халалсене пит хăвăрт маннăран-тăр,
тӳсеп инкек те хур, тӳсеп асап.
Этем этемшĕн кашкăр-мĕн. Ăнлантăм
çавна ытла та эп кая юлса.

Пĕр хăвăншăн çеç тунă ĕç — сăвапсăр.
Ма пурăнтăм эп, калăр, çак пуçпа?
Хавхаланусăр пурăнтăм, савмасăр,
çунмасăр — пурнăçсăр пурăнăçпа.

Кунсем чипер тăмарĕç, урчĕç, урчĕç.
Пуçра — кĕрлев те шав, куçра — тĕтре.
Халь тин килеймĕ ĕнтĕ ырă пурнăç.
Халь тин кĕтместĕп эп нимле кĕтрет.

Масаралла пуçтарăнас пулать-тĕр,
пасара мар, мĕскер сутас, илес?
Çав сăлтавпа чун — тăвăр, çил — улать-мĕн,
çивиттисем çинче çӳрет çиллес.

Месерле ялăн çак та çук, пĕлетĕп.
Анчах мĕн тăвăн-ха, килмест пиртен.
Илес пулать парсассăн çуккине те,
унпа чун канăçĕ тупатпăр, тен?

Вилесчĕ ман — çил мар, анне юрлатăр
пуç вĕçĕнче хитре сăпка юрри.
Аннесенчен ан йăлăхăр, юратăр,
анне пурри, ăнланăр, — чун пурри.

Вилесчĕ ман — савни аса ан килтĕр:
сутать те тĕп тăвать пире савни.

Ун чунĕ çук; пулсассăн та, вăл пилсĕр.
Ăна асилтерни — усал сунни.

Вилесчĕ ман — каçпа, çĕкленнĕ уйăх
ылмаштарсассăн сарă хĕвеле.
Григ музыки янратăрччĕ; çут хуйăх
чуна лăпкатăрччĕ çав кĕвĕлле.

Киле, яла çитесчĕ — вăтăр çул-и
е хĕрĕх эп унтан тухса кайни,
анчах унтах, унтах ман пурпĕр чунăм,
чун чиксĕр хурланни те савăнни.

Тăван çĕрсем кăна виçесĕр ырă.
Тăван çĕре эппин кĕрсе выртам.
Ун чух çеç канлĕ пулĕ нӳрĕ вырăн,
ун чух çеç çăмăл пулĕччĕ тăпрам.

Ютра — юнарĕçĕ сума сумасăр.
Мантарчĕç юратма, çисе куçпа.
Хавхаланусăр пурăнтăм, савмасăр,
çунмасăр — пурнăçсăр пурăнăçпа...

**Финал**

Юратăвăм,
эсĕ сӳнтĕн те,
сана — лайăх.

Эс — çук,
пулман та тейĕн.

Çиçĕм çиçнĕ пек çиçрĕн те
çухалтăн.

Çăлтăр ӳкнĕ пек ӳкрĕн те
çĕтрĕн.

Çĕр çăтрĕ пуль
сана?

Эс — çук, юратăвăм.
Сана — лайăх:
çунса тертленместĕн.

Чĕрене чĕрĕлле
касса кăларчĕç, тессĕм килет.

Мимене сывăллах
ĕмсе илчĕç, тессĕм килет.

Эп — вакуум,
пушă, тессĕм килет.

Тĕнчере пур çинче —
çук пекех, тессĕм килет.

Эп
мăшкăла тăрса юлтăм,
тессĕм килет.

Курсан та,
нимĕн курмастăп.

Илтсен те,
нимĕн илтместĕп.

Туйсан та,
нимĕн туймастăп.

Вилĕ,
тессĕм килет.

Шутлаççӗ —
пурнатăп, тессӗм килет.

Уйăх пăхни —
савăнтармасть.

Хӗвел ăшши —
савăнтармасть.

Кăвак тӳпе —
савăнтармасть.

Чечек те —
курăк çеç.

Чӗкеç те —
кайăк çеç.

Пике те —
этем çеç.

Юрă —
хумхантармасть.

Ташă —
çӗклентермест.

Тӗнче те —
тӗнче мар.

Пурнăç та —
пурнăç мар.

Эп хам та —
хам мар.

Эп
тĕнчене çухатрăм,
шыратăп:
ăçта эсĕ, тĕнче?

Хама хам
çухатрăм,
шыратăп:
ăçта эпĕ, ăçта?

Юратăвăм сӳнчĕ.
Шырамастăп.
Сӳннĕскер —
çутăлас çук.

Тĕттĕм урам-и
е тĕттĕм пӳлĕм?

Пăчă-тĕттĕм.

Хура.

Йăн сас та çук.

Шăп.

Эп анранă
е тăнлă?

Сывлатăп
е сывламастăп?

Çĕр çинче
е çĕр тĕпĕнче?

Ăсчахсем:
тĕнчере ним те çухалмасть,
теççĕ.

Пур япала та
пĕр тĕсрен тепĕр тĕсе çеç куçать,
теççĕ.

Апла —
тĕнче те çухалман пуль,
анчах мĕнле тĕс
илнĕ?

Эппин,
эпĕ те çухалман ĕнтĕ,
анчах мĕне
куçнă?

Теме аса илтĕм те,
теме
хĕрхентĕм.

Ача чух хурăна эпĕ
хуçнăччĕ.

Чĕкеç йăвине
пăснăччĕ.

Çăлкуçа пылчăкпа
вараланăччĕ.

Суккăр ыйткалакан
татăк çăкăр ыйтсассăн,
чул тыттарнăччĕ.

Вăрманта калтана
эп вĕлернĕччĕ.

Вилнĕ йытă курсан,
пуçтарса пытармасăр,
тапса эп хăварнăччĕ.

Çаксене йăлт астурăм та,
хама та,
пурне те
хĕрхентĕм...

Пăхатăп-пăхатăп та,
куратăп:
аякра-аякра
хăйçути курăнать,
аякран-аякран
кунталла
пăхать.

Тăнлатăп-тăнлатăп та,
илтетĕп:
аякра-аякра
йĕнĕ сас илтĕнет,
аякран-аякран
кунталла
килет.

Куçăм,
куратăн-им каллех?
Куратăн!

Хăлхам,
илтетĕн-им каллех?
Илтетĕн!

Чĕрем,
тапатăн-им каллех?
Тапатăн!

Чĕрĕ!
Эп — чĕрĕ,

юратăвăм —
вилĕ.

Сӳнтĕн те, çутăлмастăн,
теп ăна.

Çиçĕм çиçнĕ пек çиçрĕн те
иртрĕн.

Çăлтăр ӳкнĕ пек ӳкрĕн те
çĕтрĕн.

Çĕр çăтнă пек — кайрăн та
çухалтăн.

Каçар:
вăхăтра ăнланма пĕлеймерĕм.

Каçар:
вăхăтра хĕрхенме пĕлеймерĕм.

Каçар:
вăхăтра çĕнетме пĕлеймерĕм.

Упрама
пĕлеймерĕм.

Эсĕ
сӳнтĕн те,
сана —
лайăх...

Чĕрĕл.
Чăн чĕрĕлсе тăр.
Чĕрĕлсе тăр,
тетĕп сана.

Аçа çаптăр,
çĕр çăттăр,
мур хырса кайтăр
пĕрскерне.

Хитре тухатмăш,
чее çĕлен,
юн ĕмекен
сăхă вупăр вăл, çав пике-арăм.

Чĕрĕл.
Эс мар, çав пĕттĕр —
тăранайми
выçă куç, тессĕм килет.

Хăçан та хăçан
хĕвел сӳнсе ларать,
эсĕ сӳн.

Хăçан та хăçан
çĕр арканать,
эсĕ аркан.

Хăçан та хăçан
çынсем пулмаççĕ,
эсĕ ан пул.

Халлĕхе
хĕвел сӳнмен-ха, çутатать,
эс те çун.

Халлĕхе
çĕр арканман-ха, çаврăнать,
эс те ан аркан.

Халлĕхе
çынсем пур-ха, пурнаççĕ,
эсĕ те пул.

Эп сана ырламастăп-и?
Ырлатăп.

Мухтамастăп-и?
Мухтатăп.

Саламламастăп-и?
Саламлатăп.

Чĕрĕл.
Ал çинче çеç йăтса
çӳрĕп,
хам виличчен.

Чĕрĕл.
Хĕвĕмре çеç ăшăтса
усрăп
хам виличчен.

Чĕрĕл.
Пуçран çеç ачашласа
пурнăп
хам виличчен.

Шыв чĕлхи пĕлместĕп,
калатăп шыва:
ан путар юратăва.

Вут чĕлхи пĕлместĕп,
калатăп вута:
ан çунтар юратăва.

Çил чĕлхи пĕлместĕп,
калатăп çиле:
ан тустар юратăва.

Хурçă чĕлхи пĕлместĕп,
калатăп хурçа:
ан кас юратăва.

Çĕр чĕлхи пĕлместĕп,
калатăп çĕре:
ан çĕрт юратăва.

Вĕрме-сурма пачах пĕлместĕп,
чĕртеймĕп
юратăва.

Ăнланăттăм сана,
ăнланăттăм,
юратăвăм.

Хĕрхенĕттĕм сана,
хĕрхенĕттĕм,
юратăвăм.

Çĕнетĕттĕм сана,
çĕнетĕттĕм,
юратăвăм.

Сыхлăттăм сана,
сыхлăттăм,
юратăвăм.

Упрăттăм сана,
упрăттăм,
юратăвăм.

Ĕненетĕп чунран.
Чĕрĕл.

Шанатăп чунран.
Чĕрĕл.

Юрататăп чунран.
Чĕрĕл.

Вилĕлĕх шывĕ
тупаймăп
суранусене çумашкăн.
Пурăнăç юмах мар,
суранусем —
ӳт илеймĕç.

Чĕрĕлĕх шывĕ
тупаймăп
ӳтне сыватмашкăн.
Пурăнăç юмах мар,
чĕрĕлĕх —
вĕрсе кĕртеймĕп.

Шерпет вырăнне ĕçсе
типĕтмерĕм,
ху пĕлен.

Турат вырăнне хуçса
хăртмарăм,
ху пĕлен.

Çырла вырăнне татса
çимерĕм,
ху пĕлен.

Пурĕпĕрех типрĕн-çке,
мĕн тăвас,
кам пĕлет?

Пурĕпĕрех хăртăн-çке,
мĕн тăвас,
кам пĕлет?

Пурĕпĕрех пĕтрĕн-çке,
мĕн тăвас,
кам пĕлет?

Чĕрĕлес пулсан-и,
мĕскĕн тесе мăкăртатĕç —
ĕненмĕп.
Чĕрĕл!

Чĕрĕлес пулсан-и,
начар тесе кăчăртатĕç —
кулăп.
Чĕрĕл.

Чĕрĕлес пулсан-и,
айван тесе айăлтатĕç —
юрлăп.
Чĕрĕл.

Чĕрĕлес пулсан-и,
сивĕ,
вăйсăр,
аскăн,
хăтсăр тесе хăрăлтатĕç —
ташлăп.
Чĕрĕл!

Сан вуту мана
хӗвел пек кирлӗ.

Ҫунату
сывлӑш пек кирлӗ.

Илемӳ
юрӑ пек кирлӗ.

Эсӗ ху
пурнӑҫ пек кирлӗ.

Эпӗ —
эсӗ марччӗ-и
ӗлӗк чух?

Эсӗ —
эпӗ марччӗ-и
ӗлӗк чух?

Эпӗ
кунта
халь.

Эсӗ хӑҫан
кунта
пулӑн?

Чӗрӗл!
тархаслатӑп эп сана, —
чӗрӗл!
Пурӑн! —
ӳкӗтлетӗп эп сана, —
пурӑн!

Эпĕ пур чух —
пурăн.
Эпĕ вилсен —
пурăн.
Яланах —
пурăн...

Инанга, эс ăçта тата —
Çӳлти Телейĕм?
Çĕрте телей ман çук,
пулмарĕ çĕрте телей,
талан та
ăрăскал.

Ăс-кăмăл-чун тĕнчи,
юрату патшалăхĕ —
ноосфера —
сверх-жизнь —
хĕр турă —
Инанга Алшигусти!

Эс — эпĕ, эпĕ — эс,
ман Нуся, Фрези Грант;
ман Беатриче.

Эп — Çеçпĕл, Грин; эп — Данте
çак çĕр çинче.
Ăс-кăмăл-чун патши.

Эп — Юрату, Инанга Алшигусти.
Ах, пĕтĕм пурăнăç ман —
Юрату.
Эс — эпĕ, эпĕ — эс,
Сӳнми Хĕвел.

Мĕн ĕмĕр
шырарăм хама —
чунпа çӳллĕрехне,
хитререхне,
ăслăрахне,
анлăрахне хамран.

Тупмарăм.

Вилетĕп тупаймасăрах.

Тен, тупĕç ыттисем.

Сӳнмен,
сӳнмест,
аталанать
Тĕнчери Дух —
Сӳнми Хĕвел.

Эпĕ пур чух —
пурăнать.
Эпĕ вилсен —
пурăнать.
Яланах —
пурăнать...

Эпĕ пулнă-и?
Пулнă.

Эсĕр пулнă-и?
Пулнă.

Вĕсем пулнă-и?
Пулнă!

Апла мĕн-ма:
çук, тетĕр?

Апла мĕн-ма,
усал чунсем,
тиркетĕр?

Ĕненместĕр?

Суя, тетĕр?

Ĕненĕр, айвансем:
суя мар ку,
юмах мар.

Эп ним те
шутласа кăларман —
ĕненĕр!

Ку —
пĕтĕмпех —
эпĕ!

Эпĕ пур чух —
ĕненĕр.
Эпĕ вилсен —
ĕненĕр.
Яланах —
ĕненĕр...

* * *

*1987 çул,*
*Саврăшпуç—Шупашкар—Мускав.*

## ТУПМАЛЛИ


Увертюра . . . . . . . . . . . . . . 5
Пĕрремĕш пайĕ . . . . . . . . . . 17
Иккĕмĕш пайĕ . . . . . . . . . . . 126
Виççĕмĕш пайĕ . . . . . . . . . . . 221
Финал . . . . . . . . . . . . . . . . 337



**Михаил СЕНИЭЛЬ**
**(Михаил Павлович Егоров)**

**ÇЫРНИСЕН ПУХХИ**
**СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ**

**Сӳнми хĕвел**
**Негасимый свет**

*Поэма*

**Том четвертый**

Редактор *И.П. Турган*
Художественный редактор *В.В. Садкова*
Корректор *И.П. Егоров*
Оригинал-макет *Э.В. Кирилловой*

Подписано в печать __.02.2015
Формат $70 \times 108^{1}/_{32}$
Бумага офсетная
Учётно-изд. л. __
Тираж 200 экз.
Печать офсетная
Гарнитура Times
Физ. печ. л. 22,0
Заказ № __

Отпечатано в типографии «Новое Время»
г. Чебоксары, ул. М. Павлова, 50/1.
E-mail: newtime1@mail.ru; тел.: (8352) 41-27-98.